К 84.09 (=Чув)
Н 56
Ч 42323



## Зоя Нестерова

# ӐҪТА-ШИ ЭСӖ ХАЛӖ?

Национальная библиотека ЧР
4-042323

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1981 г.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ

**Зоя Нестерова**

Н56



# ĂÇТА-ШИ ЭСĔ ХАЛĔ?

Калавсемпе
повеçсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2009

УДК 821.512.111—93
ББК 84 (2Рос=Чув)6—4
Н 56

ПРОВЕРЕНО
20 10

**Нестерова З.А.**

Н 56 Ăçта-ши эсĕ халĕ? Калавсемпе повеçсем/ З.А. Нестерова. — Шупашкар: Чăваш. кĕнеке изд-ви, 2009. — 223 с.

ISBN 978-5-7670-1654-9

Зоя Нестерова хайлавĕсенчи сăнарсем тĕрлĕ йывăрлăха лекеççĕ. Апла пулин те вĕсене çăлаканĕ, йывăр вăхăтра пулăшма алă тăсса параканĕ те юнашарах тăрать.

и-42323

**УДК 821.512.111—93**
**ББК 84 (2Рос=Чув)6—4**

**ISBN 978-5-7670-1654-9**

© Нестерова З.А., 2009
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2009

# КАЛАВСЕМ



## КĂМПАРА

— Анне! Эпĕ кăмпана каятăп. Юрать-и? Пĕччен мар, çынсем тата пур. Анне, мĕнле савăт илес?

— Акă карçинкка. Ме çĕçĕ ил. Кăмпана касса илсен çитес çул çав вырăнта каллех ÿсет. Тăпăлтарма кирлĕ мар.

— Юрать, пĕлетĕп, илтнĕ.

— Асăрханса çÿре. Юлташусенчен ан уйăрăл. Вăрманĕ пысăк, çĕтсе кайма нимĕн те мар.

— Юрать, пĕлетĕп.

Настя пысăк мар карçинкка илчĕ те пÿртрен чупса тухрĕ.

Çанталăк лăпкă, сутă. Ăшă çил варкăшать. Акă вĕсем вăрмана кĕчĕç. Кунта сывлăш нÿрĕ те уçă. Тĕрлĕ ырă шăршă, вăрман шăрши, сăмсана пырса кĕрет. Шăпăрт. Кайăк-кĕшĕк сасси те илтĕнмест. Вĕсен, кайăксен, юрлас вăхăчĕ иртнĕ ĕнтĕ. Шăрăх çанталăк йăвашланчĕ. Хальлĕхе йывăçсем сип-симĕсех пулин те сайра хутра çывхаракан сивĕ кĕр палли, — сарă çулçă — турат çинчен уйăрăлать те шăппăн, хуллен çĕр çине ÿкет.

Кăмпасем пухмалăх пур. Хăш-пĕрисем уççăнах курăнса лараççĕ, теприсем пĕлтĕрхи тĕссĕрленнĕ, типсе кушăрханă çулçăсем айне пытаннă, виççĕмĕшсем çăра симĕс курăк ăшĕнчен пуçĕсене кăларса пăхаççĕ. Шыраса тупма, касса карçинккана хума кăмăллă. Тĕрлĕ вĕсем. Пĕрисен шлепкисем çÿлелле мăкăрăлнă, теприсен пачах урăхла — варринче айлăм. Пĕрисем çирĕп, патвар, тачка, теприсем хавшак, хăвăрт хуçăлаççĕ, вакланаççĕ. Тĕсĕсем те пĕр пек мар: шуррисем, саррисем, хурисем те пур. Акă шап-шурă пăнчăсемпе илемленнĕ хĕрлĕ кăмпа.

— Ан тат. Çиме юрамасть ăна. Наркăмăшлă вăл, — касма аллине тăссанах илтрĕ Настя хыçра пĕрле килнĕ хĕрарăм сассине.

Çапла йĕри-тавра тĕплĕн тинкерсе пăхса, ура айĕнче чăштăртатакан типĕ çулçăсене сире-сире

Настя карҫинккине тултарчӗ, халӗ киле кайма та юрать. Анчах юлташсем, пӗрле килнисем, ăҫта? Мӗншӗн вӗсен сассисем илтӗнмеҫҫӗ?

— Аня-а-а! Рита-а! Ларис инке-е-е!

Хирӗҫ сасă паракан ҫук. Ҫӳллӗ йывăҫсем кăна хăйсен пӗр тӗрлӗ юррине хуллен юрлаҫҫӗ.

Хӗр ача сасартăках пăлханса ӳкрӗ. Ăҫта вăл? Хăш вырăнта? Ах, манчӗ, манчӗ амăшӗ асăрхаттарнине... Пӗр енне чупрӗ, тепӗр еннелле... Палламан вырăнсем, чăтлăхсем, уҫланкăсем...

— Аня-а-а! Рита-а!

Тӳсеймерӗ хăраса ӳкнӗскер, макăрса ячӗ.

— Кранк! Кранк!

Инҫе те мар, ҫурри хăрнă вată юман турачӗ ҫинче пысăк хура кайăк ларать. Настя ҫине пăхать.

— Кранк! Кранк!

Темле шанчăк, темле ăнланма ҫук хавхаланулла туйăм ҫуратрӗ ҫак сасă хӗр ача чӗринче.

— Ырă кайăкăм, — пăшăлтатрӗ вăл. — Эпӗ ҫухалса кайрăм. Ăҫталла каймаллине пӗлместӗп. Пулăш мана юлташсене тупма. Ҫул кăтарт мана...

«Ут ман хыҫҫăн», — тенӗ евӗр кайăк каллех кранклатрӗ те сывлăша ҫӗкленсе тепӗр турат ҫине кайса ларчӗ. «Ут, кай ҫавăн хыҫҫăн», — терӗ ăшри сасă.

— Кайăкăм, ырă, ăслă кайăкăм... — Хӗр ача ҫывхарчӗ кăна, вӗҫен кайăк каллех вырăнтан хускалчӗ. Ҫапла темиҫе хут та. Настя ҫывхарать кăна — хура кайăк каллех тепӗр йывăҫ ҫине вӗҫсе ларать. Юлашкинчен вăрман хӗрри курăнчӗ. Хаваслăн кăшкăрса ача малалла тапса сикрӗ. Унталла-кунталла пăхса илчӗ. Паллană вырăн. Вӗсем шăп ҫакăнтан вăрмана кӗнӗччӗ. Ах, кайăк, ырă, ăслă кайăк! Тавтапуҫ сана... Ыттисем ăҫта-ши? Ҫаплах кăмпара-ши е киле кайрӗҫ-ши?

Нумай кӗтсе тăмарӗ Настя. Акă пӗри тухрӗ, тата иккӗн, тата...

— Пăхăр-ха, Настя тăрать. Эпир ăна шыратпăр, кăшкăратпăр, чĕнетпĕр. Вăл хăй пире кĕтет.

Кăмăллăн калаçса кăмпаçăсем ялалла утрĕç. Настя çул тăршшĕпех хăйне инкекрен çăлнă хирти вĕçен кайăк çинчен шухăшласа тĕлĕнсе пычĕ.

## ТУС

— Ачасем вăрмана çырлана кайрĕç. Эсĕ мĕншĕн юлтăн тата? — ыйтрĕ иртсе пыракан хĕрарăм урама тухнă Мишăран.

Çырлана? Пиçнĕ-и? Э-э, вăрманта хурăн çырли нумай çĕрте ÿсет. Пĕлет ача пĕр вырăна. Ух, унта! Çынсем те питех çÿремеççĕ. Пĕлмеççĕ пулас.

— Тус! Атя çырла пуçтарма! — Сулхăнра выртакан хура хĕрлĕ пысăк йытă çавăнтах сиксе тăчĕ, юратнă хуçи патне чупса пычĕ те ачашшăн нăйкăшса куçран тинкерсе пăхрĕ. «Мĕн тумалла? Ăçта каймалла? Эпĕ хатĕр!» — терĕ вăл.

— Çырлана каятпăр. Пĕлетĕн-и? Çырлана.

Йытă нăйкăшса илчĕ те уçă картиш алăкĕнчен тухрĕ. Тÿрех вăрман еннелле чупрĕ. Ăнланчĕ вĕт каланине. Ну, ăслă йытă. Иртнĕ çул икĕ хут кайса килчĕç вĕсем амăшĕпе çырлана. Тус та пĕрле пычĕ. «Çырла» сăмаха пĕлет-ши? Авă çул кăтартнă пек малта лăпăстатса пырать. Вăрманĕ инçе мар — çухрăм пулать. Унта çитсен малтан вĕсем сарлака çулпа утрĕç. Машинăсем сайра иртеççĕ, сывлăш уçă. Симĕс вăрман хуллен шавлать. Тус халĕ те малта чупать, вăхăтран-вăхăт чарăнса кĕтсе тăрать. Акă вăл ансăр сукмак тĕлĕнче чарăнчĕ, ман хыççăн ут тенĕн хуллен сасă пачĕ. Çулне те манман. Ну, Тус! Чăн-чăн тус эсĕ. Утма çул тăвалла çĕкленме тытăнсан йытă пăрăнчĕ те çулсăр-мĕнсĕр сылтăмалла чăтлăхалла кĕрсе кайрĕ. Асăрханса, хĕсĕнкелесе иртрĕç те пысăк уçланкăна тухрĕç. Вăл аялалла, тарăн çырманалла, анать. Хĕвеллĕ çутă уçланкăра симĕс

курӑк хуллен хумханать. Ҫӳллӗ, ҫын ҫӳллӗшех. Аялта вара пӗшкӗнсе алӑпа сиретӗн те — эх, мӗн чухлӗ ҫырла! Хӗп-хӗрлӗскерне ача пуҫтарма тытӑнчӗ. Ҫур ывӑҫне ҫӑвара хыпать, ҫуррине — бидона. Ҫисе тӑранма та ҫитет, бидона тултарма та. Каҫ пуличчен ӗлкӗрет. Эх, килтисем савӑнаҫҫӗ ӗнтӗ вӑл тулли савӑтпа пырса кӗрсен.

Васкать Миша, васкать, хӗвелӗ те вырӑнта тӑмасть, шӑвать те шӑвать анаталла. Ывӑнчӗ пулӗ ӗнтӗ кунӗпе йӑлкӑшса, унӑн та канас килет. Нимех те мар. Мишӑн юратнӑ тусӗ пур, ав лӗпӗшсем хыҫҫӑн хӑваласа чупать. Унпа тӗттӗмре ҫӳреме те хӑрушӑ мар. Васкать ача, васкать. Анчах инкекӗ те ҫавӑнтах пынӑ-мӗн. Кӗтмен ҫӗртен ура яр! шуса кайрӗ те, Миша тытӑнса тӑраймарӗ, чикӗленсе йӑванса кайрӗ. Сылтӑм урана калама ҫук хытӑ ыраттарчӗ. Сиксе тӑма хӑтланчӗ — пултараймарӗ. Йынӑша-йынӑша тӑрса ларчӗ. Сандалине хывса ыратакан вырӑна пӑхрӗ. Пакӑлчак тӗлӗнче хӗрелсе шыҫса тухнӑ. Ура ҫине пусма ҫук ыратать.

Инкеке туйса Тус чупса пычӗ, хурлӑн нӑйкӑшса аманнӑ вырӑна ҫуласа илчӗ.

— Тус, мӗн тӑвӑпӑр-ха? Епле киле ҫитӗпӗр? Кӗҫех хӗвел анать авӑ, — терӗ Миша йыттине ыталаса.

Сасартӑк Тус картах туртӑнчӗ, вӗлт! ҫаврӑнчӗ те тӑвалла сирпӗнчӗ.

— Тус! Тус! Ан кай! Ан пӑрахса хӑвар мана!

Ыратнипе, пуринчен ытла хӑранипе ача ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ.

Хӗвел вӑрман хыҫӗнче ҫухалчӗ, тавралӑх сулхӑнланчӗ, унтан тӗттӗмленме пуҫларӗ. Кайӑксем юрлама пӑрахрӗҫ. Тӗксӗмленнӗ вӑрман та, тем ырӑ мара систернӗ пек, сиввӗн шавлать. Ура вара ыратать те ыратать. Миша тӑсӑлса выртрӗ, капла канлӗрех пек туйӑнать. Курӑк чӑштӑртатать, каҫхи шӑрчӑксем чӗриклетме тытӑнчӗҫ, пуҫ ҫийӗ-

нех темле кăпшанкă хулăннăн нăрласа вĕçсе иртрĕ.

Инçе те мар йытă хаваслăн вĕрсе ячĕ. Тус! Тус! Таврăнтăн-и? Чупса пычĕ, питрен çуласа илчĕ.

— Миша! Ывăлăм! — илтĕнчĕ çывăхрах хумханнă ашшĕ сасси. — Мĕн пулчĕ? Ӳкрĕн-и? Уруна хытă амантрăн-и?

Вăйлă алăсем ачана хăвăрт çĕклерĕç.

— Атя, атя! Киле каятпăр. Аннӳ кĕтет...

Пысăк çул çине тухрĕç. Унта машина ларать. Йĕри-тавра уткаласа çӳрекен палламан арçын васкаса машина алăкне уçрĕ. Ашшĕ ывăлне асăрханса меллĕн лартрĕ. Хăй юнашар вырнаçрĕ.

— Ну, Тус, ну, йытă! — терĕ вăл машина хускалсан пуçне сулкаласа. — Ăçта ыранă пулăттăмăр-ха эпир сана вăл пулман пулсан? Тата епле пĕлнĕ-ха вăл эпĕ хăш ялта, хăш вырăнта ĕçленине? Хашкаса чупса пычĕ, эпĕ иккĕмĕш хутра çӳлте ĕçлеттĕм. Вĕрет те сассинченех палларăм. Антăм та, — чупса пычĕ, нăйкăшать, куçран тилмĕрсе пăхать, кĕскен хамлатса илет те чупса каять, каллех çавăрăнса пăхать, каллех, тем калас пек, куçран тилмĕрет, чĕнет...

— Ну, ахаль мар ку, — терĕç пĕрле ĕçлекенсем. — Килте темле инкек пулнă пулĕ.

Çурт хуçи те ăнланчĕ. «Кай, ĕç кунĕ вĕçленесси нумай мар», — терĕ. Хăй шоферне чĕнсе илчĕ.

— Хăвăртрах леçсе яр.

— Тус вара каллех тĕлĕнтерчĕ, — арçын кушăрханă аллипе чĕркуççийĕ çинче выртакан ывăлĕн пуçне ачашласа илчĕ, — лармасть машинăна. Малта пырать. «Çул кăтартать», — тавçăрса илтĕм. Машина унран иртмесĕр хыççăн чупрĕ.

Ури ыратать пулин те ашшĕне итленĕ май Миша иртнине аса илчĕ. Виçĕ çул каялла ашшĕ, таврари ăста платник, ĕçленĕ ялтан пĕчĕк йытă çури илсе килчĕ те ăна Мишăна парнелерĕ.

— Пăх, усра, ӳстер, — терĕ вăл. — Лайăх йăхран. Тусу пултăр. Ячĕ те Тус пултăр...

Машина чупать. Тăван яла кĕмесĕр вăл район центрĕнчи больницăна çул тытрĕ. Унта ача урине рентгенпа тĕрĕслесе пăхрĕç, гипсларĕç.

— Тепĕр виçĕ эрнерен каллех сиккипех чупакан пулатăн, — пĕлтерчĕ шурă халатлă, шурă калпаклă хĕрарăм.

— Халĕ киле кайăпăр. Аннӳ кĕтсе пăлханать ĕнтĕ, — терĕ ашшĕ ывăлне каллех алă çине çĕклесе.

## ХĔЛЛЕХИ КАÇ

Таса çӳллĕ тӳпере тулса çитеймен уйăх тăхри хăйĕн уçăмсăр вылянчăк пайăркисене çĕр çине сапалать. Çăлтăрсем имшеррĕн йăлкăшаççĕ. Йĕри-тавра шап-шурă юрпа хупланнă уй-хир. Акă ун урлă тăсăлакан ансăр çулпа лашасем кӳлнĕ ултă çуна шăвать. Кашнин çинче пăчкăпа каса-каса татнă пысăк йывăç муклашкисем выртаççĕ...

Шкул ачисене хĕллехи каникула ярсан тепĕр куннех Таньăсен картишне колхоз бригадирĕ кĕчĕ.

— Вăрмантан вутă тиесе килмелле. Пуçтарăн хăвăртрах, — терĕ вăл татăклăн сурăхсене апат парса витерен тухнă хĕр ачана хирĕç утса. — Улттăн каятăр. Тепĕр сехетрен çула тухмалла. Васка.

Таня чĕри шиклĕн пăчăртанчĕ.

— Инçе каймалла-и? — тĕлĕнерех ыйтрĕ хĕр умри бригадир çине тĕллесе пăхса.

— Ытла инçе мар. Çĕрлеччен çаврăнса çитетĕр.

Колхоз ĕçне-хĕлне ачаранах хутшăннă пулин те, килте хăйĕнчен аслисем, арçынсем, пур пирки Таня лашапа питех çӳремен, хăнăхман çав ĕçе. Халĕ вара яра куна тата хĕлле çапла инçе çула тухса каяс пулать.

— Кам-кам каять?

Виçĕ хĕрарăм иккен. Тата Таньăпа пĕр класра вĕренекен тепĕр икĕ юлташ — те хĕр, те хĕр ача темелле ĕнтĕ вĕсене...

Ăнланать-ха Таня. Çĕршывра халĕ вăрçă алхасать. Нимĕç çарĕ Мускав çывăхĕнчех. Унта хаяр çапăçусем пыраççĕ. Ялта вăйпитти арçын çук. Пурте фронтра. Таня пиччĕшĕ те тахçанах çапăçу хирĕнче. (Турра шĕкĕр, хальлĕхе сывах-ха, çырусем килсех тăраççĕ.) Салтака илмелли çулсенчен иртнĕ ашшĕ военкомат хушнипе кӳршĕ районта вăрман касать. Таня аппăшĕ те (унран виçĕ çул аслăрах вăл) килте çук. Ăна та уй-хирте ĕçсем вĕçленсенех ытти нумай ял çамрăкĕсемпе пĕрле вăрман касма илсе кайрĕç.

Çапах шиклĕ шухăшĕсене пытарчĕ хĕр ача. Юрать, каятăп тесе пуçне сĕлтрĕ çеç. Тепĕр икĕ çултан вăл та çитĕннисен шутне кĕрет-çке. Апла унăн та ыттисем пекех ерипен пур ĕçе те хăнăхмалла...

Вăрмана чиперех çитрĕç. Вутă тума уйăрса хăварнă кутамас пысăк йывăç муклашкисене иккĕнвиççĕн йăвантара-йăвантара çунасем çине тиерĕç. Лашисене çитерчĕç, хăйсем те килтен мĕн илсе тухнипе апатланчĕç, вара каллех çула тухрĕç. Хĕллехи кун çерçи сăмсинчен вăрăм мар теççĕ. Чăнах та нумай каймарĕç, кăштах çĕкленнĕ хĕвел пытанчĕ, каç пулчĕ.

Çулĕ яка-ха, тикĕс, анчах сулăнчăк нумай. Çавăнпа лавçăн шутсăр тимлĕ, сыхă пулмалла. Çунана шуса кайма памалла мар. Лакса ларсан йывăр тиенĕ лава туртса кăларма хĕн пулать. Лаша вара вăйлă пек туйăнмасть.

Çапла шухăшласа пыратчĕ Таня, асăрхамарĕ, çуна сылтăмалла шуса-шуса кайрĕ те чылаях пысăк лакăма путса кĕрсе ларчĕ. Туртса кăларас тесе лаша тăпăлтатрĕ-тăпăлтатрĕ — çуна вырăнтан хускалмарĕ.

— Но-но! Атя, атя турт! — сассине хаярлатса

кăшкăрчĕ шикленсе ӳкнĕ хĕр ача айăпсăр выльăха çурăмĕнчен пушăпа çапа-çапа. Таня хыççăн пыракан улттăмĕш лавĕ чарăнмарĕ, иртсе кайрĕ.

— Калатăп! Пулăшма килетпĕр! — кăшкăрса хăварчĕ лавçă хĕрарăм. — Эй, умрисем! Тăхтăр-ха! Ан кайăр!.. — янăрарĕ унăн сасси каçхи шăплăхра.

Чылаях малта пыракан лавсем чарăнчĕç.

— Мĕн пулчĕ? — хуса çитекен çунана хирĕç утрĕ пĕр хĕрарăмĕ.

— Таня çуни сулăнчăка кĕрсе ларчĕ. Пулăшмасан пĕччен кăлараяс çук вăл.

Пĕр вăхăт шăп пулчĕ.

— Эй, ачу-пăчупа тепĕр тесен, — çиллессĕн сăмах хушрĕ малти лав çинче ларакан хĕрарăм. — Манăн хамăн килте виçĕ ача, пĕринчен тепри пĕчĕк. Темле пурăнчĕç ĕнтĕ паян. Ăш çунсах тухать вĕсем çинчен шухăшласа. Эсир кирек мĕн тăвăр, эпĕ каятăп, — çапла каласа вăл тилхепине алла илчĕ.

— Эпĕ те вырăнпа выртакан аннене тăхăр сулхи Кирукпа пăрахса хăвартăм, — хăюсăррăн хушса хучĕ тепĕр хĕрарăмĕ. — Выльăх-чĕрлĕх те выçă. Хăвăртрах çитсе апат парас, шăварас пулать... Юля, Нина, — ним чĕнмесĕр итлесе пыракан хĕр упраçсем çине тĕллесе пăхрĕ вăл: — Сире ача-пăча кĕтсе макăрмасть. Кайса пулăшăр тантăшăра. Вăхăт нумай мар халĕ, каçĕ çутă. Хăрамалли çук, каярах çитетĕр.

Хĕр ачасем хускалмарĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те пуçĕсене усса чĕнмерĕç.

— Ну, эпĕ кайрăм...

— Апла эпĕ те юлмастăп... Мана мĕн... Манăн та килте ĕç мăй таранах...

Урăх калаçакан пулмарĕ. Пилĕк лав пĕрин хыççăн тепри вырăнтан хускалчĕ.

Уйăх çути витĕр курăнакан мĕлкесем аяккалла кайрĕç, умри хура вăрман тăрăхĕ патне çывхарса

куçран çухалчĕç. Каçхи сывлăшра малтан çуна тупанĕсем айĕнче юр чĕриклетни, лашасем тулхăрни илтĕнчĕ, унтан тавралăха шиклĕ, канăçсăр шăплăх çавăрса илчĕ. Хĕллехи сивĕ каç ют уй-хирте хĕр ача пĕр-пĕччен тăрса юлчĕ. «Пăрахса хăварчĕç», — чунне çунтарса шухăшларĕ вăл. Тути асаплăн турткаланса илчĕ, куçĕсем куççулĕпе тулчĕç, тумламсем пулса шăнса хĕрелнĕ пит çăмарти тăрăх йăпăртатса юхса анчĕç. Таня вĕсене алсишпе шăлса типĕтрĕ, йывăррăн сывласа ячĕ те хускалмасăр тăракан лаша патне пычĕ.

— Ну, кантăн-и? Пултаратăн-и туртса кăларма? — терĕ вăл чĕлпĕре алла илсе. — Тăрăш, тăрăш. Темле пулсан та паян киле çитмелле пирĕн. Кунтах юлсан иксĕмĕр те шăнса вилетпĕр. Ĕнтĕ нумай юлмарĕ, çур çул килнĕ. Атя, атя тĕрмеклен...

«Э-э, мансах кайнă. Манăн çăкăр пур-çке», — аса илчĕ вăл çавăнтах. Çапла, çула тухма пуçтарăннă çап-çамрăк хĕрĕ çине канăçсăррăн пăхапăха илекен амăшĕ ăна пир татăкĕпе тирпейлĕн чĕркенĕ çăкăр чĕлли тыттарчĕ.

— Кĕрĕк айне кăкăру çине хур, ан шăнтăр, — терĕ вăл. Паçăр шыв ĕçес килни аптратнипе çиес кăмăл пулмарĕ Таньăн, халĕ акă аса илчĕ те хăй те хырăм выçнине туйрĕ. Сурăх тирĕнчен çĕленĕ кĕрĕкне вĕçертсе вăл çăкăр татăкне кăларчĕ, ăна варринчен хуçса пĕр пайне вакларĕ те лаша тути патне илсе пычĕ.

— Ме çи. Мĕнле, тутлă-и? Тутлă, шутсăр тутлă. Çапла вĕт? Сулăнчăкран тухсан тепĕр çуррине те санах паратăп.

Чĕлпĕре вĕçертмесĕр хĕр çăкăр тытнă тепĕр аллине лаша сăмси патне илсе пычĕ, анчах çиме памасăр темиçе утăм каялла ярса пусрĕ.

— Ну, кил, кил, ут... Акă вăл çăкăр...

Мăйне тăсса лаша малалла талпăнчĕ.

— Маттур... Тата... Тата...

Анчах нимӗн те: ҫӑкӑрпа астарни те, хаяррӑн кӑшкӑрни те, пушӑпа хӗнени те пулӑшмарӗ. Ывӑннӑ хавшак лаша тарӑн сулӑнчӑка кӗрсе ларнӑ ҫунана вырӑнтан хускатаймарӗ. Аптранӑ хӗр тунсӑхлӑ куҫӗпе йӗри-тавра пӑхса ҫаврӑнчӗ: шап-шурӑ пушӑ хир, пушӑ ҫул. Аякра, сулахай енче, хура вӑрман тӑсӑлать, ума та вӑрман тӑрӑхӗ хупӑрлать. Сылтӑмра... Чим-ха, мӗн унта, сылтӑмра? Хура мӗлкесем курӑнаҫҫӗ. Кашкӑр кӗтӗвӗ мар-и?.. «Кунталла килеҫҫӗ... Турӑҫӑм... Сыхла, хӳтӗле, — пӑшӑлтатрӗ сехӗрленсе ӳкнӗ хӗр ача питне алли-семпе хупласа. Урасем лӑстӑрах кайрӗҫ, вӑл вӑй-сӑррӑн ҫуна ҫине тӗшӗрӗлчӗ. — Пӗтрӗм...» Ни вилӗ, ни чӗрӗ кӗтрӗ...

Анчах мӗншӗн ҫывхармаҫҫӗ вӗсем? Мӗншӗн халӗ те ҫав вырӑнтах? Сиксе тӑрса Таня каллех аякри мӗлкесем ҫине тинкерчӗ, хӑраса чарӑлнӑ куҫсем мӗн курнине ӗненмесӗр хӑвӑрт-хӑвӑрт мӑчлатса илчӗҫ, пир пек шурса кайнӑ пичӗ ҫине кулӑ евӗр ӑшӑ хӗлхем имшеррӗн выляса илчӗ. Хӗр ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ. Ҫуртсем вӗт кусем... Ял! Ял курӑнать...

Шап-шурӑ юрпа витӗннӗ ютӑ пуш хирте ҫап-ҫамрӑк хӗр тӑрать. Кӑваккӑн-симӗссӗн йӑлкӑшакан уҫӑмсӑр уйӑх ҫути витӗр инҫех те мар курӑнакан ял ҫине тинкерсе пӑхать...

«Яла кайса пӑхсан мӗнле-ши? — шутласа тӑчӗ вӑл пӗр вӑхӑт, лашана куҫӗнчен пӑхрӗ. — «Кирек мӗн тусан та эпӗ санпа пӗрлех пулатӑп», — терӗҫ унӑн куҫӗсем. — Тен, кам та пулин ҫӗр каҫма кӗртӗ». Ҫак шухӑш Таньӑна хавхалантарса ячӗ.

— Атя пуҫтарӑн, тусӑм. Кунта шӑнса виличчен кам патне те пулин кайса шаккар кантӑкран, — терӗ вӑл лашине. Хӑмӑт-пӑявне илчӗ, лашине тӑварчӗ те ҫунине вырӑнтах хӑварса ялалла уттарчӗҫ. Ҫӗрлехи уйӑх ҫути ялалла каякан сукмака кӑтартса пычӗ.

Пырса кĕнĕ урамра ыттисенчен уйрăлса тăракан çурта тӳрех асăрхаса пычĕ хĕр — пуянрах, чаплăрах, илемлĕрех вăл. Тата çĕрле пулин те çутă халĕ те мĕлтлетсе çунни курăнать чӳречерен.

Шак-шак-шак! пырса шаккарĕ чӳречерен.

— Кам унта? — илтĕнсе кайрĕ кăшт вăхăт иртсен арçын сасси.

— Манăн кунтан инçе мар çуна путса ларчĕ те ниепле те хал çитереймерĕм кăларма. Каçа хирĕç пĕчченех тăрса юлтăм пушă хирте. Çĕр каçма кĕртеймĕр-ши? — каласа пачĕ хăй пирки Таня. Алăк шăкăлт уçăлчĕ.

...Çывăрнă-çывăрманскер, Таня ирхине ирех, кăвак çутă килсенех вăранчĕ. Пуçтарăнчĕ, тумланчĕ. Шăкăр-шăкăр сасса илтсе кил хуçипе, вăтам çулсенчи типшĕм питлĕ уксах арçын, самай çулланнă, ырă кăмăллă хĕрарăм та тăчĕç.

— Апат çимесĕрех ан кай, Таня, — терĕ хĕрарăм. — Чей те пулин ĕç.

— Çук-çук, — хыпăнсах хирĕçлерĕ хăна хĕр, — анне кĕтет ĕнтĕ мана, часрах киле çитесчĕ, тата лашана та апат паман.

— Лашине шăвартăм, апат патăм, çĕрлене витене хупрăм, — пĕлтерчĕ арçын. — Уншăн эсĕ ан пăшăрхан. Аннӳ пирки тĕрĕсех калатăн, çĕрле çывăраймарĕ пуль куляннипе. Атя эпĕ ăсатса ярам.

— Кирлĕ мар, тавах. Хамăрах çитетпĕр. Тавах çĕр каçма кĕртнĕшĕн, — чунтан тав турĕ Таня.

Пĕчченех тухса утрĕ хĕр ача çав çуртран, лашине çавăтса пынă май ăна çĕр каçма кĕртнĕ таравăт хуçасене чунтан ырă сунчĕ. Хăйне те апатпа сăйларĕç, лаши та тутă. Пулаççĕ-çке çапла ырă чунлă çынсем çĕр çинче.

Çуна патне çывхарнă май ун патĕнче такам мĕкĕлтетнине курчĕ Таня. Амăшĕ иккен. Çĕрлех пырса калалнă хĕрĕ пушă хирте пĕчченех тăрса юлни пирки. Эх, амăш чĕри! Çичĕ-сакăр çухрăмри вăрма-

на çӗрлене пӑхмасӑрах тухса чупнӑ-мӗн. Кам пӗлет, тен, шӑнса вилӗ, те тискер чӗр чун тӗлне пулӗ. Çитет, пӑхать — никам та çук, кӑшкӑрать, чӗнет — сасӑ паракан пулмарӗ. Никам та чӗнменнипе каялла таврӑнать...

Амӑшӗпе хӗрӗ килелле васкамасӑр утаççӗ. Сулӑкран туртса кӑларнӑ çунана лаша вӗсем хыççӑн çӑмӑллӑн туртса пырать.

## ÇУХАЛНӐ УРОК

Ах, çав вун икӗ-вун виçӗ çулхи арçын ачасем! Ларма-тӑма пӗлмен шӑпӑрлансем. Пӑхӑр-ха эсир вӗсем çине пӗр-пӗр çӗрте ушкӑнпа пуçтарӑнсан. Вӗçӗмсӗр чупаççӗ, кӑшкӑрашаççӗ, тавлашаççӗ, кӗçех тытӑçса та илеççӗ, çапӑçма та яланах хатӗр. Пурин çинчен те манаççӗ вӗсем çав хӗрнӗ самантсенче: вӑхӑт иртнине те, хырӑм выççнине те, ашшӗ-амӑшӗ пӗр-пӗр ӗç хушнине те, малтанах пурнӑçлама шухӑшласа хунӑ хӑйӗн шутсӑр кирлӗ ӗç-пуçне те... Шкулта тата... Шӑнкӑрав янранӑ, вӗрентекен класра, вӗсем çаплах кӗрсе пӗтеймеççӗ.

— Юрать-и?

— Кӗме юрать-и? — илтӗнет вӗçӗмсӗр.

Асӑрхаттарни, ӳпкелени, вӑрçни усӑсӑр — пурпӗр итлемеççӗ, тӗрӗсрех каласан çав хӗрнӗ самантсенче никама та тӑнлама пултараймаççӗ вӗсем. Акӑ кӗрсе пӗтрӗç, вырнаçса ларчӗç. Анчах урок пуçлама иртерех-ха, тӑруках лӑпланайман класс, пӗр хушӑ çаплах йӑшӑлтататать, пӑшӑлтататать. Пӗрин тетрачӗ çук, тепри ручкине çухатнӑ, виççӗмӗшӗ вӗренмелли кӗнекине киле манса хӑварнӑ... Юлашкинчен лӑпланчӗç.

Умра ларакан çирӗм ултӑ ача çинчен куçне илмесӗр Ольга Ивановна киле панӑ ӗçсене тӗрӗслет, ыйтать, итлет, йӑнӑшсене тӳрлетет, ӑнлантарать.

Акă вăл доска енне çавăрăнчĕ, мел илсе çырма тытăнчĕ. Çав вăхăтра парта айĕнчен алă çĕкленчĕ те — сывлăша хутран тунă кайăк ачасен пуçĕ çийĕн пăр-р вĕçсе хăпарчĕ.

— Кам ашкăнать? — кăмăлсăр сасăпа ыйтрĕ вăртах çавăрăннă Ольга Ивановна.

Класс шăп. Канăçсăр куçсем кăна савăккăн йăлкăшаççĕ. Урок малалла тăсăлать.

Хĕр ачасемпе ĕçлеме çăмăлрах. Вĕсем лăпкăрах, итлеççĕ, вăр-вар шуйханмаççĕ. Анчах арçын ачасем... Мĕн-мĕн шутласа тупмаççĕ пулĕ çав шĕвĕрсем урокри ĕç йĕркине пăсма, хаваслăх тупма. Куç ан ил вĕсем çинчен, унсăрăн пăрăн кăна — е хыçалтан çӳçĕнчен туртнă хĕр ача айлатса илсе кӳрентерекене чышкисемпе тавăрма пуçлать, е урай варринче уринчен çиппе çыхнă шăши йăпăртатса чупма тытăнать... Э-э, каласа пĕтерес çук вĕсен мыскарисене... Апла пулин те пĕлет Ольга Ивановна çав ашкăнчăксемпе ĕçлеме, шутлă минутсемпе ăнăçлăн усă курса уроксене кирлĕ пек ирттерме. Анчах паян... Паян çухатрĕ вĕрентекен хăй урокне, вăрларĕç ăна, ахалех сая кайрĕç хаклă самантсем.

Пысăк тăхтавран хашка-хашка чупса кĕнĕ ачасем лăпланса ĕçе тытăнчĕç кăна, алăк яри уçăлса кайрĕ те, класа тăсланкă арçын кĕрсе тăчĕ.

— Чăрмантарнăшăн каçарсамăр, — терĕ вăл. Йăл кулчĕ те малтан Ольга Ивановна, унтан вĕренекенсем енне темиçе хутчен пуçне тая-тая илчĕ. — Манăн пĕлтермелли пур. Юрать-и? Ачасем, эпĕ республикăн тĕп хулинчи пукане театрĕн администраторĕ тата артист. Сире валли пукане театрĕ илсе килтĕмĕр. Каçхине çичĕ сехетре пуçланать. Пурте курма пырăр.

Çакнашкал хыпар ял ачисемшĕн, паллах, пысăк савăнăç. Урок çинчен манса класс çавăнтах хускалчĕ, малтан хуллен, хăюсăррăн кăштăртат-

ма, унтан хыттăнрах та хыттăнрах шавлама тытăнчĕ.

— Интереслĕ-и театрĕ?

— Кулăшла-и?

— Мĕн çинчен? Упа пур-и?

— Кашкăр та-и?

— Тилĕ тата? — илтĕнчĕç пур енчен те чăтăмсăр, хаваслă сасăсем

— Пур, пур. Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те, — тăсланкă кĕлеткине йăкăл-якăл авкаласа, кăтра пуçне сулкаласа пĕлтерчĕ артист. Нумай каласса тăмарĕ вăл, тухрĕ. Анчах ун хыççăн класс алăкĕ хупăнчĕ кăна, хыçалта ларакан пĕр ашкăнчăкĕ сиксе те тăчĕ.

— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур, — терĕ вăл, сассипе те, кĕлетки-çурăмне хускатнипе те пĕлтерӳçĕ евĕр пулма тăрăшса.

Класс харăссăн, хаваслăн ахăлтатса ячĕ. Пуçланчĕ вара...

— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур...

— Хи-хи-хи!

— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур...

Халран кайрĕ Ольга Ивановна татăлнă урока тăсас тесе. Анчах ытла та шуйханса кайнă ачасем ăна тăнлама вăй-хал çитерейменнĕç. Çакна ăнланнă учительница вĕçĕмсĕр ихĕлтетекен, авкаланакан-хуçкаланакан ачасене юмах итлеме сĕнчĕ. Ерипен-ерипен лăпланчĕç, тимлесех итлеме пуçларĕç. Анчах шăнкăрав янрарĕ кăна, самантрах хускалнă класс пĕр-пĕринпе ăмăртса, пĕр-пĕрне пӳлсе каллех хаваслăн шавлама тытăнчĕ.

— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур...

Пукане театрĕ, паллах, питĕ лайăх, çапах çухалнă урока та шел...

и-42323

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА Чувашской Республики

2. Заказ № К-1139.

## СУЛТАН

Çу кунĕсемпе пĕрле отпуск та персе çитрĕ. Мĕнле иртгермелле-ши ăна? Темиçе çул каялла кун пирки пуçа ватма та кирлĕ марччĕ. Тăван профсоюза заявлени çырса паратăн çеç. Хура тинĕс хĕрринче те шутлă вăхăта хаваслă иртгернĕ Тарас Никонорыч, кану çурчĕсенче те пулнă, турпутевкăпа ют çĕршывсенче те çӳренĕ. Анчах улшăнчĕ пурнăç, санатори, кану çурчĕсен алăкĕсем ку чухне тĕрлĕ майпа пуйса кайнă хулăн кĕсьеллисем умĕнче çеç уçăлаççĕ. Халĕ ĕнтĕ ĕçĕ те йĕркелли çук, ĕçлесен те вăхăтра тӳлемеççĕ. Çапах ăçта та пулин каймаллах. Подъезд умĕнче кунĕ-кунĕпе домино шаккаса ларнинче ырри сахал. Анчах ăçта?

«Яла кайсан мĕнле-ши? — пырса кĕчĕ пуçа шухăш. Ашшĕ-амăшĕ çук ĕнтĕ Тарас Никонорычăн ку тĕнчере. Йăмăкĕпе шăллĕ те тахçанах хулара пурăнаççĕ. Амăшĕн тăванĕ Мариш аппăшĕ пур-ха. — Ял санатори мар ĕнтĕ, — шухăшлать арçын. — Çапах... уçă сывлăш, килте ӳстернĕ таса пахча çимĕç. Ир-каç халĕ кăна сунă ăшă сĕт. Сăра та чаплă тăвать Мариш аппа. Ĕçсе тăранмалла мар тутлă. Тата укçатенкĕ те сахалтарах пĕтет унта... Каятăп. Арçын тумалли ĕç те пайтах пулĕ-ха Мариш аппа хуçалăхĕнче. Хăçантанпа пĕччен пурăнать те. Пулăшас пулать тăвана. Çитетĕп те акă çав кунах ĕçе тытăнатăп. Кашни кунах иртерех тăрса хире чупма тухатăп, шыва кĕретĕп. Пĕви, турра шĕкĕр, ял хыçĕнчех. Пĕр сăмахпа, аппана та усă пулать, хамăн та сывлăх çирĕпленет».

Çакăн евĕр çутă шухăшсемпе хавхаланса Тарас Никонорыч çула пуçтарăнчĕ.

Анкартинче çум çумлакан Мариш аппа парлукпа пыракан тăванне тӳрех палласа илчĕ. Хуралнă аллисене саппунĕпе шăлкаланă май васкаса кил картине кĕчĕ, алăкне уçса ячĕ.

— Тарас, ачам, эсех пултăн-и? Турăçăм, мĕнле

килме пĕлтĕн? — терĕ вăл шывланнă куҫне алă тӳртĕшĕпе шăлкаласа.

Хĕрĕхрен иртнĕ тĕп сăнара ялта хăй ячĕпе ҫеҫ чĕннĕрен малашне эпир те унăн ашшĕ ятне асăнмăпăр.

— Отпускра эпĕ халĕ, Мариш аппа. Сана курма тата хуҫалăхра кăшт та пулин пулăшас тесе килтĕм. Кала, мĕн тумалла...

— И-и, сăпаҫҫипах сана, ачам, сăпаҫҫипах... Ĕҫĕ тармĕ-ха, тупăнĕ... Вăл вилсен те виҫĕ куна юлать теҫҫĕ те. Халĕ кан-ха ҫул ҫинчен. Пӳрте кĕрер-ха... Кашни ҫулах кĕтетĕп те. Килместĕр ҫав, килместĕр. Атя-ха пӳрте. Курманни хăҫан... Каласа пар, мĕнле пурăнатăр? Пурте сывах-и, чипере́х-и? Кин тата?

Ҫапла кăмăллăн шăкăлтатса хаклă хăнана кил хуҫи тирпейлĕ пуҫтарнă пысăк мар пӳрте чĕнсе кĕчĕ, сĕтел ҫине апат-ҫимĕҫ хатĕрлерĕ.

— Килти сăра юрататăн-ха эсĕ. Ҫиччас, кĕҫĕрех вĕретсе лартатăп, — хыпкаланчĕ савăннă тăван.

Унтан чылаях хĕрнĕ Тарас крыльца ҫине тухса пирус чĕртрĕ, умри тĕтĕме алă тупанĕпе сиркелесе кăмăллă пит-куҫпа йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. Ҫав самантра урамран картишне хапха айĕпе хĕсĕнсе автан кĕчĕ, ун хыҫҫăн темиҫе чăх курăнчĕ. Палламан арҫынна курсан автан васкамасăр крыльца ҫывăхне пычĕ.

— Кик-кик-как-как! — терĕ вăл хаяррăн шăрҫа евĕр ҫап-ҫавра йăлтăркка куҫне хăна ҫине тĕллесе.

— Ну, автан! — тĕлĕннине пĕлтерчĕ Тарас Мариш аппа юнашар пырса тăрсан. — Мĕнешкел кĕрнеклĕ! Епле капăр! Пĕсехи чăн-чăн ылтăн тейĕн. Йăлтăртататать кăна. Мĕнле мăнаҫлă тата...

— Ҫапла, кĕрнеклĕ. Ҫапла, капăр, — хуравларĕ Мариш аппа кăмăллăн. — Ялта ун пек ăратлли урăх ҫук. Кӳршĕ арҫынĕ ăна Султан тет.

— А мĕн? Тĕрĕс. Чăххисем шутсăрах юратаҫҫĕ

пулĕ ĕнтĕ. Пăх-ха, вăл ăçта, вĕсем те унтах çӳреççĕ.

— Çапла, хăйĕнчен ниçта та уйăрмасть. Пĕрлех илсе çӳрет. Хăй вара, — хĕрарăмăн тĕксĕмленнĕ куçĕсем хаваслăн йăлкăшса çуталчĕç, — хăй инкесем патне те чупма хирĕç мар. Пускилсен автанĕ вилчĕ те, çиччас вĕсен енне йăпăртатса каçса каять.

— Инкесем тетĕн... Ха-ха-ха, — кăмăллăн кулса ячĕ арçын.

— Анчах арăмĕсем çывăхне ют автан ан пыр. Тӳрех çапăçма тытăнать, — çаплах кулкаласа сăмахне малалла тăсрĕ Мариш аппа. — Шутсăр çапăçма юрататъ. Тем пулсан та парăнасшăн мар. Уран ӳкиччченех хирĕç сикет. Нумай пулмасть аранаран тайкаланса килчĕ кĕчĕ. Чĕп-чĕр юн. Юрлама ăста тата... Сасси усă. Ир тăрать те тытăнать шарлаттарма.

Пĕр ури çинчен тепри çине юлхавлăн пускаласа çывăхрах çӳрекен автан çынсем хăй пирки калаçнине тăнлать тейĕн — çап-çавра куçне ялкăштарса вĕсем çине пăхкалать, хĕп-хĕрлĕ вăрăм киккирикĕ унталла-кунталла сулланкалать. Унтан, эппин, юрласа кăтартам-ха сире тенĕн çирĕп çуначĕсене шарт-шарт çапрĕ те вăрăм мăйне малалла тăсса хыттăн, янравлăн авăтса ячĕ.

— Ки-ки-ре-ку-у!

— Маттур, Султан. Атя яра пар. Пĕлтер тавралана ху пурри çинчен. Никамран та ан хăра, — мухтарĕ ăна хăна.

Каç кӳлĕм шăрăх лăплансан икĕ тăван пахчара утă пуçтарчĕç. Типнĕ курăка сенĕкпе чике-чике илсе Тарас ăна аслăк çине йăтса купаларĕ.

— Шăрши... шăрши мĕне тăрать, — терĕ вăл. — Хулара укçапа та илейместĕн çакнашкал сиплĕ сывлăша. Çывăрма çакăнта вырăн сарса пар мана, Мариш аппа.

— Хам та çаплах шутларăм-ха. Пӳртре пăчă. Тата

эпĕ ирех тăратăп та кĕрсе тухса чăрмантарăп сана канлĕ çывăрма.

— Çук, çук, пӳртре мар, — тăванне пӳлсех хирĕçлерĕ хăна. — Çавăнта. Çавăнта çеç...

Тарас автан авăтнине илтсе вăранчĕ. Куçĕсене уçрĕ — тул çутăлнă. Ир-ха, хĕвел те тухман пулас. Мариш аппа вырьăх-чĕрлĕхне картишĕнчен урамалла хăвалани илтĕнет. «Тăмалла-ши?.. Хире чупма каймалла, шыва кĕмелле», — вĕлтлетрĕ пуçра канăçсăр шухăш. Анчах ытла та çывăрас килет-çке. «Каярах... Ыран... Аха... ыран», — хуса ячĕ ăна тепри.

Автанĕ вара янраттарать кăна юррине. Тарас пуçне утиялпа хупларĕ. Усси çук. Хуть хуса яр çав карма çăвара, хуть анса тар урăх вырăна.

— Эсремет карланки. Çакăнта килсе çухăрмасăр урăх вырăн çук-ши сан валли? Кша, мур çăварĕ! — кăшкăрчĕ Тарас аслăк хĕрне упаленсе пырса. — Анса ярса тытатăп та акă тĕкна-çӳçна хăвармăп. Çӳре вара çаппа-пакартан тĕнчене култарса. Пĕр чăх та хăй çывăхне ямĕ сана.

Маттур автан юрлама чарăнса çын сăмахĕсене тăнласа тăчĕ, унтан, çывăрах эппин тенĕ пек, чăххисемпе тем çинчен какăлтатса аяккалла пăрăнса утрĕ.

Тепĕр ир янравлă, хаваслă кикиреку ăна татах тутлă ыйхăран вăратрĕ. «Каллех!» — тарăхса шухăшларĕ Тарас.

Сиксе тăчĕ, лупас хĕрне пырса аялалла пăхрĕ.

Инçе те мар чăхсем çирĕп чĕрнисемпе çĕре чавкаласа çӳреççĕ. Автанĕ те унтах, вăрăм мăйне тăсатăса каçса кайсах авăтать.

Анса тăрăлтаттарма Тарас ӳркенчĕ, мĕнпе те пулин перес тесе унăн-кунăн пăхкаларĕ — нимĕн те курмарĕ.

— Ма типсе лармасть сан пыру! Ма çăпан тухмасть ăна! — чышкисене чăмăртасах чашкăрчĕ тарăхнă арçын. — Тупăннă юрăç...

Тămалла-ши... Иртерех çав... Унтан вăрт пăрăнчĕ те утиял айне чăмса хăлхине минтерпе хупларĕ... Тĕлĕрсе кайнăччĕ, Мариш аппăшĕ пырса чĕнчĕ.

— Тарас, ачам, тăр-ха, тăр... Ĕнер çăлран кăларнă шыв ĕçрĕм те, çав сивĕ ларчĕ-ши. Кăшт пăркаланма та памасть, шутсăр шăм-шак ыратать, — терĕ вăл тăванĕ аслăк çинчен сиксе ансан. — Ĕнене те кӳршĕ хĕрарăмĕ суса пачĕ... Ĕç хушас тетĕп сана. Анкартинче пĕр кĕтес çулман курăк юлчĕ. Кĕскерехчĕ те хăвартăм эпĕ ăна. Çавна сывлăм типиччен çулса пăрахасчĕ... Тата çак чӳлмеке нӳхрепе антарса ларт-ха. Кунашкал шăрăхра сĕт кĕçех йӳçсе каять вĕт... Эпĕ фельдшер патне кайса килем. Халиччен пычĕ, уçрĕ пулĕ ĕçлекен пӳртне. Тен, сĕрме эмел парĕ, — çапла каларĕ те Мариш аппа ыратакан пилĕкне сăтăркаласа картишĕнчен тухса кайрĕ.

Тарас анаслакаласа çава йăтрĕ, анкартине тухса юлнă курăк лаптăкне çулса пăрахрĕ, сапаларĕ.

Çанталăкĕ, чăнах та, иртенпех шăрăх, йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ арçын тумне хывса çăвăнчĕ, вара трусси вĕççĕнех лаççа кĕрсе тулли сĕт чӳлмекне илсе тухрĕ, ăна икĕ аллипе те хăй умĕнче тытса нӳхреп енне асăрханса утрĕ.

Çак таçтан килнĕ ют çынна ку кил-çуртра хăй камне кăтартас шутпа-ши е ирсерен вырăнĕ çинчен тăра-тăра ятланăшăн тавăрас тесе, тен, ытла та çапăçас килнипе çывăхрах çӳрекен Султан Тараса ирттерсе ячĕ те хыçран тӳрех çара урисем çине сиксе ларчĕ, çунаттисемпе çапрĕ, чĕрнисемпе чĕрмелерĕ.

— Ай! — кăшкăрса ячĕ çакна кĕтмен арçын сĕмсĕре ури çинчен аяккалла сирсе ывăтса. — Эс мĕн, ухмаха ертĕн-им? И-и, тăнкки!

Сирпĕнсе кайнă автан хăвăрт сиксе тăчĕ, хаяррăн ялкăшакан куçне çын çинчен илмесĕр çапăçма хатĕрленсе çĕр çумне лăпчăнчĕ.

— Мĕ-ĕн?.. Вăрçас тетĕн-и? Манпа-и? Тăхта эп сана!..

Чӳлмеке çĕре вăр-вар лартса Тарас лаç çумне тайăнтарнă çаппа ярса илчĕ те вăшт сулчĕ хайхи чăркăш çине. Пĕрре... иккĕ... виççĕ...

— Кăт-кăт-кăти-ик! — кăшкăрса ячĕ чăрсăр кайăк юлашкинчен хаяр сасăпа аяккалла сиксе ӳксе.

— Э-э, таратăн-и? Кăтартам эпĕ сана манпа çапăçма. Эпĕ пускил автанĕ мар. Ак сана! Акă! Акă!

Ниçта кайма пĕлмен Султан хаяррăн çухăрса пĕчĕк кил карти тавра ывтăнать.

— Кăт-кăт-кăти-ик! Хурах! Хурах!

Ун хыççăн хыттăн кăтиклетсе чăхсем вирхĕнеççĕ, хыçра вăрăм çапă тытнă Тарас чавтарса пырать.

— Акă! Акă сана!

Юлашкинчен пĕчĕк шăтăкран хĕсĕнкелесе автан пусма айне чăмрĕ. Сехри хăпнă чăхсем ăçта кирлĕ унта тарса пытанчĕç. Арăмĕсем умĕнче намăс курнă маттур автан пусма айĕнчен тухмасăр нумайччен хаяррăн тулашрĕ. Ăна итлесе, унпа пĕр пулса чăхсем те çиллессĕн какăлтатрĕç. Кăмăлĕ тулнă Тарас сĕте нӳхрепе антарса лартрĕ, крыльца çумне таянса чĕлĕм туртса ячĕ.

— Ай тар-тар! Кам шуйхатрĕ ман чăхсене çаплах? — пырса кĕчĕ кил картине Мариш аппа. — Пăсара тапăнмарĕ пулĕ-çке?

— Акă пăх, — тăсса кăтартрĕ Тарас чĕрмелесе юнланнă урине. — Сĕт чӳлмекне кăшт çеç алран ӳкермерĕм.

— Ай-уй! Автан-и? Çапăçать-и? — тĕлĕнчĕ Мариш аппа. — Темшĕн килĕштермест апла вăл сана. Пĕлетĕп. Пускилте те пур унăн çавнашкал çын. Курсан лăпкăн иртсе çӳреме памасть.

Çапăпа хыçран хăвалакан арçынран пусма айне пытанма тиврĕ пулин те, Султан улшăнма шухăш-

ламарӗ. Унчченхи пекех ирсерен лупас ҫывӑхне пырса ҫуначӗсене ҫапа-ҫапах янравлӑ сассипе чылай вӑхӑт аватрӗ. Сиксе ана-ана хӑваласа та пӑхрӗ ӑна Тарас. Усӑсӑр. Кӑшкӑрса-ҫухӑрса автан пусма айне пытанать-ха, анчах тепӗр ир ҫутӑлнӑ-ҫутӑлман каллех лупас ҫывӑхӗнче ҫӳрет.

Унтан Мариш аппӑшӗ тӑванне чӑлана сарса пачӗ. Вара Султан ирхи концерчӗсене... чӑлан ҫывӑхӗнче ирттерме тытӑнчӗ. Кунран-кун хаярланса пычӗ. Пур ҫӗрте те Тараса йӗрлеме пуҫларӗ. Картишӗнче курать-и, урамра-и, тӳрех чупса пырать. Асӑрхамасан, хирӗҫ тӑмасан пуҫ ҫине те сиксе ларма пултарать. Паян та акӑ Тарас пӳртре, уҫӑ чӳрече умӗнче хырӑнма пуҫларӗ кӑна, ҫавра куҫӗсене хаяррӑн ялтӑртаттарса пырса та тӑчӗ. Арҫын ҫине аялтан ҫӳлелле пӑхса е чӑтӑмсӑррӑн пӗр ури ҫинчен теприн ҫине пускаларӗ, е чӳречерен вӗҫсе кӗрес пек, хӑратасшӑн-ши, ҫӗр ҫумнелле лӑпчӑна-лӑпчӑна ларчӗ.

— Тарас, ачам, — чӑтаймарӗ юлашкинчен Мариш аппа. — Каланӑшӑн ан ҫиллен те... Каятӑн пулӗ киле. Пурпӗрех пӑхӑнтараймастӑн эсӗ ӑна. Хӑвах куратӑн, усаллансах пырать. Каплах пулсан малашне хампа та ҫапӑҫма пӑхӗ. Тата вӗҫӗмсӗр хӑваласа шуйхатсан чӑхсем килтен сивӗнӗҫ, ҫӑмарта тума пӑрахӗҫ, кӳршӗсем патне кайӗҫ.

Кӳренме-и, ҫакна илтсен Тарас ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ. Кунсерен патак е ҫапӑ тытса ӑнсӑртран хыҫалтан сиксе ларасран унӑн-кунӑн пӑхкаласа ҫӳресси кама килӗшет. Кӗҫех ял кулма тытӑнать вӗт... Ни йӗркеллӗ ҫывӑрма, ни канма. Ҫапах кӑшт та пулин ӗҫлесе пулӑшас тенӗччӗ вӑл Мариш аппӑшне хуҫалӑхӗнче. Пулмарӗ. Кӑнтӑрла ытла шӑрӑх, ир-каҫ... Ну, халӗ хӑех кай тет пулсан... Ирсерен автанпа пӗрле вӑранса хире тухса чупма вӑй-хал ҫитереймерӗ вӑл. Шыва кӗме те каяймарӗ. Хулара пурӑнма хӑнӑхнӑ пурнӑҫ йӗрки ялта та ҫаплах шурӗ.

Хăнара лайăх, килте лайăхрах теççĕ... Тепĕр ир Тарас япалисене сумкăна вăр-вар чикрĕ, аппăшĕпе сывпуллашрĕ те хаваслă кăмăлпа çула тухрĕ. Ăна курсан урамра çӳрекен Султан чăххисене пăраххсах хыçалтанваскарĕ. Чупрĕ, чупрĕ. Вăрăм утăмсемпе вашлаттарса пыракан арçынна хуса çитеймессине ăнланса чарăнчĕ. Вара пуçне мăнаçлăн, çĕнтерӳллĕн каçăртрĕ те хыттăн, савăнăçлăн янраттарса ячĕ:

— Ки-ки-ре-ку-у!

## УЛТАВÇĂ ХĔРТ-СУРТ

Ĕçрен таврăннă чух мана урамра кӳршĕ чĕнсе илчĕ.

— Элекçей пичи, — терĕ вăл кил карти алăкĕнчен тухса. — Мунча кĕрес теместĕн-и? Ăшши çителĕклĕ, шывĕ те пур.

— Аптрамастчĕ тарпа пиçнĕ ӳт-пĕве кантарсан, — хаваслансах килĕшрĕм эпĕ.

— Вăт-вăт. Килсе çăвăн. Никам та çук халĕ унта. Эпир çемйипех кĕрсе тухрăмăр.

Киле çитсен эпĕ улăштарса тăхăнма тесе таса кĕпе-йĕм илтĕм те мунчаналла васкарăм. Вăхăт чылаях пулнă ĕнтĕ. Хĕвел тахçанах аннă. Анчах çуллахи çĕрсем тĕттĕм мар. Ял та çывăрма выртманха. Мунча пахчара, килти ытти çурт-йĕртен кăшт аяккарах, карта хĕрринче ларать. Пĕр енĕпе вăл пралукаллах тухать. Инçе те мар улмуççисем ӳсеççĕ, лапсăркка çырла тĕмĕсем сарăлса лараççĕ. Хывăнтăм, кĕтĕм вĕри мунчана, спичка илсе мăчăлти краççын лампине çутрăм. Çăвăнтăм, чун каниччен çапăнтăм, вара пăшăхнăскер уçăлма пахчана тухрăм. Çемçе курăк çине çăмăл утиял сартăм та тăсăлса выртрăм йывăç тĕмĕ çывăхне. Мĕн тери лайăх, мĕн тери канлĕ! Çанталăкĕ тӳлек, сывлама çăмăл, уçă. Çӳлте çăлтăрсем йăлкăшаççĕ, таçта аяк-

ра йытӑсем вӗркелешни илтӗнет, урамра ҫынсем калаҫкалани хӑлхана пырса кӗрет. Кунта, пралукра, шӑп. Каҫхи шӑрчӑк чӗриклетет ҫеҫ. Сасартӑк ҫывӑхрах темле ӑнланмалла мар сасӑ илтӗнсе кайрӗ. Мунчара такам... ҫапӑнать пек...

Ҫӑтти-ҫатти, ҫат-ҫат-ҫат! Ҫӑтти-ҫатти, ҫат-ҫат-ҫат!

Пуҫа ялтах ҫӗклерӗм — тимлӗн итлетӗп. Ҫапла, чӑннипех такам ҫапӑнать... Эпӗ тӗшмӗш ҫын мар, ҫапах сисмерӗм те чуна ҫӳҫентерсе ҫан-ҫурӑм сӳлесе кайрӗ. Ачаранах илтсе ӳснӗ тӗрлӗ усал-тӗсел ҫинчен каласа панисем пуҫа ҫиҫӗм евӗр вирхӗнсе кӗчӗҫ: хӗрт-сурт, ҫынсем пекех, мунчара ҫапӑнма юратать тени аса килчӗ...

Ман вырӑнта хӗрарӑм пулнӑ пулсан-и — мунчу-качку! — хӑранипе ҫине тӑхӑнмасӑр тухса сирпӗнетчӗ ӗнтӗ. Манӑн вара ҫав хӗрт-сурта калама ҫук курас килчӗ. Шиклене-шикленех шӑппӑн ура ҫине ҫӗклентӗм, хуллен йӑпшӑнса мунча чӳречи патне пытӑм та пӗшкӗнсе шалалла пӑхрӑм... Никам та ҫук. Лавка пушӑ, милӗксем те эпӗ хунӑ вырӑнтах... Туйӑнчӗ ҫеҫ-ши?.. Каллех кайса выртрӑм, тӑнлатӑп — каллех ҫапӑнать. Икӗ милӗкпех ҫатӑлтаттарать, канлӗн ахлатса та мӑшлатса илет. Иккӗмӗш хут йӑпшӑнса пытӑм — каллех никам та курӑнмарӗ. Вӑт тӗлӗнтермӗш! Аптранипе мунча йӗри-тавра тишкерсе ҫаврӑнтӑм. Пӑрӑнса пралукалла пӑхрӑм та — мунча пӗр кӗтессинче сысна хыҫкаланса тӑрать...

Ҫапла питӗ ӑста улталаса хӑварчӗ мана хӗрт-сурт. Ҫывхартрӗ те — ҫухалчӗ. Пурччӗ — халӗ ҫук... Чӑннипех шухӑшласан — пур-и вӑл ҫӗр ҫинче, ҫук-и? Ҫук пулсан мӗншӗн манӑҫа тухмасть вӑл? Мӗншӗн сӗм авалтанах тӗрлӗ халӑх шухӑш-кӑмӑлӗнче пурӑнать? Пур пулсан мӗн вӑл? Кам вӑл? Хӗрт-сурт — ау! — ӑҫта эсӗ?

Хирӗҫ чӗнекен ҫук...

## ПАРНЕ

Василий Анисимович пушмакне алла илчӗ те ассӑн сывласа ярса пуҫне салхуллӑн сулкаларӗ. Тепӗр икӗ эрне тӳсӗ-ши, тӳсмӗ-ши... Тек юсасан та усси пулас ҫук. Пӗр саланма тытӑнсан нимӗнле пӑта та, нимӗнле саплӑк та пулӑшмасть ҫав. Ҫара уран ҫӳремелле-и вара? Ҫӗнни илес — ой-ой-ой! Миҫе пин тӑрать халӗ вӑл. Пенси тӑранкаласа пурӑнма ҫитет-ха. Анчах пушмак туянас пулсан мӗнле пурӑнмалла? Шӑл шаккаса ҫӳренипе хырӑм выҫҫи каҫармасть-ҫке.

Ҫакнашкал хавассӑр шухӑшсемпе пуҫне пӑтратса Василий Анисимович килӗнчен тухрӗ. Юлташӗ кӗтет-ха ӑна, калаҫмалли пур. Ҫул пӗр енӗпе ҫӳллӗ карта тӑсӑлать. Карта хыҫӗнче пӗрлешӳллӗ сад. Пыратчӗ утса Василий Анисимович, сасартӑк хӑй те сисмерӗ, чарӑнчӗ. Инҫе те мар пӗчӗк йыт ҫури... пушмакпа вылять. Шӑлӗсемпе ярса тытнӑ та е лӑстӑр-лӑстӑр силлет, е унталла-кунталла сулкаланать, е ҫурас пек малти урисемпе пусса туртать.

Иртсе пыракан ҫын хӑй ҫине куҫне тӗлленине курсан йытӑ ҫури пушмака пӑрахрӗ, хӑй вара тем калас пек ун ҫине пӑхса илчӗ. Унтан икӗ хӑма хушшинчи пӗчӗк шӑтӑкран карта леш енне кӗрсе ҫухалчӗ. Василий Анисимович пушмака илчӗ, ҫаврӑкаласа пӑхрӗ. «Лайӑх, ҫирӗп ботинках... Хуҫи шырать пулӗ. Вӑт шельма», — куларах шухӑшларӗ вӑл. Вара карта ҫине ҫӳллӗ хӑма тӑррине тӑхӑнтартса хӑварчӗ.

Пӗр-икӗ сехетрен каялла килнӗ чух пӑхать — шӑп паҫӑрхи вырӑнтах ҫав йытӑ ҫури каллех пушмака муталать-турткалать, силлет, пӑрахать, каллех ярса тытать. Ку хутӗнче те чӑтаймарӗ Василий Анисимович, чарӑнчӗ. Пӗчӗк ашкӑнчӑк каллех пушмака шӑлӗнчен вӗҫертрӗ те пуҫне ҫӗклесе ҫын ҫине пӑхса илчӗ. «Кирлӗ-и сана? Пама пултаратӑп. Ме», — тесшӗн пулчӗ-ши вӑл, хӑй чӗлхипе тем

тĕхлетсе илсе пăрăнчĕ те шăтăкран кĕрсе кайрĕ. Айуй! Çав пушмаках-çке ку!.. Мĕнле майпа?..

Василий Анисимович карта çине пăхрĕ... Лешĕ унтах çакăнса тăрать. Вăр-вар кармашса илчĕ, танлаштарса пăхрĕ. Тĕлĕнмелле... Ун аллинче халĕ пĕр мăшăр лайăх, çирĕп ботинка... Калăпăшĕ те унăн... Тăхăнса пăхмасăрах паллă. Тусанпа вараланнă çеç. Тата, хуçи тем сăрланă пулас, темиçе çĕрте сăр тумламĕсем пур. Ну, куна тасатма пулать. Ик-виçĕ çул упрарах тăхăнсан, тен, ытларах та тӳсĕ...

«Анчах юрамасть-çке капла, — пырса çапрĕ пуçа тепĕр шухăш. — Тем тесен те...» Эй, мĕн шухăшласа тăмалла вара? Вăрламан вĕт. Тата... тĕрĕсрех каласан, парне вăл. Йытă çури парнелерĕ ăна... Тен, пĕлнĕ вăл. Тен, çакăнтан иртессе чухласа юри ун валли илсе тухнă. Çыраççĕ-çке, калаççĕ мĕн пуласса малтанах пурне те ăнкаракан тĕлĕнмелле çынсем пурри çинчен. Йытăсем хушшинче çук-и вара ун пеккисем? Паллах, пур. Мĕнле ăслă йытăсем пулаççĕ ăшшĕ. Çавнашкал сисĕмлĕхпе вĕсем çынран та ирттереççĕ... Кам пĕлмест кун çинчен...

Василий Анисимович хаклă парнене хул хушши айне хĕстерчĕ, пиншакĕпе хупларĕ те, сасартăках шăм-шак çăмăлланнине туйса килнелле вашлаттарчĕ.

## АШКĂНЧĂК

Кӳршĕ ял çыннипе халĕ кăна Мускавран хăнана килнĕ ултă çулхи Вова, Ален кинеми мăнукĕ, çĕнĕ вырăнта малтанхи кунах ашкăнчăк ятне илтрĕ. Чăнах та, пӳрте те кĕмерĕ вăл, çул çинчен апат çиме те килĕшмерĕ, тӳрех картишĕнче ухтарма пуçларĕ. Вите алăкĕсене уçа-уçа хупрĕ, нӳхрепе анса хăпарчĕ, чăхсене шуйхатса салатрĕ, автана хӳринчен ярса тытма хăтланчĕ, унтан пĕчĕк чĕпсем патнелле йăпшăнса пыма пуçларĕ.

— Юрамасть вёсене тивме, — илтĕнчĕ çавăнтах кăмăлсăр сасă.

Вова умне хĕрлĕ çӳçлĕ, куктĕр питлĕ хĕр ача пырса тăчĕ. Ку Миля, Вова тăванĕ. Вăл унран пĕр çул аслă, çак çуртра пурăнать. Кăмăла каймасть хĕр ачана аякран килнĕ хăна вĕсен килĕнче çапла пуçтахланса çӳрени.

— Юрамасть чĕпсене тытма. Вĕсем пĕчĕк. Хăраççĕ, — терĕ вăл хура çӳçлĕ, хура куçлă хурăнташĕ çине çиллессĕн пăхса.

Вова хирĕç чĕнмерĕ. Чăх хыттăн кăтиклетме тытăннине илтсе çавăнтах аслăк еннелле утрĕ.

— Ан пыр çывăха. Ан хăрат чăхха. Çăмарта тăвасшăн вăл, — чарчĕ ăна каллех Миля. — Асанне, — терĕ хĕр ача Ален кинеми крыльцара курăнсан. — Мĕн вĕçĕмсĕр ашкăнать вăл? Чаратăп, чаратăп, вăл пур — хăлхана та чикмест.

— Эсĕ йĕркеллĕ кала, ăнлантар, кăтарт. Вĕсен хулара ун пекки çук.

Çав самантра сарайĕнче сысна çури çухăрса ячĕ.

— Акă каллех! — терĕ те Миля çиллессĕн сасă енне вирхĕнчĕ.

Вова пахчана тухрĕ. Кĕçех унтан шыв шавласа юхни илтĕнчĕ. Каярахпа асламăшĕ мăнукне вут шаршанĕ çинчен хуса ячĕ.

— И-и, чарусăр, — кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ Ален кинеми.

— Вова, — терĕ вăл ача çывăрма выртсан койка хĕррине ларса. — Ывăнтăм эпĕ паян санпа. Эс мĕншĕн çапла ашкăнатăн?

— Эпĕ-и? — ача куçĕнче тĕлĕнни те, кăштах пăшăрханни те курăнчĕ. — Çук, асанне, эпĕ ашкăнман. Эпĕ аннене чăн-чăн сăмах патăм йĕркеллĕ ача пулатăп тесе.

— Мĕншĕн апла чăх-чĕппе картишĕнче лăпкă çӳреме памастăн? Мĕншĕн сысна çурисене шуйхататăн?

Вова тăруках чĕнмерĕ.

— Эпĕ... эпĕ юратса, — терĕ вăл юлашкинчен. — Манăн вĕсене шутсăр ачашлас килет.

— Пахчара шыв кранне мĕншĕн уçрăн? — каллех ыйтрĕ Ален кинеми. — Ăна та юратса-и? Ну, ма чĕнместĕн?

Ача асламăшĕ çине айăплăн пăхса илчĕ.

— Эсĕ мана вăрçмастăн-и чăннине каласан?

— Тĕрĕс каланăшăн, паллах, вăрçмастăп.

— Шыв шавласа юхнине курас килчĕ те, — хуллен пĕлтерчĕ Вова.

— Вут шаршанĕ çине мĕншĕн улăхса кайрăн тата? Унтан мĕн курмалли тупрăн?

— Автанла авăтас килчĕ, — терĕ те Вова ассăн сывласа ячĕ.

— Асту, ачам, тек ан хăпар унта, — куллине пытарса асăрхаттарчĕ Ален кинеми. — Шаршанĕ ишĕлсе анма пултарать. Турă сыхлатăр инкек-синкекрен... Юрĕ, калаçрăмăр. Ĕнтĕ çывăр. Ыран акă иксĕмĕр чĕпсене тăрантарăпăр, сысна çурисене те çитерĕпĕр.

«Вăт, пыр та калаç вĕсемпе, ачасемпе, — шухăшларĕ Ален кинеми çывăрса каяймасăр. — Эпир вăрçатпăр вĕсене, ӳпкелетпĕр. Унăн вара автан пек авăтас килнĕ... Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен теççĕ çав. Ултă çулхи ача ăс пачĕ мана паян».

Хĕрарăм кĕске вăхăт мăнукĕ канлĕн мăшлаттарса сывланине итлесе выртрĕ, унтан ăна пуçĕнчен хуллен ачашласа илчĕ.

— Çывăр, пепкем... Çывăр, ылтăнăм.

## ИНÇЕ ÇУЛ

Çуллахи шăрăхран пытанса эпĕ хула паркне кĕтĕм. Хĕвел йывăççем çийĕн çĕкленеймен-ха, çавăнпа кунта сулхăн. Нумаях пулмасть çумăр çуса кайнă. Сывлăш таса, уçă. Унта-кунта пĕчĕк шыв

кӳлленчӗкӗсем кӑваккӑн йӑлкӑшаççӗ, йӗри-тавра симӗс илем, хитре чечексем. Лӗпӗшсем вӗçеççӗ, кайӑк-кӗшӗк чӗвӗлтетет.

Эпӗ ансӑр çулпа васкамасӑр утатӑп. Акӑ мана хирӗç пӗчӗк çын таплаттарса пырать. Хаваслӑ куçӗсене умри инçете тӗлленӗ, аллисене малалла тӑснӑ. Çирӗпленсе çитеймен урисем имшер-ха. Вӑл сулӑна-сулӑна каять, чарӑнса тӑрать. Акӑ тайӑлчӗ, тытӑнса тӑраймасӑр купарчи çине лак ларчӗ. Анчах йӗрсе ямарӗ. Çывӑхри тенкел çинчен хӑйӗн кашни хусканӑвне ытарайми сӑнаса ларакан çамрӑк арçынпа хӗрарӑм çине çаврӑнса пӑхрӗ çеç. Çӗкленчӗ. Вара каллех малалла ӑнтӑлчӗ. Вӑл ман пата çывхарсан эпӗ пӑрӑнса тӑтӑм.

— Инçе çулу такӑр пултӑр, пепкем!

## ӐÇТА-ШИ ЭСӖ ХАЛӖ?

*Фантастикӑллӑ калав*

> Кашни каçах, ялан пӗр вӑхӑтра,
> (Е тӗлӗк çеç ку вылянать чунра?)
> Хӗр пӗвӗ-сийӗ пурçӑн виткӗчпе
> Шӑвать, иртет тӗтрелле тӗттӗмпе.
>
> *А. Блок*

Çичӗ çул каялла пӗр хӗллехи каç ман пурнӑçра тӗлӗнмелле пулӑмсем пулса иртрӗç. Ун чух эпӗ университетра виççӗмӗш курсра вӗренеттӗм. Пурне те паянхи пекех лайӑх астӑватӑп пулин те кун çинчен халиччен никам умӗнче те çӑвар уçман. Çапах каласа парас килет. Анчах юлташа мар, туса мар, мӗншӗн тесен шанчӑклӑ çыннӑн хӑйӗн шаннӑ тусӗ пур. Пӗр-пӗр хаçата е журнала çырса ярсан? Тен, вулакансенчен кама та пулин курма тивнӗ çавнашкал тӗлӗнтермӗшсем. Ятӑма, паллах, улӑштаратӑп, мӗншӗн тесен — туятӑп эпӗ — вулакансенчен чылайӑшӗ тӗлӗкре курӑннӑ е ӑсран тайӑлнӑ ку çын теме пултараççех. Чӑнах та, çавнашкал

вăрттăнлăха шăпа пурне те уçса кăтартмасть çав. Нумайăшĕ нихăçан та нимĕн те курмасть. Кулленхи пурнăçра тĕлĕнмелле япаласем пулса иртнине тавçăрмасăрах ĕмĕрне пурăнса ирттерет. Курма тивĕçлĕ пулнисенчен унашкаллисем ăсран тайăлнă, «пуçĕнче пурте çук» тесе шăл йĕрме юратаççĕ. Çакна пулах лешсем тĕлĕнтермĕшсем çинчен çынна-мĕне пĕлтерме васкамаççĕ. Эпĕ те çичĕ çул шăл шурри кăтартмарăм.

Пач ĕненмен вулакана çапла калас килет — тен, тĕлĕкре курăннă вăл мана, тен, пĕр-пĕр пуç мими чирĕ ăса вăхăтлăха пăтратса янă. Анчах шухăшласан мĕн пĕлетпĕр эпир чăн-чăн пурнăç çинчен? Çĕр чăмăрĕн тĕрлĕ енĕсенче çулран-çул çĕнĕренçĕнĕ ăнланмалла мар япаласем тупни, пулса-иртни, курни çинчен вулатпăр, илтетпĕр. Юлашки вăхăтра хваттерсенче, пӳртсенче шаккакан барабашсем, япаласене вырăнтан вырăна куçаракан полтергейстсем, малашне мĕн пуласса пĕлекен экстрасенсем, пĕлĕтре вĕçекен НЛОсем тата ытти тĕлĕнтермĕшсем çинчен час-часах çырма пуçларĕç. Çапла, тĕнче чăннипех эпир шухăшлама хăнăхнă пек маррине эпĕ ĕненетĕп.

Çав каç вара... Студент пурнăçĕнче хĕрӳ вăхăтчĕ ун чух. Хĕллехи сесси, экзаменсем пуçланнăччĕ. Пĕр пытармасăр калатăп — эпĕ питĕ лайăх вĕренекенсен шутĕнче пулман. Мĕн вĕрентнине пурне те тĕплĕн тишкерсе пысăк пĕлӳ илес шухăш та кăмăлăма хĕтĕртмен ун чух. Çапах курсран курса йĕркеллех куçса пынă, стипенди илнĕ. Анчах çав каç тем пулчĕ-çке мана, пĕр сăлтавсăр-мĕнсĕр чуна сӳрĕклĕх çавăрса илчĕ. Нимĕн те тăвас килмест. Çийĕнчех ăшра темле канăçсăрлăх та хускалчĕ — таçта каймалла пек манăн, такам кĕтет пек. Аса килех кайрĕ — виçĕм кун дискотекăра Анюта ятлă хĕрпе паллашрăм. Аптрамасть пек туйăнчĕ вăл мана. Кăмăллă, чипер. Адресне те çырса хунăччĕ. Аха,

акă вăл. Аякра пурăнать çав, хула тепĕр вĕçĕнче. Юрĕ-çке. Кунашкал кăмăлпа пурпĕрех вĕренесси пулмасть.

Ăшри сÿрĕклĕхе вăйпа сирсе эпĕ пуçтарăнма тытăнтăм — çăвăнтăм, хырăнтăм, тумлантăм та хваттертен тухрăм. Каçĕ лăпкă, ăшă. Сывлăшра шурă юр çăлтăрĕсем юлхавлăн ярăна-ярăна анаççĕ, васкамасăр çĕр питне кăпăшка пĕркенчĕкпе витеççĕ, пит-куçа перĕне-перĕне ирĕлеççĕ. Акă талккишпех хупăрланса тăракан пĕлĕтсем çиййĕн типĕ хаяр сасă шалтăртатса чупса саланчĕ. Çапла, сайра хутра аслати хĕлле те пулма пултарнине пĕлетĕп-ха эпĕ. Анчах хам кунашкал япалана пĕрремĕш хут илтетĕп.

Аслă çул çине тухса кирлĕ троллейбуса кĕтсе илтĕм те кĕрсе лартăм. Нумай иртрĕ-ши вăхăт, сахал-и, халĕ астумастăп ĕнтĕ, троллейбус чарăнчĕ.

— Малалла каймасть. Энерги çук, — пĕлтерчĕ водитель. Алăксем уçăлчĕç. Пассажирсем пĕри чĕнмесĕр, тепри кăмăлсăррăн мăкăртатса салонран туха-туха утрĕç. Эпĕ те вырăнтан çĕклентĕм. Телее, автобуссем çÿреççĕ-ха. Миçемĕш номерли каять-ши унталла? Ыйтас пулать. Тата ăçта эпĕ? Хăш вырăнта? Çывăхра иртен-çÿрен курăнмасть. Çанталăк унчченхи пекех лăпкă. Юр вăйланнă. Йăваланать кăна. Урамра тĕттĕм. Çÿлтен тăкăнакан шурă пĕркенчĕк витĕр çуртсен тĕксĕм мĕлкисем çеç палăраççĕ. Инçе те мар йывăççем хыçĕпе курăнакан икĕ хутлă пысăках мар кермен кăна аякранах çуталса ларать. Ун çывăхĕнче çынсем куçкалаççĕ, алăк вĕçĕмсĕр уçăла-уçăла хупăнать. Автобус пирки камран та пулин ыйтса пĕлес тени, кунсăр пуçне тата темле çăмăл туйăм мана çав çутă çурт еннелле тĕртрĕ. Мĕн унта?

Алăка яри уçса эпĕ чылаях пысăк пÿлĕме кĕрсе тăтăм. У-у мĕн чухлĕ çын! Ытларах арçынсем ушкăнăн-ушкăнăн тăраççĕ, тем çинчен халапласççĕ,

хаваслăн кулаççĕ. Унта-кунта курăнакан пĕчĕк сĕтелсем çинче тĕрлĕ эрех кĕленчисем, черккесем лараççĕ, çырткаламалли те пур. Анчах вĕсем çывăхĕнче кĕпĕрленекенсем çук. Сайра хутра кăна пĕрерĕн-икшерĕн пыра-пыра тутанса каяççĕ çеç. Ӳсĕрсем курăнмаççĕ. Ку мана, паллах, тĕлĕнтерчĕ. «Юлашки çулсенче пуйнă пĕр-пĕр шутсăр пархатарлă йĕркеллĕ хуçа хăйĕн чи çывăх лайăх пĕлекен çыннисемпе темле уяв ирттерет пулас», — шухăшларăм эпĕ. Çапах мана эсĕ ют çын, каялла тух текен пулмарĕ.

Çурри уçă тепĕр пӳлĕм алăкĕнчен çемçе пукансем, дивансем çинче ларакан капăр тумлă хĕрарăмсен ушкăнĕ курăнать. Сĕтел çинче сăмавар, тĕрлĕ пылак апат-çимĕç. Иккĕмĕш хутран хаваслă кĕвĕ янрани илтĕнет. Унта, паллах, çамрăксем, унта ташă. Çакна эпĕ кĕрсе тăрсанах тавçăрса илтĕм. Нумай шухăшласа тăмарăм, çиелти тума хывса гардероба патăм та сарлака мрамор пусмапа çӳлелле хăпарса яри уçă алăкран пысăк зала кĕтĕм. Çапла, тĕрĕсех. Кунта çамрăксем ташласа савăнаççĕ. Кăшт аяккарах пăрăнса тăтăм та йĕри-тавра тимлĕн пăхса çавăрăнтăм. Пĕр паллакан сăн та курăнмасть.

— Эсĕ мана шыратăн пулас, — пырса тăчĕ ума йăрăс пӳллĕ хĕр. — Ташлатпăр-и?

— Савăнсах.

Хаваслă ташă кĕвви, илĕртӳллĕн кулакан хĕр мана пулса иртекен тĕлĕнтермĕшсем çинчен мантарчĕ. Мĕнпур çамрăк кăмăлпа эпĕ çак чун ырлăхĕн ытамне ăнтăлтăм.

Кĕрлет, кĕшĕлтетет, сиккелет, авкаланать пысăк зал ăш-чикĕ. Курса тăракансем те пур. Акă эпĕ хам çине пăхакан куçсене асăрхарăм. У-у, мĕн тери хитре пике!

Музыка шăплансан эпĕ палламан хĕре тав турăм та çемçе пукан илсе ларма сĕнтĕм. Хам аяккарах пăрăнтăм, вара каллех унталла-кунталла хуçка-

ланма, авкаланма тытăннă çамрăксене тĕрткелесе, вĕсен хушшипе хĕсĕнкелесе хитре хĕр патне васкарăм. Анчах çывхартăм кăна, хăюлăх тасçта кайса çухалчĕ, чĕлхе-çăвар çыхланчĕ, калас сăмахсем тарса пытанчĕç. Телее, хама алла илме пултартăм, асаплă хăюсăрлăха путарса ăна ташлама чĕнтĕм.

Ах, ташă, ташă, çамрăксен киленĕвĕ. Мĕн чухлĕ хĕре, качча паллаштарман, туслаштарман пулĕ вăл!

Çывăхран вăл мана пушшех чиперрĕн курăнчĕ. Пăхма çирĕм-çирĕм иккĕсенчен ытла мар. Пĕвĕсийĕ çӳллĕ, йăрăс. Яка туранă çырă çӳçĕ вăрăм, кăпăшшăн ансăр хулпуççийĕ çине усăннă. Килĕшӳллĕ çутă тумĕ илемлĕ кĕлеткине уйрăмах палăртса кăтартать. Авăнчăк хура куç харшийĕ айĕпе пăхакан пысăк хăмăр куçĕ кăмăллăн йăлкăшать.

— Сан пек хитре хĕр халиччен курман, — персе ятăм эпĕ сасартăках капланса килнĕ хĕрӳллĕ туйăма пытараймасăр. Вăл чĕнмерĕ. Эпĕ калани кăнттамрах тухрĕ пулин те, ырă сăмахсемшĕн тав тунă евĕр, илемлĕн йăлкăшакан пысăк куçне ман çине тĕллерĕ те хитре тутине хускатса ăшшăн кулса илчĕ.

Тем пулчĕ мана. Çав самантчен нихăçан та, пĕрре те хĕрпе тĕл пулсан чĕре çапла хумханнине, хаваслăн, тутлăн пăчăртана-пăчăртана илнине астумастăп.

— Мĕншĕн халиччен курман сана?

— Эпĕ кунти çын мар.

— Аякра пурăнатăн-и? Ăçта?

— Кунтан курăнмасть.

— Çапах, ăçтан? Космосран мар пулĕ те? — шӳтлеме пăхрăм эпĕ.

Чипер хĕр хаваслă куçне ман çине тĕллерĕ те килĕшнĕ пек пулса пуçне сĕлтрĕ.

— Шăп çавăнтан. Чăнах, чăнах.

— У-у, инçетрен, — çаплах шӳт турӑм эпӗ чӗре хаваслӑн тапнине туйса. — Ĕçпе-и пирӗн пата? Хӑнана-и?

— Ко-ман-ди-ровкӑра, — йывӑррӑн, тӑсарах каларӗ вӑл.

— Ав епле, — кулса ятӑм эпӗ. — Мӗн ятлӑ эсӗ, космос хӗрӗ?

— М-м... Клара.

— Клара кунти ят мар.

— Ну-у, апла Лариса... Аха, Лариса.

— Клара, Лариса. Чӑн-чӑн яту мӗнле?

— Сана ӑна пӗлме кирлӗ мар.

— Мӗншӗн?

— Калама йывӑр. Чӗлхӳне хуçӑн тата.

— Анчах эсӗ, космос хӗрӗ, пирӗн пекех калаçатӑн-çке.

— Эпӗ юри вӗреннӗ. Тата манӑн пӗчӗк коробка пур. Вӑл пулӑшать.

Ну, тӗл пулчӗ хӗр! Маттур. Шӳт тума, сӑмах вылятма ӑста. Çапах кам-ши вӑл?

— Эсӗ, Лариса, артистка мар-и?

— Артистка? Камччӗ-ха вӑл? Çук, эпӗ артист мар. Эпӗ...

Çав вӑхӑтра пирӗн пата икӗ çамрӑк арçын çывхарчӗ. Пӗри кӗрнеклӗ пӳ-силлӗ, çырӑ вӑрӑм çӳçӗ сарлака хулпуççийӗ çине хумлӑн-хумлӑн кӑтраланса анать. Пӑхмасӑр, сӑмах каламасӑр, вӑл мана çирӗп чавсийӗпе тӗксе сирчӗ те хӗре тӳрккессӗн аллинчен ярса тытрӗ.

— Эсӗ мана килӗшетӗн. Атя ташлатпӑр.

— Ку ман хӗр. Вӑл манпа ташлать, — терӗм эпӗ чылаях сиввӗн.

Сӗмсӗр каччӑ ман çине пӑхмарӗ те. Юлташне тем систерсе пуçне сӗлтрӗ çеç. Лешӗ, çинçе питлӗ, çинçе хура уссиллӗ, çирӗм çулсенчен иртнӗ çамрӑк, аллине ман хулпуççи çине хучӗ.

— Атя тухар, унта калаçӑпӑр. Ман тусӑм хӑйне

чăрмантаракансене юратмасть. Нивушлĕ вăл камне пĕлместĕн эсĕ? Вăл...

— Сирĕл-ха кунтан, — терĕм эпĕ ăна хĕр çирĕп алăсенчен çăлăнма хăтланнине курса. Пăрахса хăварма юрать-и ăна çакнашкал çынпа? Сĕмсĕр каччă мăшкăлне тӳсес килмерĕ манăн. — Вĕçерт хĕре! Ну! — сăрхăнтартăм эпĕ шăл витĕр хаярлăх капланса килнине туйса. Чышкăсем сисмесĕрех чăмăртанчĕç.

— Вăт çыпçăнчĕ. Хуса яратăн-и эсĕ çак вăрăм тунана ман çывăхран? Нăйлать те нăйлать, — терĕ тăрнаккай каччă пуçне каллех ман енне юлхавлăн сĕлтсе. Хăрах аллипе çаплах хĕре пилĕкрен ыталаса тепринпе вăл ман хула хыттăн пăчăртарĕ.

Ӳт-тире пӳрнесем мар, йĕпсем тирĕнсе кĕчĕç тейĕн. Мĕн ун ывăçĕнче? Пĕчĕк çĕçĕ-и? Шĕвĕр пралук-и? Е тата мĕн те пулин чĕрмелесе ыраттаракан урăх япала? Калама çук тарăхса кайнăскер, эпĕ çав самантра ыратнине лайăххăн туймарăм. Ярса тытса çав алла хам паталла карт туртрăм. Турăçăм! Е туйăнчĕ-ши мана? Чăн-чăн этем пӳрнисем вĕçĕнче шĕп-шĕвĕр хура чĕрнесем курса юлма ĕлкĕртĕм. Кушак чĕрнисем пек вĕсем, хăвăрт шалалла кĕрсе пытанчĕç.

— Пурнăçна шеллетĕн пулсан халех тухса шăвăн кунтан! — çиллессĕн пăшăлтатрĕ хыçрах хура усси.

Çапла каласа вăл мана çурăмран хыттăн чышрĕ. Пăхма маттур çынах мар, анчах вăйлă иккен алли. Чикеленсе кайса эпĕ тăрнаккая пырса перĕнтĕм. Тем пулчĕ-çке ăна, ури çыхланчĕ-ши. Унсăрăн çавнашкал пӳ-силлĕ çамрăк ӳкмелле мар пек. Апла пулин те вăл çĕре персе анчĕ. Эпĕ ура çинче тытăнса тăма пултартăм. Анчах çав-çавах çирĕп кĕлеллĕ пушмакпа ун пичĕ çине пусрăм. Вăл картах туртăнчĕ, тăма хăтланса пуçне çĕклерĕ. Вара...

Хăранипе эпĕ ирĕксĕрех каялла чакрăм. Кĕтмен çĕртен куктĕрлĕ пит çурăлса икĕ енне уçăлса кайрĕ

те... тамаша! — ун айӗнче тепӗр пит-куҫ куранчӗ. Тӗрӗсрех мӗнле сӑмахсемпе ҫырса кӑтартас-ши ман ӑна? Вӑл ҫавра мар, тӑрӑхла та мар. Шӗп-шӗвӗр кӗтессем ҫук пулин те геометрире асӑнакан ромб евӗрлӗ — сарлака хӑлха тӗпӗсен тӗлӗнчен пуҫ тӳпешки патнелле те, аялалла янах еннелле те ансӑрланса, шӗвӗрӗлсе пырать. Каҫӑр сӑмси шутсӑр сарлака, тата куҫӗсем айӗнчех. Тути хулӑн, питӗ пысӑк. Маска!.. Мӗн тери нӗрсӗр пит-куҫа хупласа пытарнӑ иккен эпӗ ӑнсӑртран пуснипе ҫурӑлса кайнӑ ҫак маска. Чӑн-чӑн пичӗ усӑлнине туйнӑ тискер чӗр чун (ҫын теме пултараймастӑп эпӗ ӑна) хӑвӑрт сиксе тӑчӗ. Питне аллисемпе хупларӗ те кӗшӗлтетекен ҫамрӑксене тӗрткелесе залран сиксе тухрӗ. Хура уссилли — ун хыҫҫӑн. Хуса ҫитес, чарас тесе эпӗ хыҫран ыткӑнма тӑнӑччӗ.

— Хӑвалама кирлӗ мар, Тима, — чарчӗ мана хӗр аллипе хулпуҫҫие перӗнсе. — Пурпӗр тытаймастӑн. Хӑрушлӑхра вӗсем куҫран пӑч ҫухалма та пултараҫҫӗ. Турра шӗкӗр, пирӗнсӗр пуҫне урӑх никам та нимӗн те асӑрхамарӗ пулас. Ташлар-и?

— Мӗне... Мӗне пӗлтерет ку мыскара? — ыйтрӑм эпӗ ытла та хумханса кайнине пула мӗнпур кӗлеткепе чӗтресе. — Кам пулчӗ вӑл? Мӗнле майпа?..

— Вӗсем лерен... Пирӗн енчен, — терӗ те хӗр ассӑн сывласа ячӗ. — Санран пытарас теместӗп. Пурпӗрех эсӗ куртӑн. Усал тӗнче хуҫисем яраҫҫӗ вӗсене кунта.

— Мӗн тума?

— Ҫӗр ҫинчи тӗрӗсмарлӑха, хаяр киревсӗрлӗхе тата та ӳстерес, пушшех хӑпартса ярас шутпа.

— Эсӗ кам вара? — ыйтрӑм эпӗ хальхинче вӑл каланине ирӗксӗрех ӗненсе.

— Ҫавнашкал ирсӗрсене йӗрлесе тупса сиен кӳме чаракансенчен пӗри.

— Эсир пире пулӑшасшӑн-и? Мӗне пула?

— Эпир кӳршӗсем. Ҫӗр ҫинче усал вӑй алхасать

пулсан пире те кансĕр. Тĕнчере пурте пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Тавтапуç. Пулăшрăн мана.

— Мĕнле? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Таврари çынсенчен уйăрса илме çăмăл мар вĕсене, çавăнпа яланах сыхă пулмалла. Ахаль çулăхрĕ тетĕн-и ăна ман çума? Тем сисрĕ вăл. Май пулсан вĕсем пире те шеллесе тăмаççĕ. Телее, эсĕ тытса чартăн ăна. Çавăнпа, тен, мана та хăрушлăхран çăлтăн. Вăл камне пĕлме кирлĕ меслет тупма ĕлкĕртĕм эпĕ.

— Эсĕ пулăшрăн-и ăна урайне персе анма?

— Тата сисмесĕрех санăн ун пуçĕ çине пырса пусмалла пулчĕ. Пĕтĕмпех вăтантарса ятăн качча. Питне аллисемпе хупласах тухса тарчĕ, — йăл кулчĕ хĕр. Çав кулă кăштах лăплантарчĕ. Эпĕ хама алла илтĕм.

Курни-илтни мана хытă тĕлĕнтерчĕ пулин те, вăл сыхлăха, иккĕленĕве пĕтĕмпех сирсе яма пултараймарĕ. Чăнах-и ку? Е вăйă-кулăшăн такам юри шутласа кăларнă шӳт кăна? Ман çумра хĕр. Калама çук чипер хĕр. Пысăк залра мăшăрăн-мăшăрăн куçкалакан хаваслă çамрăксем хушшинче эпир те çавăрăнатпăр. Унăн илемлĕ алли ман алăра. Эпĕ унăн çинçе пилĕкне перĕнетĕп, вăл сывланине туятăп, унпа калаçатăп... Анчах вăл кунти çын мар. Вăл юмахран, иртнĕ ĕмĕрсенче халăх хушшинче çӳрекен халап-юмахран килнĕ. Кам вăл? Çын-и? Е?.. Е вăл та лешсем пекех? Çук! Çук...

Ухмаха тухатăп пулĕ эпĕ.

Пĕлĕтре каллех çиçĕм ялтлатрĕ, пуç çийĕн асլати кĕмсĕртетсе иртрĕ.

— Манăн каймалла, — терĕ хĕр сасартăках алăран вĕçерĕнсе. — Сывă пул.

— Ăçта? — ăнсăртран тутлă ыйхăран вăраннă пек, эпĕ картах сикрĕм. Чĕре асаплăн ыратса хĕсĕнчĕ. — Тулта çил-тăман. Тата лешсем... Вĕсем ирĕкре, тен, сывăхрах кĕтеççĕ...

— Паллă турăм эпĕ вĕсене. Тек ашкăнаймĕç.

— Епле майпа?

Хĕр чĕнмерĕ.

— Эпĕ ăсатса яратăп.

— Кирлĕ мар. Манăн хамăн çул-йĕр. Сывă пул.

— Эпир тĕл пулмастпăр-и?

Вăл хăвăрт тумланчĕ, алăка яри уçса çавăрăнакан-пĕтĕрĕнекен юр тĕтрине ярса пусрĕ, куçран çухалчĕ. Вăй-хал лăштăрах кайнине туйса эпĕ пысăках мар çурма тĕттĕм пӳлĕме кĕтĕм те çемçе пукан çине тĕршĕнтĕм. Чĕре хĕссе ыратрĕ, куçран куççулĕ шăпăртатса юхрĕ. Пуç шавларĕ, таçта такамсем ман çинчен тем калаçрĕç, хурлăхлă кĕвĕ хуллен янрарĕ...

Çывăрса кайнă-ши эпĕ, тăна çухатнă-ши, пĕлместĕп. Такам хулпуççирен лăсканипе куçа уçрăм.

— Тима, вăран-ха, вăран.

Пăхатăп — икĕ хĕрарăм тăраççĕ. Кӳршĕсем. Каç. Йĕри-тавра шурă юр, хура йывăçсем. Хам пурăнакан çурт патĕнче, подъезд умĕнче выртатăп иккен эпĕ.

— Малтан эпĕ ӳсĕр тесе. Тĕлĕнтĕм, — пырса кĕчĕ хăлхана хуллен мăкăртатнă сасă.

— Мĕнле çитнĕ вăл çак вĕрипе? Вутри пекех çунать, шеремет.

Апла чирлĕ эпĕ. Çиçĕм евĕр ялтлатса ăс-тăн иртнине çутатса астутарчĕ — Анюта патне кайма шутлани, чарăннă троллейбусран палламан вырăна тухни, пысăк çутă керменте калама çук чипер хĕрпе ташлани, ăна хӳтĕлеме хăтланса çĕре тăсăлса ӳкнĕ çын евĕр тискер чĕр чун пуçĕ çине пырса пусни, уйрăлни... Урăх нимĕн те астумастăп. Мĕнле çитнĕ эпĕ киле? Чăннипех хамах-и? Е кам та пулин тумлантарса илсе тухнă мана çав çуртран? Çакăнта илсе килсе юр çине хурса хăварнă?

Экзамен тытмалли кунсене эпĕ больницăра ирттертĕм. Нервăпа çыхăннă темле йывăр чир мана

виçĕ эрнене койка çумне çыхса хучĕ. Тăн е çуталать, е каллех таçта тĕттĕмелле чăмса çухалать. Ырă е хăрушă тĕлĕксем канăç памаççĕ. Çав каç тĕл пулса ташлană, чуна хускатнă палламан хĕр час-часах куçа курăнать.

Акă халĕ те йĕрес пек тарăхса та хурланса вăранса кайрăм. Эпĕ халиччен пулман-курман çеçен хирте пĕчченех тăратăп пек. Каçхи тĕттĕм тӳпере кăшт палăракан тăрăхла япала çакăнса тăрать. Акă вăл çуталчĕ те çĕр çине тĕрлĕ тĕслĕ йăлтăркка пайăркасем сапаларĕ. Унтан çӳлтен ман енне вĕçсе анакан çутă çаврашка мĕлтлетсе илчĕ. Кĕçех вăл темиçе утăмра çăмăллăн çĕре перĕнчĕ, хуллен чанклатса чечек çеçкисем евĕр тĕрлĕ енне уçăлса кайрĕ. Çаврашка ăшĕнче хĕр курăнчĕ. Çапла, вăл эпĕ ташлană космос хĕрĕ. Хулпуççи çине витсе янă чĕлтĕр тумĕ витĕр эпĕ унăн шăратса тунă пек илемлĕ кĕлетки-çурăмне, тăпăл-тăпăл кăкăрне, çирĕп, йăрăс урисене куртăм. «Çук, маска мар. Вăл чăннипех çапла чипер», — чун-чĕреме çĕклентерсе çиçсе илчĕ пуçра хаваслă шухăш. Хитре, çинçе аллисене тăсса вăл ман енне ура ярса пусрĕ. Тĕнчере мĕн пурри çинчен манса эпĕ те ун патнелле талпăнтăм. Çав самантрах пирĕн хушша таçтанçке этем евĕрлĕ, анчах калама çук нĕрсĕр питкуçлă хăрушă чĕр чунсем тухса тăчĕç. Шĕвĕр чĕрнеллĕ пӳрнисене тăсса вĕсем ман çине тĕллетĕлле кăтартаççĕ, хаяррăн ахăлтатса кулаççĕ. Çапла, вĕçĕмсĕр тĕлĕк, тĕлĕк. Пĕрисем савăнтараççĕ, теприсем хăратса шалкăм шыва ӳкереççĕ.

Больницăран сывалса тухса хваттер енне утаттăм, тахăшĕ хуса çитсе мана хулран тытрĕ. Анюта.

— Салам, — терĕ вăл куçран ăшшăн тинкерсе пăхса. — Кĕтрĕм, кĕтрĕм сана. Сăмах патăн, пымарăн.

— Эп... — больницăран кăна тухрăм тесшĕнччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕм, хĕр мана пӳлчĕ.

— Чухлатăп, чухлатăп, экзаменсем. Маттур, маттур.

— Мĕншĕн маттур? Мĕн пулнă? — ыйтрăм эпĕ нимĕн те ăнланмасăр.

— Ан сăпайлан. Пĕлетĕп. Каларĕç мана.

— Мĕн каларĕç? — кăсăклантăм эпĕ.

— Отличник, пур экзамена та «пиллĕкпе» пачĕ терĕç.

Хĕр сăмахĕсем мана ирĕксĕрех хаваслантарчĕç. «Тахăшĕ суйса панă ĕнтĕ айвана», — кулса илтĕм эпĕ ăшăмра, анчах хирĕçлемерĕм, пустуй халап тесе ĕнентермерĕм.

Çапла, экзаменсем. Мĕн калĕç-ши деканатра? Чирлĕ пулнине шута илĕç-ши е памаллах тейĕç? Эх, шăп сесси вăхăтĕнче чирлемелле пулчĕ вĕт-ха.

Çакнашкал шухăшсемпе канăçсăрланса эпĕ хам пурăнакан пӳлĕме кĕтĕм, салтăнса чи малтан сĕтел çинче выртакан зачеткăна илтĕм. Уçрăм та... тĕлĕннипе шалтах хытса тăтăм. Тĕрĕс каларĕ Анюта — пур экзамена та вăхăтра панă, пуринпе те «пиллĕк» илнĕ. Ак тамаша! Мĕнле майпа?..

Каярах пĕлтĕм — çапла, «эпĕ» консультацисене те, экзаменсене те йĕркеллĕ çӳренĕ, анлă, тарăн пĕлӳсемпе экзаменатора та, юлташсене те тĕлĕнтернĕ иккен...

...Унтанпа çичĕ çул иртрĕ. Çак вăхăтра ман шухăш-кăмăлра чылай улшăну пулчĕ. Вĕренес, пĕлес тавра курăма анлăлатас кăмăл çĕкленчĕ, çулран-çул ӳссе, вăйлансах пычĕ. Университета хĕрлĕ дипломпа пĕтертĕм. Икĕ çул каялла наука кандидачĕ ятне илтĕм. Кунпах лăпланса ларас теместĕп-ха. Ĕмĕтсем пысăк. Ĕçлес кăмăл та малаллах хистет. Авлантăм. Çемьере пĕчĕк хĕрĕм ӳсет. Ку енчен те пурте йĕркеллĕ. Анчах çав хĕллехи каç чĕрене кĕрсе юлнă чечен туйăм халĕ те иртмест. Шухăша каятăп çеç, таçта умра, тĕтреленчĕк кăвак тавралăхра, калама çук илемлĕ хĕр пĕвĕ-сийĕ шуса тухать.

Васкамасăр утса иртет те ăшра темле тутлă, çутă тунсăх чĕртсе аякка кайса çухалать. «Ăçта-ши эсĕ халĕ? Ăçта?.. — пăшăлтатаççĕ ман тутасем. — Пĕрре те пулин курса калаçасчĕ санпа».

## КУНТА ПУЛМАН ХĂНА

*Фантастикăллă калав*

> На свете, друг Гораций,
> есть такое, что и не
> снилось нашим мудрецам.
>
> *У. Шекспир*

Йăрăс пӳллĕ, хура çӳçлĕ çамрăк каччă пысăк çулран пăрăнчĕ те ансăр сукмакпа утрĕ. Вăл виçĕ çухрăмри ялтан, тусĕ патĕнчен, киле таврăнать. Кашни кунах çӳрет Руслан патне. Темле тĕлĕнмелле машина тăвасшăн тĕрмешеççĕ-ха вĕсем. Çав машина çулпа та чупмалла, шывра та ишмелле, сывлăшра та вĕçме пултармалла. Хальлĕхе кун çинчен виççĕн çеç пĕлеççĕ: икĕ çамрăксăр пуçне тата Руслан ашшĕ, Виктор Петрович инженер. Вăл ăста токарь те, слесарь те. Ачасем шут тытнине мухтать, вĕсене хавхалантарать, ыйтсан канашсем те парать. Сарайĕнче акă тĕрлĕ тимĕр-тăмăрпа ĕçлеме, касма, шаккаса юсама, тӳрлетме, упрама уйрăм пӳлĕм ăсталарĕ. Кирлĕ япаласем туянма укçа та паркалать хăш-пĕр чух, çапах çитмест. Çамрăксем, акă вĕсен тантăшĕсемех, укçа ĕçлесе илме каяççĕ-ха, анчах ывăлĕсем кун пирки калаçу хускатсан Русланпа Володя ашшĕ-амăшĕ карах хирĕç тăраççĕ, — вĕренес пулать. Чăнах ĕнтĕ, чи малтан пĕлӳ пухмалла, унсăрăн тантăшсем шут тытнă машинăна туса пĕтерме пĕлӳ çитмест.

Çакăн евĕр шухăшсемпе пуçне çавăрттарса çамрăк каччă васкамасăр малалла утрĕ. Паян каярах тухрĕ çав килне кайма. Вăхăт иртнине те сисмен.

Хёрлё хёвел ҫавраки тёксём ҫёре перёнчё ёнтё, кёҫех курăнми пулать. Каҫё лăпкă. Тӳпере пёлёт татăкё те курăнмасть. Унта-кунта пирвайхи ҫăлтăрсем хăюсăррăн ҫуталчёҫ. Сукмак икё енёпе те ӳсекен пиҫсе ҫитеймен ыраш пучахёсем ăшă ҫилпе хуллен кăштăртатаҫҫё, ҫамрăк качча саламласа пуҫ тайнăн хуллен хумханаҫҫё. Каҫхи сывлăшра тёрлё курăк шăрши сăмсана перет. Акă темле нăрă хулăммăн пуҫ ҫийёнех вёҫсе иртрё. Авă лапсăркка хурама курăнчё. Тарăн ҫырма хёрринче ӳсет вăл. Ҫырма хёррипе кăштах-кăштах каймалла та утма ҫул сылтăмалла пăрăнса яла илсе пырать. Ку ҫулпа Володя час-часах ҫӳренё. Анчах паян...

Йывăҫ сывăхёнче кăвайт ялтлатса ҫуннине, ун тавра темиҫе ҫын мёлки ларнине курсан каччă сисмерё те ирёксёрех тăпах чарăнчё, шăм-шак тăрăх темле сивё туйăм сăрăлтатса чупса кайрё. Ҫак вырăн ҫинчен халăх хушшинче тёрлё ырă мар юмах-халап ҫӳренине аса илчё. Таса мар вырăн иккен вăл. Иртен-ҫӳрене хăш-пёр чух темскер хăратать имёш: е ăнсăртран тёксём мёлке тухса тăрать, е лаша канăҫсăрланса хартлатма тытăнать, е... Ырă мар аса илӳсене хăваласа чунне хытарчё Володя, хăрушă вырăнтан иртрё. Чупас килнине путарса урасене унчченхи пекех лăпкăн та ҫирёппён ярса ялалла утрё. Ларакан мёлкесем ун хыҫҫăн ҫавăрăна-ҫавăрăна пăхнă пек туйăнчёҫ.

Акă ыраш ани вёҫленчё. Сёлё ҫӳллех ҫёклеймен-ха. Ёнтё ял та инҫе мар, йăмрасем курăнаҫҫё. Анчах хускалнă чун лăпланаймасть: такам хыҫран килет пек туйăнать, тахăшё ятран чёнет... Ҫавăрăнса пăхать — никам та ҫук...

— Володя! Тăхта! — янраса кайрё уҫă сасă.

Каччă чарăнчё. Пăхать: чăнах та ун патнелле ҫын утать. Пырса тăчё — ҫамрăк, Володя ҫулёсенчехши, кăштах аслăрах-ши. Ҫӳллё пӳллё, хура ҫӳҫне кёске кастарнă, ҫийёнче ҫамрăксем тăхăнакан

тумах — футболка, трикотаж шăлавар, аллинче пĕчĕк портфель. Çинçе пит-куç, çӳхе тута...

— Сывлăх сунатăп, Володя!

Пачах палламан çамрăк. Çук, нихăçан та курман ăна.

— Ĕçсем мĕнле пыраççĕ? Пулать пек-и шутланă машина моделĕ?

— Эсĕ ăна ăçтан пĕлетĕн?

— Эпĕ-и? Эпĕ пурне те пĕлетĕп, куратăп. Сана та, Руслана та, ну... хама кирлине пурне те... Маншăн вăл пĕрре те йывăр мар... Мĕншĕн тесен эпĕ ахаль çын мар.

Мухтанчăксене Володя тӳсме пултараймасть. Çавăнпа алă сулчĕ те кайма тăчĕ.

— Ĕненместĕн-и? Пăх эппин!

Çапла каласа палламан çамрăк кĕсйинчен темиçе тĕспе йăлтăртатакан пĕчĕк мечĕк евĕр çаврашка туртса кăларчĕ, темиçе хут аларан алла ывăткаласа вылянçи турĕ, унтан икĕ пӳрнипе пăчăртаса çӳле çĕклерĕ.

— Пăх!

Умра, пĕлĕт çинче, экран евĕр тăваткал çуталчĕ. Унтан çурт-йĕр, пӳртсем курăнчĕç.

— Ку сирĕн ял. Палларăн пулĕ? Акă эсир Русланпа тĕрмешетĕр. Çапла-и? Татах кăтартас-и?

Володя тĕлĕнсе те килĕшсе пуçа сĕлтрĕ. Акă çамрăк мăшăр ыталанса иртрĕ, туйи çине таяннă вата çын курăнчĕ... Нумай çын иртрĕ унта.

— Кунти этемсемех вĕсем. Паллакансем çук-и? Тинкererех пăх-ха.

Акă йăрăс пӳллĕ, кăпăшка çӳçлĕ хитре хĕр. Света! Чăнах та вăл юратнă хĕр-çке. Ав вăл вĕсен енне çаврăнса тăчĕ, куçран çухалчĕ.

Володьăн чĕри хаваслăн картлатрĕ, çăварĕ типсе ларчĕ. Ну кăна гипноз е фокус евĕр япала теме пулĕ-ха. Анчах Света? Ăçтан пĕлет çак çын Володя çав хĕре юратнине? Кун çинчен никама та

шарламан. Светăна хăйне те! Тĕлĕннĕ каччă сăмах тупаймасăр шалтах хытса тăчĕ.

— Ну, мĕн калăн? — каччă куçĕнчен ытарлăн кулкаласа пăхрĕ палламан çын.

— Вĕсен, çавăнта курăннă çынсен, кăкăрĕ тĕлĕнче çутă йăлкăшать. Мĕн вăл?

— Тĕрлĕ калаççĕ. Чун çулăмĕ... чун тĕрекĕ, чун вăйĕ... Кашни çынах тĕнчене çав çутăпа çуралать. Пурнăç иртнĕ май вăл улшăнма та, вăйланма та, йăвашланма та, сӳнсе ларма та пултарать.

Каллех йăлтăр çаврашка алăран-алла куçрĕ, çӳхе тута тем пăшăлтатрĕ. Аякра каллех тăваткал экран çуталчĕ.

— Акă эсир икĕ тус. Кăкăрăрсем тĕлĕнче иксĕрĕн те çăлтăр евĕр çутăсем. Танлаштар — санăн пысăк, çап-çутă, таса. Русланăн чылай пĕчĕк, тĕксĕм.

Санăн çав çутă, каларăм ĕнтĕ, питĕ вăйлă, хĕмленет кăна. Çавăнпа килтĕм ĕнтĕ эпĕ сан патна. Парнеле эсĕ ăна мана е сут.

— Мĕне? — ăнланаймарĕ Володя.

— Çав çутта. Эпĕ уншăн санăн ĕмĕте пурнăçлама пулăшатăп.

Çутă çаврашкине икĕ пӳрнипе тытса вăл каллех аллине çĕклерĕ. Таçта аякра экран çуталчĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлакан уй-хирте анлă типтикĕс çул чупать. Ун çийĕн тăрăхларах хитре çăмăл машина вирхĕнсе пырать. Умра хĕвел çинче кăваккăн йăлтăртатакан пысăк шыв курăнса кайрĕ. Машина тӳрех чăмрĕ. Акă шывра пысăк мар шурă пăрахут ишет, унтан сарлака çунатсем курăнчĕç. Сывлăша çĕкленчĕ те кĕçех куçран çухалчĕ.

— Ну, — хут умĕнче çутă ялтлатрĕ. — «Килĕшетĕп» тесе алă пус çеç, — палламан çын васкаса портфельне уçрĕ, хут листипе ручка кăларчĕ. — Акă çакăнта. Малтан вуласа пăхма пултаратăн. Унта пĕтĕмпех çырнă. Ме ручка.

— Çапах мĕнле çутă вăл, çынсем те, ăсчахсем

те пĕлменскер? Çав çутăсăр этем часах вилет пулĕ?

Çапла çине тăрса тĕпчени палламан çынна тарăхтарать пулас. Шĕвĕрккe пит-куç сиввĕн йăлкăшса илчĕ.

— Çĕр çул та пурăнатăн.

Ручка тытнă аллине Володя çывăхах илсе пычĕ. Тем хистет ăна алла ручка илме.

«Чунне сутнă», «чунсăр этем», «хура чунлă çын» пырса кĕчĕç ăша халăх калакан сăмахсем. Тискер, усал çынсем çинчен çапла калаççĕ. Вăл тӳрленсе тăчĕ. Сыхăлăх çирĕпленчĕ.

— Çук. Эпир Русланпа хамăр ĕмĕте хамăрах пурнăçлатпăр.

Ача кăмăлĕ улшăннине туйнă çыннăн сивĕ питкуçĕ кăмăлсăррăн турткаланса илчĕ.

— Руслан, — йĕрĕнчĕклĕн кулса ячĕ палламан çын, — мĕнле туслашнине аса ил-ха. Епле йăпăлтататчĕ вăл сана. Е канфет тыттарать, е тутлă кукăльпе, е ашшĕ аякран илсе килнĕ кучченеçсемпе хăналать. Юратнипе тетĕн-и? Класра эсĕ чи лайăх вĕренекен пулнă. Сан пек ăслă-тăнлă тус кирлĕ пулнă ăна. Сан ăсупа усă курнă вăл лайăххисен шутĕнче пулма тăрăшса. Машина пирки, — тăсрĕ калаçăвне пурне те пĕлекен тĕлĕнмелле çамрăк, — эсир ăна, паллах, тăваймастăр. Манпа килĕшсен мĕн тивĕçли пурте сана пулать — чап, укçа, тĕрлĕ премисем... — палламан çын кĕсйинчен темĕнле пысăк мар çаврашка кăларчĕ. Темиçе енлĕ, темиçе кĕтеслĕскер, вăл хыпса илчĕ, тĕрлĕ тĕслĕ йăмăх çутăпа йăлкăшса çунма тытăнчĕ. Каллех пĕлĕт хыпса çуталчĕ. Пысăк хула курăнчĕ. Илемлĕ çуртсем, пуян, капăр хваттерсем, хаваслă халăх, симĕс парксем, чечеклĕ анлă çарансем, кăваккăн йăлтăртатакан шыв хумханать.

— Тĕнчипе паллă конструктор (куна та пĕлет!), чап, мухтав. Ну, мĕнле?..

Хушмасть, юнамасть, хăратмасть. Мĕншĕн?

— Хамăрпа пĕрле ĕçлеттерме пирĕн тĕрлĕ май та пур, — сăмахне тăсрĕ çын каллех ача шухăшне ăнланса илнĕ пек. — Анчах пĕр çирĕп йĕрке. Пирĕнпе пĕрле пулма çын хăй килĕшсе алă пусни кирлĕ.

Çамрăк чĕнмерĕ. Чăнах та, çавăн чухлĕ пуянлăх, тĕрлĕ ырлăх сĕнет пулсан ахальтен мар ку.

— Тĕнчере пĕр-пĕрне курайман, килĕштерме пултарайман икĕ вăй пур. Çутă вăй, тĕттĕм вăй. Вĕсем çĕр çине этемпе пĕрлех килнĕ. Анчах, шел пулин те, пурнăç калама çук йывăр пулин те, çынсенчен нумайăшĕ чăнлăха мухтать, ун енне туртăнать. Пире сивлет, йышăнмасть, хирĕç тăрать.

— Çук! Эпĕ хам вăй-хала сирĕн хура тĕнчене çирĕплетме памастăп.

— Эпĕ сана ăслă этем тесе. Пăх-ха йĕри-тавра тинкеререх. Пурте чапшăн, пуясшăн вĕтĕленеççĕ. Эсĕ вара ху телейна ху тĕртсе яратăн. Каях, кай, мекĕрлен тĕрĕслĕхӳшĕн. Эпир хамăра хирĕç тăракансене юратмастпăр. Инкеклĕ, йывăр пурнăç кĕтет сана...

Володя ялалла утрĕ. Канăçсăр туйăм тата вăйланчĕ.

— Ха-ха-ха-ха! — янрарĕ хыçра сивĕ кулă. Володя чăтаймасăр тепĕр хут çаврăнса пăхрĕ, хыçра никам та çук.

Ĕнтĕ ял çывăхрах, хапха та курăнать. Уçса кĕчĕ. Кӳршĕ урамра çамрăксем кулни, шавлани илтĕнет. Володя килĕ еннелле утрĕ. Темшĕн ывăнчĕ вăл паян.

Ăша шиклĕх шăвăнса кĕчĕ. Ун хыççăн такам йĕрлесе пынăн туйăнчĕ. Тата темиçе хут та çаврăнса пăхрĕ — çав-çавах йĕрлекен тек курăнмарĕ. Акă тăван кил. Унта çывăх, юратнă çынсем пурăнаççĕ. Унта лăпланать, унта пĕтĕмпех иртсе каять.

Сасартăк пăралукран ӳсĕр çамрăксен ушкăнĕ шавласа тухрĕ.

— Акă вăл! — кăшкăрса ячĕ вĕсенчен пĕри каччă

çине пӳрнипе тĕллесе. — Тытăр ăна! Хĕнĕр! Хĕнĕр! Пĕлтĕр малашне ют ял хĕрĕсем патне çӳреме!

Пĕр ялта ӳснĕ, ачаран паллакă çамрăксем! Мĕн пулнă вĕсене? Мĕншĕн хĕнесшĕн вĕсем ăна? Мĕнле ют ял? Мĕнле хĕр?

Çывăхрах шăв-шав илтсе пысăк патак йăтнă ашшĕ урама сиксе тухрĕ.

— Мĕн пулнă? Мĕн тапăлтататăр? — Пысăк патак йăтнă вăйпитти арçынна курсан ӳсĕр çамрăксем тĕрлĕ енне тарса саланчĕç.

Çĕр çинче выртакан ывăлне ашшĕ çĕклесе тăратрĕ.

— Хытах хĕнерĕç-и? — ыйтрĕ вăл ывăлĕ çине канăçсăррăн пăхса. — Атя пӳрте. Мĕншĕн вĕсем сана?

Чăнах та, мĕншĕн? Каярах Володя пĕлчĕ. Паллайман иккен ăна. Пĕр хĕр патне çӳрекен кӳршĕ ял каччи тесе шутланă.

Хальлĕхе ашшĕпе ывăлĕ пӳрте кĕчĕç. Володя питне-куçне çуса тасатрĕ те амăшĕ тирпейлесе сарнă вырăн çине йăванчĕ. Пуç çаврăнать, хутран-ситрен куç хуралса килет. Унтан вĕри ăшталантарма тытăнчĕ.

Хăраса ӳкнĕ амăшĕ урам енчи чӳречине яри уçса ячĕ.

— Кам пур унта?! — кăшкăрса ыйтрĕ вăл çывăхранах иртекене. — Килĕр-ха кунтарах. Лисавет аппана кайса калăр-ха, телефонпа «васкавлă пулăшу» чĕнтĕр. Володя хытă чирлесе ӳкнĕ тейĕр.

— Юрать! Калатпăр! — илтетнчĕ урамра.

Амăшĕ ывăлĕ çывăхĕнче пуçне усса ларать, сивĕ шывпа йĕпетнĕ тутăр татăкĕсене ывăлĕн хĕмленекен çамки çине хурать, тулти кашни сасă-чĕвве тимлĕн итлет. Володя çаплах аташать.

Акă таçтан тĕттĕм кĕтесрен тĕксĕм, шалпар тумлă, хура калпаклă çӳллĕ, хыткан çын вĕçсе хăпарчĕ, çамрăк тĕлĕнче аяла, ун патнех çывхар-

чĕ. «Килĕш! Килĕш! Алă пус», — тесе пăшăлтатрĕ.

Кăшт вăхăт иртсен вĕсем нумаййăн вĕçсе тухаççĕ, çывăхах пĕшкĕнсе сиввĕн пăшăлтатаççĕ: «Килĕш... килĕш... Акă алă пус». — «Çук, çу-ук, — тет Володя мĕнпур вăйне пухса. — Çук!»

«Васкавлă пулăшу», чăнах та, нумай кĕттермерĕ. Хĕрĕх çулсенчен иртнĕ шурă халатлă хĕрарăм врач аллисене çурĕ те чирлĕ çын выртакан пӳлĕме кĕчĕ, вĕри пуррипе çуккине тĕрĕслерĕ, кăкăрне итлерĕ, укол турĕ, эмел ятне çырса пачĕ.

— Нерва чирĕ. Темрен хăранă вăл хытă, — терĕ. — Тăна кĕрсен виçшер сехетрен çăмăлланма кирлĕ. Шăнкăравласа пĕлтерĕр. Тен, район больницине хумалла пулать.

«Нерва... тем пулнă ĕнтĕ. Такамран хăранă...» — шухăшларĕ амăшĕ врач тухса кайсан.

Тепĕр кун ирхи апат хыççăн хапха умне çăмăл машина çитсе ларчĕ. Марине инке чӳрече патне чупса пычĕ. Машинăран вăтам пӳллĕ, çӳллĕ çамкаллă арçын тухрĕ. Çамрăк мар. Çырă çӳçĕнче, кĕске кастарнă сухалĕнче кăвак пĕрчĕсем курăнаççĕ. Хĕрарăм ăна хирĕç крыльца çине чупса тухрĕ.

— Килме юрать-и? — терĕ арçын хулăн сасăпа. — Эпĕ тухтăр. Ман хушамат Пинеров.

— Пинеров? — чĕлхи сасартăках çыхланчĕ хĕрарăмăн. — Леш... леш... çĕршывĕпе паллă профессор-и? Анатолий Аркадьевич-и?

— Çавă, — килнĕ çын хĕрарăм чĕнессе кĕтмесĕр крыльца çине хăпарчĕ. — Тăван яла шăллăм патне канма килес терĕм. Çула май район больницине кĕтĕм. «Васкавлă пулăшу» чĕннĕ, йывăр чирленĕ тесе пĕлтерчĕç. Кĕрсе тухам-ха, тен, пулăшма пултарăп. Ăçта вăл? Выртать-и?

Марине инке пичĕ асаплăн турткаланса илчĕ.

— Вĕри чакмасть-çке. Çĕрĕпе аташрĕ, — йăпăртатса юхса тухнă куççульне пĕчĕк тутăрпа шăлса илчĕ вăл. — Кĕрĕр... кĕрĕр. Иртĕр малалла.

— Анне, кам килчӗ? — илтӗнчӗ вӑйсӑр сасӑ.

— Вӑранчӗ! Тӑна кӗчӗ! — ҫиҫсе ялкӑшрӗ амӑшӗн пичӗ. — Тав Турра!

Вӑл пӳлӗм алӑкӗ енне ыткӑнчӗ, яри уҫса ячӗ.

— Ывӑлӑм! Тухтӑр килчӗ... Чаплӑ тухтӑр... Пинеров хӑй! Пирӗн кӳршӗ ял ҫынни!

Профессор пукан ҫине Володя ҫывӑхне ларчӗ. Марине инке чӳрече каррине уҫрӗ.

— Ну, ҫамрӑк ҫын, мӗн ятлӑ-ха? Каласа пар. Мӗн пулчӗ? Мӗнле сӑлтава пула ҫапла сасартӑк йывӑр чирлесе ӳкрӗн?

— Нимӗнех те пулман. Ирхине тӑрсанах пуҫ кӑштах ыратнине туйрӑм эпӗ. Иртӗ-ха тесе юлташ патне кайрӑм.

— Тусӗпе темле машина тӑватпӑр тесе тӗрмешеҫҫӗ вӗсем, — хушса хучӗ амӑшӗ.

— Вара... Малалла...

— Пуҫ пӗр вӑхӑт лӑпланчӗ пек туйӑнчӗ. Килме тухсан каллех тата ытларах...

— Эсир каҫарӑр-ха мана, — пӳлчӗ ҫемҫен врач хускалмасӑр выртакан чирлӗ каччӑ ҫинчен куҫне илмесӗр. — Манӑн унпа куҫа-куҫӑн калаҫасчӗ... — терӗ вӑл амӑшне.

Иккӗн юлсан врач аллине Володя алли ҫине хучӗ.

— Тем пытаратӑн эсӗ манран. Темшӗн тӗрӗсне каласшӑн мар. Эпӗ сана пулӑшма килнӗ. Мӗн пулнине, мӗн курнине тӗпӗ-йӗрӗпе васкамасӑр, пӗр пытармасӑр пӗлтер-ха.

Пӗр вӑхӑт шӑп пулчӗ. Унтан чирлӗ ҫамрӑкӑн куҫӗсем сӳрӗккӗн уҫӑлчӗҫ, умри врач ҫине сӑнаса, тинкерсе пӑхрӗҫ.

— Кун хыҫҫӑн эсир мана тӑнран тайӑлнӑ ҫын темӗр-и? Ман ҫине пӳрнепе кӑтартса кулма пуҫламӗҫ-и?

— Кун пирки сӑмах та пулма пултараймасть.

— Апла итлӗр...

Чуна каллех темле канӑҫсӑрлӑх ҫавӑрса илчӗ,

йывăр аса илме. Никама та, чи çывăх, шанчăклă туса та пĕлтерес килмест. Хумханса, такăна-такăна, хăйне хисте-хисте аран-аран, çапах тĕпĕ-йĕрĕпе, пĕтĕмпех каласа пачĕ Володя. Йывăррăн сывласа çамки çине пăчăртанса тухнă тарне шăлса илчĕ, вăйсăррăн куçне хупрĕ.

— Халĕ эсир пурне те пĕлетĕр, — пăшăлтатрĕ вăл.

— Ывăнтăн-и? Кан эппин кăштах. Çывăр. Манăн кайса килмелли пур-ха...

Тухтăр каччă аллине чăмăртарĕ... Шăм-шак тăрăх ăша сиплĕ хум чупса саланнăн туйăнчĕ... Вăхăт мĕн чухлĕ иртнине туймарĕ Володя, хăйне ятран чĕннипе вăранчĕ. Куçне уçрĕ — çывăхра каллех Пинеров ларать.

— Мĕнле çывăртăн? Леш хура калпаклисем чăрмантармарĕç-и?

— Çук... Пуç та уçăлнă.

— Апла пулсан юсанатăн, кĕçех ура çине тăратăн.

— Чăнах-и? Ай, савăнăç!

Анатолий Аркадьевич куçĕ кăшт хĕсĕнчĕ.

— Каяс пулать санăн...

— Ăçта?

— Пĕлместĕп. Хăвăн ирĕкӳ. Мĕн чухлĕ инçерех, çавăн чухлĕ лайăхрах...

— Мĕншĕн? Мĕнле сăлтава пула?..

— Сăлтав-и?.. Чирӳ çăмăл мар сан. Тĕрĕсрех, вăл питĕ кăткăс, хăйне евĕр чее темелле-ши ăна. Халĕ вăл йăвашланать, пĕчĕкленет, пытанать, анчах санран уйăрăлмасть. Пысăк хуласенче халĕ клиникăсем нумай, лайăх врач специалистсем те йышлансах пыраççĕ... Чирӳпе шала кайиччен кĕрешес пулать, çĕнтерес пулать. Çак вырăнсенче вара... Тарăн çырма, ватă хурама, авалхи чăвашсен чӳк вырăнĕ... Вĕсене курни, çывăхран иртсе çӳрени... хм... хм... вăл иртнĕ каç пулса иртнине тата та

вăйлатма пултарать. Сăмах май, ăçта пултăм эпĕ халĕ çеç, пĕлетĕн-и? Çав хурама çывăхĕнче. Кăвайт юлашкине, йĕрсене курас терĕм. Анчах симĕс çерем çеç сарăлса выртать.

— Эсир мана суятăп тесе каласшăн-и? — çĕкленме тăчĕ сасартăк каллех хумханса кайнă çамрăк.

— Вырт, вырт, тăма иртерех-ха. Лăплан. Пĕрре те ĕненменшĕн мар. Çапла пуласса малтанах чухланă-ха эпĕ... Çавăн пек чее вĕсем, пирĕн тăшмансем... Ун пеккине ăста... Çавăнпа та эпĕ хушнине итлемеллех санăн.

— Çапах инçе кайма пултараймастăп эпĕ, — пăшăлтатрĕ Володя.

— Мĕншĕн?

— Манăн вĕренмелле...

— Вĕренетĕн. Кăмăлу пултăр кăна.

— Тата...

— Тата мĕн?

— Укçа нумай кирлĕ, — пĕр вăхăт чĕнмесĕр выртнă хыççăн аран-аран сăрхăнса тухрĕç хистенĕ сăмахсем.

— Ĕçе кĕретĕн. Тек ача мар-çке, çитĕннĕ каччă. Шухăшла. Ну, эпĕ каятăп. Ăнаçу сунатăп. Шанатăп.

Профессор çĕкленчĕ, Володя аллине хĕрӳллĕн чăмăртарĕ. Каччă шăм-шакĕ тăрăх каллех темле ăшă, сиплĕ туйăм чупса саланчĕ.

— Анатолий Аркадьевич... Тархасшăн, каçарăр ыйтнăшăн... Çав сутă... çав чĕре çывăхĕнчи сутă... чăннипех пур-и е...

— Пур, çамрăк çыннăм, пур... Çавă вăй-хал парать те пире. Асту, малашне те упра ăна. Тĕрĕс çулран ан пăрăн... — Пинеров ачапа сывпуллашрĕ.

Унтан пӳлĕме амăшĕ кĕчĕ.

— Юсанатăн терĕ, — хаваслăн йăлкăшрĕ унăн пичĕ-куçĕ. — У-у, чăнах та. Тепĕр хут чĕрĕлсе çĕкленнĕ шаннă курăк пекех.

— Анне, манăн тăрса ларас килет...

— Выртах, вырт, ывăлăм. Тухтăр хушмарĕ. Ыранччен тӳс... Мĕн тери ырă çын! Вăт чăн-чăн çын! Пĕчĕк яла, пĕлмен-палламан çынсем патне килме ӳркенмен вĕт... Мĕнле, мĕнле тав тăвас-ши ăна? Володя, эсĕ мĕн шутлатăн кун пирки?

— Ку енчен, анне, эсĕ ху ăслă çын.

— Шăллĕ патне канма килетĕп терĕ. Кукăль пĕçеретĕп. Ялти кукăль, чăваш кукли... Такси чĕнсе илсех леçсе паратăп. Ача чухнехи апат, тен, килĕшĕ, — хавхаланчĕ Марине инке. — Паян çитсе вырнаçтăр-ха. Ыран, ыранах каятăп.

Каç енне тин кăна илсе килнĕ хаçата вулама ларчĕ Марине инке. Сасартăк ахлатса ячĕ те пĕр вырăнта хытса ларчĕ, тепре вуласа тухрĕ, тата тепре.

— Володя! Володя! — вирхĕнсе кĕчĕ вăл пӳлĕме. — Пăх-ха, вула-ха. Пинеров тухтăр... Анатолий Аркадьевич иккĕмĕш кун ют патшалăхра...

— Ну-ка, ну-ка... Пулма пултараймасть. Темле йăнăш ку!

Марине инке телефон патне чупрĕ. Çук, Анатолий Аркадьевич пулман вĕсем патĕнче район больницинче. Пулма та пултараймасть. Вăл халĕ ют çĕршывра, командировкăра... Пур çĕртен те, тăван ялĕнчен те çав хыпарах.

— Кăçал çу уйăхĕнче пулчĕ вăл кунта, хальлĕхе урăх килеймест! — терĕç профессор тăванĕсем.

Ак тамаша! Ак тĕлĕнтермĕш! Сăн ӳкерчĕкне темиçе те курнă. Пичĕ-куçĕ те унăнах-çке! Мĕнле вара?..

* * *

Ача вăй-халĕ çĕнтерчĕ чире...

Алла аттестат илсен вăл аслă шкула вĕренме кĕчĕ. Каярах пысăк заводра ĕçлеме тытăнчĕ. Рус-

лампа çав-çавах халĕ те туслă. Хăйсен шухăшне, лартнă тĕллеве пурнăçа кĕртесшĕн халĕ те тĕрмешеççĕ. Тен, пурнăçлĕç те. Ĕнтĕ иккĕшĕн те пĕлĕвĕсем ӳсрĕç. Укçа та пур, пулăшма хатĕр юлташсем те нумайланчĕç. Халĕ Владимир Павлович хулара пурăнать, тăван ялне те манмасть, часчасах пырса каять.

Тарăн çырма кукринчен те, чӳк вырăнĕнчен, пур вăхăтра та çуран иртнĕ. Нимĕнле сас-хура та илтмен, тĕксĕм мĕлкесем те, вут çути те курман. Çĕнтерчĕ вăл вĕсене, тек усал-тĕсел ун çумне çулăхмасть.

Анчах мĕн пулчĕ ку пĕтĕмпех: чуна сутма ыйтакан хура çын, кунта пулман хăна Пинеров профессор? Тĕлĕк-и?.. Çук, тĕлĕк мар. Апла пулсан мĕн?..

## ШУРĂ КАЙĂК

*Фантастикăллă калав*

Çамрăк хĕрарăм киоскра темиçе хаçат туянчĕ, хутлатса хутаçа чикрĕ те пăрăнса утрĕ.

— Таня! — илтĕнчĕ çывăхрах. — Татьяна Петровна!

Хĕрарăм чарăнчĕ те тĕлĕннĕн унталла-кунталла пăхса илчĕ. Çав самантра такам хыçалтан ун куçне лап хупларĕ.

— Ай-ай! Кам пулчĕ ку?

— Пĕл, — терĕ хаваслă сасă. — Ну, ну... Хи-хи-хи!

— Нина! Нивушлĕ эсĕ?!

Ăшă аласем куç çинчен сирĕлчĕç. Икĕ хĕрарăм хаваслăн кулса ыталанса илчĕç. Савăнăçлăн çиçекен куçсемпе темиçе самант пĕр-пĕрин çине тишкерсе пăхса илчĕç, каллех кулса ячĕç, каллех ыталанчĕç.

— Нина, нимĕн чухлĕ те улшăнман эсĕ. Пит-

куҫран та ҫамрӑк, пӗвӳ те хӗр чухнехи пекех йӑрӑс, илемлӗ.

— Эсӗ вара кӑштах ӳт хушнӑ. Бальзак хӗрарӑмӗ пекех халӗ, чипер, илӗртӳллӗ, ӑмсануллӑ...

— Хӑҫан тавӑрӑнтӑр? Нумайлӑха-и? Мӗнле пурӑнатӑр?

— Калаҫмалли темӗн чухлех. Атя пирӗн пата.

— Таня, — Нина ассӑн сывласа ячӗ те алӑри сехечӗ ҫине пӑхса илчӗ.

— Вӑхӑт ҫук-и? Ну, ӗҫ пӗтерсен кӗр эппин.

— Тем пекех пырӑттӑм. Шутсӑр тунсӑхласа ҫитрӗм. Анчах манӑн каймалла. Шкул валли вӗренмелли кӗнекесем туянтӑм. Ҫавсене илсе каяс пулать. Кӗҫех ял автобусӗ ҫитмелле, — Нина каллех сехечӗ ҫине пӑхрӗ. — Итле-ха, — хулпуҫҫийӗнчен ыталарӗ вӑл тусне. — Эпӗ сире ҫемйипех хамӑр пата хӑнана чӗнетӗп. Ял илемлӗ пирӗн, сывлӑш кунта, хулари пек мар, уҫӑ, таса. Хӑҫан пымалла тетӗн? Ҫак эрнерех. Кайран вӑхӑт пулмасть манӑн хӑнасене пӑхма. Тухас умӗн шӑнкӑравласа пӗлтер. Пирӗн халӗ хамӑрӑн телефон, — Нина сумкинчен пӗчӗк блокнотпа ручка кӑларса унта тем ҫырчӗ, хут листине татса илсе тусне пачӗ. — Гера та, атте те шутсӑр хавас пулаҫҫӗ сире курма. Пуринчен ытла сана курма, Таня. Ман аттене астӑватӑн-и?

— Паллах. Эсир, мӗн, пӗрле пурӑнатӑр-и? Мӗншӗн?

— Анне вилнӗ хыҫҫӑн авланмарӗ вӑл. Кил-ҫуртне сутсах пирӗн пата куҫса пычӗ.

— А-а-а... Питӗ хӑйне евӗр ҫынччӗ вӑл Гавриил Васильевич, — терӗ Таня куларах.

— Юрататчӗ вӑл сана. Вӗҫӗмсӗр мана санпа танлаштарса ӳпкелетчӗ, — кулчӗ Нина та. — Эпӗ, чӑнах, ун чухне те, халӗ те ҫавах, шутсӑр пакӑлтатма юрататӑп. Эсӗ лайӑх пӗлмен, палламан ҫынсем умӗнче ҫӑварна вӑр-вар уҫмастӑнччӗ. Кулленхи тӗрлӗ ыйтусене тӗплӗн шухӑшламасӑр татса па-

мастăнччĕ. Экзаменсене хатĕрленнĕ чух сехечĕ-сехечĕпе вырăнтан хускалмасăр, чăтăмлăн вуласа лараттăн. Манăн, яркăнăн, ниепле те тӳсĕм çитместчĕ сан пек пулма. Акă çитрĕ ман автобус, — татрĕ Нина сăмахне çавăнтах. — Ну, Таня, эппин, кĕтетпĕр сире. Çук, çук, ан та калаç. Нимĕнле «çапах та». Тăнламастăп, илтместĕп. Пыратăр, — вăл тусне тепĕр хут ыталаса чуптурĕ те çул хĕррине пырса чарăннă пысăк мар автобус енне чупрĕ.

«Ну, Нина Цаплина-Максимова, — шухăшларĕ Таня хускалса кайнă машина хыççăн пăхса, — вăхăт нимĕн чухлĕ те улăштарман сана. Хĕр чухнех çаплаччĕ — шут тытрăн пулсан — чакмастăн. Ыттисене те шухăшлама, иккĕленме памастăн. Каланă — тунă. Качча та çавăн пекех тухрăн...»

Çапах лайăх тĕл пулма чĕнни. Аслă шкулта вĕреннĕ чух вĕсем питĕ çывăх хĕр туссем пулнă. Сăнĕсем те пĕр евĕрлĕрехчĕ вĕсен — иккĕшĕ те çырă çӳçлĕ, çинçе питлĕ. Нина ашшĕ çавăншăнах килĕштеретчĕ пуль Таньăна.

— Манран ытларах юратать вăл сана. Вĕçĕмсĕр санпа танлаштарса ӳпкелет. Таня лайăх хĕр. Ун пек пулма тăрăш тет. Асту, туртса ан илех, — шӳтлекелетчĕ сайра хутра Нина.

Çапах сăнĕ-пичĕпе пĕр евĕрлĕ пулсан та кăмăлĕсем тĕрлĕ вĕсен. Тен, çавăншăн килĕштеретчĕç вĕсем пĕрне-пĕри. Пĕр хут çеç хĕрсен туслăхне хура кушак каçса кайма тăнăччĕ. Гера Максимов, журналистика уйрăмĕнче вĕренекен университет студенчĕ, хулăн туталлă, куктĕр питлĕ, хĕрлĕ çӳçлĕ, анчах калама çук ăшă куçлă, ăшă кулăллă каччă, чи малтан, паллашсан икĕ хĕртен Таньăна куç хыврĕ. Анчах халиччен каччăсемпе çӳреме хыпкаланман Нина вĕсен хушшине çавра çил евĕр вирхĕнсе кĕчĕ.

— Эпĕ юрататăп ăна. Пĕрре курсах юратса пăрахрăм. Вăл ман шăпа. Унсăр пуçне мана никам

та кирлӗ мар. Тархасшӑн, ан чӑрмантар, — тесе хучӗ. Ачаш туйӑм чӗрере тӗвӗленме ӗлкӗреймен пулин те, ӑна ҫакнашкал сӑпайсӑррӑн аркатма ҫине тӑнине Таня, паллах, кӑмӑлламарӗ. Ҫапах хӑй шухӑшне палӑртмарӗ вӑл. Чӑннипех шутсӑр килӗштерет пулсан ҫӳреччӗрех ара. Хӗр чух хӗрӗх тенӗ. Каччӑсем тата та пур. Нинӑпа Гера, чӑнах та, кӗҫех туй тусах пӗрлешрӗҫ.

Хӗр тусӗн ашшӗне те лайӑх астӑвать Таня. Общежитинче хӑйсен пӳлӗмӗнче ун чух вӑл пӗчченех ларатчӗ. Кӑвакарнӑ тӑнлавлӑ, вӑтам пӳллӗ арҫын кӗчӗ.

— Эпӗ палларӑм сана. Эсӗ Таня. Сӑнран пӑхсан эсир Нинӑпа пӗр еврӗлӗ. Ҫавӑнпа сире ҫывӑх тӑвансем тесе те шутлаҫҫӗ. Ҫапла-и? — терӗ вӑл хаваслӑн йӑлкӑшакан хуп-хура пысӑк куҫне хӗр ҫине тӗллесе. — Хампа паллаштарма ирӗк парсам. Гавриил, аха, икӗ «и» ман ятра, ҫапла ҫырнӑ паспортра, — шӗвӗр пӳрнине ҫӗклесе хушса хучӗ вӑл, — Гаврил Васильевич. Чӑвашла Чарлан Ваҫлей Каврушӗ е Кавруш пичче. Цаплин юлташ текенсем те пур. Ялти фельдшер, — вӑл пысӑк алӑ тупанне Таньӑна тӑсса пачӗ те пукан илсе ҫывӑхарах ларчӗ. Таня тӳсеймерӗ, кулса ячӗ. Шӳт тума ӑста иккен Нина ашшӗ. «Чарлан Ваҫлей Каврушӗ». Паллашакан хӑй ятне ҫапла вӑрӑм тата ял ҫыннисем пек чӑвашла каланине вӑл нихӑҫан та илтмен.

— Нина столовӑя кайрӗ.

— Юрӗ. Вӑл килнӗ тӗле кунта эпир хамӑр столовӑй уҫатпӑр, — ҫапла каласа килнӗ ҫын алӑк патне лартнӑ тӗссӗрленнӗ пысӑк чӑматана уҫрӗ те сӗтел ҫине тӗрлӗ апат-ҫимӗҫ кӑларса хума пуҫларӗ — какай, услам ҫу, тӑпӑрч, чӑкӑт, кукӑль...

Аслӑ шкул вӗренсе пӗтерсен Таня та качча тухрӗ. Новосибирск облаҫӗнче экономист пулса ӗҫлекен кӑвак куҫлӑ, ҫырӑ ҫӳҫлӗ Саша Таньӑран пилӗк ҫул

аслă. Юрă-ташă уявĕнче вĕсене Таня йыснăшĕ паллаштарчĕ.

— Юри авланма килнĕ. Пурнăç этемĕ, йăпăх-япăх мар, — систерчĕ вăл хĕре. — Ратти те лайăх вĕсен, ырă çынсем нумай.

Малтан икĕ хĕр тус çырусем çыркаласах тăчĕç. Çулсем иртнĕ май çыхăну вăйсăрланчĕ, татăлчĕ. Миçе çул курманни. Паян акă ăнсăртран каллех тĕл пулчĕç те иккĕшĕ те шутсăр хĕпĕртерĕç.

Çапла, вĕсем, Цветковсем, халĕ çуралса ÿснĕ килтен аякра пурăнаççĕ. Самана улшăнчĕ. Вăр-вар тухса çÿреме çук, укçа нумай кирлĕ. Çапах тăвансене курас килет, çуралса ÿснĕ вырăнсем чуна астараççĕ. Кунсăр пуçне Мускав çывăхне килме тата тепĕр сăлтав хистерĕ. Вĕсен вун икĕ çулхи ывăлĕн Толикăн сывлăхĕ начар-çке. Пуç ыратнипе аптăрать. Вăхăтăн-вăхăтăн темиçе кун сăмсинчен юн каять, вăхăтăн-вăхăтăн хăстарма тытăнать. Врачсем тĕрлĕ калаççĕ. Пĕри питĕ асăрханса пурăнмалла, чупма, сикме юрамасть, хумханма юрамасть терĕ. Епле-ха ун çулĕсенче пачах чупмасăр, вылямасăр! Чĕрĕ ача-çке вăл. Вĕçĕмсĕр алăран тытса çÿрейместĕн ăна. Тепри кĕтес пулать, вун ултă-вун çичĕ çулсене çитсен иртме пултарать тесе йăпатрĕ. Анчах тÿрленетех текен çук. Мускава кайса пĕр-пĕр лайăх специалиста — профессора е академика — кăтартасшăн вĕсем ывăлне. Хакла ларать ĕнтĕ. Анчах мĕн тăвăн? Сывалтăрччĕ кăна...

* * *

Чĕннĕ çĕре упăшки кайма килĕшмĕ тесе Таня шикленнĕччĕ, Саша вара пĕрре те шухăшласа тăмарĕ.

— Отпускра чух тĕрлĕ вырăнсене тухса çÿрени лайăх, — терĕ вăл. — Хамăршăн çеç мар, ытларах Толикшăн. Тĕрĕс калатăн, унта, ялта, хулари пек вĕçĕмсĕр шăв-шав çук, лăпкă. Сывлăш таса, уçă.

Тата ҫӗнӗ вырӑн, халиччен пӗлмен, курман ҫынсем. Ӳсекен ачана уйрӑмах кирлӗ ун пекки. Юрӗ, Таня, каятпӑр.

Нина патне ҫитме питех инҫе мар. Кӑнтӑрла ҫӳреме шӑрӑх пулнӑран каҫ пулттипе тухма шутларӗҫ. Хӑйсемшӗн мар, ывӑлӗшӗн. Ҫуллахи хӗвеллӗ кунсенче питӗ асапланать вӑл. Шывсӑр типнӗ йывӑҫ пек, чунӗпе те, кӗлетки-ҫурӑмӗпе те лӑштӑрах каять шеремет, пичӗ ҫинче юн тумламӗ те юлмасть тейӗн. Эмелсем пулӑшмаҫҫӗ.

Ҫул лайӑх, такӑр. Каҫа хирӗҫ машинӑсем сайра ҫӳреҫҫӗ. Ӗнтӗ ҫитме те нумай юлмарӗ. Акӑ сарлака трассӑран пӑрӑнчӗҫ. Машина сарнӑ чул ҫийӗн кӑлтӑртатрӗ. Вӑрман курӑнчӗ. «Ун витӗр тухсан пирӗн ял виҫӗ-тӑватӑ ҫухрӑмран инҫе мар», — тенӗччӗ Нина.

Кӗтмен ҫӗртен янкӑр тӳпене тӗксӗм пӗлӗт хупӑрларӗ, ҫиҫӗм ҫиҫрӗ, аслати авӑтрӗ, ҫумӑр чашлаттарса ҫума пуҫларӗ. Ҫанталӑк тӗттӗмленчӗ. Сасартӑк умра вӗсене хирӗҫ ҫӗр ҫийӗн вӗҫсе пыракан ҫапҫутӑ ҫаврашка курӑнчӗ. Ку мӗнне Сашӑпа Таня тавҫӑрса илме те ӗлкӗреймерӗҫ, ялтӑркка ҫавра, мечӗк евӗр, вӗҫсе-сиккелесе ҫывхарчӗ те тӳрех машина айне чӑмрӗ. Ҫав самантрах унта темскер хыттӑн шартлатрӗ. Тимӗр ут картах турӗ, каялла сулӑнчӗ те чарӑнса шӑпланчӗ. Пӗр тӑхтамасӑр Саша машинӑран сирпӗнсе тухрӗ.

— Хӑвӑртрах! Хӑвӑртрах! Чупӑр! Тарӑр! — хыҫалти алӑка яри уҫса вӑл сиксе тухнӑ ывӑлӗпе арӑмне аллисенчен ярса тытрӗ те аяккалла ывтӑнчӗ.

— Мӗн пулчӗ ку? — ыйтрӗ Таня хӑраса чарӑлнӑ куҫӗпе упӑшки ҫине пӑхса.

— Пӗлместӗп. Ман шутпа, ҫавра ҫиҫӗм...

— Эй, Турӑ...

Телее, машинӑран тӗтӗм те, ҫулӑм та тухмарӗ. Татах кӗтсе тӑчӗҫ. Ҫук, хӑрушлӑх пурри сисӗнмерӗ. Арӑмӗпе ывӑлне юлма хушса Саша каялла утрӗ.

— Чиперех пек, — мăкăртатрĕ вăл машина йĕри-тавра тĕплĕн пăхса çаврăннă хыççăн. Кĕрсе ларчĕ, уçça çавăрчĕ, стартер çине пусрĕ. Шăпăрт, мотор сасă памарĕ. Ăçта, мĕн ванчĕ-ши тесе капота уçса пăхрĕ. Анчах çанталăк тĕттĕмленнĕ, курăнмасть... Ах, ăнман çул. Çитме те инçе юлмарĕ. «Нимĕн те тăваймăн, хиртех, машинăрах çĕр касма лекет», — шухăшларĕ çемье пуçĕ каллĕ-маллĕ уткаласа. Йĕпе çине сапа тенĕ пек ытла та пăшăрханнипе асăрхаймарĕ пулас, ури яр шуса кайрĕ те çӳллĕ кĕлеткипе вăл чуллă çĕр çине персе анчĕ. Сиксе тăчĕ — кĕленче е шĕвĕр чул пулчĕ-ши — сылтăм аллинчен, чавсаран кăшт аяларах, юн ярлаттарсах юхать. Ахлатса ярса Таня упăшки патне ывтăнчĕ, сумкинчен пĕчĕк тутăр кăларса сурари пылчăка шăла-шăла тасатма пикенчĕ.

— Сăмса тутăрĕ пур-и? Ăçта?

— Сылтăм кĕсьере, — терĕ Саша. — Туртса çых хăвăртрах. Юн юхма чарăнтăр.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?

Çумăр чарăннă. Унăн хура кӳлепи халĕ тухăçалла шуса кĕпĕрленнĕ. Унта çиçĕм çипписем çутала-çутала илеççĕ, аслати кĕмсĕртететет. Çапах тӳпе уçăлнă, пуç çиййĕнче çăлтăрсем йăлкăшаççĕ. Тĕттĕмленнĕ çул çинче çын утни те курăнмасть, мотор сасси те илтĕнмест. Саша алли суранланман пулсан машинăра çĕр касатчĕç-ха. Халĕ утма лекет пĕр-пĕр яла çитиччен. Сурана капла хăварма хăрушă, таса шывпа та пулин çуса çыхмалла.

— Атте! Анне! Пăхăр-ха! Çутă! Инçе те мар! Авă, ав! — кăшкăрса ячĕ Толик савăк сасăпа хура вăрман енне аллипе кăтартса. — Чӳрече çути. Пӳрт ларать унта.

— Чăнах та, пӳрт, — хуравларĕ Таня ывăлĕ тĕлленĕ енне тинкерсе. — Вăрман хуралçи çурчĕ пулĕ. Маттур, Толик, куçу çивĕч санăн. Атьăр утар. Унта шыв тупăнатех. Тен, эмел те пулĕ.

— Кунта сукмак та пур. Шăп çавăнталла каять, — каллех сăмах хушрĕ хăйне мухтанипе хавхаланнă ача.

— Вăт ăнăçу. Тавах Турра.

— Мĕн тума пурин те утмалла? — терĕ Саша арăмĕ çине иккĕленерех пăхса. — Пĕччен эпĕ хăвăртрах çитетĕп, хăвăртрах каялла килетĕп.

— Çук, Саша, çук, пĕрлех каятпăр, — татсах каларĕ Таня. — Сурану тарăн санăн. Тата сĕм çĕр. Палламан, пĕлмен вырăнсем... Манăн та пĕччен юлас килмест. Хăратăп эпĕ.

Алăка питĕрмен. Краççын лампи çунакан çурма тĕттĕм пӳлĕмре çурăмĕ кукăрălнă ватă карчăк çеç. Кĕрсе тăнă палламан çынсем çине вăл тĕлĕнмесĕр, чĕнмесĕр пăхса илчĕ, çаплах сăмахсăрах аллипе кăтартса малалла иртсе ларма сĕнчĕ.

Пӳртĕнче таса, анчах пуян мар. Тĕксĕмленнĕ стенасем, кивĕ диван, çавăн пекех кивелнĕ сĕтел, темиçе пукан, кĕтесре турăш.

— Кинемей, инкеке лекрĕмĕр эпир. Çул çинче машина çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Упăшка ӳксе аллине хытă амантрĕ. Халĕ те юн сăрхăнать. Сурана таса шывпа çуса тасатасчĕ. Сĕрме эмел çук-и? — ыйтрĕ Таня.

Мĕн каланине карчăк ăнланмарĕ тейĕн. Вăл тӳрех Толик умне пырса тăчĕ, аллине ача пуçĕ çине хурса куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ. Вара тин Саша енне çаврăнчĕ. Çаплах сăмах хушмасăр çитсăпа карса тунă кĕтесе кĕме чĕнчĕ, пит-куç çумалли савăтри шывпа пылчăклă алла, сурана çурĕ, таса ал шăллипе шăлса типĕтрĕ, стена çумĕнче çакăнса тăракан шкапран пĕчĕк кĕленче кăларса унти шĕвекпе сурана сĕрсе ячĕ.

— Тавтапуçах, кинемей. Лăштах кайрĕ ыратни, — çăмăллăн сывласа ячĕ арçын.

Çаплах шарламасăр кил хуçи сĕтел çине кашăксем хучĕ, пысăк чашăкпа вир пăтти пырса лартрĕ. Тепĕр пӳлĕмрен минтерсем, утиялсем илсе тухса

диван çине хучĕ, кресло-кравать текен çемçе пукана саркаласа Толик çине кăтартрĕ те каялла кĕрсе çухалчĕ.

— Чĕлхесĕр пулас, — терĕ Таня çурма сасăпа. — Тен, хăлхасăр та.

— Ырă çын. Тавах ăна.

— Сурану мĕнле?

— Ыратни лăпланать. Юн та сăрхăнми пулчĕ.

— Анчах пирĕн машина... Пĕр-пĕр çăткăн пырса тухмасан юрĕччĕ, — канăçсăррăн калаçса илчĕ хăрушлăх иртнине туйнă Таня. — Тен, çĕр каçма унта кайăпăр?

— Çук! Çук! — килĕшмерĕ çакна илтнĕ Толик кĕç-вĕç йĕрсе ярас пек. — Эпĕ ниçта та каймастăп. Манăн утас килмест.

Чăнах та, ача пичĕ хут пек шурă, куçĕсем сӳрĕкленнĕ. Вăл аран-аран ларать.

— Машину-качку. Пĕтсен пĕттĕр, — терĕ Саша ывăлĕ çине пăхса. — Аслă çул çинче мар. Ирччен, тен, чиперех пулĕ. Хамăр чĕрĕ, сывă юлнишĕн савăнар. Урăхла та пулма пултарнă. Çавра çиçĕм шӳт мар. Çывăрар выртса. Ирпе куç курĕ...

Вăл хăйне хулпуççинчен лăсканипе вăранчĕ.

— Тăр-ха, тăр хăвăртрах! — илтĕнчĕ арăмĕн хумханнă сасси.

— Мĕн? Мĕн пулнă? — Ялтах пуçне çĕклерĕ арçын, вара тĕлĕннипе шалтах хытса ларчĕ. — Ку мĕне пĕлтерет? Ăçта эпир? — ыйтрĕ вăл йĕри-тавра пăхкаласа.

Вĕсем пӳртре мар, хирте вăрман хĕрринче иккен. Минтер вырăнне пуç айĕнче пысăк чул катăкĕ. Утиял та çук, вăл çири пиншакĕпе витĕннĕ. Ак тамаша! Анчах кун пирки йĕркеллĕн шухăшласа илме те ĕлкĕреймерĕ, арăмĕ хуллен ĕсĕкленине илтсе пуçне тӳрех ун енне пăрчĕ.

— Мĕн? Тата мĕн пулнă? — вĕрекен шывпа пĕçертнĕ пекех, ура çине сиксе тăчĕ арçын.

— Толик... Тăнне çухатнă. Аташать. Темле вăратсан та илтмест мана, — йĕре-йĕре пĕлтерчĕ Таня. Пăхрĕ те ача ашшĕ — вĕсен пĕчĕк ывăлĕ те нӳрлĕ çĕр çинче выртать. Унăн та пуçĕ айĕнче чул муклашки.

— Толя! Толик! — пĕшкĕнчĕ ача умне хăраса ӳкнĕ ашшĕ.

Лешĕ илтмерĕ, тем мăкăртатса илчĕ çеç. Вăйлă аллисемпе çĕклесе Саша ывăлне кăкăрĕ çумне çупăрларĕ те вĕсем килнĕ сукмакпа каялла васкарĕç.

— Анлă çул инçех мар. Ун çине тухса хăвăртрах хулана каймалла. Унта врачсем, больница, — терĕ арçын пысăк утăмсемпе малалла талпăнса. — Акă пирĕн машина, вырăнтах ларать. Тĕкĕнни, сăтăр туни курăнмасть. Таня, сар-ха курăк çине мĕн те пулин Толика вырттарма. Пăхам кун çутинче, мĕн çĕмĕрĕлнĕ унта. Тен, юсама пулать.

Вĕçĕмсĕр тем мăкăртатакан ывăлне вăл пĕчĕк утиял çине çепĕççĕн хучĕ. Капота уçрĕ, пăхрĕ, тишкерчĕ, анчах мĕн те пулин шайран тухнине, çĕмĕрĕлнине курмарĕ. Ассăн сывласа ярса вырăнне кĕрсе ларчĕ. Хăнăхнă алă хăй тĕллĕнех уççа лартрĕ, пăрчĕ. Вара, нимĕн пулман пекех, машина кĕрлесе кайрĕ те вырăнтан хускалчĕ.

— Тĕлĕнтермĕш! — мăкăртатрĕ арçын кĕске самант çемçе ларкăч çине çурăмĕпе тайăнса. «Тĕлĕнтермĕш», — шухăшларĕ вăл каллех.

Чĕркуççийĕ çине пуçне хунă ывăлне ачашланă май куççульне шăла-шăла ларакан Таня хускалчĕ, малалла ӳпĕнчĕ.

— Мĕн?.. Юсарăн-и? — хыпăнчăклăн ыйтрĕ вăл. — Кайма пултаратпăр-и?

— Çавăн пек туйăнать, — терĕ Саша иккĕленчĕк сасăпа. — Тапранса пăхăпăр.

— Çапах пирĕн халĕ хулана мар, Максимовсем патне çитмелле, — терĕ каллех Таня. — Врачсем унта та пур. Кĕçех шăрăхлатать. Тем сиксе тухĕ икĕ виçĕ сехет каймалли çул çинче.

— Юрĕ, — килĕшрĕ Саша кăштах шухăшланă хыççăн.

Тĕксĕм çĕр хыçĕнчен çĕкленнĕ хĕрлĕ хĕвел пайăркисем тӳпери кăтра шурă пĕлĕтсене сăрласа улăштарчĕç, каçхи тĕксĕме пĕтĕмпех хуса ячĕç. Ирхи çил вăранса çĕр çийĕн вăркăшса юхрĕ.

— Кăтартрĕ пире кĕçĕрхи мыскара. Ай-яй. Нихăçан курманнине куртăмăр. Каласан никам та ĕненес çук. Çавра çиçĕмрен пуçланчĕ те, — терĕ Саша шăппăн йĕрекен арăмне йывăр шухăшсенчен кăшт та пулин пăрма тăрăшса. — Пăсăлнă машина хăйне хăй юсанса ларни те тĕлĕнтерет. Киле таврăнсан лайăх специалиста кăтартас пулать. Мĕн пулнă унта. Халĕ чупать-ха. Чуптăрах. Чиперех çитес пек туйăнать. Çапах та, Таня, мĕне пĕлтерчĕ çак тĕлĕнмелле япала? Мĕнле майпа пӳртре çывăрма выртса эпир хирте вăрантăмăр? Кам, мĕнле вăй шӳт турĕ çапла? Мĕн тĕллевпе?

Курни-илтнипе, хуйхă-суйхăпа пусăрăннă Таня сăмах хушма вăй-хал çитерейменрĕ. Пысăк илемлĕ пӳрт патне машина пырса чарăнсан тахăшĕ чӳречерен пăхрĕ. Васкакан ура сассисем шалтан крыльцаран чупса анчĕç, картишĕнче илтĕнчĕç. Кил карти алăкĕ яри уçăлса кайрĕ.

— Килчĕç пирĕн хăнасем, — тухса тăчĕ Гера. — Тинех. Чим-ха, хапха уçам.

— Мĕн пулчĕ? Эпир сире каçчен çитетĕр пулĕ тесе. Çапла калаçса татăлтăмăр вĕт. Мĕншĕн халĕ тин? — сиксе тухрĕ упăшки хыççăнах Нина. — Çĕрле шăнкăравларăм сирĕн пата. Пиллĕк çитиччен тухса кайрĕç тесен ăш вăркама пуçларĕ. Йĕркеллĕ çывăраймарăм кĕçĕр. Таня, тух-ха хăвăртрах, пăхам сан çине, ыталам чунтан savăннипе, — машина алăкне уçса шалалла пĕшкĕнчĕ çамрăк хĕрарăм. — Мĕн пулнă сире? Мĕн эсир иксĕр те... Инкек-и? Мĕнле инкек?

— Тăхта-ха, Нина. Тăхта. Пирĕн Толик чирлесе

ӳкрĕ, — чарчĕ ăна Саша. — Чи малтан çавна пĕр-пĕр лăпкăрах уçă вырăна кĕрсе вырттарасчĕ.

— Ак тата. Ак тамаша. Халех, халех, — хыпăнса ӳкрĕ хĕрарăм. — Гера, мĕн хытса тăратăн эсĕ? Уçса яр хапхана.

Чирлĕ ачана пĕчĕк çутă пӳлĕме çемçе вырăн çине хурсан Саша ун пуçĕ вĕçне пукан çине тĕшĕрĕлчĕ.

— Таня, кан пăртак. Эпĕ ларатăп кунта.

— Тĕрĕс. Атя уçăл кăштах. Ил хăвна алла, — терĕ Нина та тантăшне хулпуççийĕнчен ыталаса.

— Çывăхра врач пур-и? — ыйтрĕ Таня ăна тăнламасăр.

— Врач? Пур. Çичĕ çухрăмра. Анчах кашни кун тенĕ пек район больницине кайма тивет те — вырăнтах-ши? Малтан аттене кăтартар-ха. Гера, — чĕнчĕ вăл каллех упăшкине. — Чуп-ха, кала аттене хăвăртрах килтĕр. Ирхи сывлăмпа кăштах çулам-ха тесе хире кайрĕ вăл. Кунтах, инçе мар, — унтан пуçланă сăмахне малалла тăсрĕ. — Гавриил Васильевич, паллах, фельдшер çеç, анчах тахçан-танпах ĕçлет. Хисеплеççĕ ăна. Таврари ялсенчен темиçе çухрăмран ун патне пулăшу ыйтма сиплен-ме килеççĕ. Вĕсемшĕн вăл фельдшер та, юмăç та, тен, тухатмăш та. Астăватăн-и, хĕре капла юрамасть тесе выля-кула тенĕ пек, вăл сан сăмса çунатти çинчи шĕпĕне пĕтерчĕ?

— Астăватăп-çке, — Таня хуйхăллă питĕ-куçĕ ирĕксĕрех ăшшăн йăлкăшса илчĕ.

Çапла, Гавриил Васильевич тĕлĕнтерчĕ ун чух ăна. Çип татăкне тем мăкăртатса шĕпĕн çийĕн тытса виçĕ хут тĕвĕлерĕ, унтан çунтарса ячĕ. Таня, паллах, ĕненмерĕ ăна. Анчах шĕпĕн пĕчĕкленме пуçларĕ. Эрнерен ун вырăнне пĕчĕк пăнчă çеç юлчĕ, каярах вăл та çухалчĕ.

Хаклă хăнана хулпуççийĕнчен ыталаса кил хуçи хĕрарăмĕ ăна тепĕр пӳлĕме илсе кĕчĕ.

— Лар-ха çакăнта, — çемçе диван çине кăтартрĕ вăл. — Каласа пар, мĕн пулчĕ Толикпа тăруках? Каç пулттипе тухнă пулсан мĕншĕн хĕвел тухсан кăна çитрĕр эсир? — чăтăмсăррăн ыйтма пуçларĕ вăл.

— Ах, Нина... Хам та пĕлместĕп, — хаш сывласа ячĕ Таня. — Пĕччен пулсан тĕлĕкре курăнчĕ тесе шутлаттăм. Иккĕн-çке. Нихăçан та ĕненмен эпĕ унашкал халапсене. Трассăпа йĕркеллех килтĕмĕр. Пур асарĕ-писерĕ пысăк çулран сирĕн енне пăрăнсан пуçланчĕ. Малтан темле йăлтăр-ялтăр çаврашка, те чăнах çавра çиçĕм пулчĕ вăл, те темле усал вăй, машина айне вĕçсе кĕрсе ăна çĕмĕрсе пăрахрĕ. Ку нимĕнех те мар-ха. Юсанчĕ вăл хăех. Толик çывăхне ямалла марччĕ манăн çав карчăка. Шухăшласа илеймерĕм. Умнех пырса тăчĕ вăл, тата аллине ун пуçĕ çине хучĕ. Çавăн хыççăн ача лăстăрах кайрĕ.

— Кам пырса тăчĕ? Хăçан? Тăхта-ха, лăплан. Каласа пар йĕркипе.

Итленĕ май Нина куçĕсем чарăлчĕç, вăл тусĕ çине ĕненмесĕр сăнаса пăхрĕ.

— Таня, мĕнле пўрт çинчен калаçатăн эсĕ? Вăл вырăнта вăрман хĕрринче нихăçан та нимĕнле çурт та пулман. Вăрман хуралçи пўрчĕ пачах урăх енче.

— Çапла, чул муклашкисем çеç йăваланса выртаççĕ. Анчах ун чух пўрт ларатчĕ çав. Чўречесенчен, пире астарнă пек, çутă курăнатчĕ. Каларăмçке, пĕччен пулнă пулсан хама хам та ĕненес çук...

Çав самантра алăк яри уçăлса кайрĕ те Нина ашшĕпе Гера васкаса кĕчĕç.

— Гавриил Васильевич! Ах, Гавриил Васильевич, Гавриил Васильевич, — Таня вĕсене хирĕç çĕкленчĕ, тўсеймерĕ, каллех йĕрсе ячĕ.

— Ну, ну. Ун пекех хуçăлма кирлĕ мар, — терĕ ватă фельдшер ача амăшне хулпуççийĕнчен çупăрласа. — Пурнăç вăл çапла — унра ырри те, усалли

те пур. Эпир ырă пуласса шанăпăр. Ну-с, итлетĕп. Мĕн пулчĕ? Хăçан, мĕнрен пуçланчĕ? Каласа пар. Та-ак. Интереслĕ. Тĕлĕнмелле. Шутсăрах тĕлĕнмелле... Халĕ ман пациента курасчĕ.

Ватă фельдшер чирлĕ ачан юн тымарĕ тапнине тăнларĕ, пысăк алă тупанĕпе нӳрлĕ çамкине сĕртĕнчĕ, шухăша кайнăн ун çинчен куçне илмесĕр, пĕр вăхăт чĕнмесĕр, хускалмасăр тăчĕ.

— Хăрамалли çук, — сăмах хушрĕ вăл юлашкинчен. — Вĕриленмест, лăпкă сывлать. Пичĕ хаваслă, кула-кула илет. Апла лайăх ăна, канлĕ, нимĕн те кансĕрлемест. Кунта ман пулăшу кирлĕ мар. Кунта. Кхм, кхм... Пĕр сăмахпа — çывăртăр. Халĕ ăна канлĕх кирлĕ. Çапла. Канлĕх çеç.

Кун каç енне сулăнсан пӳлĕме хĕвел пайăрки йăлкăшса кĕрсе хускалмасăр выртакан ачан шуранка пичĕ çине ӳкрĕ. Тăрса Таня чӳрече каррине антарма тăнăччĕ. Çав самантра ывăлĕн имшеркке алли вылянса илчĕ те хуллен шуса анса çĕрелле усăнчĕ. Амăшĕ ăна асăрханса çĕклерĕ, çав самантра ача куçне уçрĕ.

— Анне, эсĕ-çке ку, — терĕ вăл хаваслăн. — Эпĕ... Ой, ăçта кайса кĕчĕ вăл? Халĕ кăна кунтаччĕ-çке, — пуçне пăркаласа йĕри-тавра пăхкаларĕ Толик. — Санран хăраса пытанчĕ пулас.

— Тĕлĕкре такам курăннă сана. Кунта никам та çук, — амăшĕ çăмăллăн сывласа ячĕ. «Турра шĕкĕр, тăна кĕчĕ».

— Тĕлĕкре мар, — килĕшмесĕр пуçне сулкаларĕ ывăлĕ. — Анне, эпĕ паянтан сывă çын. Халĕ манăн пуç пĕрре те ыратмасть. Мĕншĕнне калас-и?

— Паллах, эпĕ итлетĕп.

Ах, шеремет ачи! Мĕн тери чирлесшĕн мар вăл. Хăйне кăшт çăмăл туйсанах сывалтăм тесе ĕнентерет.

— Эпир çав пӳртре карчăк патĕнче çывăртăмăр-çке, — çаплах хавхаланса тăсрĕ Толик сăмах-

не. — Ахаль карчăк мар вăл. Вăл... вăл... Пĕлетĕн-и, мĕн терĕ вăл мана? Эсĕ ман асаттен аслашшĕ пулатăн терĕ.

Чунĕ ыратса кайнипе Таня чăтаймарĕ, йынăшса ячĕ. Аташать-и, тăнран тайăлчĕ-и?.. Хĕрарăм питне аллисемпе хупларĕ те çапла пĕр самант хытса ларчĕ.

— Анне, санăн итлес килмест-и? — пырса кĕчĕ хăлхана кӳреннĕ сасă. — Чăн сăмах. Пĕрре те суймастăп.

— Итлетĕп, ывăлăм, итлетĕп. Эпĕ ахаль çеç.

Амăшĕ вара чунне çунтарса, çав вăхăтрах тĕлĕнсе ывăлĕ пĕр пăтранмасăр, йĕркипе каласа кăтартнине тимлĕн итлерĕ.

— Çĕрле эсир çывăрса кайсан пӳлĕм алăкĕ хуллен чĕрик турĕ те, хайхи карчăк кĕчĕ. Итлесе тăчĕ, вара чĕрне вĕççĕн утса ман пата пычĕ.

— Ну-у! — Таня шăм-шакĕ тăрăх сивĕ чупса саланчĕ. — Мĕн терĕ вăл сана? Мĕн турĕ?

— Малтан эпĕ те хăраса ӳкрĕм. Кăшкăрса сире вăратас тенĕччĕ, анчах вăл пӳрнине тути патне тытса шарлама хушмарĕ.

— Вара? — каллех ыйтрĕ амăшĕ мĕнпур кĕлеткипе чĕтреме тытăнса.

— Çума ларчĕ те, лăплан, ан хăра, санпа калаçмалли пур терĕ. Анне, пĕлетĕн-и, вăл çирĕм виççĕмĕш ĕмĕртен килнĕ пирĕн пата. Эпир санпа пĕр йăхран, эсĕ ман асаттен аслашшĕ пулатăн терĕ. Кулăшла вĕт? Çапла-и, анне? — хаваслăн ахăлтатса ячĕ Толик.

— Кала, кала, итлетĕп, — терĕ Таня юхса аннă куççульне хăвăрт шăлса илсе.

— Мĕнле килтĕр эсир унтан, — тесе ыйтсан пирĕн пĕр вăхăтран тепĕр вăхăта тухса çӳреме уйрăм вырăнсем пур. Пĕри шăпах эсĕ выртакан çĕрте терĕ. Пĕлетĕн-и, мĕн тума килнĕ вăл ман пата? — Толик пичĕ-куçĕнче хавас кулă çухалчĕ, куç харшийĕсем пĕркеленчĕç. — Вĕсен йăхĕнче

(манăн та ĕнтĕ) сыпăкран сыпăка чирлĕ, имшер ачасем çуралаççĕ иккен. Пуç ыратать вĕсен, сăмсаран юн каять, хăстарать. Мĕншĕнне пĕлес тесе вĕсем тĕпчеме шутланă. Тĕрĕсленĕ хыççăн темле ăслă машинăсем (ячĕсене астуса юлаймарăм) пурте ман çине эпĕ айăплă тесе кăтартнă. Ман генсем сигнал параççĕ иккен унталла. Çаплах каларĕ вăл. Эпĕ çав пăсăка юсама килтĕм терĕ.

— Турăçăм! — аллисене шарт çапса пăшăлтатрĕ ачин кашни сăмахне тимлĕн итлекен амăшĕ.

— Хăçан пуçланчĕ санăн çак чир, мĕнрен тесе ыйтрĕ, — тăсрĕ калавне Толик. — Эсĕ врача каласа панине аса илтĕм те, тăваттăра чух мана пĕр ӳсĕр кăшт çеç шыва путарман. Çавăнтан терĕм.

— Тĕрĕс! Чăннипех çапла. Вара? Малалла?..

— Вăл пуçне сулчĕ те: «Хăранипе апла. Ну, кун çумне тата япăх экологи, сиенлĕ апат-çимĕç, наркăмăшлă сывлăш, шыв хутшăннă», — тесе хучĕ. Эпĕ унпа тата та калаçасшăнччĕ — интереслĕ-çке, анчах вăл алă тупанне ман пит çийĕн шутарса илчĕ те халĕ сан сывăрас пулать. Лайăх, хаваслă тĕлĕк тĕллен терĕ. Урăх эпĕ ăна курмарăм.

— Эсĕ, чăнах та, нумай сывăртăн. Такампа калаçрăн, култăн. Кампа?

— А-а, каярах ман пата шурă кайăк вĕçсе кĕчĕ. Эпир вылярăмăр унпа. Вăл мана кулăшла япаласем çинчен каласа пачĕ.

— Мĕн каларĕ?

— Эсĕ тек чирлеместĕн терĕ. Тата... Ыттине астумастăп, маннă, — хушса хучĕ амăшĕ çине айăплăн пăхса ача. — Халĕ кăна кунтаччĕ вăл. Сана курсан таçта кайса пытанчĕ.

— Тĕлĕкре курăннă вăл сана.

— Тĕлĕкре? А-а, ăнлантăм. Анне, ман çиес килет.

— Юрать, ывăлăм, халех, — сиксе тăчĕ Таня. — Халех илсе килетĕп. Халех, ывăлăм.

Çапла, талăк ĕнтĕ Толик ăша тĕпренчĕк те яман. Миçе çул ашшĕ-амăшĕ вăл çиес килет тенине илтменни. Сĕтел хушшине ларсан та кăшт чĕпĕткелесе илет çеç.

Çав самартра Нина васкаса кĕчĕ.

— Вăт маттур! Çиекен лаша çулран юлман тет. Атя, атя. Ту-утлă апат хатĕрлерĕм эпĕ сан валли, — терĕ вăл. Ачана аллисенчен туртса тăратрĕ те пӳлĕмрен илсе тухса кайрĕ. Вĕсем хыççăнах васкана Таня кăшт çеç алăк хыçĕнче тăракан Гавриил Васильевича пырса перĕнмерĕ.

— Каçару ыйтатăп, — терĕ лешĕ именнĕ сасăпа. — Толик калаçнине илтрĕм те чăтаймарăм. Итлесе тăтăм. Медик-çке эпĕ. Пĕлес килет. Нина та манашкал...

— Пĕтĕмпех илтрĕр-и?

Хумханнă Таня ăна аллинчен пырса тытрĕ, куçĕнчен канăçсăррăн тинкерсе пăхрĕ.

— Гавриил Васильевич, пулни-илтнине хам та ĕненме хăратăп. Тĕлĕк мар-и ку?.. Чăннипех сывалчĕ-и пирĕн ывăл е çак метаморфоза, çак улшăну вăхăтлăха кăна? Калăр. Калăр... Манăн сирĕн шухăша пĕлес килет.

— Ну, ыррине шанар, Танюша. Пĕлтернĕ-çке ăна йăхри пăсăка юсама килтĕм тесе. Вăт.

— Гавриил Васильевич, эпĕ чăнласах ыйтатăп.

Ватă фельдшер хулпуççине хускаткаласа илчĕ, аллисене саркаларĕ.

— Ну, психологсем, наука çыннисем сире такам куç пăвса пушă хирте пӳрт кăтартнă теме пултарĕç. Толик пирки — тĕлĕнтермĕш тĕлĕке пула ун ăшĕнче, тĕрĕсрех, унăн организмĕнче çавнашкал улшăнусем пулса иртнĕ е сывалма вăхăчĕ çитнĕ, е тата та çавăн евĕр мĕн те пулин каласа ĕнентерĕç. Анчах кам пĕлет ăна, пирĕн çакăнта, çак питĕрĕнчĕк, çак тĕлĕнтермĕш кăткăс, пĕчĕк тĕнчере мĕн пулса иртнине, — терĕ вăл çӳллĕ çам-

кине пысăк чышкипе шаккаса кăтартса. — Ну, тепěр енчен... Тен, пуç мими те мар. Тен, чăннипех таçтан, урăх çěртен килнě çав пулăшу. Çут çанталăк шутсăр кăткăс, унта эпир пěлменни пайтах. Хам енчен çакна çеç çирěплетме пултаратăп — ырă улшăнусем пур. Пысăк улшăнусем. Савăнăр. Шанăр. Эпě те шанатăп.

— Тавтапуç, — терě те Таня ывăлě мěнле çинине курмаваскарě.

Чăнах та, çак кунран Толик сывлăхě юсансах пычě. Пуç ыратать теме пăрахрě вăл, ытти чирсем те ерипен иртрěç. Шуранка пичě çине кěрен сăн çапрě, куçěсем çивěчленчěç, сўрěк шăм-шакě çăмăлланчě. Пěвěпе те вăл кěçех тантăшěсене хуса çитрě.

Вăт çавнашкал мыскара. Хуть ěненěр, хуть ан ěненěр.

## ЮЛАШКИ ОПЕРАЦИ

Алăка шăнкăртаттарчěç.

— Кам унта? — ыйтрě Алевтина Дмитриевна çывăхах пырса.

— Ку эпě, анне, — илтěнчě паллană сасă.

— А-а, Алеша... Питě лайăх килни. Эпě сан пата пырас тесе хатěрленеттěм. Хывăн. Ирт малалла. Çиес килет-и? Халех чейник лартатăп.

— Çиес те, ěçес те килмест. Эпě нумайлăха мар, васкатăп. Ялта пултăмăр. Акă икě кило какай илсе килтěм, тата пыл ыйтнăччě эсě. Ме тыт, — терě ывăлě, çўллě пўллě, хура куçлă çамрăк арçын, алăк патěнчен иртмесěр. — Атте килеймерě-и-ха Мускавран?

— Килчě те, операци тумалла тесе чěнсе кайрěç...

Кěтмен çěртен Алевтина Дмитриевна нăшăкласа илчě те халат кěсйинчен пěчěк тутăр кăларса унпа куçне хупларě.

— Мĕн? Мĕн пулнă? — алăк хăлăпĕнчен аллине вĕçертсе амăшĕ еннелле сулăнчĕ Алексей.

— Аçу... Аçу чирлĕ, — терĕ хĕрарăм. — Рак унăн. Вар ракĕ...

Лутăрканнă тутăрне куçĕ çинчен илмесĕр вăл хулпуççине чĕтретсе сассăр йĕме пуçларĕ.

— Ну?!.. Акă тата, — ывăлĕн сывлăхлă çамрăк пичĕ салхуланчĕ, хура куç харшийĕсем хушшинче тарăн йĕр курăнчĕ. — Вăт инкек...

— Инкек, Алеша, пысăк инкек.

— Хăçан, мĕнле пĕлтĕр? Чиперех çӳрет-çке. Ĕçе те каять...

— Паян Мускавран таврăнсан каларĕ. Хăй чирлине малтанах туйнă пулас вăл. Çавăнпа кайнă. Мана ăнсăртран сиксе тухнă кăткăс ыйтусене татма каятăп терĕ. Тĕрĕсленĕ ĕнтĕ ăна унта... Вăт çавăн пек диагноз...

— Ай-яй-яй!.. Шутламан, кĕтмен çĕртен, — ахлатрĕ Алексей пуçне хуйхăллăн унталла-кунталла сулкаласа. — Нимĕнпе те пулăшма çук-и? Операци...

— Çавăн пирки калаçасшăн эпĕ санпа, ывăлăм, — терĕ Алевтина Дмитриевна йывăррăн сывласа ярса. — Салтăн-ха. Иртсе лар.

Мĕн тăвас-ши тенĕн, Алексей кĕске самант хускалмарĕ, унтан васкамасăр нумаях пулмасть илнĕ хаклă модăллă курткине, йăмăх шарфне хывса пăта çине çакрĕ, алă тупанĕсемпе хура çӳçне сăтăркаласа амăшĕ хыççăн тепĕр пӳлĕме кĕчĕ, ăна хирĕç пукан çине ларчĕ.

Çур ĕмĕре çитме нумаях юлман пулин те, чипер пичĕ-куçĕпе те, яштака кĕлетки-çурăмĕпе те, çăмăл уттипе те Алевтина Дмитриевна хăй çулĕсенчен чылай çамрăк курăнатчĕ. Тумĕ-сийĕ те яланах типтерлĕ, кăмăлĕ те уçă, ăшă унăн. Халĕ Алексей ун çине ирĕксĕрех шеллесе пăхрĕ — хулпуççийĕсем лăштăрах усăннă, шурăхнă тути мĕскĕннĕн

чĕтрет, хĕрелсе тăртаннă куçĕнче тĕпсĕр хуйхă. Вунă çула ватăлнă тейĕн çак кĕске вăхăтра.

— Эсĕ операци терĕн, — сăмахне малалла тăсрĕ хĕрарăм. — Калаçнă аçу ун пирки Мускавра. Шăп çав чирпе ĕçлекен пĕр пысăках мар клиникăра пулнă вăл. «Маларах килнĕ пулсан ним мар сывататтăмăр. Халĕ йывăртарах пулать. Çапах шанчăк пур», — тесе каланă ăна. Анчах...

— Мĕн анчах?

— Укçа шутсăр нумай ыйтаççĕ, — хуравларĕ Алевтина Дмитриевна йывăррăн сывласа ярса. Хакне каласан Алексей шартах сикрĕ. — Çуррине малтан памалла. Ыттине сывалма тытăнсан. Вăт çапла, ывăлăм... Укçа... Халĕ пур çĕрте те укçа... Ĕнтĕ çирĕм çичĕ çул аçу çак больницăра ĕçлет. Çирĕм çичĕ çул хирург. Кăнтăрла кăна мар, çĕрле те пайтах тухса кайнă васкавлă операци тесе. Нихăçан та никамран та пĕр пус та илмен, — хушса хучĕ хĕрарăм ывăлĕ чĕнменнине кура. — Мĕнпур шанчăк сан çинче, Алеша. Аппу врач, нумай илмест. Упăшки заводра инженер. Пĕр эрне ĕçре, виççĕшне килте ларать. Эпир те, хăвах пĕлетĕн, пуян мар. Мĕн вăл врач е учитель шалăвĕ хальхи вăхăтра? — çапла каласа Алевтина Дмитриевна ывăлĕ çине юратса, шанса пăхса илчĕ.

Пуçне пĕксе Алексей пĕр вăхăт çаплах шарламарĕ, унтан тăрса канăçсăррăн унталла-кунталла уткалама тытăнчĕ.

— Анне, ăçтан тупас манăн çавăн чухлĕ укçа? — терĕ вăл юлашкинчен амăшĕ умĕнче чарăнса.

Кĕтмен тӳрккес сивĕ сăмахсем кĕске вăхăта ăнран ячĕç. Такам кăкăртан вăйпа чышнă пек, хĕрарăм каялла сулăнчĕ, калама сăмах тупаймасăр пĕр самант чĕнмесĕр аптраса ларчĕ.

— Мĕнле ăçтан? — ыйтрĕ вăл юлашкинчен тĕлĕннипе чарăлнă куçне ывăлĕ çине тинкерсе. — Виçĕ машина санăн, икĕ лавкка. Пĕри кунта, район

центрӗнче, кунӗн-ҫӗрӗн суту тӑвать. Тӑваттӑн ӗҫлеҫҫӗ сан патра... Тӑватӑ ҫынна тара тытнӑ.

Амӑшӗн ӑшӑ куҫӗсем улшӑнчӗҫ. Вӗсенче пӗр вӑхӑтрах кӳренни те, хӑрани те, тилмӗрни те палӑрчӗ. Ҫамрӑк арҫыннӑн та пичӗ илемсӗррӗн турткаланса илчӗ, хура куҫ харшийӗсем кӑмӑлсӑррӑн пӗрӗнчӗҫ.

— Кама мӗн ӗҫ ман магазин ҫӗрле те ӗҫленипе? — терӗ вӑл сасартӑк ҫӗкленнӗ ҫиллине путараймасӑр. — Эпӗ ӑна хам тӑрӑшнипе, хам ырмиканми чупнипе тунӑ. Кама мӗн ӗҫ ман мӗн пуррипе? Мана никам та пулӑшман. Хамах... Хамах... Ҫавӑн чухлӗ укҫа тыттарса ярса каллех ҫука юлмалла-и? Тепӗр тесен манӑн хамӑн ҫемье... Ачасем...

— Алеша-а! — йынӑшса ячӗ Алевтина Дмитриевна. — Мӗн калаҫатӑн эсӗ? Тӑна кӗр, ачам. Аҫу вӗт вӑл санӑн... Тӑван аҫу...

— Пӗлетӗп. Ухмах мар, — ҫаплах тӳрккессӗн хуравларӗ Алексей. — Атте... Районӗпе пурте пӗлекен паллӑ врач, ӑста хирург. Пӗр кун мухтанать: «Мана, пирӗн больницӑра ӗҫлекен врачсем хушшинче пӗр ҫынна, ял халӑхӗ аслӑ тухтӑр е асли тесе хисеплесе чӗнет». Хӑй вара вӑтӑр ҫула яхӑн ӗҫлесе те машина туянайман. Ну, чӑннипе каласан ун чух укҫа тупма майӗ те сахалтарах пулнӑ ҫав, — сассине кӑшт ҫемҫетсе хушса хучӗ ҫамрӑк арҫын ҫавӑнтах. — Анчах халӗ... Халӗ пурнӑҫ улшӑнчӗ. Виҫӗм ҫулах сӗнтӗм эпӗ ӑна кунта, хамӑр патра, тӑватӑ-пилӗк койкӑллӑ операци уйрӑмӗ уҫма. Ҫурчӗ пур, ытти кирлӗ ӑпӑр-тапӑра илнӗ. Унӑн авторитечӗпе, унӑн ӑсталӑхӗпе пациентсӑр лармастчӗ. И-и, ӑҫта унта! Итлесшӗн те пулмарӗ. «Укҫаллӑ медицина пулма пултараймасть. Ҫын пурте пӗр пек. Ун пурнӑҫне укҫапа виҫни преступлени!» — терӗ. Хӑйӗнчен халӗ авӑ мӗн чухлӗ сӑтӑрса илесшӗн... Мана итленӗ пулсан...

Амӑшӗ каллех хуллен нӑшӑклатма тытӑннине

курса Алексей сăмахне татрĕ, йыварран тăчĕ, сывăхах пырса аллине унăн вăйсăррăн усăннă хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Ну, юрĕ, анне, юрĕ, — терĕ вăл, пĕшкĕнчĕ те тутипе амăшĕн çӳçне ачашшăн перĕнчĕ. — Эпĕ шухăшласа пăхăп. Манăн алăра, чăнах та, укçа нумай мар. Мĕн те пулин сутмалла пулать-ши?.. Арăмпа канашлăпăр-ха. Тен, юлташсем кивçен парĕç. Кĕçех пĕлтеретĕп... Çак кунсенчех... Тен, паянах.

...Ĕç кунĕ вĕçлесе больницăран тухнă Владимир Порфирьевича картишĕнче Алексей кĕтсе илчĕ.

— Эсĕ мĕн кунта? Чирлерĕн-им? Килте пурте чиперех пулĕ?

— Йĕркеллех-ха. Пурте сывах. Сан пата эпĕ. Калаçмалли пур. Манăн пĕр вырăна çитсе пĕчĕк ĕç татмалла. Пырас кăмăл çук-и? Инçе мар. Çур сехет — унта, çур сехет — каялла. Çул çинче пуплешĕпĕр.

— Мĕн çинчен?

— Ирхине анне патĕнче пултăм эпĕ, — терĕ Алексей питне-куçне сисĕнмеллех салхулантарса.

— А-а, — ăнланса пуçне сĕлтрĕ Владимир Порфирьевич. — Кайса килĕпĕр.

Вăл ывăлĕ пекех хура куçлă, çӳллĕ арçын. Хыçалалла туранă çӳçĕ сарлака çамки икĕ енĕпе çаралса кукшаланнă, кĕске кастарнă тăнлавĕсенче кăвак пĕрчĕсем курăнаççĕ.

Машина анлă çул çине тухса малалла вирхĕнчĕ. Хирĕç çурхи юртан тасалса пĕтмен уй-хир, ялсем шăваççĕ, çырма-çатра хыçала юлать, вичкĕн çил шăхăрса чупать.

Иккĕшĕ те сăмах хускатма васкамаççĕ-ха. Ашшĕпе ывăлĕ хушшинче унччен те çирĕпех пулман килĕшӳлĕх юлашки тăвата-пилĕк çул тăршшĕпе тата та çинçелсе, вăйсăрланса пычĕ. Пĕр çемьере икĕ ача икĕ тĕрлĕ ӳсрĕç. Хĕрĕ, Алеша аппăшĕ, университетран хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухрĕ. Ывăлĕ

вăтам шкула та «виççĕпе» çеç пĕтерчĕ. Ачаранах урам, шухăшсăр-тĕлсĕр пурнăç илĕртетчĕ ăна. Ӳсерехпе ĕçке-çике явăçрĕ, кăшт çеç тĕрмене лекмерĕ. Çара илчĕç. Унтан ырах-сывах тавăрăнчĕ. Авланчĕ кăна, пачах улшăнчĕ. Унччен пĕрле ĕçсе-иртĕхсе çӳренĕ юлташĕсене манчĕ. Халĕ суту-илӳçĕ (бизнесмен тет хăйне), районти юлашки çулсенче пуйса кайнă темиçе çынран пĕри. Анчах ывăлĕ çапла майпа тупăш туни Владимир Порфирьевича савăнтармасть.

— Мускавра мĕнле пурнăç? — ашшĕ чĕнменнине кура шăплăха пăсрĕ Алексей умри сарлака çул çинчен куçне илмесĕр.

— Тĕп хула кашни утăмрах пинĕ-пинĕпе укçа ыйтать. Пурте шутсăр хаклă, — ирĕксĕрех хаш сывларĕ Владимир Порфирьевич. — Пирĕн патра та йӳнĕ мар халĕ. Унта вара — ой-ой-ой!.. Çапла, улшăнчĕ самана. Укçа малти вырăна тухрĕ. Çын пурнăçĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ нимĕн те мар укçапа танлаштарсан.

Ăшĕнче ашшĕ каланипе килĕшрĕ пулин те, Алексейăн кун пирки сăмах ваклас килмерĕ. Мĕн тейĕн? Вăл хăй те юлашки çулсенчи улшăнусене пула таврари сумлă çынсен ретне кĕчĕ. Халĕ ун çине хисеплесе пăхаççĕ — хăвăртрах алă тăсса пама васкаççĕ. Пĕрисем ăмсанаççĕ, теприсем йăпăлтатаççĕ. Тем тесен те укçа-тенкĕ — пысăк вăй. Шутсăр пысăк. Ăна упрама, пурри çумне тата та хушса пыма пĕлсен пурнăç каять вара... Яланах çакнашкал самана пултăр çеç...

— Атя уççăн, тӳррĕн пуплесе илер, атте, — терĕ Алеша юлашкинчен йывăр калаçăва пуçласа яма хăюлăх çитерсе.

— Хм... Уççăн... тӳррĕн, — тутине кăшт хускатса йăлкăшса илчĕ Владимир Порфирьевич. — Ман шутпа, эпĕ яланах уççăн, тӳррĕн калаçатăп. Эсĕ пĕлместĕн-и вара ăна?

— Рак чирне сыватма пулать-и? — ыйтрĕ Алексей куçне умри çул çинчен илмесĕр.

Ашшĕ пуçне вăртах ун енне пăрчĕ, тинкерсе, сăнаса пăхрĕ.

— Пулать. Вăл аталанма тытăннине чи малтанхи тапхăрта асăрхасан. Анчах вăл, çав тапхăр, вăрттăн иртет. Çавăнпа çын сисмест чир пуçланнине. Каярах, рак клеткисем ăшра сарăлсан, метастаза теççĕ ăна, унпа кĕрешни усăсăр.

— Эсĕ... Санăн мĕнле тапхăрта вăл халĕ?

— Эпĕ те вăхăтра туйман...

— Мускавра сана шанчăк панă-çке...

— Ман шутпа, çав клиникăра сыватакансем мар, шарлатансем лараççĕ. Çын инкекĕпе усă курса кĕсйисене хулăнлатма тăрăшакан ăçтиçуксем. Пурнăçа упраса хăварасшăн этем нимĕн те шеллес çуккине пит лайăх ăнкараççĕ вĕсем. Пайтах халĕ унашкалсем. Юлашки вăхăтра ытла та ĕрчесе кайрĕç. Эпĕ врач, пĕлетĕп — хальлĕхе наука рака çĕнтермелли меслет шыраса тупман-ха.

— Апла эсĕ Мускава каяс теместĕн-и?

— Каяс тесен те... Ăçтан тупатăп эпĕ çавăн чухлĕ укçа?..

Çак сăмахсене Владимир Порфирьевич ывăлне тĕрĕслес шутпа каламарĕ. Вĕсем хăйсемех, ăнсăртран сиксе тухрĕç. Мĕн тăвăн?.. Панă шанчăк суя пулин те, пурпĕрех илĕртет-çке, туртать хăй патне. Уйăрălас килмест çутă тĕнчерен. Алă çула çеç çитнĕ-çке. Пурăнас пулсан тата мĕн чухлĕ усă кӳме пултарĕччĕ вăл халăха... Анчах Алексей: «Шанчăка сухатма кирлĕ мар. Хам тӳлетĕп», — темерĕ. Нимĕн те шарламарĕ вăл. Питне салхулантарчĕ те ассăн сывланă пек туса куçне аяккалла пăрчĕ...

Больницăри тĕп врачпа калаçса татăлса Владимир Порфирьевич малтанхи уйăхсенче çаплах ĕçе çӳрерĕ-ха. Хăй вырăнне пынă çамрăк хирургпа операцисем те турĕ, пĕлменнисене ăнлантарчĕ, вĕ-

рентрĕ. Пурнăç вăйĕ вара, ерипен-ерипен сӳнекен çутă пек, начарланса, чаксах пычĕ...

Хăрушă чир мĕнле аталанни, мĕн тĕрлĕ асап кӳни çинчен çырса кăтартса вулаканăн кăмăлне тĕксĕмлетес шухăш тытман эпĕ. Çавăнпа çак вырăнта пысăк пăнчă лартса, калавăма вĕçлес тенĕччĕ. Анчах аслă тухтăрăн юлашки кунĕсем çинчен пĕлни мана каллех ручка тыттарчĕ.

Магазинран таврăнакан Алевтина Дмитриевна подъезд патне çывхарчĕ кăна, ун умне çăмăл машина пырса чарăнчĕ. Алăк хуллен чанклатса уçăлчĕ те, шурă халатлă сестра тухрĕ.

— Салам, Алевтина Дмитриевна. Эпĕ сирĕн пата, — терĕ вăл. — Владимир Порфирьевич сывлăхне тĕрĕслеме, кăштах çирĕплетме эпир ăна эрнелĕхе больницăна илсе каяс тетпĕр. Хирĕç мар-и эсир?

— Юрать, юрать, — пуçне сĕлтсе килĕшрĕ хĕрарăм. — Анчах хăй тем тет.

— Эпир телефонпа калаçса илтĕмĕр унпа. Кĕтет вăл халĕ пире.

Владимир Порфирьевич хĕрарăмсене хирĕç малти пӳлĕме тухрĕ. Кайма хатĕрленнĕ, тумланнă вăл. Хыпар хавхалантарнă пулас ăна. Куçĕсем чĕрĕлнĕ, сăнĕ-пичĕ сисĕнмеллех хавасланнă. Ăнланать Алевтина Дмитриевна — кун-çулĕн çуррине унта ĕçлесе ирттернĕ-çке вăл, унта ăнăçлă операцисем туса çынсен пурнăçне çăлнă, чĕререн тав тунисене илтсе савăннă. Унта нумай çул пĕрле ĕçленĕ юлташсем, çамрăкран хăнăхнă ĕç вырăнĕ... Анчах сывлăхĕ кунран-кунах хавшаса пырать çав. Юлашки вăхăтра кăмăлĕ те улшăнчĕ. Час-часах ниме тăман сăлтава пулах çилленсе каять, чăкăлташма, кăшкăрма тытăнать. Малтанах уçăлма та тухса çӳретчĕ, кĕнекесем те тытса ларатчĕ, хаçат-журнал вулатчĕ, телевизор, радио итлетчĕ. Халĕ ытларах выртать. Пурнăç ĕнтĕ çулсемпе мар, уйăхсемпе, тен, эрнесемпе çеç виçĕнет. Çавăнпа (туять çакна арăмĕ) уншăн

халӗ кашни кун, кашни сехет хаклӑ. Тем пулсан та пурӑнас килет. Шутсӑр пурӑнас килет...

Алевтина Дмитриевна упӑшкин ырханлӑннӑ кӗлетки, лапӑшкаланнӑ костюмӗ ҫине пӑхрӗ те хуллен, вӑрттӑн ассӑн сывласа илчӗ. Ах, чир, чир!..

— Ну, Аля, эпир кайрӑмӑр. Эрнесӗр ан кӗт.

— Эп пыратӑп, унччен темиҫе те кӗрсе тухӑпха, — салхуллӑ пит-куҫне хаваслантарса сӑмах хушрӗ арӑмӗ.

Больницӑна ҫитсе вырнаҫсан Владимир Порфирьевич кӑмӑлӗ пушшех ҫӗкленчӗ. Выртма сӗннине тӑнламасӑр вӑл коридора тухрӗ, операци пӳлӗмӗнче пӗр вӑхӑт йӗри-тавра пӑхкаласа ҫӳрерӗ, палата алӑкӗсене уҫа-уҫа пӑхрӗ, врачсем патне кӗрсе ларчӗ, шӳт турӗ, анекдотсем каласа култарчӗ.

Улттӑмӗш кунӗнче, кӑнтӑрлахи шӑплӑх сехечӗ вӑхӑтӗнче, Владимир Порфирьевич коридорта ура сассисене илтсе вӑранчӗ. Чупнӑ пек васка-васка иртни, пӗр-икӗ сӑмахпа хӑвӑрт калаҫса илнисем илтӗнчӗҫ.

«Такама илсе килчӗҫ. Йывӑр чирлӗ пулас», — ӑнкарса илчӗ тухтӑр. Тӑчӗ, тумланса алӑка уҫса пӑхрӗ.

— Мӗн пулнӑ? — ыйтрӗ вӑл васкаса иртекен операци сестринчен.

— Ах, Владимир Порфирьевич! Вун икӗ ҫулхи арҫын ачана илсе килчӗҫ. Ӳкнӗ тет таҫтан, пӳрт тӑрринчен. Пӗр тӑхтамасӑр, халех операци тумалла. Анчах хирург, Артем Кузьмич, икӗ кун чирлӗ, вырӑнпах выртать. Пулӑшу памасан вилет ача, — васкавлӑн пӗлтерчӗ те хӗрарӑм каллех коридорпа тапса сикрӗ.

— Тӑхта, — чарчӗ ӑна Владимир Порфирьевич. — Пирӗн тепӗр клиника пур вӗт. Алеша... э-э, Алексей Владимирович уҫни. Унта ординатура пӗтернӗ лайӑх хирург ӗҫлет теҫҫӗ.

— Шӑнкӑравларӑмӑр. Укҫа тӳлемесӗр йышӑнма

пултараймастпăр терĕç. Амăшĕ — пĕччен хĕрарăм. Авă алăк патĕнче йĕрсе ларать. Упăшки пĕлтĕр вилчĕ. Икĕ ача... Ăçтан туптăр ĕнтĕ вăл темиçе пин?

— Атя-ха. . çыхăнтар мана çав клиникăпа. Алло! Алексей Владимировичпа калаçмалла манăн!.. Çук? Тупăр, чĕнсе килĕр. Хăвăртрах! Питĕ кирлĕ.

— Ирхине кĕрсе тухса кайрĕ те унтанпа курман. Ăçтине пĕлместĕп. Тупма йывăр ăна. Пĕр вырăнта лармасть вăл, — илтĕнчĕ трубкăра хĕрарăм сасси. — Ăнланатăп сире. Анчах, каларăм-çке, эпир кунта укçасăр йышăнмастпăр... Хăй пулнă пулсан, тен, ӳкĕте кĕретчĕ. Вăл ирĕк памасăр эпир хамăр тĕллĕн пултараймастпăр...

Владимир Порфирьевич тек лăпкăн итлеме пултараймарĕ. Калама çук тарăхса кайнăскер телефон кĕпçине хыттăн шартлаттарса хучĕ те ним тума пĕлмесĕр каллĕ-маллĕ уткалама пуçларĕ, чарăнчĕ, шухăша кайрĕ.

— Ну, мĕн? Операци тăватпăр-и? — ыйтрĕ вăл кĕтмен çĕртен чĕнмесĕр тăракан сестра çине сасартăках чĕрĕлсе хавасланнă куçпа пăхса. — Хатĕрленĕр! Хăвăрт!

Тĕлĕннипе лешĕ хытса тăчĕ, тем каласшăн пулса çăварне те уçрĕ, анчах шарламарĕ, вĕлт çавăрăнчĕ те вĕçтерчĕ коридорпа.

Икĕ сехете яхăн тăсăлчĕ йывăр операци. Пыршă темиçе çĕртен çурăлнă, пĕвер аманнине пула хырăма юн тулнă... Турра шĕкĕр, операци чиперех, йĕркеллех иртрĕ. Акă юлашки çĕвĕ...

— Пулчĕ! — терĕ Владимир Порфирьевич. Хыттăн, хаваслăн каласшăнччĕ — пултараймарĕ. Çывăхра тăракан сестрана хуллен пăшăлтатни çеç илтĕнчĕ. Операци сĕтелĕ патĕнчен утăм турĕ çеç, хăй те сисмерĕ, сулăнса кайрĕ. Чĕтреме тытăннă урасем сасартăк вăйсăрланса лĕнчĕррĕн хутланчĕç...

Тепĕр икĕ кунран чаплă тухтăр пурнăçĕпе ĕмĕрлĕхех сывпуллашрĕ.

## АХ, ЫВӐЛӐМ...

Троллейбусра халӑх лӑк. Елена Никитична, хӗрӗхрен иртнӗ ватам пӳллӗ хӗрарӑм, пассажирсем хушшипе хӗсӗнкелесе каллӗ-маллӗ утать, билетсем тата-тата парать, пурри-ҫуккине тӗрӗслет. Акӑ вӑл йӑрӑс пӳллӗ чипер хӗр умӗнче чарӑнчӗ.

— Билет илес пулать.

Лешӗ ӑна илтмерӗ тейӗн. Чӳречерен пӑхса пыраканскер хускалмарӗ, чӗнмерӗ.

— Сире калатӑп, — аллипе хулпуҫҫие кӑшт перӗнчӗ кондуктор.

— Эсӗ мӗн, хӑлхасӑр-им? — кӗтмен ҫӗртен ҫиллессӗн, хыттӑн хуравларӗ чиперкке. — Пур терӗмҫке. Пур манӑн билет! Пур! — пысӑк хура куҫсем сиввӗн йӑлкӑшса илчӗҫ. Хитре хӗр ҫурӑмпа ҫаврӑнса тӑчӗ.

— Кӑтартӑр, — ҫине тӑрсах ыйтрӗ кондуктор та.

— Тата мӗн?! — пит-куҫне мӑнаҫлӑн, илемсӗррӗн турткаласа илчӗ ҫамрӑк пассажир. — И вообще... Хӑпӑр ман ҫумран! Мӗн ҫулӑхрӑр?

— Акӑ ме, — кӗтмен ҫӗртен хутшӑнчӗ калаҫӑва ҫумра тӑракан арҫын. Пиншак кӗсйинчен хут укҫа кӑларса вӑл Елена Никитичнӑна тӑсса пачӗ. — Тыт та сирӗл кунтан. Йӑлӑхтарчӗ.

— Эпӗ ӑна... Эпӗ... — тем калама тӑчӗ аванмарланнӑ кондуктор, анчах ӑна тепӗр кӑнттам сасӑ пӳлчӗ.

— Укҫа пачӗҫ-и сана? Е сахал-и? Хушса тӳлемелле мар-и?

Ихӗлтетсе кулни илтӗнчӗ. Елена Никитична чӗнмерӗ. Тӑрӑхлакан ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ ҫеҫ. Хирӗҫ калама юрамасть. Вӑл ӗҫре. Алӑри укҫана мӑйӗ урлӑ ҫакнӑ сӑран сумкине чикрӗ, ытлашшине шутласа хуҫине тыттарчӗ, пушаннӑ вырӑна ларнӑ хӗре билет татса пачӗ те пӑрӑнса утрӗ. «Ав арҫынсем епле хута кӗреҫҫӗ ӑна. Ҫамрӑк, хитре теҫҫӗ. Манра

айăп çук. Апла пулин те хӳтĕлесе пĕр çын сăмах хушинччĕ хăть», — шухăшларĕ Елена Никитична ăшри кӳренĕвне лăплантарма тăрăшса.

Çăмăл мар кондуктор ĕçĕ. Смена тăршшĕпех ура çинче. Ку çеç пулсан юрĕччĕ-ха. Хăш-пĕр пассажирсем хытă тарăхтараççĕ. Пур вĕсем хушшинче тӳлевсĕр çӳреме юратакансем. Пуринчен ытла çамрăксем. Вунă çул хушшинче мĕн-мĕн илтмен пулĕ Елена Никитична унашкалсенчен. Кулаççĕ, тăрăхлаççĕ, йĕкĕлтеççĕ. Мĕн тăвăн? Кама кайса калăн? Ĕçлес пулать, пурăнас пулать.

Чупать, чупать троллейбус хула урамĕсемпе. Пассажирсем вĕçĕмсĕр улшăнаççĕ — пĕрисем тухаççĕ, теприсем кĕреççĕ. Акă хайхи чиперкке те хускалчĕ. Тăчĕ, йĕри-тавра пăхса илчĕ те кондуктора курсан ун еннелле утрĕ. Шукăль тумĕ кăкăрĕ таранах уçă, шутсăр кĕске, чĕркуççинчен чылай çӳлте. Тăрна пек вăрăм уралласкер çамрăк ӳт-тирне, кĕлетке-çурăмне кăтартма, арçынсене юриех астарма тухнă тейĕн. Мода çавăн пек теççĕ халĕ... Çапах кондуктор патне мĕн шутпа çывхарать-ха вăл?

— Ак сана билет! Тыт, тăран!.. — çилĕпе сулса янă хитре алă Елена Никитична питне пырса çапăнчĕ, сăрланă вăрăм чĕрнесем ӳте чăрмаласа илчĕç. Пĕчĕк çӳхе хут татăкĕ урайне ӳкрĕ. Куçран пăхса хĕр хаяррăн кулса ячĕ, вăрăм чĕлхине кăларса кăтартрĕ те уçăлнă алăкран çын хĕвĕшекен урама сирпĕнсе тухрĕ...

Смена вĕçленсен Елена Никитична килне васкарĕ. Ĕçĕ-хĕлĕ хĕрарăмăн килте нихăçан та пĕтместха. Ахальтен мар ваттисем ĕç вилсен те виçĕ кунлăха юлать тенĕ. Çапах васкама унăн паян уйрăм сăлтав пур. Вĕсен ывăлĕ Денис авланма шут тытнă та ашшĕ-амăшĕнчен ирĕк ыйтрĕ.

— Çемье çавăрас тетĕн апла? — интересленчĕ сăмах ваклама питех юратман ашшĕ кăштах

чĕнмесĕр ларнă хыççăн яка хырнă типшĕм янахне сăтăркаласа илсе. — Юрать. Пирĕнтен тухнă йăла мар. Çул çитнĕ. Çара кайса килтĕн. Ĕçлетĕн. Укçатенкĕ шутлама пĕлетĕн. Тăпăл-тăпăл тытсан, шухăшсăр унталла-кунталла ярăнтармасан пурăнма çитет, — Андрей Пркопьевич çăмламас куç харши айĕпе умра ларакан ывăлĕ çине кăмăллăн пăхрĕ. — Юрать, эпир аннӳпе хирĕç мар. Анчах малтан пулас кине курасчĕ.

— Паллах, атте, — терĕ хавасланнă Денис. — Пирĕн те Ларисăпа кун пирки калаçу пулчĕ. Вăл хăй систерчĕ мана çакăн çинчен.

— Ав епле! — каллех кăмăллăн хуравларĕ Андрей Прокопьевич. — Ку мана килĕшет. Тытăннă ĕçе вăраха ярар мар. Хĕрĕ лайăх пулсан туртса илес текенсем те тупăнĕç. Çавăнпа...

— Лариса, чăнах та, шутсăр лайăх хĕр, — чăтămсăррăн хĕрӳллĕн пӳлчĕ ашшĕне Денис. — Анчах туртса илес пирки иккĕленме кирлĕ мар. Эпир пĕрне-пĕри юрататпăр. Эпĕ те ăна хама шаннă пекех шанатăп. Вăл ырă кăмăллă, йĕркеллĕ хĕр. Тата питĕ хитре. Ун пекки таврара урăх çук.

Ывăлĕн таса хĕрӳлĕхĕ те, çамрăк айванлăхĕ те ашшĕн çирĕп, йăваш мар чунне çемçетрĕ пулас. Вăл ăшшăн, кăмăллăн кулса илчĕ. Амăшĕн пĕркеленме тытăннă пичĕ çинче те ырă çутă туйăм йăлкăшса илчĕ.

— Вĕсен килĕнче пулнă эпĕ, — тăсрĕ сăмахне юрату çулăмĕнче ăшталанакан каччă. — Унта килĕштереççĕ мана. Пуян пурăнаççĕ вĕсем. Лара вĕсен пĕртен-пĕр йăпанăвĕ, пĕртен-пĕр шанчăкĕ. Василь Захарович, унăн ашшĕ, мана хăй патне ĕçе илме те хатĕр. Шалуран кӳрентерместĕп тет. Тата, — Денис ашшĕ çине темле именчĕклĕн, хăюсăррăн хăвăрт пăхса илчĕ, — тата... эпĕ вĕсем патне пурăнма куçас пулсан та хирĕç пулас çук Лара ашшĕамăшĕ...

Андрей Прокопьевич картах турĕ, кăмăллăн йăлкăшакан куçĕ сивĕнчĕ.

— Кун çинчен, ывăлăм, хальлĕхе сăмах-юмах хускатар мар. Эсĕ те пирĕн пĕртен-пĕр ывăл, — терĕ вăл çирĕппĕн. — Тата акă мĕн — пирĕн ратра эпир пурте — асаттесем, аттесем, — хамăр вăйпа ĕçлесе-тăранса пурăннă. Кĕлмĕç пулман, пуянсем умĕнче пуç тайман. Çавна яланах асра тыт. Юрĕ, калаçрăмăр. Апла пулас кин хăй те пирĕнпе паллашма хирĕç мар. Юрать, юрать. Тархасшăн, хаваспах кĕтсе илетпĕр. Анчах хăçан? Амăшĕ, сан шутупа, хăш эрнере, хăш кун меллĕрех пулать?..

Сӳтсе яврĕç, калаçса татăлчĕç. Ĕнтĕ акă çитрĕ çав кун...

Хваттере кĕрсен Елена Никитична тумне улăштарса тăхăнчĕ, апат çикелерĕ те çаннине тавăрса ĕçе тытăнчĕ. Хатĕрленес пулать. Сĕтел хушшине лармасăр епле кăларса ярăн ун пек çынна. Пулас кин-çке, пулас çывăх тăван. Хăналамасан ывăл та кăмăлсăрланма пултарать. Пĕчченех-ха вăл паян. Алина хĕрĕ, çиччĕмĕш класс вĕренсе пĕтернĕскер, çуллахи каникул пуçлансанах асламăшĕсем патне яла кайрĕ. Çуллахи кунсене пĕчĕкренех унта иртгерме хăнăхнă. Хуçалăхра ваттисене пулăшакан пулчĕ ĕнтĕ: ĕне сăвать, çум çумлать, пахча çимĕç шăварать, килçуртра тасатать, тирпейлет. Вăл пулнă пулсан çăмăлтарахчĕ ĕнтĕ. Юрĕ-çке. Вăхăт пур-ха, ĕлкĕрет.

Ах, Денис, Денис! Тин кăна пĕчĕк ача чупса çӳретчĕ. Мĕн тери хăвăрт иртсе кайрĕç çамрăк çулсем. Нумай пулать-и качча тухни. Халĕ акă ывăл çемье çавăрасшăн. Лайăх каччă ӳсрĕ. Чипер. Ашшĕ пекех çӳллĕ пӳллĕ, кăпăшка хура çӳçлĕ. Чĕлхи те çыпăçуллă. Ытти хăш-пĕр çамрăксем пек эрех ĕçсе çапкаланса çӳремест, ĕçлеме ӳркенместь. Çаврăнăçуллă. Ун пек качча темле хĕр те савмалла. Суйла кăна. Арăмĕ те хăй пекех кăмăллă пулсан тем пекехчĕ те...

Телефон шăнкăртатни шухăшсене татрĕ. Елена

Никитична йĕпеннĕ аллисене хăвăрт шăлса типĕтрĕ те трубкăна çĕклерĕ.

— Алло! Э-э, эсĕ-и? Çапла, тытăнтăм ĕçе. Вăхăт пур-ха. Ĕлкĕретĕп пулĕ. Иксĕмĕр те пĕрле кĕтсе илнĕ пулсан лайăхчĕ ĕнтĕ, анчах мĕн тăвăн. Юрĕ, эппин, кĕтетпĕр.

Хĕрарăм трубкăна хучĕ те каллех кухньăна кĕчĕ. Мăшăрĕ ĕçрен шăнкăравларĕ. Кӳршĕ республикăран делегаци пынă иккен вĕсем патне завода. Çавна пула ĕç кунĕ вĕçленсен тӳрех пыраймастăп тесе пĕлтерчĕ... Çапах мĕнле хĕр суйласа илнĕ-ши Денис? Пулас кин, мĕнлескер-ши вăл?.. Сисмерĕ те хĕрарăм темшĕн йывăррăн сывласа ячĕ. Ах, ку чухнехи çамрăксем... Çук, çук! Унашкал усал шухăшлас мар. Йĕркеллех пулĕ-ха. Денис çитĕннĕ çын, ырăран усала уйăрма пĕлет...

Шухăш, шухăш явăнать, пăтранать. Ăçта-ăçта илсе çитермест-ши вăл. Савăнмалла пек ĕнтĕ. Ывăл авланать-çке. Çук, темшĕн ăш-чик вăркать. Тунсăх чĕрене кăшлать. Çăмăл мар иккен юратса çитĕнтернĕ ачана хăвăнтан уйăрса ют алла пама. Çав паян курнă чипер хĕр те çаплах чуна вĕчĕрхентерет. Пулаççĕ вĕт çавнашкал кугăн çынсем. Мĕнле çемьере çитĕнеççĕ-ши вĕсем?..

Акă хваттер алăкĕ уçăлса хупăнчĕ. Малти пӳлĕмре мăкăр-мăкăр калаçни илтĕнчĕ. Çитрĕç!.. Ах, вăхăт! Васканă чух вăл та пĕрле чупать-çке. Турра шĕкĕр, ĕлкĕрчĕ Елена Никитична. Сĕтел çине лартма апат-çимĕç хатĕр. Тумне кăна улăштарма вăхăт çитмерĕ.

— Кам та пулин пур-и? Атте, анне, эпир килтĕмĕр, — илтĕнчĕ ывăлĕн хаваслă сасси.

— Пур ара, килтех, — сасă пачĕ амăшĕ. — Килĕрех, килĕр, иртĕр малалла, ларăр. Эпĕ халех, çиччас.

Вăл çăнăхпа вараланнă аллине çуса типĕтрĕ, сапунне хывса çакрĕ, пуç çинчи тутрине салтса хучĕ те юнашар пӳлĕме васкаса тухрĕ. Малтанах хатĕр-

лесе хунă чечеклĕ çӳхе кĕпе тăхăнчĕ, çӳçне тураса якатрĕ те пысăк тĕкĕр умне пырса тăчĕ. Ун çине хулăмланнă пӳ-силлĕ çамрăк мар вăтам хĕрарăм тинкерсе пăхать. Ывăннă шăм-шак. Кĕске кастарнă хура çӳçĕнче шурă пĕрчĕсем курăнаççĕ, куçĕсем салхуллă. Эх, ăçта кайса çухалчĕ çамрăк чухнехи чиперлĕх, илĕртӳллĕ, çинçе, йăрăс кĕлетке-çурăм!

Çук, капла юрамасть. Сăрă илсе Елена Никитична тĕссĕрленнĕ тутине, питне кăштах хĕретрĕ, пит-куçне савăклатса йăл кулчĕ, тумне кăрт-карт турткаларĕ те хулпуççине маттуррăн хускатса илчĕ. Вăт çапла. Хумханнине туйса çамрăксем ларакан пӳлĕм алăкне хуллен тĕртсе уçрĕ. Кăмăллăн, вашаватлăн сывлăх сунас, паллашас тенĕччĕ. Анчах хăна çине пăхрĕ çеç, хальхинче лешĕ сăпайлă тумпа пулин те, ăна тӳрех палласа илчĕ. Калас сăмах таçта кайса çухалчĕ. Елена Никитична юпа пек пĕр вырăнта хытса тăчĕ, хăй те сисмерĕ, хыттăн ахлатса ячĕ. Пачах ăнсăртран чуна кисретсе, сирпĕнсе тухрĕ çав кĕске ах-х тени.

Диван çинче сăн ӳкерчĕксем пăхса ларакан хĕрпе каччă Елена Никитична пӳлĕме кĕрсе тăнине туймарĕç пулас. Ах-х тенине илтсе иккĕшĕ те харăсах пуçĕсене çĕклерĕç. Чипер хĕр ялтах сиксе тăчĕ. Пысăк хура куçĕсем, чăнах-и ку е тĕлĕк çеç тенĕн, хĕрарăм çине тирĕнчĕç. Денис та çĕкленчĕ, пĕрре амăшĕ, тепре савнă хĕрĕ çине тĕлĕннĕн, канăçсăррăн пăха-пăха илчĕ.

— Анне, мĕн... Мĕн пулчĕ?

Хитре хĕр вĕлт çаврăнчĕ те алăк енне ыткăнчĕ.

— Лара! Ларочка-а! Тăхта-а! — вара ывăл та уçăлса хупăннă алăк хыçĕнче çухалчĕ.

Кил хуçи хĕрарăмĕ çывăхри пукан çине йывăррăн тĕшĕрĕлчĕ те питне аллисемпе хупларĕ. Мĕн чухлĕ çапла сĕмленсе ларнă-ши вăл? Чуна кансĕрлесе пуçра пăтранакан шухăшсене алăк уçăлса хупăнни татрĕ. Денис таврăнчĕ.

— Анне, — терĕ вăл кăмăлсăррăн çывăхах пырса. — Мĕнле хăйрăн эсĕ Ларисăна, çавăн пек хĕре, çапла кӳрентерме? Тата çынсем умĕнче...

— Эпĕ-и?.. Эпĕ ăна кӳрентертĕм-и? Ах, ывăлăм...

— Лариса мана пĕтĕмпех каласа пачĕ... Йĕрейĕрех, — каччă хăвăрт малалла иртрĕ, тĕрлĕ ăпăртапăр хуракан чăлантан пушă чăматан йатса тухрĕ, шкап алăкне яри уçса çие тăхăнмалли япаласене иле-иле хума тытăнчĕ.

— Эс мĕн, ывăлăм? — сиксе тăрса ыткăнчĕ ун патне Елена Никитична.

— Каятăп эпĕ. Пурăнмастăп тек кунта... сирĕнпе...

Каллех телефон шăнкăртатрĕ.

— Итлетĕп.

— Ну, мĕн? Сĕтел хушшинче ларатăр-и? — терĕ трубкăра Андрей Прокопьевич сасси. — Эпĕ тухатăп ĕнтĕ...

Пик-пик-пик... систерчĕ çавăнтах телефон калаçу вĕçленнине пĕлтерсе.

— Эпĕ кайрăм. Чипер юлăр, — пырса кĕчĕ хăлхана тепĕр сасă, ывăл сасси.

Алăк çиллессĕн шартлатса хупăнчĕ. Вара хваттере хăрушă шăплăх шăвăнса кĕчĕ, чĕрене пĕр хĕрхенмесĕр хаяррăн кăшлама тытăнчĕ.

Ывăлăм... Ах, ывăлăм...

## ГИПНОЗ МЫСКАРИ

Автобус станцинче яланах çын кĕшĕлтетет. Пĕрисем килеççĕ, теприсем каяççĕ. Машинăсем килессе кĕтекенсем те чылай, ушкăн-ушкăн пухăнса тăраççĕ, йĕри-тавра вырнаçтарнă тенкелсем çинче лараççĕ.

Тĕрлĕ тĕслĕ çутă сăрпа сăрласа илемлетнĕ тенкел çинче темиçе çын хуллен халапласа ларать.

— Эпĕ Хастаркассине каятăп. Тăван ял вăл

манӑн. Ҫавӑ ялта ҫуралса ӳснӗ, — тет пӗри, вӑтӑр ҫулсене ҫывхарнӑ пысӑк хура усиллӗ, вӑтам пӳллӗ арҫын.

— Эпӗ паллатӑп сана. Эсӗ Артист Ҫтаппанӗ вӗт, — хуравларӗ юнашар ларакан арҫын. — Э-э, пӗлес килет, мӗншӗн сана Артист теҫҫӗ. Сирӗн ратра артистсем пулман пулӗ-ҫке?

— Ун пекки пулман. Пӗр каҫ мана артист туса хучӗҫ. Ҫилӗм пекех ҫыпҫӑнчӗ ҫав хушамат. Халӗ эпӗ Степан Егорыч мар, пурте — ватти те, вӗтти те — «артист» та «артист» теҫҫӗ.

— Ха... Мӗн пулчӗ вара ҫав каҫ?

— Пуласси-качки, — васкамасӑр калавне пуҫласа ячӗ арҫын уссине шӑлкаласа илсе. — Ял ҫийӗн хыпар сарӑлчӗ — гипнотизер килнӗ иккен. Кӗҫӗр клубра кӑтартать хӑй мыскарисене. Ҫынни те таҫтан аякран килнӗскер мар. Амӑшӗ пирӗн ял хӗрӗ пулнӑ имӗш. Гипнозласа ҫынсене ухмаха кӑларма пултарасси ҫинчен илтнӗ-ха эпӗ. Пӗрре шӑллӑм патне хулана килсен кайса курнӑччӗ. Ай, мӗн тумаҫҫӗ-ши сцена ҫине тухнӑ ҫынсем? Кулса вилетӗн.

— А-а, Татьян ывӑлӗ-и, — терӗ ватӑ атте ҫакна пӗлсен. — Ҫавӑн ывӑлӗ сӳпӗлтетсе ҫӳрет-и-ха. Ашшӗ те ӗҫ тӗлне пӗлмен. Ҫанӑ тавӑрса ӗҫлес вырӑнне ывӑлӗ те ҫынсене улталаса укҫа пухма вӗреннӗ апла.

«Улталаса укҫа пухма вӗреннӗ...» Ҫак сӑмахсем ман ӑша ҫӗлен пек сиввӗн шӑвӑнса кӗчӗҫ. «Гипнотизер» сӑмахӑн хавха муллӑ ҫутӑ сӑнарне тӗксӗмлетрӗ, сӳрӗклетрӗ. Ҫапах кайса курма шутларӑм.

Ҫын чылай пуҫтарӑннӑ. Ют ялсенчен те пайтах килнӗ. Клуб умӗнче урамра автобус, темиҫе ҫӑмӑл машина тӑраҫҫӗ. Чӑнах та, клуб лӑках тулса ларнӑ. Акӑ пуҫланчӗ хайхи, спектакль темелле-ши ӑна, концерт темелле-и. Чаршав яр уҫӑлса кайрӗ те ярт-ярт утса тухрӗ лутакаскер. Ҫӳҫӗ вӑрӑм, ҫивӗтленӗ,

тутине хĕретнĕ, çӳллĕ кĕлеллĕ пушмакпа. Те арçын, те хĕрарăм. Тьфу! Кулкаласа темиçе хут пуçне тайрĕ те кĕсйинчен йăлтăр-йăлтăр çаврашка кăларчĕ.

— Пăхăр çакăнта, — тесе аллине çĕклесе кăтартрĕ. — Халĕ аллăрсен пӳрнисене пĕр-пĕрин хушшине тытса хытă чăмăртăр. Уйăрăр. Кам уйăраймасть, çавсене ман пата сцена çине чĕнетĕп, — терĕ. Ман алăсем çăмăллăнах уйăрăлчĕç-ха. Çапах тем пулчĕ-çке мана çав самантра. Çывăхрах курас килнипе-ши, алăсене тепĕр хут çаклатрăм та уттартăм ыттисем хыççăн çав камит патне.

— Алăрсене ярăр, — терĕ те пире, сцена çине хăпарнисене, ретĕн тăма хушрĕ. Пырса тăрать те куçран чăр-р тинкерсе пăхать. Çывăр тет. Акă пĕрин пуçĕ усăнчĕ, теприн кĕлетки лĕнчĕрленчĕ. «Чăннипех çывратса ярсан мĕн тума хушĕ-ши?» — пуçа çурса вĕлтлетсе илчĕ шухăш. Упа туса пыл вăрлама ярсан... нимĕнех те мар-ха. Ав санăн юратнă хĕрарăму тесе пĕр-пĕр арçын çине кăтартсан... Мĕнпур ял кулма, тăрăхлама тытăнать вĕт. Шăмшак тăрăх сивĕ чупса кайрĕ. Арăм тата... Кăтартĕ вăл савние мĕнле ыталамаллине.

Тухса тăчĕ те хайхи ман ума шăтарасла куçран пăхрĕ. Эпĕ те маххă памарăм. Пуçа мăнаçлăн çĕклерĕм те куçа ун çине тĕллерĕм. «Çывăр», — терĕ.

— Ху çывăр.

— Çывăр, çывăр...

— Ху çывăр, ху çывăр...

Пăхатăп та — çывăрса кайрĕ. Тăрать умра сулланкаласа. Ак тамаша! Ак кĕтмен япала! Мĕн тумалла ĕнтĕ манăн? Сасартăк вăй пĕтнине туйрăм, алă-ура чĕтреме тытăнчĕ, кĕлетке-çурăма сивĕ тар тапса тухрĕ. Залра халăх шăпăрт, мĕн пуласса кĕтсе ларассĕ.

— Вăт, юлташсем, — тетĕп, — халĕ хăй çывăрса кайрĕ.

Паллах, ёненмерĕç, кулса ячĕç.

— Çывăрччăрах. Эпир шăппăн саланар. Ыран куç курать мĕн тумаллине.

Эх, шавлама тытăнчĕç. Кăшкăраççĕ, çухăраççĕ, урисемпе тапăртатаççĕ, шăхăраççĕ. Асар-писер тăвăл тухрĕ тейĕн.

— Ниçта та каймастпăр!

— Çывăратса яма пĕлтĕн пулсан вăратма та пĕл!

— Тавăрса пар билет хакне!

Ним тума аптраса эпĕ каллех çав артист текен çын патне пырса тăтăм.

— Эсĕ мĕн пăлахая персе тăратăн? Халех вăраннă пултăр! — тарăхса кайнăскер танк тутартăм хырăмĕнчен. Пуçне çĕклерĕ те куçран чăр пăхрĕ. Вăранчĕ! Ёненетĕр-и, вăранчĕ! Хи-хи-хи! Мана алăран тытрĕ те сцена хĕррине илсе пырса эх кулать, эх пуçне таять. Иксĕмĕр пĕр каварлă пулса вăйă выляса патăмăр тесшĕн ёнтĕ. Хавасланнă халăх тăвăллăн алă çупса ячĕ.

— Халех, çак самантрах тухса сирпĕн кунтан! Марш! — сиввĕн пăшăлтатрĕ хайхискер.

Калама çук тарăхса кайрăм. Мĕн, эпĕ хулиган-и, ӳсĕр çапкаланчăк-и мана хăваласа яма? Пăхăр-ха эсир ăна, таçти ăçтиçук мана, ял çыннине, хамăр клубран хуса ярасшăн! Хăраса чĕтреме тытăнатăп акă. Кĕтсех тăр!

Ăнланчĕ, сассине çемçетрĕ.

— Тархасшăн, ăнланăр, сирĕн куç вăйĕ маннинчен хăватлăрах. Эсир мана ĕçлеме чăрмантаратăр, — хăй вăрттăн укçа тыттарать.

Йĕркеллĕ калаçма пĕлетĕн пулсан эпĕ те йĕркеллех. Тухса кайрăм...

— Вăт çав каçран «артист» сăмах çилĕм пекех çыпçăнчĕ ман çума, — калавçă карттусне юсаса тăхăнчĕ те итлеме пуçтарăннă çынсем çине кулкаласа пăхса илчĕ. — Темле майпа çитнĕ çак хыпар театр пуçлăхĕ патне. Чĕнсе пĕр-икĕ хут çыру-

сем ячĕҫ, киле те пырса кайрĕҫ. Ҫук, ҫук, каймастăп. Ман ĕҫ мар вăл тутана хула хĕрарăмĕсем евĕр хĕретсе, ҫӳҫе ҫивĕт туса ялсем тăрăх ҫынна култарса ҫӳресси. Э-э, ак ман автобус ҫитсе ларчĕ. Ну, сывă пулăр-ха. Тепре куриччен...

— Ну, пĕр сăмахне те пулин ĕнентĕр-и? — ыйтрĕ пĕри вăл автобус алăкĕнчен кĕрсе ҫухалсан.

— Кам пĕлет, — терĕ шухăшлăн тепри. — Тĕнчере ыттисенчен уйрăмла тăракан ҫынсем пурри ҫинчен халĕ наукăра та калакалама тытăнчĕҫ... Кам пĕлет ҫав...

## ИРХИ ШУҪĂМ

Юрату ҫурхи чечек пек
яланах таса.

*У. Шекспир*

Поезд хускалчĕ, хула ҫурчĕсене хыҫала хăварса ирĕклĕ хире сирпĕнсе тухрĕ те хăвăртлăхне васкатса хăй ҫулĕпе малалла ыткăнчĕ. Купере иккĕн. Пĕри кĕреҫе сухаллă, сарлака питлĕ ҫулланнă арҫын, хăйне Иван Трофимович терĕ. Тепри унпа танлаштарсан чылай ҫамрăк (вăтăртан иртнĕши?). Вăл хура ҫӳҫлĕ, хура куҫлă. Иккĕшĕ те Мускава каяҫҫĕ. Иван Трофимович халĕ кăна пенсие тухнă ятпа тĕп хулара пурăнакан хĕрĕ патне хăнана, Леонид, вырăнти хаҫатра ĕҫлекен журналист, — командировкăна. Калаҫу ҫыхăнмарĕ. Пули-пулми ҫинчен сӳрĕккĕн перкелешсе ларнă хыҫҫăн ҫамрăк арҫын сумкинчен хаҫат кăларса вулама пикенчĕ. Иван Трофимович хыҫалалла тайăнса куҫне хупрĕ те кĕҫех хуллен харлаттарма тытăнчĕ.

Ҫу кунĕсем. Хĕвел питĕнче йăлтăртатса вырткан рельсăсем ҫийĕн пуйăс чашкăрса пырать: е аслă хирсем урлă чупать, е симĕс вăрмансене кĕрсе тухать, е чугун ҫул икĕ енĕпе ӳсекен йывăҫ тăрă-

хӗсем витӗр иртет, кӗске вӑхӑта чарӑнать, татах хускалать. Акӑ хурҫӑ урапасем каллех хӑвӑртлӑхне чакарчӗҫ, пысӑк мар ҫуртсем ҫумӗпе шуса иртсе чарӑнчӗҫ. Коридорта ура сассисем, такамсем калаҫни илтӗнчӗ. Купе алӑкӗ яри уҫӑлса кайрӗ те хӗрӗх-хӗрӗх пилӗк ҫулсене ҫывхарнӑ тулли пӳсиллӗ, йӑмӑх тумлӑ хӗрарӑм курӑнчӗ. Шалалла ярса пусса вӑл умри арҫынсем ҫине кӑмӑллӑн йӑлкӑшса пӑхрӗ.

— Кӗме юрать-и?

— Тархасшӑн, тархасшӑн, — вашаватлӑн хуравларӗ Леонид хаҫатне умран сирсе. — Иртӗр, вырнаҫӑр.

Иван Трофимович шарламарӗ, хӗсӗк куҫне уҫса пӑхрӗ кӑна. Хӗрарӑм чӑматанне ещӗке вырнаҫтарса лартрӗ.

— Виталик, сумкӑна пар-ха, — терӗ вӑл хыҫра тӑракан хӑва пек ҫинҫешке пӳ-силлӗ, пысӑк куҫлӑ арҫын ачана. — Кӗр, лар.

— Пӑчӑ унта.

— Ку та тӗрӗс. Ҫанталӑкӗ, чӑнах та, пӗҫертсе вӗлерет, — кӗсйинчен пӗчӗк тутӑр кӑларса хӗрарӑм тарланӑ пит-куҫне, ҫара мӑйне шӑлса типӗтрӗ, унтан пӑта ҫине ҫакса янӑ хутаҫран пысӑк мар тӗрке кӑларчӗ те тухрӗ. Кӗҫех йӑмӑх чечеклӗ шалпар вӑрӑм халатпа кӗчӗ, илемлӗ ҫавра тӗкӗр кӑларса ҫамрӑк илӗртӳлӗхне ҫухатнӑ пичӗ ҫине тинкерсе пӑхрӗ, хӗретнӗ тутине ҫуласа илчӗ, хура авӑнчӑк куҫ харшине пӳрне вӗҫӗпе сӑтӑркаларӗ.

— Екатерина Павловна! Екатерина Павловна! — илтӗнчӗ ҫав самантрах коридорта.

— Э? Мӗн? Мана чӗнеҫҫӗ-и? — сиксе тӑрса алӑк еннелле талпӑнчӗ хӗрарӑм. Уҫрӗ, унталла-кунталла пӑхкаларӗ. — Ман ятлӑ ҫын тата та пур иккен кунта, — терӗ вӑл вырӑнне ларса. Салхуллӑн хушса хучӗ никам та чӗнменнине кура: — Эх, мӗн тӗрлӗ ачаш ятпа чӗнместчӗҫ-ши мана? Катюша, Катя,

Киса, Котик, Котеночек... Çамрăклăх, çамрăклăх! Сисмерĕм те — иртсе кайрĕ.

— У-у! Апла калама иртерех-ха, — терĕ хĕрарăма вăрттăн сăнаса ларакан Леонид. Унăн хура куçĕнче кăшт тăрăхлакан кулă палăрса çухалчĕ. — Мускава-и?

— Çавăнта. Кăçалхи отпуска атте-анне патĕнче ялта ирттертĕм. Халĕ киле каятăп.

— Ку çамрăкĕ — Виталик терĕр пулас — сирĕн ывăлăр-и? — хупă алăк енне пуçне сĕлтсе ыйтрĕ Леонид.

— Шăллăмăн. Хамăр пата хăнана илсе каятăп.

— Йĕркеллĕ ача пек туйăнчĕ. Анчах куçĕ темшĕн шутсăр салху.

— Ай-яй, асăрхама ĕлкĕрнĕ-çке эсир ăна. Çапла, юлашки вăхăтра куçĕ типме пĕлмест ĕнтĕ. Аптрал вăл ачапа.

— Тем пулнă ĕнтĕ?

— Юратса пăрахнă, — çамрăк тăванне те шеллесе, те хурласа аллине сулчĕ Екатерина Павловна. — Тус хĕр ачине урăххи туртса илнĕ тет-и çав.

— Миçере-ха?

— Ача хальлĕхе. Вун виççĕ тултарнă çеç. Чун çунтармăшĕпе кӳршĕллех пурăнаççĕ те. Лешсем иккĕшĕ вара, юриех йĕкĕлтес шутпа ĕнтĕ, вĕсен килĕ умĕнченех иртсе çӳреççĕ. Вăт çапла. Камшăн кулă, камшăн куççулĕ.

Чӳречерен вăркăшса кĕрекен çил хĕрарăмăн кăтра çӳçне арпаштарчĕ, темиçе пайăрка куçĕсем çине ӳкрĕ. Вăл ăна алă тупанĕпе çӳлелле шăлса хучĕ.

— Шăллăм та, арăмĕ те çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен хăвăр пата илсе кай-ха, тен, лăпланĕ, ăссăрланма пăрахĕ терĕç те.

— Пирвайхи юрату апла... М-да, — хуравларĕ Леонид. Унăн çинçе вăрăм пӳрнисем сĕтеле хуллен шăкăртаттарса илчĕç.

— Юратать пулĕ çав. Чăн-чăн юрату хуйхă-суйхăсăр пулмасть теççĕ те...

— Теççĕ? — Леонид хĕрарăм çине сăнарах пăхса илчĕ. — Эсир вара? Пирвайхи юрату асапне тӳсмен-и?

— Астумастăп, — кĕскен тавăрчĕ Екатерина Павловна. Шухăша кайнăн вăл пĕр вăхăт чĕнмерĕ. — Пулнă-ши манăн çавнашкал юрату? Çамрăк чух, хĕр чух, юрлама-ташлама, шӳтлеме-кулма ăста пулнă эпĕ. Каччăсем ман тавра кĕтӳпех явăнатчĕç. Эх, юрататтăм эпĕ çавнашкал айвансене вăрçтарма-харкаштарма, хĕр тантăшсене кĕвĕçтерме! Çапла выляса-кулсах сисмерĕм те качча сиксе тухрăм, — хĕрарăм хаваслăн кулса ячĕ.

— Эсир пачах юратман тесшĕн-и?

— Ну, унсăрах качча тухман ĕнтĕ. Çапах Виталик евĕр йĕрсе асапланнине астумастăп. Ну... çамрăк чух мĕнле пулать — пĕринпе çӳреме тытăнатăн кăна, тепри тупăнать, тата лайăхрах, тата чипертерех. Э-э, хĕр чух хĕрĕх теççĕ. Çапах шеллетĕп эпĕ Виталике...

Иван Трофимович тӳрленсе ларчĕ, тем калас пек хуллен кĕскен ӳсĕрсе илчĕ, анчах нимĕн те шарламарĕ.

— Эсир тата, Иван Трофимович... Тен, каласа парас тетĕр хăвăрăн пирвайхи юратăвăр çинчен, — пуçне пăрчĕ ун енне Леонид.

— Ман юрату çинчен-и? Юрать, — сасă пачĕ халиччен чĕнмесĕр пынă арçын кăшт куларах. — Юрату, юрату, хĕн-хур, асап теççĕ. Вилекенсем те пур имĕш ăна пула. Çапах мĕн вăл юрату?.. Яш чух, чăнах та, килĕшнĕ пек туйăнатчĕ пĕр хĕр. Анчах вăл мана тиркерĕ. Кĕçех çара илчĕç. Таврăнтăм та, атте авлан та авлан тесе хистеме тытăнчĕ. Килти хуçалăхра вăйпитти хĕрарăм кирлĕ, аннӳ чирлĕ, кĕçĕннисем айван терĕ. Кӳршĕ ялтан хĕр тупса пачĕç, хăтана илсе кайрĕç. Пăхрăм та пулас арăм

çине — тиркемелле мар. Калаçса таталтăмăр, туй турăмăр. Турра шĕкĕр, ку таранччен чиперех пурăнтăмăр-ха. Вăт çакă пулчĕ пулĕ манăн юрату — пирвайхи те, юлашки те...

Кĕске вăхăт шăп ларчĕç.

— Çавăнпа эпĕ акă мĕн каласшăн, — каллех сăмах хушрĕ çулланнă кӳршĕ. Ман шутпа, юрату вăл — хĕрарăмпа арçын хушшинчи этем йăхне малалла тăсма пӳрнĕ туртăм. Çавă çеç. Ыттине — асап, куççулĕ — пурне те çын хăй шутласа кăларнă. Кайнă вара çав сăмах-юмах ламран лама, сарăлнă тĕнче тăрăх. Çын-çке вăл, пурнăç патши, çавăнпа чĕр чунсенчен çӳлте пулмалла. Мĕне ĕненетĕн, çавă пулать теççĕ-çке.

— М-да... — çинçе вăрăм пӳрнисемпе сĕтеле шăкăртаттарса илчĕ Леонид. — Этем йăхне тăсма панă туртăм çеç-ши? Каçарăр та, Иван Трофимыч, сирĕн пек шухăшласан ирсĕр пусмăрçă та, хĕрарăм ӳтне сутăн илекен те юратать. Çапла-и? Çу-ук, килĕшместĕп. Юрату вăл — таса, пархатарлă, хитре туйăм. Юрату вăл — этеме çӳлтен пилленĕ хаклă парне. Ахальтен мар ăна çĕр çинче пурăнакан мĕнпур çын пуç таять, шырать, кĕтет. Çавăнпа унăн асапĕ те килĕшӳллĕ, хисеплĕ.

— Апла халĕ Леонида итлетпĕр. Вăл пире хăйĕн юратăвĕ, асапĕсем çинчен каласа парĕ, — терĕ Екатерина Павловна. — Эсир те Виталик пекех йĕре-йĕре юратнă-и?

— Пулнă, Екатерина Павловна, пурте пулнă — чĕрене шăнăçайми телейлĕ самантсем те, ăша çунтарса ыраттаракан хуйхă-суйхă та, вĕри куççулĕ те... Миçе çул иртрĕ ĕнтĕ унтанпа, анчах çав вăхăта эпĕ халиччен те çутă туйăмпа аса илетĕп.

— Ну-ну... Хăлха тăратсах итлетпĕр.

— Юрĕ апла пулсан... Иван Трофимыч, эсир итлеме хирĕç мар-и?

— Атя яра пар. Ĕç çук. Капла вăрăм çул та кĕскелет.

Çамрăк арçын пичĕ-куçĕ ăшшăн çуталчĕ, ун çийĕн кăшт палăракан ачаш кулă курăнса иртрĕ.

— Çав çул эпĕ те вун виççĕ кăна тултарнăччĕ, — пуçларĕ вăл сăмахне. — Чи пирвай ăна çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă кун пĕрремĕш урокра куртăм. Çавра çил евĕр вирхĕнсе кĕчĕ çав туйăм ман чĕрене. Шăнкăрав янрасан эпир партăсем хушшине ларма ĕлкĕртĕмĕр çеç, алăк яри уçăлса кайрĕ те класа иккĕн кĕчĕç. Пĕри пирĕн завуч Анфиса Даниловна, тепри... Ах, тепри... Эпĕ ун çине пăхрăм çеç, шанках хытса лартăм. Пирĕн ума çамрăк çăка евĕр йăрăс пӳллĕ, çинçе пилĕклĕ, пысăк хăмăр куçлă... Çук, ун пирки хĕр е хĕрарăм тени маншăн çителĕксĕр... Пирĕн ума хут çине те пысăк сас паллисемпе çырма тивĕçлĕ юмахсенчи Илем Турри тухса тăчĕ. Анфиса Даниловна пире унпа кĕскен паллаштарчĕ. Кăçал вăл университет вĕренсе пĕтернĕ, Вера Антоновна тесе чĕнеççĕ.

«Вера Антоновна... Вера Антоновна», — ăшăмра вĕçĕмсĕр пăшăлтатрăм эпĕ тĕнчере мĕн пурри çинчен манса. Мĕн тери илемлĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ ят — унра Ĕненӳ, Шанчăк. Çав самантра мана çĕр çинче унран чипер хĕр урăх çук пек туйăнчĕ. Эпĕ ун çине куç илеймесĕр, ытарайми пăхса лартăм, унăн кашни хусканăвне сăнарăм. Чунăмра халиччен пĕлмен темле ырă, савăк туйăм çĕкленчĕ, чĕрене тутлăн пĕçерте-пĕçерте илчĕ. Урок тĕлĕкри пек вĕлтлетсе иртсе кайрĕ. Шăнкăрав янрасан вăл сĕтел çинчи хутсене пуçтарчĕ те алăк патнелле утрĕ. Мана такам хыçран тĕртрĕ тейĕн. Эпĕ коридора сирпĕнсе тухрăм, вăл куçран çухаличченех пăхса тăтăм.

Çапла, çав хăватлă туйăм нумайлăха мĕнпур шухăш-кăмăла çавăрса илчĕ, хаваслантарчĕ, асаплантарчĕ, йĕртрĕ. Аякри шурăмпуç çăлтăрĕ евĕр

хăйĕн тасалăхĕпе, хăйĕн илемĕпе вăл халĕ те чунăма илĕртет.

— Авă епле, — хаш сывларĕ Екатерина Павловна. Салхуланнă куçне вăл çутă чӳрече çине тĕллерĕ те пуçне хуллен сулласа илчĕ.

— Ача çулĕсенчен тухайман пулин те, арçынпа хĕрарăм хушшинчи çыхăнусем çинчен илтнĕ эпĕ, — тăсрĕ калавне Леонид шĕвĕр янахне сăтăркаласа. — Хăшĕ-пĕрисем, пуринчен ытла çамрăк каччăсем, хăйсен арçын пултарулăхĕпе уççăнах мухтанма, çамрăк хĕрарăмсем, хĕрсем çинчен çăмăл сăмахкюмах юптарма, кулма, тăрăхлама юратаççĕ. Унашкал калаçусем мана вăтантаратчĕç, ăсăмпа сивлеттĕм эпĕ ун пеккине, çапах, пытармастăп, ирĕксĕрех кăсăклансах итлеттĕм. Пĕрре истори урокĕ хыççăн яланхи пекех эпĕ коридора васкаса тухрăм. Çывăхрах аслă классенче вĕренекен арçын ачасен ушкăнĕ тем çинчен хаваслăн шавласа тăрать. Вера Антоновна иртнĕ чух вĕсем шăпланчĕç, пуçĕсене пăрса хыçран пăхса юлчĕç.

— Чипер пирĕн истори училки, — терĕ пĕри, тăсланкă Петр Гордеев. — Уçăлма каясчĕ унпа пĕрре... Ых-х! — урăх вăл нимĕн те каламарĕ. Юлташĕсем кулса ячĕç.

Гордеев «ых-х» тени те, юлташĕсен кулли те мана шутсăр килĕшмерĕ. Шап-шурă илемлĕ япала çине пылчăк лаплаттарнă пекех пулчĕ ку маншăн. Епле хăяççĕ вĕсем Ун çинчен çавнашкал хисепсĕр сăмах вылятма! Çилĕ капланса килчĕ, чышкăсем чăмăртанчĕç. Эпĕ каччăсен ушкăнне пырса тăтăм.

— Эсĕ мĕншĕн... мĕн тесе пирĕн учительницăна кӳрентеретĕн? — ыйтрăм чараксăр чĕлхеллĕ тăрнаккай çине хаяррăн пăхса.

— Мĕн? Санăн та уçăлма каяс килет-и? — ыйтрĕ Петя тăрăхлакан куçне ман çине тĕллесе. — Ан та шутла. Санпа пымасть вăл. Иртерех-ха, ӳсес пулать...

Каллех хаваслă кулă янăрарĕ. Тарăхнипе ман куç хуралса килчĕ. Мĕн тунине лайăххăн ăнланмасăр пĕррех чышрăм çав тăсланкăна вăрăм янахĕнчен.

— Акă сана уçăлма! Тыт!

Çакна кĕтмен Петя сулăнса кайрĕ. Унтан куçĕсене усаллăн ялкăштарса аллисене ман енне тăсрĕ. Çирĕп вăрăм пӳрнесем хулпуççие тирĕнчĕç.

— Эпĕ... Эпĕ сана, — шăппăн, хаяррăн чашкăрчĕç шурса кайнă тутасем. Анчах юлташĕсем ăна чарчĕç.

— Ан ухмахлан. Кунта... шкултa. Авă директор килет...

Купе алăкĕ уçăлса кайрĕ.

— Чей кирлĕ-и? — ыйтрĕ проводница.

— Чей-и? Кирлĕ, — терĕ тайăнса ларакан Иван Трофимович малалла ӳпĕнсе.

— Кун пек шăрăхра чей лайăх, — хушса хучĕ Екатерина Павловна та.

Сĕтел çывăхне куçса ларчĕç, çул çине илсе тухнă юр-варпа каçхи апат турĕç. Виталик çеç çиме килĕшмерĕ, чей ĕçрĕ те каллех тухрĕ. Апат-çимĕç юлашкисене пуçтарса илсе Леонид та куперен тухрĕ. Хĕвел каç енне сулăннă ĕнтĕ. Васкаса чупакан пуйăспа вăл темле вăйă вылять тейĕн: е пĕр енчи чӳречерен ялкăшса пăхать, е тепĕр енне каçать, е малта сирпĕнсе вĕçет, е хыçала юлать. Пуйăсран, йывăççенчен, телеграф юписенчен тухăçалла тĕксĕм мĕлкесем тăсăлаççĕ. Вăркăшса кĕрекен каçхи сывлăш купери пăчăха уçăлтарать.

Кĕçех Леонид кĕрсе вырăнне ларчĕ.

— Апла хĕнеймерĕ сана леш... мĕн ятлă терĕнха ачине, Петяччĕ-и? — тӳрех сăмах хускатрĕ Иван Трофимович.

— Э-э, ирĕкре пулсан-и? — кулса илчĕ Леонид. — Мунчала тăватчĕ вăл манран. Çав самантсене эпĕ пурпĕрех хаваспа аса илетĕп. Пĕлмен унччен хам-

ра çавăн пек хастарлăх пуррине. Тантăшсемпе тытăçкаласа илнисем шутра мар. Анчах манран темиçе çул аслă, тăсланкă пӳ-силлĕ каччă çине алă çĕклеме хăйни... Сăмах май каласан манмарĕ çакна Петя. Пĕррехинче шкултан тухнă чух мĕнпур вăйран картлашка çинчен тĕртсе ячĕ. Сирпĕнсе кайса эпĕ чавсана, чĕркуççие шăйăрттартăм, ыратнипе чылай вăхăт уксахласа çӳрерĕм. Çапах ку мана питех пăшăрхантармарĕ. Шикленмесĕр хисеплĕ, хаклă çыннăма хута кĕме пултарни савăнтарчĕ кăна. Çав хавхалану кăмăл-туйăма çĕклерĕ, çутă, чăрсăр ĕмĕтсем çуратрĕ. Ĕнтĕ эпĕ ĕмĕтсенче юмахри пек никам çĕнтерейми вăйлă ыра паттăр, тĕрлĕ путсĕрсемпе кĕрешетĕп, çĕнтеретĕп, терт, нуша куракансене хӳтĕлетĕп, пулăшатăп. Пуринчен ытла, паллах, хамăн юратăва, хамăн Илем Туррине тĕрлĕ хăрушлăхран, тĕрлĕ усал-тĕселрен хăтаратăп. Кун пек чух пурнăçăма та шеллеместĕп. Çывăрма выртсан куçа хупатăп çеç, умра хăрушă ӳкерчĕксем явăнма тытăнаççĕ. Акă Ăна, темшĕн-çке пушă хирте пĕр-пĕччен утаканскерне, выçă кашкăр кĕтĕвĕ йĕрлет е халиччен курман шап-шурă вăрăм шăллă тискер кайăк сиксе ларма хатĕрленет. Акă Ăна хурахсем çавăрса илнĕ. Эпĕ вĕсен хушшине вирхĕнсе кĕретĕп. Пĕрне тĕртсе сирпĕнтерсе яратăп, теприне тапса ӳкеретĕп. Тăшмансем сирĕлеççĕ. Анчах вĕсен пуçлăхĕ, чи чейи, чи нĕрсĕрри, хыçран йăпшăнса пырать те вăрăм çĕççине пĕтĕм вăйран сулса çурăмран чикет.

Асаплăн йынăшса ярса эпĕ çĕре тĕшĕрĕлетĕп. Хурахсем тараççĕ. Вера Антоновна çав самантрах чупса пырать, манăн лĕнчĕрленнĕ кĕлеткене ыталать, йĕрет. «Леня... Леонид, тăр, ан вил», — ĕсĕклет вăл. — Ах, чĕрĕлес пулсан...» Юлашки вăя пухса пуçа çĕклетĕп. «Сывă пулăр. Эпĕ юрататăп сире, Вера Антоновна... Верочка», — тетĕп те куçăм хупăнать...

— Ах, тур-тур! — терӗ те Екатерина Павловна пуҫне аяккалла пӑрчӗ.

— Ирхине Леня паттӑр ҫухалать. Эпӗ каллех шкул ачи, парта хушшинче ларатӑп, вӗренетӗп, тӑрӑшатӑп. Ытти вӗрентекенсем пекех, Вера Антоновна киле панӑ ӗҫсене тӗрӗслет, ыйтать, пӗлӳ паллисем лартать. Ҫапла кунсем иртеҫҫӗ, анчах юрату ҫулӑмӗ сӳнмест, тӗксӗмленмест.

Пӗрре ман пата Мишка кӗчӗ. Вӑл манӑн чи ҫывӑх, чи шанчӑклӑ тус тантӑш. Эпир пӗрле выляса ӳснӗ, пӗр ҫуртрах пурӑнатпӑр. Юлташ тӗрӗ тӗрлесе ларакан йӑмӑкӑм ҫине чалӑшшӑн пӑхса илчӗ те пуҫне алӑк енне сулчӗ.

— Калаҫмалли пур.

Эпир тухрӑмӑр.

— Ҫыру сана, — пӑшӑлтатрӗ Мишка. Йӗри-тавра асӑрхануллӑн пӑхкаласа вӑл кӗсйинчен хутлатнӑ конверт кӑларса мана тыттарчӗ. Э-э, пӗр класра вӗренекен Люда Столярова ҫырать. Мана килӗштерни ҫинчен пӗлтерет, туслашма сӗнет. Лайӑх хӗр ача. Вӑрӑм ҫивӗтлӗ, хӑмӑр куҫлӑ. Анчах манӑн Илем Туррипе епле танлаштарӑн ӑна?

— Паян эпир Гальӑпа кино курма каятпӑр, — пӗлтерчӗ Мишка мӑнаҫлӑн.

— Вара мӗн?

— Епле «мӗн»? — тӗлӗнчӗ юлташӑм. — Людка Столярова та пырать. Билетсем илнӗ.

Мишкӑпа Галя пӗр-пӗрин хушшинче юратуллӑ ҫырусем ҫӳретнине, каҫсенче час-часах тӗл пулкаланине пӗлнӗ-ха эпӗ.

— Пымастӑп, — хирӗҫлерӗм ҫирӗп сасӑпа. — Эпӗ урӑххине юрататӑп.

— Кама? — йӑлкӑшса илчӗ тусӑмӑн кӑвак куҫӗ.

Ун ҫине иккӗленерех пӑхса эпӗ тӑруках чӗнмерӗм.

— Никама та шӑл шурри те кӑтартмастӑп тесе тупа ту.

— Ну, тупа тăватăп. Чăн-чăн çирĕп сăмах.

— Эпĕ... Эпĕ...

Ман чĕре камшăн çуннине пĕлсен Мишкăн чăтăмсăррăн ялкăшакан куçĕсем сӳрĕкленчĕç.

— Тупнă юратмалли, — терĕ вăл питне мăн кăмăллăн турткаласа. — Çавна... ватăскерне.

— Кам? Кам ватă? — хĕрӳлентĕм эпĕ çавăнтах.

— Кам, кам, — витлесе илчĕ юлташăм. — Миçе çул аслă вăл санран? Çавна пĕлетĕн-и? Ну, мĕнле пурнăç тăвас тетĕн эсĕ уна качча илсен? Тепĕр çичĕ-сакăр çултан вăл карчăк пулать. Малтанах пуçпа шухăшламалла кун çинчен...

Эпир кăшт çеç çапăçса каймарăмăр.

— Ха... ватăлать, — кăмăлсăррăн мăкăртатрăм эпĕ пĕччен юлсан каллĕ-маллĕ уткаласа. — Тепĕр виçĕ-тăватă çултан эпĕ те çитĕннисен шутне кĕретĕп. Нумай мар вăл, хăвăрт иртет. Хальлĕхе мана нимĕн те кирлĕ мар. Ăна çеç час-часрах курасчĕ, ун çине вĕçĕмсĕр пăхасчĕ. Вăл тĕнчере пурри, вăл пирĕн класа эрнере икĕ хут урок ирттерме пыни маншăн пысăк уяв.

Пĕрре пире класĕпех атте-аннесен пухăвне чĕнчĕç. Калаçу вăраха тăсăлчĕ. Урамра тĕттĕм. Кĕрхи сивĕ çил тулашать, класа кĕресшĕн стенасенче, чӳречесенче шăтăк-çурăк шырать, çиллессĕн улать, шăхăрать, шавлать.

«Мĕнле çитĕ вăл? — шухăшлатăп эпĕ Вера Антоновна çине пăхса. — Автобуспа, троллейбуспа кайма шутсăр тавра. Çуран, тӳрĕрен инçех мар, анчах ансăр пралукпа утмалла. Пĕр енче çӳллĕ çуртсем, тепринче тарăн çырма тăсăлать. Кун пек касçсенче иртен-çӳрен те пулас çук унта, çырмара вара тĕрлĕ вăрă-хурах та пытанса ларма пултарать... Ăсатса яратăп, — çирĕп шут тытрăм эпĕ. — Крыльца патне çитичченех, алăкран кĕрсе çухаличченех».

Пуху вĕçленнĕ-вĕçленменех класран сирпĕнсе тухрăм, иккĕмĕш хутран чупса анса хăпăл-хапăл

тумлантӑм. Тухса крыльца ҫинчен антӑм ҫеҫ, пӑхатӑп — имшеррӗн ҫуталакан алӑк ҫывӑхӗнче патак выртать. Алла тытма меллӗ, сулӑмлӑ чӗрӗ йывӑҫ турачӗ. Такам шӑп мана валли юри пӑрахса хӑварнӑ тейӗн. Ярса тытрӑм та шалта алӑк патнелле ҫывхаракан ура сассисене илтсе шкул ҫурчӗн чи аякри тӗттӗм кӗтессине кайса лӑпчӑнтӑм. Тӳпере талккишӗпех хура пӗлӗт шӑвать, вичкӗн ҫил ахӑрашать, шӑм-шака сиввӗн хыпашлать, ураран ӳкересшӗн пек кассӑн-кассӑн пыра-пыра ҫапӑнать.

Акӑ алӑк уҫӑлса кайрӗ, ачасем те, ҫитӗннисем те кӗпӗрленсе тухрӗҫ, тӗрлӗ енне саланчӗҫ. Пытанса тӑнӑ кӗтесрен эпӗ те машинӑсем ҫӳрекен пысӑк ҫул ҫине утрӑм.

«Ӑҫтан кайӗ-ши?» — шухӑшлатӑп Вера Антоновнӑна куҫран ҫухатмасӑр. «Пралукпа... пралукпа... пралукпа...» — сасӑсӑр, анчах чунтан тархаслатӑп, тилмӗретӗп эпӗ ӑна хыҫран курӑнми йӑпшӑнса пынӑ май. Чӑнах та, троллейбуса лармарӗ, аслӑ ҫул урлӑ каҫрӗ те — ур-ра! — пралукалла пӑрӑнчӗ.

Ҫурма тӗттӗм ансӑр урампа йӑрӑс пӳллӗ хӗр утать. Пӗр-пӗччен вӑл. Сивӗ ҫил чарӑнусӑр ахӑрашать, типӗ ҫулҫӑсене ҫул тӑрӑх чуптарать, ҫавӑрать, пӗтӗрет, хаяррӑн ҫӗкле-ҫӗкле ҫапать, каллех таҫта хӑваласа каять. Чӳречесенчен ӳкекен ҫутӑ тӑваткалӗсенче ҫаралса юлнӑ йывӑҫ тӑррисем такамран хӳтлӗх ыйтнӑ пек унталла-кунталла сулланаҫҫӗ, канӑҫсӑррӑн шавлаҫҫӗ... Ансӑр пралукпа йӑрӑс пӳллӗ хӗр — Илем Турри — пӗр-пӗччен пырать. Таврара кӗрхи тӗттӗм каҫ, юнашарах тарӑн ҫырма тӑсӑлать. Унта пушшех тӗттӗм, хӑрушӑ. Кам та пулин siксе тухас пулсан?.. «Ан шиклен, эпӗ кунтах. Эпӗ сыхӑ, кӳрентерме памастӑп», — пӑшӑлтататӑп, калаҫатӑп хамӑн Илем Туррипе йывӑҫ тӗмӗсем хыҫӗпе йӑпшӑнса пынӑ май.

Ҫапах тем сисрӗ вӑл, йӑлт ҫаврӑнса пӑхрӗ. Тар-

ма мар, нимӗн шухӑшласа илме те ӗлкӗреймерӗм, ума пырса та тӑчӗ. Пӑхрӗ те ахлатса ячӗ.

— Кириллов, эсӗ-и?!

Вӑтаннипе, хӑранипе ҫӗр тӗпне анса кайӑттӑм ҫав самантра.

— Мӗн тӑватӑн эсӗ кунта?

— Эпӗ... Эпӗ, Вера Антоновна...

Чӗлхе хытса ларчӗ. Калас тетӗп, сӑмах ҫук.

— Ку тата... Ку патакӗ мӗн тума сана? — янрарӗ хӑлхара чылаях сивӗннӗ сасӑ.

Сасартӑк пуҫа калама ҫук хӑрушӑ шухӑш пырса ҫапрӗ. Тавӑрма тухнӑ тесен?.. Ман шутпа, сехӗрленме сӑлтав пулнӑ. Икӗ кун каярах тӑхтав вӑхӑтӗнче эпӗ юлташа хӑваласа коридорпа вирхӗнсе пыраттӑм. Сасартӑк умрах алӑк яри уҫӑлчӗ те, Вера Антоновна тухрӗ. Пӗр аллинче класс журналӗ, тепринпе хӑй ҫумне тетрадь купи чӑмӑртаса тытнӑ. Пырса ҫапӑнмарӑм эпӗ, пӑрӑнма ӗлкӗртӗм, анчах пурӗ пӗрех перӗнтӗм. Тетрадьсем урайне персе анчӗҫ.

— Ах!

Хӑранипе, вӑтаннипе чӗлхе ҫӗтрӗ, каҫару ыйтма та ӑнкараймастӑп, тӑратӑп хытса.

— Ну, Кириллов! Ну, ашкӑнчӑк! — кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртатрӗ вӗрентекенӗм. Вӑл урайне саланнӑ хутсене пуҫтарма пикенчӗ. Пулӑшас тесе эпӗ те пӗшкӗнтӗм. Ҫав самантра йӗри-тавра хӗвӗшекен ачасенчен пӗри, тепӗр ашкӑнчӑк, мана хыҫран чӗркуҫҫийӗпе тӗртрӗ. Чикӗленсе кайса иккӗмӗш хут кӑшт ҫеҫ ун ҫине пырса перӗнмерӗм. Ҫакна пирӗн класс ертӳҫи курнӑ иккен. Кӗскен каласан, лекрӗ мана. Халӗ эпӗ ҫавӑншӑн тавӑрма тухнӑ тесе шутласан...

Чӑнах та, кӗрхи тӗттӗм каҫ ҫын ҫӳремен пушӑ урампа сулмаклӑ туяпа хыҫран вӑрттӑн йӗрлесе пыракан ҫинчен мӗн шухӑшлӑн?

— Кириллов, ку мӗн? Мӗн тума кирлӗ вӑл

сана? — ыйтать манран вӗрентекенӗм аларри патак ҫине кӑтартса.

— Эпӗ... Эпӗ, Вера Антоновна, сире хураллатӑп. Каҫӗ тӗттӗм... хӑрушӑ...

Урӑх каллех нимӗн те калаймарӑм. Пӗр вӑхӑт вӑл та чӗнмерӗ.

— Юрӗ, — илтӗнчӗ кӑштахран сисӗнмеллех ҫемҫелнӗ сасӑ. — Ӗнтӗ эпӗ ҫитнӗпе пӗрех. Ҫурчӗ те курӑнать авӑ. Тек маншӑн шикленмелли ҫук. Каях, чуп киле. Хумханаҫҫӗ пулӗ унта ӑҫта тесе. Ырана уроксене те хатӗрленмелле.

Пуҫа ҫӗклеме хӑяймасӑр эпӗ ҫаврӑнса суллантӑм. Каҫхи апат ҫимерӗм, пуҫ ыратать тесе вырӑн ҫине кӗрсе выртрӑм. Кӳренӳ куҫҫулӗ пит тӑрӑх йӑпӑртатрӗ те йӑпӑртатрӗ. Ҫапла, эпӗ уншӑн ача... Шкул ачи кӑна...

— Ҫакӑн хыҫҫӑн тӑна кӗмелле пек ӗнтӗ. Анчах мӗн тӑвӑн чӗрене кӗрсе ларнӑ ӑссӑр туйӑмпа?.. Вӑт ҫапла ҫунтарса хӑварчӗ мана пирвайхи юратӑвӑм, — терӗ Леонид куларах, хӑй ҫав самантрах хуллен ассӑн сывласа ячӗ. Унтан вулас тесе умри хаҫатне илсе саркалама тӑнӑччӗ, анчах ӑна Иван Трофимович чӑрмантарчӗ.

— Ак тамаша! — терӗ вӑл тӗлӗннипе сарлака сухалне шӑлкаласа. — Эсӗ хӗн-хур-асап ҫеҫ мар, чуна шӑнӑҫайми телей те пулнӑ терӗн-ҫке. Ӑҫта вӑл? Пуҫларӑн тӑк атя пурне те каласа пар.

— Вара ҫав хӗр сирӗн юратӑвӑр ҫинчен пӗлмерӗ те-и? Пӗлтерейменӗр-и эсир ӑна? — ыйтрӗ Екатерина Павловна та. — Тата ҫавӑн пек хитре пикен нивушлӗ ҫӳрекен каччи пулман?

Леонид хулпуҫҫине хускатса илчӗ, графинран шыв ярса ӗҫрӗ.

— Ҫӳренӗ-ши вӑл каччӑпа, ҫӳремен-ши, эпӗ ӑна пӗлместӗп, илтмен. Шкулта уявсенче, тепӗр чух ахаль кунсенче те юрӑ-ташӑ, вӑйӑ-кулӑ каҫӗсем ирттеретчӗҫ. Унта аслӑ классенче вӗренекен-

сем çеç мар, çамрăк учительсем те хутшăнатчĕç. Вера Антоновна та. Ытларах вăл физика учителĕпе ташлатчĕ. Вăйăсенче те вĕсем час-часах пĕрлеччĕ. Эпĕ кĕвĕçеттĕм, ăмсанаттăм Владимир Николаевича. Эх, ман пуласчĕ унăн вырăнĕнче тесе шухăшлаттăм. Çапах вĕсем çинчен сăмахюмах юптарнине илтмен. Унашкал хыпар хăвăрт сарăлать. Шкул ачисем хăйсен учителĕсем çинчен пурне те пĕлеççĕ. Кун пирки иккĕленмелли çук.

Çурхи кунсем çывхарчĕç. Кĕçех пысăк уяв — Хĕрарăмсен кунĕ — çитет. Класс старости Люба Иванова хĕрарăм вĕрентекенсем валли парне илме пирĕнтен укçа пухать. Эпир те, арçын ачасем, пĕрле пуçтарăнса канашлусем ирттеретпĕр. Пĕрле вĕренекен хĕр ачасене саламламалла-çке. Ку темех мар-ха. Хăнăхнă йăла. Вĕсем пире нарăсăн çирĕм виççĕмĕш кунĕ тĕлне темиçе сăмахлă хитре уçă çырусем, пĕчĕк парнесем тыттараççĕ, эпир те парăма çавăн евĕрлех саккăрмĕш мартра тататпăр. Анчах Ăна, манăн хаклă чун çунтармăшне, мĕнле саламламалла-ши? Паллах, парне кирлĕ. Чунне хавхалантаракан илемлĕ, тивĕçлĕ парне...

— Чечек ил. Арçын хăй килĕштернĕ хĕрарăма чи малтан яланах чечек парнелет. Çапла майпа вăл ăна юратнине систерет, — вĕрентет мана Мишка. — Шурă е хĕрлĕ чечек парнелемелле. Шурри — паллашас тенине пĕлтерет, хĕрли — юратнине.

Нумай пĕлет ман тусăм çавнашкал япаласем çинчен. Вун çичĕ çулхи пиччĕшĕ пур унăн. Пĕлĕвĕсене çавăн урлă чылай анлăлатать вăл. Унăн тĕплĕ пытарнă юратуллă çырăвĕсене тупса вулать, юлташĕсем килне пырсан вĕсен вăрттăн калаçăвĕсене тăнлама ăста. Лекет те пулас Мишкăна çапла хăтланнăшăн, вăл пурпĕр хăйĕннех тăвать. Пĕрре-

хинче вăл мана пысăках мар кĕнеке кăтартрĕ. Унăн хуплашки çине «Юрату вăрттăнлăхĕсем» тесе çырнă.

— Мĕн тери интереслĕ, — пăшăлтатрĕ вăл ман çине хаваслă çиçекен куçĕпе пăхса.

— Пар-ха вулама.

— Тин кăна вулама тытăнтăм çав. Хамăн мар, Кольăн. Питĕ тĕплĕ çĕре пытарса хурать. Эпĕ пурпĕр шыраса тупрăм...

Хĕрарăмсене чечек парнелемеллине хамах пĕлетĕп-ха. Анчах ăна илме укçа кирлĕ-çке. Ăçтан тупас? Аннерен ыйтсан вăл тӳрех тĕпчеме тытăнать: мĕн тума? кам валли? мĕн сăлтавпа?.. Тата те парать, те çук. Аттере те шанчăк сахал. Килте ăна ытларах телевизор та хаçат-журнал çеç интереслентерет. Çапах хальхинче çумне диван çине ларса кăшт систертĕм çеç — вăл пуçне ялтах çĕклерĕ.

— Парне илме? Хĕр валли-и? — ыйтрĕ вăл ман çине хаваслă куçпа кăшт тĕлĕнерех пăхса. — А-а, ман ывăл арçынсен шутне кĕресшĕн апла. Миçе тенкĕ кирлĕ?.. Юрĕ, ывăлăм, пулать сана укçа. Халĕ мар, ыран. Анчах асту, хамăр хушăра пултăр, — вăл кухньăра кăштăртатакан анне енне пуçне сĕлтрĕ.

Çав ир эпĕ хаваслă туйăмпа вăрантăм. Паян пуш уйăхĕн саккăрмĕшĕ. Паян уяв. Кунĕ те епле илемлĕ. Ĕнер йĕпе юр çурĕ. Каçалапа тавралăха тĕксĕм тĕтре карса илчĕ. Халĕ сарă хĕвел ялкăшать. Кăн-кăвак тӳпе хаваслăн çуталать. Шап-шурă йывăççсем черчен кĕмĕл пĕркенчĕкпе витĕннĕ тейĕн, капăр тумĕпе киленсе хускалмасăр лараççĕ. Инçе мар çерçи пухăвĕ хăйсен кайăк-кĕшĕк ыйтăвне шавлăн сӳтсе явать.

Чи малтан эпир, виçĕ арçын — атте, эпĕ, шăллăм — аннепе йăмăка уявпа саламларăмăр. Унтан хыпăнсах чей ĕçрĕм, хамăн чи капăр тума тăхăнтăм.

— Ăçта эсĕ капла ирех? — ыйтрĕ анне.

Илтмĕш пулса хăвăртрах тухса шăвăнтăм. Çапла, эпĕ пасара васкарăм. Унсăрăн чи хитре чечексене илсе пĕтерме пултараççĕ-çке. Чечек патĕнче темĕн чухлĕ çын кĕшĕлтетет. Ытларах çамрăк арçынсем, çулланнисем те, ачасем те пур. Кăмăллăн шăтăртатакан темиçе хута ывăçра чăмăртаса эпĕ рет тăршшипе васкамасăр, тимлĕн пăхса иртетĕп. Юлашкинчен виçĕ хĕрлĕ чечек суйласа илсе тирпейлĕн чĕркетĕп. Халĕ Ун патне!..

Троллейбусран антăм. Авă вăл, чун-чĕреме темле çутă вăйпа хăй енне туртакан виçĕ хутлă вăрăм çурт, çавăнта, общежитинче, пурăнать Вăл. Виççĕмĕш хутра унăн пӳлĕмĕ. Чĕре хаваслăн тапать — кĕçех, кĕçех эпĕ Ăна куратăп.

Алăка туртса уçрăм, çурма тĕттĕм вăрăм коридора кĕтĕм. Сасартăках вăйсăрланнă урасене хисте-хисте картлашкапа çӳлелле хăпаратăп. Акă вăл, мана кирлĕ пӳлĕм!.. Чĕре сиксе тухас пек тапăлтатать... Чĕтрекен аллăма çĕклесе алăка хуллен шаккатăп...

— Кĕрĕр! — илтĕнчĕ сасă. Унăн сасси!

Вера Антоновна пĕчченех, чӳрече çывăхĕнче кĕнеке вуласа ларать. Эпĕ кĕрсен вăл пуçне çĕклерĕ, ну, мĕн калăн тенĕ евĕр, илемлĕ хăмăр куçне ман çине тĕллерĕ.

— Вера Антоновна, — хăюсăррăн мăкăртатрăм эпĕ, пĕр ура çинчен теприн çине пускаласа. — Эпĕ... саламлатăп Сире... Хĕрарăмсен кунĕпе. Телей сунатăп.

Малтан шухăшласа хунă сăмахсем таçта кайса çухалчĕç. Хаçата васкаса саркаларăм та чечек çывхине ун енне тăсрăм... Вăл тăчĕ, çывхарчĕ. Çинçе, тĕксĕм куç харшисем çӳлелле ывтăнчĕç, çамрăк, чипер пит-куçĕ хаваслăн çуталчĕ.

— Тюльпан!.. Ман юратнă чечек! — терĕ вăл. Парнене илсе пичĕ патне çывхартрĕ. — Çуллахи

уй-хир, çаран шăрши кĕрет. Мĕн тери лайăх! Тавтапуç, Леня.

Çепĕç алă хулпуççие перĕнчĕ, хитре пит-куç çывхарчĕ. Вара... вара Ун вĕри тути çамкана ачашшăн сĕртĕнчĕ... Эпĕ куçа хупрăм. Сывлăш питĕрĕнчĕ.

— Халĕ чей ĕçĕпĕр, — илтрĕм эпĕ унăн хаваслă сассине. — Манăн тутлă печени пур. Хам пĕçертĕм. Атя хывăн. Иртсе лар малалла акă пукан çине. Эпĕ чечексене шыва лартам-ха.

Çапла каласа Вера Антоновна шкапран кĕленче савăт илчĕ те пӳлĕмрен тухрĕ. Пĕччен юлсан тин кăштах тăна кĕтĕм, йĕри-тавра пăхса илтĕм. Пĕчĕк пӳлĕм. Тирпейлĕ пуçтарнă кравать, пысăк мар сĕтел, стенасем çинче журналсенчен тата-тата илнĕ тĕрлĕ ӳкерчĕксем, кĕтесре кĕнекесем, хутсем хунă этажерка.

Вĕри чей васкамасăр ĕçнĕ май Вера Антоновна манран пирĕн çемье, атте-анне çинчен ыйтса пĕлет, хăй çинчен каласа парать. Ку вырăнсенче çуралса ӳснĕ çын мар иккен вăл. Унăн тăванĕсем Çĕпĕрте пурăнаççĕ. Пирĕн хулана вăтам шкул пĕтерсен ăна амăшĕн йăмăкĕ хăй патне чĕнсе илнĕ, анчах унăн халĕ çĕнĕ çемье.

Эпĕ килелле утатăп. Чĕрере тĕлĕнмелле ырă, çутă туйăм çĕкленсе чечекленет. Эпĕ Ун çинчен шухăшлатăп. Пĕр Ун çинчен кăна. Таврара мĕн пурри: кăн-кăвак пĕлĕт те, ылтăн пайăркисене çĕр çине тăкакан ялкăш хĕвел те, ĕнер кăна çунă шапшурă таса юр та, кĕмĕл тумлă йывăççем те — пурте-пурте Ăна аса илтереççĕ. Ман умра Ун сăнĕ шăвать — е аякка кайса çухалать, е каллех çывхарать. Хитре пысăк куççем ăшшăн-ăшшăн пăхаççĕ. Эпĕ каллех Ун сассине илтетĕп, Вăл каланă кашни сăмаха аса иле-иле чунтан киленсе пăшăлтататăп. Акă вăл çурри шыв тултарнă вазăна че-

чексем вырнаçтарса лартать, пăрăнса е аякран тишкерсе пăхать, е çывăха пырса ылмаштарать, юсать.

— Леня, ну, мĕнле? Килĕшет-и сана? Çапла пултăр-и? — ыйтать вăл.

Пичĕ-куçĕ калама çук кăмăллă, илемлĕ хăмăр куçĕсенче чуна тивекен ачашлăх. Акă эпĕ унпа юнашар ларса чей ĕçетĕп. Вăл мана хăй пĕçернĕ печенипе хăналать, тĕрлĕ канихвет илсе çиме сĕнет. Паян вăл мана чуптурĕ, аллăма çепĕççĕн чăмăртарĕ. Çапла, маншăн халĕ унăн кашни хусканăвĕ, кашни сăмахĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, сумлă. Пурте-пурте чĕрене хумхантарать, çутатать, ачашлать, хавхалантарать. Пĕлĕте вĕçсе çĕкленĕттĕм чун-чĕре ытла та савăннипе, тĕнчене кăшкăрса пĕлтерĕттĕм телейĕм çинчен...

Хаяр хыпар кĕтмен çĕртен пырса çапрĕ. Шкулта уяв касĕ, вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ ятпа. Тата нумай-нумай вăхăт шкулта ĕçленĕ математика учителĕ Никифор Сидорч паян тивĕçлĕ канăва каять. Клуба халăх чылай пуçтарăннă. Шкул ачисемпе вĕрентекенсем çеç мар, хула çыннисем те сахал мар. Вĕсем хушшинче эпĕ куçпа Ăна шыратăп, канăççăррăн унталла-кунталла пăхатăп, анчах Вăл курăнмасть.

— Калаçмалли пур. Атя тухар, — пырса тăчĕ ман пата Мишка. — Ан кĕт. Пулмасть вăл паян кунта, — терĕ юлташăм çурма сасăпа эпир крыльца çинчен анса пĕр-икĕ утăм аяккалла пăрăнсанах. — Упăшки килнĕ унăн.

Чĕре картах турĕ.

— Мĕн?.. Кам упăшки? — ыйтрăм эпĕ, пĕтĕмпех ăнлантăм пулин те.

— Камăн, камăн... Паллах, Вера Антоновнăн. Каларăм сана малтанах. Тăнламарăн ман сăмаха. Халĕ вăт... Чугун çул станцине кайнă вăл паян ăна кĕтсе илме. Лешĕ, йăрăс пӳллĕскер, хитрескер, çар тумĕпе тет.

— Эсĕ ăçтан пĕлетĕн? Тата мĕншĕн упăшки? Тен, пиччĕшĕ, тен, урăх тăванĕ-пĕлĕшĕ, — путакан çын улăм пĕрчинче çăлăнăç шырать тенĕ пек, персе ятăм эпĕ те пуçа пынă пĕрремĕш шухăша.

— Аха, тăван-пĕтен мар çав, чăн-чăн упăшки. Галя амăшĕ ыйтса пĕлнĕ унран. Вăл унта, общежитинче, ĕçлет-çке, — иккĕленĕве пĕтĕмпех сирсе ывăтрĕ Мишка.

Калама çук ывăннă пек, манăн шăм-шак сасартăках йывăрланчĕ. Мишка каллех Люда Столярова пирки тем каларĕ. Таçта чĕнчĕ, анчах ăна тăнлама эпĕ вăй-хал çитерейменрĕм, çаврăнтăм та килелле суллантăм. Çак кунран ман пурнăç тĕксĕмленчĕ, çутă ĕмĕтсем сӳнчĕç. Суранланнă чунăма тек нимĕн те хавхалантармарĕ. Ĕнтĕ кăлăхах эпĕ шкула кĕре-кĕре тухатăп, пушаннă коридор тăрăх çӳретĕп, пушă классене уçа-уçа пăхатăп. Вăл çук. Çук Вăл, çук... Унăн çинçе йăрăс пĕвне, чипер пит-куçне курса чун çĕкленмест. Айван чĕре! Айван юрату! Мĕн тесе хыпса илмелле пулнă-ши унăн? Вăл çапла вĕçленессе пĕлнĕ-çке эпĕ, ăс-тăнпа ăнланнă. Апла пулсан мĕншĕн ытла та асаппа уйăрăлать вăл? Мĕншĕн вĕри хуйхă канăç памасть? Мĕншĕн ялан, иртен пуçласа каçчен, пĕртен-пĕр шухăш Ун çинче, пĕр Ун çинче кăна?

Кампа калаçас? Чунăма кама уçса парас? Кам ăнланĕ? Юратнине пĕлтерме те ĕлкĕреймерĕм. Малтан хăяймарăм. Халĕ вара мĕн усси? Тата мĕне кирлĕ ăна ман юрату? Вăл телейлĕ, унăн упăшки пур.

Анчах канăçсăр айван туйăм мана пурпĕрех шкул енне çавăтса каять. Аслă классенче экзаменсем вĕçленмен-ха. Тен, Вăл унта...

Пĕррехинче пыратăп çапла пуçа усса. Акă шкул алăкĕ уçăлчĕ те — Вăл, Вера Антоновна, курăнчĕ.

Пусма çинчен çăмăллăн чупса анчĕ, утăмĕсене вăрахлатмасăр ман паталла çывхарчĕ.

«Васкать... Упăшки патне ĕнтĕ. Пичĕ-куçĕ епле телейлĕ», — пĕçертсе илчĕ чунăма сивĕ кĕвĕç. Çавăнса утас тенĕччĕ — пултараймарăм.

— Сывлăх сунатăп, Вера Антоновна!..

— А-а, Леня, эсĕ-çке! — тăпах чарăнчĕ Вăл. — Эпĕ асăрхаман та. Ну, Леня, сывă пул. Тен, урăх курайmăпăр та. Ыран каятăп эпĕ. Лайăх вĕрен. Маттур, сывлăхлă ӳс. Усалпа ан асăн.

Алă тăсса пачĕ, кăшт салхуллăн кулкаласа куçран тинкерсе пăхрĕ.

— Сывă пулăр, — măкăртатрăм эпĕ чунăма хытарса.

Чĕрене такам татăкăн-татăкăн вакларĕ, асаплантарчĕ, кăшкăртрĕ.

Апла ыран... Ыран каять. Тек эпĕ Ăна нихăçан та курайmастăп. Нихăçан та...

Тепĕр кун ман пата Мишка кĕчĕ.

— Пĕчченех-им? — ыйтрĕ вăл йĕри-тавра пăхса. — Эсĕ пĕлетĕн-и? Паян каять вăл. Тек килмест кунта.

Эпĕ пуçа усрăм.

— Пĕлетĕп.

— Ну, эсĕ... Ытлашши ан кулян. Мĕне кирлĕ чуна пустуй çунтарма? — каллех ăс пама тытăнчĕ мана Мишка. — Хĕр вăл пĕтмест. Татах тупăнать. Ку тата... Ну, Вера Антоновна, хĕр те мар, упăшкаллă хĕрарăм. Сур эсĕ ун çине... Таса юратăва хаклама пĕлмерĕ.

Вăл пакăлтатнине илтес килмерĕ. Эпĕ пуçа усса чĕнмерĕм. Çавăнпа-ши, нумай лармарĕ вăл, кĕçех килетĕп тесе тухса кайрĕ.

Эпĕ ăна кĕтмерĕм, урама тухрăм та Вăл пурăнакан общежити еннелле суллантăм. Лапсăркка тĕм хыçне тенкел çине лартăм. Тĕллесе пăхмасан мана кунтан вăр-вар асăрхаймастăн, эпĕ вара унăн чӳре-

чине те, тухмалли алăка та лайăх куратăп... Унтан Мишка пырса тăчĕ.

— Çакăнта пулĕ терĕм çав сана, — пăшăлтатрĕ вăл. — Упăшки таçта кайрĕ. Чĕнсе тухас-и? Кĕме те пултаратăн. Сыхласа тăратăп, систеретĕп лешĕ килнине.

Килĕшмесĕр эпĕ пуçа сулкаласа илтĕм. Мĕн ман хыççăн çӳрет вăл паян? Мĕн кирлĕ ăна?

— Эпир санпа çывăх туссем, — шухăш-кăмăлăма ăнланнă пекех хĕрӳллĕн пăшăлтатрĕ Мишка юнашар ларса. — Çакăн пек йывăр самантра чăн-чăн тус хăй юлташне пĕччен хăварма пултараймасть. Юрату вăл — шӳт мар. Вăл ăс-тăна илет. Телейсĕр юратăва пула вилекенсем те пур. Авиценна авă...

Юратать ман тусăм хăй пĕлĕвне кăтартма. Тата ăс пама ăста. Тепĕр чух интересленсех тăнланă пулăттăм-ха. Анчах халĕ... Ман йĕрес килет. Чĕрене тунсăх кăшлать, вăл пур — ларать кирлĕ мара пакăлтатса.

— Авиценна тетĕп-çке. Е Абу Али Ибн Сина, е тата Абу Али Хусейн Ибн Абдуллах... Вăт мĕн чухлĕ ят унăн. Пин çул каярах пурăннă вăл. Шутсăр ăслă, паллă çын пулнă. Çав Авиценна алă тымарне итлесех юратăва пула чире кайнă каччă е хĕр камшăн асапланнине, лешĕ мĕн ятлине, ăçта пурăннине пĕлме пултарнă тет. Пĕрре ăна шах ывăлĕ, çамрăк принц, патне чĕннĕ...

Тек чăтăмлăх çитмерĕ. Лаплаттарса хутăм хам шухăша. Мĕнле ăнланмасть-ха вăл? Тус тет хăйне... Ман тӳрккеслĕх Мишкăна, паллах, кӳрентерчĕ. Хыттăн мăшлатса вăл тăрса утрĕ.

Манăн та каймалла. Чăнах, мĕн тесе ларатăп çакăнта? Мĕн кĕтетĕп? Тепре курассишĕн, тепĕр хут хыçран пăхса юлассишĕн... Апла пулин те вăйлă туйăм мана пăталаса лартрĕ тейĕн, эпĕ вырăнтан та хускалмарăм. Унтан яри уçăлса кайнă алăкран вĕсем тухрĕç. Çӳллĕ пӳллĕ çамрăк арçын пысăк чăма-

тан йатнă. Вера Антоновна аллинче çăмăл сумка. Аслă çул еннелле, машинăсем чарăнакан вырăна, утрĕç. Çывăхранах иртрĕç, анчах Вăл мана асăрхамарĕ. Акă троллейбус çитсе чарăнчĕ, алăкĕ уçăлчĕ те, Вера Антоновна куçран çухалчĕ. «Сывă пул! Телейлĕ пул!» — пăшăлтатрăм эпĕ пыра куççулĕ капланса килнине туйса.

Унтан сиксе тăтăм та шутламан çĕртен хыçран тапса сикрĕм, юлашки самантра çурри хупăннă хыçалти алăкран çын тулли салона хĕсĕнсе кĕтĕм...

Перрон тăршшĕпе халăх хĕвĕшет. Умри икĕ çынна куçран вĕçертмесĕр эпĕ те утатăп. Темле хăват ăс-тăна путарса çĕнтерейми вăйпа мана вĕсем хыççăнах çавăтса пырать. Сĕм тĕттĕм уй-хирте çĕтсе кайнă çын, мĕн курасса, мĕн пуласса пĕлмесĕр аякра ялкăшакан çутă енне ăнтăлнă евĕр, эпĕ те халĕ кĕç-вĕç куçран çухалма хатĕр телейĕм еннелле тапăлтататăп.

Вагон алăкĕ хупă-ха. Ун çывăхĕнче çынсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Акă вăл уçăлчĕ, пĕрремĕш пассажир пусма çине çĕкленчĕ.

— Ленька! — хуллен тĕртрĕ мана тахăшĕ хыçалтан. Çаврăнса пăхрăм — каллех Мишка тăрать.

— Мĕн кирлĕ сана?

— Калаçмалли пур, — пăшăлтатрĕ вăл. — Атяха пăрăнар... Юратнă хĕрарăма пушă алăпа ăсатмаççĕ. Чечек парнелемелле ун пек чух. Йĕрки çавнашкал. Акă, — çапла каласа юлташăм мана виçĕ хĕрлĕ роза тыттарчĕ. — Юри сан валли туянтăм. Хаклăрах та... Парăм пирки ан кулян. Пĕчĕккĕн парса тататăн. Халĕ каях. Пыр, сывпуллаш. Упăшки авă чăматанне сĕтĕрсе хăпарчĕ. Тата асту, уйăрăлнă чух аллине чуптума ан ман, мĕншĕн тесен...

Эпĕ тек итлесе тăмарăм, çынсене тĕрткелесе вагон патнелле ыткăнтăм.

— Вера Антоновна!

Урине картлашка çине пуснăскер, вăл вăртах çавăрăнчĕ.

— Леня... Эсĕ-и?

Сиксе анчĕ, пичĕ-куçĕ хаваслăн çуталчĕ.

— Эсĕ мĕншĕн кунта? Е кама та пулин ăсататăн-и?

— Эпĕ... Эпир Миша Кузнецовпа...

Ну, ку чĕлхене!

— Эпир Миша Кузнецовпа Сире ăсатма килтĕмĕр.

— Миша? Ăçта вăл?

Çаврăнса пăхрăм — юлташăм ниçта та курăнмарĕ.

— Ку Сире.

— Каллех чечек парнелетĕн. Тавтапуç, Леня! Шухăшларăм сан çинчен. Ăсатма килетĕнех пулĕ терĕм. Темшĕн çавăн пек туйăнчĕ. Чăнах та, чĕре улталамарĕ, — вăл ман çине каллех ăшшăн, кăшт салхуллăн тинкерсе пăхрĕ.

— Эпĕ юрататăп Сире, Вера Антоновна... Шутсăр юрататăп, — сисмерĕм те персе ятăм чĕре калама çук ыратнине туйса.

Вăл тĕлĕнмерĕ, пуçне салхуллăн сулса илчĕ çеç.

— Пĕлетĕп, Леня. Тахçанах сисетĕп. Эпĕ те юрататăп сана...

Çак самантра хам мĕн туйса ирттернине сăмахпа калама пултараймастăп. Сăнран та улшăнтăм пулас — Вера Антоновна куçĕсем чарăлчĕç, вĕсенче темле канăçсăрлăх вĕлтлетсе иртрĕ.

— Юрататăп. Çывăх тăвану пек. Аппу пек, — васкаса хушса хучĕ вăл.

— Верочка! Икĕ минут юлчĕ, — илтĕнчĕ çӳлтен арçын сасси.

— Ну, Леня, сывпуллашар. Тавтапуç сана — ăсатма килнĕшĕн, парнешĕн... юратнăшăн. Ан хуйхăр. Иртет вăл, кĕçех иртет...

Унтан мана çепĕççĕн ыталарĕ. Чипер тути каллех çамкана ачашшăн перĕнчĕ. Эпĕ сисмесĕрех ун

çумне йăпшăнтăм, куçа хупса кĕске вăхăт хускалмасăр тăтăм. Халиччен пĕлмен калама çук ырă, çутă туйăм шăм-шак тăрăх чупса саланчĕ.

— Ку сана манран асăнмалăх, — Вера Антоновна сумкинчен тутлă шăршă кĕрекен пĕчĕк тутăр кăларса ăна ман алă тупанĕ çине хучĕ. — Шăл куçна. Арçынсем макăрмаççĕ.

Хаклă парнене эпĕ кăкăр умĕнчи кĕсьене пытартăм. Кайран чылай вăхăт вăл çав тутлă, çутă самантсене аса илтерсе ыратакан чуна йăпатрĕ... Унтан юлашки ăшă сăпайлă кулă, юлашки хут алă сулни. Вĕлтлетсе илчĕ те ĕмĕрлĕхех куçран çухалчĕ... Вăт çапла, — вĕçлерĕ Леонид калавне.

— Урăх курман-и эсир ăна?

— Çук, курман...

— Апла эппин... Шел.

Купере шăп пулчĕ. Поезд кăна шавлăн васкаса малалла чупрĕ...



— Кĕме юрать-и?

— Юрать, юрать, — терĕ Юрий Дмитриевич куçне сĕтел çинчен çĕклемесĕр.

— Эсир илемлĕ литература пайĕн редакторĕ-и? — ыйтрĕ кĕрсе тăнă çамрăк хĕрарăм алăк патĕнчен иртмесĕр. — Çак япалана сире памалла пулĕ тетĕп, — çапла каласа вăл темиçе утăм малалла иртрĕ те хутаçĕнчен хура хуплашкаллă тетрадь кăларса сĕтел хĕррине хучĕ.

— Мĕн ку? Ал çыру-и? Çĕнĕ автор апла, — Юрий Дмитриевич пуçне çĕклерĕ те хĕрарăм çине тинкерсе пăхрĕ. — Акă мĕн, — хушса хучĕ вăл тетраде уçкаласа пăхнă хыççăн. — Кăна машинкăпа çаптарас пулать. Вара тин вăл редакцие пама тивĕçлĕ ал çыру пулать.

— Манăн мар вăл, — терĕ хĕрарăм. Илсе килнĕ япалине вăйпах каялла тыттарасран шикленнĕ евĕр, вăл çавăнтах алăк патне кусса тăчĕ. — Тупнă тетрадь вăл. Мускава кайнă чух ăна пĕр хĕрарăм вуласа пычĕ. Камне те, ăçта пурăннине те пĕлместĕп. Вокзала çитсен вăл куперен чи малтан тухрĕ. Эпĕ васкамарăм. Нимĕн те юлмасть-ши тесе çаврăнса пăхрăм та — урайĕнче кĕтесре выртать çак тетрадь. Хуçине хуса çитсе парас шутпа илтĕм. Анчах вăл вагонран тухма ĕлкĕрнĕ. Перрон çинче те курмарăм. Ну, выртать те выртать ман патра пĕр усăсăр. Кăларса ывăтма шел. Вара кунта килсе парас терĕм. Тен, килĕшĕ вуласа тухсан, — хĕрарăм калаçса тăмарĕ, алăка тĕртрĕ те тухрĕ. Юрий Дмитриевич, мĕн тăвас ĕнтĕ ку тетрадьпе тенĕн, ăна тепĕр хут уçкаласа пăхрĕ те портфельне чикрĕ.

* * *

«Пĕр çуллахи хĕвеллĕ ир, чылай вăхăт аякри çĕршывра пурăннă хыççăн эпĕ çуралса ӳснĕ вырăнсене таврăнтăм. Акă тăван урам. Кунта манăн лар-

ма-тăма пĕлмен ачалăх выляса чупнă, пирвайхи юратăвăн ачаш хĕлхемĕ çамрăк чĕрене çутатса хумхантарнă. Авă виçĕ чӳречеллĕ пӳрт курăнчĕ. Ку эпĕ çитĕнсе аталаннă йăва. Утăмсем ирĕксĕрех хăвăртланаççĕ, шăм-шак хăпартланать. Сасартăк...

Çук, эпĕ ытла та васкатăп. Хумханатăп пулас. Йĕркипе, пурин çинчен те йĕркипе каласа парас пулать...

Эпĕ вагон чӳречинчен пăхса пыратăп. Поезд чĕнтĕрлесе илемлетнĕ çутă чӳречеллĕ ялсем çумĕн, унта та кунта çырма-çатра татса кайнă аслă хирсем урлă, симĕс вăрмансем витĕр васкаса чупать. Ачаран курса ӳснĕ лапсăркка хырсем, хавасла шурă хурăнсем, çирĕп тураттисене саркаласа янă юмансем çывăхрах шăва-шăва иртеççĕ, ăшăмра çутă, ырă туйăм çĕклесе хавхалантараççĕ.

Тăван çĕршывăм! Пилĕк çултан эпĕ каллех санпа. Сана курнипе савăнатăп. Сан çине ытарайми пăхатăп.

Илемлĕ Куба çĕршывĕ. Кăн-кăвак тӳпенелле кармашакан тӳп-тӳрĕ пальма вăрманĕсем, аякранах куçа илĕртекен йăмăх чечеклĕ айлăмсем, тĕрлĕ тутлă çимĕçсемпе ешерекен йывăçсем, сивĕ пăр мĕнне пĕлмен тăп-тăрă юхан шывсем, кӳлĕсем, сарă хăйăрлă тинĕс, океан çыранĕсем. Чăннипех, ытла та пуян, чипер Куба çут çанталăкĕ. Анчах пурăнма мар, курса çӳреме çеç.

Тĕттĕмленсен тин купене кĕтĕм. Унта тĕксĕм лампа çунать. Пассажирсем çывăраççĕ. Ирхине тумланса пит-куçа çурăм та каллех чӳрече патне пытăм. Поезд халĕ васкамасть, час-часах чарăнать. Ĕнтĕ эпĕ çитес хула та инçе мар. Авă унăн шурă çурчĕсем курăнчĕç. Тем çинчен хĕрсех калаçакан радио шăпланчĕ, унтан вагонра ачаш юрă чуна хускатса янраса кайрĕ.

Уçланкăри палан шап-шурă çурăлсан
Эпир сăмах татсаччĕ санпалан...

Манӑн юратнӑ юрӑ... Ҫамрӑк хӗр чӗринчи тунсӑха ӑнланса ӑна йӑпатакан, унпа пӗрле куҫҫулӗ юхтаракан тахҫанхи ҫепӗҫ тусӑм! Ҫуралса ӳснӗ тӑван вырӑнсенче чи малтан мана эсӗ кӗтсе илетӗн. Эсӗ каллех манпа. Тав сана, салам сана, юратнӑ юррӑм!

Поезд вокзал умӗпе шӑвать. Перрон ҫинче темӗн чухлӗ ҫын хӗвӗшет. Эпӗ куҫпа аннене шыратӑп. Авӑ вӑл хыпкаланса пырать. Хуллен кӑлтӑртатса иртекен вагон чӳречисем ҫине тинкерсе пӑхать, анчах темшӗн мана курмасть. Пит-куҫӑма кантӑк ҫумне перӗнтерсе ӑшӑмра эпӗ ӑна чӗнетӗп, тута ирӗксӗрех кулать, куҫсем шывланаҫҫӗ. Ытарайми тӑванӑм! Манӑн пӗртен-пӗр сывӑх ҫыннӑм! Турӑҫӑм! Мӗн тери тунсӑхласа ҫитнӗ иккен эпӗ! Мӗн тери хаклӑ маншӑн ҫак перрон тӑрӑх хыпкаланса утакан вӑрӑм ҫӳҫне ӗнси ҫине тирпейлӗн тураса пуҫтарнӑ кӑвак кӗпеллӗ хӗрарӑм. Япаласене вӑрт-варт ярса тытатӑп та тухмалли алӑк енневаскатӑп. Поезд чарӑннӑ-чарӑнман пусма ҫине ярса пусатӑп.

— Аннеҫӗм!

— Марина! Хӗрӗм!

Эпӗ аннене ыталаса илетӗп, чуптӑватӑп, куҫҫуль витӗр пӑлханса хаваслӑ куҫӗнчен тинкерсе пӑхатӑп. Пичӗ ҫинче вӗтӗ пӗркеленчӗксем хутшӑннӑ, сырӑ ҫӳҫӗ ҫамка хӗррипе кӑвакарнӑ. Апла пулин те анне чиперех-ха. Сӑнӗ килӗшӳллӗ, кӑвак куҫӗ пӗрре те ватӑлман, чӗрӗ. Кӗлетки-ҫурӑмӗ тӑпӑл-тӑпӑл.

— Ну, мӗнле? Сывах-и? Чиперех-и?

— Сывах... Лайӑхах... Ху мӗнле?

— Ӗнтӗ тӗпленсех килтӗн-и? Урӑх каймастӑн-и?

— Татӑлсах килтӗм, анне, аннеҫӗм...

Эпир автобуса кӗрсе ларатпӑр.

— Малашне ӑҫта ӗҫлес тетӗн ӗнтӗ? Кунталла, хамӑр еннелле, килме шутламастӑн-и?

— Пӗлместӗп-ха. Договор тӑрӑх мана унччен

ĕçленĕ вырăнта хваттер памалла... Тен, пĕрле кайăпăр?

— Çу-ук! — пуçне сулкалать анне. — Хама хам пурăнма пултарнă чух кунти вырăнсенчен ниçта та каймастăп. Ӳлĕмрен куç курĕ унта. Ан çиллен те, хăнăхрăм ĕнтĕ эпĕ пĕччен пурăнма. Миçе çул пĕччен, — анне йывăррăн сывласа ячĕ. — Ну, каласа пар, мĕнле унта, Кубăра?

— Киле çитсен иксĕмĕр сĕтел хушшине ларăпăр та, пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартатăп. Халĕ манăн сана курас килет, сан çине пăхас килет.

Анне пичĕ-куçĕ хаваслăн çуталчĕ.

— Пăх-ха эппин, кур, — кулса илчĕ вăл. — Ватăлтăм ĕнтĕ. Çӳç кăвакарчĕ. Чир-чĕр çулăхма тытăнчĕ. Вилĕм çывхарать.

— Маттур-ха эсĕ, — ачашшăн йăпшăнатăп эпĕ анне çумне. — Ан шутла ун çинчен халех, — вара калаçăва урăх енне пăратăп. — Ман юратнă кукăле пĕçертĕн-и?

Пупленĕ май эпĕ автобус чӳречинчен пăха-пăха илетĕп. Кунта, хула варринче, улшăну çук: çав çуртсемех, урам икĕ енĕпе ӳсекен йывăçсем, симĕс газонсем, чечек клумбисем те унччензи вырăнтах. Анчах хула хĕрринелле çӳллĕ çуртсем, çĕнĕ урамсем курăнчĕç. Пилĕк çул каялла пирĕн ялпа хула хушши тăвата çухрăмччĕ. Халĕ темиçе хутлă мăнаçлă çуртсем пĕчĕк йывăç пӳртсен çывăхнех пырса ларнă, кĕç-вĕç çĕре лапчăтса лартассăн туйăнать.

Автобус чарăнчĕ. Çакăнта пирĕн тухмалла. Аслă çулран пăрăнса ял урамĕпе утатпăр.

— Улшăнмастăн-ха эсĕ. Унччензи пекех йăрăс, утту та çăмăл. Вăтăр пиллĕкри çын темелле мар, — сăмах хушрĕ анне пынă май мана пуç тӳпинчен ура тупанĕ таранах сăнаса пăхса.

— Ватăлас килмест, анне, — шӳтлетĕп эпĕ.

— Качча кайма шутламарăн-и ĕнтĕ?

— Тин кам илтĕр мана?

Çапла шăкăлтаткаласа утатпăр урампа. Авă пирĕн кил, кивелсе çĕр çумне пусăраннă виçĕ чӳречеллĕ пӳрт, курăнчĕ. Ман пурнăçри чи телейлĕ, чи çутă кунсен ырă, ăшă сăпки. Кĕçех эпĕ картиш алăкне уçса яратăп — кивелсе тĕссĕрленнĕ, анчах тап-таса çуса тасатнă крыльца картлашкисем çине пусатăп. Çенĕк алăкĕ яланхи пекех хуллен чĕриклетсе уçăлать. Пӳртре таса, тирпейлĕ. Пиçнĕ апат-çимĕç шăрши сăмсана кăтăклать. Мана саламласа пур енчен те ачалăх кунĕсем çĕкленеççĕ...

Çавăн евĕр туйăмсемпе хавхаланса утаттăм, сасартăк... Чĕре картах турĕ. Хам та сисмерĕм, тăпах чарăнтăм. Хирĕç пыракан çӳллĕ арçын пире курсан вăрт каялла çаврăнчĕ те симĕс йывăçсем хушшипе урам тепĕр енне васкаса каçса кайрĕ. Эпĕ унăн хура шăрт сухалпа хупланнă пит-куçне асăрхаса юлма ĕлкĕртĕм. Пăлханнă туйăмпа хыçран тĕллесе пăхрăм: тĕссĕрленнĕ кивĕ тум, кăштах малалла тĕрĕннĕ кĕлетке-çурăм, канăççăр утăмсем...

— Кам пулчĕ ку?

— Палларăн вĕт. Ма ыйтатăн? — терĕ те анне пит-куçне кăмăлсăррăн турткаласа илчĕ. — Çавă. Эсĕ шутланă çынах. Çур çул ĕнтĕ кунта амăшĕ патĕнче пурăнать... Намăсне пĕтĕмпех çухатман тата, пăрăнса утрĕ.

Сасартăк капланса килнĕ туйăмсене уçса пама йывăр. Саша!.. Миçе çул курман эпĕ ăна! Миçе çул пĕр хыпар та илтмен. Анне хăйĕн çырăвĕсенче нихăçан та ун ятне асăнман. Эпĕ Çĕпĕрте пурăннă чух отпуска таврăнас умĕн систеретчĕ çеç: «Кӳршĕсем патне хăнасем килсе кайрĕç», «Çав вăхăталла хăнасем пулмалла...» Хăвах чухла хăçан килмеллине тенĕ пек. Эпĕ те нихçан та ыйтман ун çинчен... Акă тĕл пултăмăр.

Хама унчченхи пекех хаваслă тытма тăрăшрăм, сĕтел тулли апат-çимĕçе мухта-мухта çирĕм

пулин те, анне ман кӑмӑл улшӑннине асӑрхарӗ.

— Мӗн тӗксӗмлентӗн? Ывӑнтарчӗ-и инҫетри ҫул? Кан эппин, выртса ҫывӑр пӗр кана. Вырӑнӗ хатӗр, сарнӑ. Эпӗ пахчана тухам-ха. Ҫӗр улми купаласа пӗтерменччӗ.

— Анне, ӑҫта ӗҫлет вӑл халӗ? — тӳсеймерӗм, ыйтрӑм эпӗ.

— Кам?..

Тавҫӑрса илчӗ. Ман ҫине кӑн-н пӑхрӗ.

— Килсенех завода бухгалтера вырнаҫнӑччӗ. Икӗ уйӑх ӗҫлерӗ-и, ӗҫлемерӗ-и... Халӗ кунти универмагра грузчикре.

— Мӗн пулнӑ вара ӑна?

— Мӗн пулнӑ... мӗн пулнӑ... Э-э, — аллине ҫиллессӗн сулчӗ анне. — Сахал-и ун йышшисем хальхи саманара. Татюк инкӳ арӑмне айӑплать. Хӑй ачине хур тӑвас килмест пулӗ ҫав. Ара, пурнӑҫри ӑнӑҫсӑрлӑхсемшӗн урӑх ҫынна ӳпкелеме ҫӑмӑлтарах ӗнтӗ. Пур ҫавӑн пек йӑла Татюкӑн та. Те арӑмӗ айӑплӑ, те хӑех? Кам пӗлет вӗсене?.. Йӑлӑхтарчӗ итлесе. Килсе ларать те вӗҫӗмсӗр пӗр «юрӑ»...

Татюк инке пирки ҫапла калани тӗрӗсех-ха. Чӑнах та, ӑшне мӗнле шухӑш кӗрсе ларать, пирӗн кӳршӗ хӗрарӑмӗ ҫавӑн ҫинчен ҫеҫ калаҫать. Сӑмах йӗркине улӑштарас тесе ӑна урӑх енне пӑратӑн-ха. Ҫук, вӑл каллех ҫав вырӑнах ҫавӑрса пырать.

Пӗччен юлсан эпӗ ҫыру сӗтелӗ ҫинче выртакан хаҫатсене уҫкаласа лартӑм, унтан кӗнеке шкапӗнчен альбом кӑлартӑм та сӑн ӳкерчӗксене пӑхма тытӑнтӑм. Пичетленсе юлнӑ иртнӗ пурнӑҫ йӗрӗсем. Акӑ аттепе анне ҫыраннӑ кун. Иккӗшӗ те ҫамрӑк, чипер. Кун ҫинче улттӑмӗш класс ачисем. Ҫак ҫинҫе ҫивӗтлӗ, куҫӗсене чарса пӑхакан хӗр ача — эпӗ. Малти ретре кӑтра ҫӳҫлӗ Саша шӑлне йӗрсе ларать. Мӗн чухлӗ тарӑхтарнӑ пулӗ ҫак ашкӑнчӑк мана ача чух! Урама тухаттӑм кӑна, тӳрех витлеме тытӑнатчӗ:

Марине — пукане,
Чупса аннă çыр хĕрне,
Шыва янă витрине.

Вĕçĕмсĕр çапла. Сăввисем ун пĕр майлă, анчах пурпĕр тĕрлĕ.

Марине — пукане
Ухса кайнă хыр тăрне,
Усса ларать урине.

Эпĕ вара: «Чикан. Сантăр чикан. Чикан урапи çинчен ӳксе юлнăскер», — тенисĕр пуçне нимĕн те шухăшласа тупаймастăм ăна витлеме. Йĕрес килетчĕ тепĕр чух тарăхнипе. Патак е çатрака илсе мĕн чухлĕ хăваланă пулĕ эпĕ çав чарусăр хыççăн. Вăл пур ахăлтатать кăна. Тепĕр кун каллех çĕнĕ сăвă унăн: «Хĕрлĕ çӳçлĕ Марине сиксе тухрĕ çул çине...»

Ывăлĕ кăна мар, амăшĕ те пайтах вĕчĕрхентеретчĕ чунăма. Татюк инке, хĕсĕк куçлă, кĕре сăнлă лутака хĕрарăм, шутсăр ачапчана çĕтĕлтерме юрататчĕ. Мана мĕн чухлĕ вăрçтарнă пулĕ вăл.

— Эх, юрататăп-çке çак хĕр ачана. Çитĕнсен хам кин тăвас тетĕп-ха, ывăл валли качча илес тетĕп...

— Пит кирлĕ пулĕ мана сан чикан ывăлу, — мăкăртататăп эпĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ çине çиллессĕн пăхса.

Итлесе тăракансем ахăлтатса кулаççĕ.

Чикан тенĕрен... Эпĕ шухăшласа тупнă сăмах мар-ха вăл. Ялти хĕрарăмсем шӳтлесе илетчĕç кун пирки тепĕр чух:

— Кама хывнă çак Саша? Чикан урапи çинчен ӳксе юлнă пулĕ вăл? — тетчĕç.

Сăнĕ-питĕнчен, чăнах та, чикан евĕрлĕрехчĕ пирĕн кӳршĕ ачи. Кĕре сăнлă вăл, хуп-хура пысăк куçлă, çӳçĕ кăтра.

Акă татах Саша карточки. Куна вăл вăтам шкул пĕтерсен ӳкерттерчĕ, çав кунах мана парнелерĕ.

Çӳллĕ пӳллĕ, пысăк куçлă илемлĕ каччă. Кăтра çӳçĕн пĕр унки сарлака çамки çине усăннă. Пичĕ-куçĕ хаваслă, пуçне мăн кăмăллăн çĕкленĕ. Çапла, шăп çак ӳкерчĕк çинчи пекехчĕ вăл çав çулсенче. Саша... Алексаша... Сантăр чикан... Нивушлĕ паçăр курнă хура шăрт сухаллă, тĕссĕрленнĕ шалпар тум тăхăннă этем те, эсĕ те пĕр çынах? Мĕн пулнă сана? Мĕнле усал вăй çапса хуçрĕ вăй-хална? Йывăрлăхсене çĕнтерме пултараймарăн-и? Е, аннӳ калашле, чăннипех çемьери тĕрĕсмарлăха тӳсеймерĕн-и? Тен, никам та айăплă мар. Хăвах... Ху ирĕкӳпех. Туссем, юлташсем, ĕçлĕ çынсем, ресторан, пикниксем...

Пӳртум алăкĕ чĕриклетнине илтсе алăри сăн ӳкерчĕке каялла альбома хуратăп.

— Марина! Курманни миçе çул?! Сывах-и, ачам! Мĕнле çитрĕн? Чиперех-и? — хаваслăн йăлкăшса утрĕ мана хирĕç пӳрте кĕнĕ лутака самăр хĕрарăм. — Аннӳ çывăрать пулĕ тенĕрен ăнсăртран вăратас марччĕ тесе асăрханса кĕретĕп. Тяпка патне килтĕм-ха эпĕ. Çакăнта тĕпелте çакăнса тăраканччĕ. Акă пур. Хамăн хуçăлчĕ те, никак тупса илейместĕп-çке.

Саша амăшĕ, Татюк инке, аннепе пĕр çултах. Анчах пăхма кӳршĕ хĕрарăмĕ чылай ватă пек курăнать. Юлашки çулсенче хытă улшăннă вăл. Самăрланнă пирки пичĕ лапшакаланнă, иккĕмĕш янахĕ усăнса тăрать. Тумĕ те лăкăш-лакăш, тĕссĕрленнĕ тутăрĕ айне пытарнă çӳçне те тураман пулас.

Кӳршĕллĕ пурăннăран-ши е шăписем пĕр евĕрлĕ пулнăран пирĕн аннесем, тĕрлĕ çынсем пулин те, килĕштерсе пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те тăлăх арăм, иккĕшĕ те çамрăклах упăшкасăр юлнă. Иккĕшĕн те пĕрер ача. Аттене эпĕ кăшт çеç астăватăп. Вăл мотоциклпа çапăнса вилнĕ. Саша ашшĕ ывăлĕ çуралсан икĕ уйăхранах урăх хĕрарăм патне кайнă тетчĕç.

Сăмах йĕркипе сывлăх, хальхи пурнăç çинчен кăштах пуплекелесе ларнă хыççăн кӳршĕ хĕрарăмĕ хаш сывласа ячĕ те калаçăва урăх енне пăрчĕ.

— Апла куртăн ман катемпи ывăла? — ыйтрĕ вăл шурăхнă тутине кулам пекки туса. — Аха, аннӳ каларĕ хирĕç пулчĕ тесе... Яланхи пекех, ĕçе тухса кайрĕ ку. Пăхатăп — кĕç каялла çаврăнса кĕчĕ. Тĕкĕр умне ларчĕ те хырăнма тытăнчĕ, кĕпине улăштарса тăхăнчĕ. «Мĕн пулнă-ши?» — тесе шутлатăп. Эсĕ килессе пĕлнĕ-ха вăл, каланăччĕ эпĕ ăна. Çапла куçа-куçăнах тĕл пуласса шутламан пулĕ çав. Эх, тур-тур, шеремет ачи! Мĕншĕн çапла хыпкаланса каялла кĕнине пĕлсен ларсах макăртăм, — Татюк инке нăшăклатса илчĕ те шывланнă куçне алă тупанĕпе шăлса типĕтрĕ. — Çапла, пĕтрĕ Алексаша, — сăмахне шутарчĕ вăл каллех йывăррăн сывласа ярса. — Мĕн тери лайăх ачаччĕ. Пĕвĕпе те, сăнĕ-пичĕпе те, ăсĕ-тăнĕпе те чуна савăнтаратчĕ кăна. Мĕн чухлĕ ырă сăмах илтмен пулĕ. Учительсем епле юрататчĕç... Арăмĕ, — кӳршĕ хĕрарăм пичĕ-куçĕ те, сасси те самантрах сивĕнчĕç, — çавах çирĕ ман ывăл телейне. Кунта килсен кураттăм та, хăйне шутсăр мăн кăмăллă тытатчĕ çав. Мускавра ӳснĕ-çке вăл, пирĕн пек ялта мар. Упăшкишĕн ырă сăмах çукчĕ, яланах хăр-хар. Тарçă вырăнне çеç хуратчĕ Алексашăна.

— Уйрăлнă-и вара вĕсем?

— Пĕлместĕп çав. Ыйтсан сан мĕн ĕç пур тет çеç. Малтан, вĕреннĕ чух, килкелерĕç-ха пĕрлех. Ачине курасчĕ сан, — Татюк инке пичĕ-куçĕ йăлтăрах çуталчĕ, шурăхса пĕркеленнĕ тутине ачаш кулă хускатрĕ. — Сăнĕ-пичĕ, калаçни — каснă лартнă Алексашăн... Ну, унтан пĕччен килме пуçларĕ ман ывăл. Каярахпа çырусем çеç çыркаласа тăчĕ, юлашкинчен пачах шăпланчĕ. Хальхи саманара ман евĕр ывăлĕ-хĕрĕ маннă ашшĕ-амăшĕ пайтах та, ытлашши кӳренме те, хуйхăрма та пĕлмерĕм пулĕ.

Пĕр-пĕринпе йĕркеллĕ, лайăх пурăнччăр çеç, хальлĕхе вăй пур, пĕччен те аптрамастăп тесе йăпатрăм чунăма. Укçа та час-часах яркаласа тăтăм. Кăçал вара — шартлама хĕл ун чух — кĕтмен çĕртен килчĕ кĕчĕ. Пăхрăм та — чĕрем сӳ-ӳ туса кайрĕ. Тумĕ — çӳхе кивĕ пальто, ботинка кĕллисем чалăшса кайнă. Калпакки тата... Эпĕ те тăхăнма вăтанатăп халĕ унашкал япаласене.

Калать Татюк инке, калать. Çав хавассăр калавра маншăн çĕнни нимĕн те çук. Ĕçке ярăннă çынсем пурте пĕр евĕр. Пĕр кăмăл кăна вĕсен, пĕртен-пĕр тĕллев. Çапах эпĕ тимлĕн итленĕ пек тăватăп. Уçтăр ĕнтĕ чунне, лăплантартăр кăшт та пулин. Амăшĕ-çке вăл, амăшĕ.

— Ăсĕ-тăнĕ пурпĕрех çивĕч хăйĕн. Нумаях пулмасть пĕр арçынна диссертаци çырма пулăшрĕ, — тăсать сăмахне Саша амăшĕ. — Çирĕп алăпа тытма пултаракан лайăх, йĕркеллĕ хĕрарăм юнашар пулсан халĕ те çĕкленетчĕ вăл, — кӳршĕ хĕрарăмĕн тĕссĕрленнĕ салху куçĕсем ман çине сăнаса пăхаççĕ. — Вăт çапла айĕн-çийĕн пăтранса кайрĕ пирĕн пурнăç, — хаш сывларĕ Татюк инке. Унтан темшĕн пӳрт алăкĕ çине çаврăнса пăхрĕ. Тăчĕ те пуканне çĕклесе ман çывăхах пырса ларчĕ. Вара халат кĕсйинчен тăваткалласа чĕркенĕ хаçат татăкĕ туртса кăларчĕ.

— Пĕр япала кăтартас тетĕп сана, — йывăр ĕçе пула шыçăнса илемсĕрленнĕ алăсем хаçат татăкне вăр-вар саркаларĕç. — Паллатăн-и çакна?

Татюк инке мана сăн ӳкерчĕк тăсса пачĕ. Ун çинче çамрăк чипер хĕр пĕр шухăшсăр, телейлĕн кулкаласа ларать. Тепĕр енне «Сашăна, юратнă тусăма, ĕмĕр асăнмалăх. Марина» тесе çырнă. Чĕре пĕрре ăшăнса, тепре ыратса кайрĕ. «Ĕмĕр асăнмалăх»... Эх, айван çамрăклăх!

— Пар мана ку карточкăна, Татюк инке, — ыйтрăм эпĕ сăн ӳкерчĕке алăра тытса.

— Çук! Çук! — çавăнтах хыпăнса ўкрĕ хĕрарăм. Чăннипех памасран шикленчĕ-ши, карт туртăнса илчĕ те каллех хаçатпа чĕркесе кĕсйине чикрĕ. — Чăматанĕнче чи кирлĕ хутсемпе пĕрле упрать вăл ăна. Ăçта тесе ыйтсан мĕн калас?

Анне кĕчĕ.

— Купаласа пĕтертĕн те-и çĕр улмине? — ыйтрĕ кўршĕ хĕрарăмĕ ун енне пуçне пăрса. — Эпĕ самантлăха килтĕм те тем чухлех лартăм, — вăл йывăррăн çĕкленчĕ. — Кукăль пĕçеретĕп. Çиме пырăр вара. Чăнах ара. Ырă сăмахшăн çеç чĕнет тесе ан шухăшлăр.

— Выртса канма памарĕ апла. Каларăм, хальлĕхе тăхта-ха, ан кĕр терĕм, — кăмăлсăррăн мăкăртатса илчĕ анне тантăшĕ тухса кайсан. — Тупнă сăлтав — тяпка кирлĕ ăна çак самантра... Ывăлне мăшăр тупса парасшăн вĕткеленсе çўрет те-ха. Темле çав. Йĕркеллĕ хĕрарăм мĕн тесе килтĕр çавăн пек çынна. Ун евĕр упăшкапа пурăниччен пĕччен пурăнни вунă хут лайăхрах...

— Шел Сашăна, — сисмерĕм те хаш сывларăм эпĕ. Анне хулпуççине хускатса илчĕ.

— Этемĕн этем пек пулмалла. Никам та çăвартан тытса яман ăна. Инкекне хăй ирĕкĕпе тупнă. Курса мĕн пуласса, пĕлсе.

— Анне, эсĕ вуламарăн-и ĕнерхи хаçатра? Статистика авă мĕн калать: пĕчĕккĕн, «культурăллă» ĕçме пĕлекенсенчен те пилĕк çынран пĕри алкоголик пулать тесе çырнă.

— Эрех мĕн патне илсе çитерессе чухламан вăл тесшĕн-и эсĕ?

(Анне пĕрре те Сашăна ятран асăнмасть.)

— Кам пĕлет çав, — терĕм эпĕ шухăша кайса. — Ăслă, пултаруллă çын. Университета хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ. Кĕвĕçекенсем те, ура хуракансем те пулнă пулĕ. Тўсеймен...

— Аха... аха... Çапла калаççĕ халĕ. Йывăр пур-

năça пула ĕçeççĕ теççĕ. Эсĕ те çавсен юррине юрлатăн апла. Пурнăç мана мĕн чухлĕ хуçма тăнă пулĕ. Э-э, аса илсен... Хуйхă-суйхă пулсан та эрехре çăмăллăх шыраман эпĕ, хаваслă самантсене те çав йӳçĕ шĕвекпе хутăштарса пайламан. Эсĕ тата... Сан пурнăçу...

Çапла, çирĕп шухăш-кăмăллă çын ман анне. Хăйне хытă тытать, хавшак чунлă çынсене, пуринчен ытла ĕçкĕпе иртĕхекенсене, пачах килĕштермест. Çакна ачаранах сăнаса çитĕннĕрен-ши, темле йывăр пулсан та эпĕ хам та, чăнахах, эрехре нихăçан та йăпану шыраман.

* * *

Мĕн пулчĕ мана? Ют çĕршывра пурăннă чух мĕн тери кĕтеттĕм эпĕ çак кунсене. Çуралса ӳснĕ тăван вырăнсене аса илсе епле тунсăхлаттăм. Килтĕм, анчах ĕмĕтленнĕ канлĕх каллех тарса пытанчĕ. Ăш вăркать. Хăш-пĕр чух хам валли вырăн тупаймасăр сехечĕ-сехечĕпе пĕр тĕлсĕр сулланса çӳретĕп. Тепĕр тесен мĕне кура хампа хам пытанмалла вылятăп-ха эпĕ? Çапла, тĕлĕнмелле пулин те, çавă... Саша... Каллех çав пăтратать чунăма. Ун çинчен шухăш каймасть... Аннепе чугун çул станцинчен килнĕ çав ир мана хирĕç тирпейлĕ тум тăхăннă, питне тап-таса хырса якатнă, хавас сăнпитлĕ йăрăс арçын утса пынă пулсан чĕрем çапла хускалмастчĕ-и тен. Эпĕ унăн пысăк куçĕнчен хăюллăн пăхма, унпа ачаран пĕрле выляса ӳснĕ çын пек кăмăллăн калаçса унтан лăпкăн çавăрăнса утма вăй-хал çитернĕ пулăттăм. Пулни — иртнĕ, иртнине маннă. Манман пулсан тата мĕне кирлĕ тахçанхине хускатма? Манăн хамăн пурнăç, унăн хăйĕн... Анчах халĕ çав хура шăрт сухалпа витĕннĕ пит-куçа, кивелсе тĕссĕрленнĕ шалпăркка тумлă, кукăрăлма тытăннă кĕлетке-çурăма аса илетĕп те, чĕре ыратма тытăнать. Ĕнтĕ ултă кун эпĕ тăван

ялта. Саша иртсе çӳренине куратăп. Çапах хирĕç пулса пĕрне-пĕри сăмах хушман, сывлăх сунман... Тĕл пуласшăн мар вăл. Уççăнах пăрăнать. Ăнсăртран урамра курсан та хăвăртрах аяккалла çаврăнса утать. Паян та акă картиш алăкне уçрăм çеç, пирĕн тĕлтен иртекенскер пуçне вĕлт пăрчĕ те кури куçа курмăш туса васкасах килне кĕрсе кайрĕ. Çакна курса пушшех чун ыратать. «Пулăшас пулать ăна çав усал сереперен çăлăнма», — хистет мана канăçсăр шухăш. Анчах мĕнле?.. Мĕнле майпа?

Эпĕ вăл ĕçрен таврăнасса кĕтетĕп. Авă килет. Пытанмалла вылякан ача евĕр ăнсăртран курасран сыхланса эпĕ йăпăр-япăр вĕсен пӳрчĕ умĕнчи тенкел çине пырса ларатăп. Кунта, йывăç тĕмĕсем хыçĕнче, вăл мана килĕ енне пăрăнмасăр асăрхамасть.

— Саша, сывă-и?

— А-а... Марина... Витальевна, — кӳршĕ ман çине вĕлт пăхса илчĕ те, куçĕсем çавăнтах пăрăнчĕç. — Сире анне кирлĕ пулĕ-ха. Мĕн, килте çук-им?.. Ман пата?.. Э-э, юрать... Питĕ лайăх... питĕ лайăх... Кунта шăрăх. Пӳрте кĕрер, — мăкăртатрĕ вăл çенĕк алăкне яри уçса ярса. Унăн ĕçре хуралнă аллисем пĕр тĕлсĕр хыпкаланчĕç, илемне çухатнă куçĕсем ман куçран тарса унталла-кунталла вылянчĕç.

— Эсир кĕрĕр-ха... кĕрĕр пӳрте. Эпĕ халех... Халех килетĕп.

Урай варринелле иртсе эпĕ йĕри-тавра пăхса илетĕп. Миçе çул Татюк инке пӳртĕнче пулманни. Тахçанхи кивĕ диван, саралса кайнă, икĕ тĕлтен çурăлнă тĕкĕр, тĕссĕрленнĕ сĕтел-пукан. Сăрĕ хăйпăнма тытăннă тимĕр кравать. Ун çине витнĕ утиял та тахçан илнĕскер пулас. Пĕр çĕнĕ япала та курăнмасть. Ĕçлесе тупнă пур-çук укçине Татюк инке пĕтĕмпех ывăлĕ патне ярса тăнă пулĕ çавă...

Саша кĕменнине кура эпĕ каялла картишне

тухрăм, пахча алăкне уçса пăхрăм, вара пуçа усса килелле утрăм.

Ман ăш çуннине анне те сисрĕ.

— Мĕн пулнă сана? — ыйтрĕ вăл куçран тинкерсе пăхса. — Нивушлĕ халĕ те юрататăн çав этем кĕлеткине? Мантăн апла хăвна хур тунине?

— Хĕрхенетĕп, анне. Пĕтет вĕт çын...

— Пĕтнĕ ĕнтĕ. Этем йĕркинчен тухнă. Юратьха амăшĕ пур. Тăрантарать, — терĕ анне кăмăлсăррăн. — Хăй юсанма шутламасть пулсан мĕн тăвăн? Амăшĕ йĕре-йĕрех тархаслать те сипленме выртма. Ывăлĕ яхăнне те ямасть çав. Илтесшĕн те мар.

— Авă епле! Темшĕн ĕнтĕ?

— Ĕненмест пулĕ-ши сываласса. Тен, килĕшет çакăн пек пурнăç... Тен, чăннипех, пурăнас килмест. Амăшне çаплах калать тет. Выртнă иккен вăл Мускавра клиникăра. Усси пулман имĕш, — анне тăчĕ. — Пăчă паян. Ăш хыпать, — терĕ те тĕпелелле утрĕ.

Çакна илтнĕ хыççăн ман чĕре нăйкăшсах ыратма тытăнчĕ. «Пурăнас килмест...», «вилни лайăхрах...» Нивушлĕ Саша чăннипех çапла шутлать? Мĕн тери юрататчĕ вăл пурнăçа! Пуласлăхĕ çине мĕнле çутă ĕмĕтпе пăхатчĕ. Вулама юрататчĕ, тĕрлĕ пĕлӳшĕн çунатчĕ. Çук, çук! Килĕшместĕп аннепе. Пулма пултараймасть. Пурнăç вăл пуриншĕн те хаклă, пуриншĕн те илĕртӳллĕ. Хавшаса çитнĕ ватă çынсем те вилĕмрен хăраççĕ пулсан Саша вăтăр пиллĕкре кăна-ха. «Пулăшас пулать ăна», — каллех хистет ăшра канăçсăр шухăш. Анчах мĕн тумалла-ши? Мĕн тумалла?

Çав кунсенчен пĕринче хаçатра экстрасенс çинчен çырнине вуларăм. Шухăшĕпе вăл темиçе пин çухрăмра пурăнакан çынна шыраса тупса ăна хăй калас тенине пĕлтерме пултарнă.

Хыпарĕ, паллах, çĕнĕ мар. Çакнашкал тĕлĕнтер-

мĕшсем пур вăхăтра та тĕл пулкаланă çын пурнă-çĕнче. Халăх хушшинче çавăн евĕр тĕлĕнтермĕш-сем çинчен яланах сăмах-юмах çӳренĕ. Анчах пире пурпĕр: «Ун пек пулма пултараймасть, пустуй халап вăл, тĕшмĕш», — тесе ĕнентернĕ. Çапах сайра хутра та пулин, ăнсăртран тенĕ пек, пичетлекеленĕ ун пек ăнланмалла мар япаласем çинчен. Тĕслĕхрен, Германире пурăнакан Ломоносова ашшĕ тĕлĕкре курăнса хăй виллине хăш утрав çинче, мĕнле вырăнта шырамалли çинчен пĕлтернĕ...

Эпĕ ирĕксĕрех шухăша кайрăм. Ученăй ашшĕ экстрасенс пулман (ун пеккисене ĕлĕк юмăç е асамçă тенĕ-çке), çапах хăй калассине ывăлĕ патне çитерме пултарнă... Тен, манăн та пур çавăн евĕр асамлă вăй? Мĕнле пĕлмелле-ши ăна? Тен, питĕ хытă тăрăшсан эпĕ те пултарăп?

Сĕтел хушшинче анне пикенсех çыру çырать. Эпĕ ултă-çичĕ утăмра чарăнса тăратăп та куçа ун çине тĕллетĕп. «Атте çинчен тĕплĕнрех каласа парха. Пĕлес килет», — тетĕп. Паллах, сасăпа мар... Ăшăмра.

— Мĕн? — пуçне çĕклерĕ анне. — Эсĕ нимĕн те каламарăн-и? Э-э, туйăнчĕ пулас...

Вара эпĕ шут тытрăм. Темиçе кун тăрăшсах хатĕрлентĕм, экстрасенсем çинчен кĕнеке тупса вуларăм. Ку ман шухăша пушшех çирĕплетрĕ.

Каç пулчĕ. Урамра шăв-шав лăпланчĕ. Эпĕ хамăн пĕчĕк пӳлĕме кĕтĕм те çутă çутмасăр пукан çине меллĕн вырнаçса лартăм. Саша çинчен, пĕр ун çинчен кăна шухăшлама тытăнтăм, унтан мĕнпур вăйхала пухса ăшăмра ăна хам пата чĕнсе илтĕм те ума тăратрăм.

Вăт çапла. Çакна кам та пулин вулас пулсан, тен, кулĕ манран. Çапах ун пек çын тупăнмĕ тетĕп эпĕ, мĕншĕн тесен ку ман пурнăçăн пайĕ, ăна эпĕ хам валли çеç çыратăп.

Акă Саша ман умра пĕр ура çинчен теприн

çине пускаласа тăрать. Пуçне уснă, куçне айăплăн аяккалла пăрнă.

— Итле, Саша. Тăнла каланине, — тетĕп эпĕ ăшшăн, сассăма ун чĕри патне çитерме тăрăшса. — Ахалех тарса çӳретĕн манран. Эпĕ сивлеместĕп сана. Эсĕ инкеке лекнĕшĕн савăнмастăп, çав кирлĕ теместĕп. Тахçанах каçарнă. Çаврăнса пăх-ха каялла, иртнĕ çулсем çине. Унта пирĕн çамрăклăх, пирĕн телей юлнă... Эпĕ сана халĕ çав вăхăтри пĕр хĕр юратăвĕ çинчен каласа парасшăн. Итле, Саша. Тимлĕн итле...

Вун сакăр çул каялла манпа пĕр класра çӳллĕ пӳллĕ, хура куçлă каччă вĕренчĕ. Сан пекех Саша ятлă. Чипер, хавас кăмăллă. Аслă классенче вĕренекен хĕр ачасенчен нумайăшĕ куç хыватчĕç ун çине. Пуринчен ытла кăтра çӳçлĕ, кăвак куçлă Лиля уççăнах Саша тавра явăнать. Пĕчĕк çырусем çырса пĕр вăтанмасăр шкул ачисем умĕнчех ăна пырапыра тыттарать. Кĕçех вĕсене каçсенче пĕрле çӳренине, кинора юнашар ларнине курни çинчен шкулта хĕр ачасем пăшăлтатма пуçларĕç. Эпĕ çав калаçусене хутшăнмастăп, çаврăнса утатăп кăна. Пулин... Çӳреччĕр, ларччăр... Мана мĕн ĕç? Эпĕ интересленместĕп те, халапламастăп та кун пирки. Хăш-пĕр чух Саша ман çывăхра çӳренине, тем пĕлтерес пек ман çине пăха-пăха илнине те туятăп. Анчах куçăмăрсем тĕл пулсан пуçа вăрт аяккалла пăратăп çеç.

«Сан Лиля пур. Унпа пупле», — темшĕн-çке çилленсе мăкăртататăп хам ăшра.

— Мемме вăл, каччă мар, — илтрĕм эпĕ пĕррехинче çав çăмăлттай хĕр çывăх тантăшĕпе калаçнине. — Кирлĕ мар мана ун йышшисем.

Ятне асăнмарĕ пулин те, калаçăвĕ кам çинчен пынине эпĕ тӳрех тавçăрса илтĕм. Мемме... Лайăх мар сăмах. Анчах мĕне пĕлтерет-ши вăл? Шухăшларăм-шухăшларăм — тупсăмне тупаймарăм.

Кӳреннӗ пек те пултӑм ман кӳршӗ ҫинчен ҫапла хисеплемесӗр калаҫнӑшӑн. Чӑнах та, мӗншӗн мемме пултӑр вӑл? Шкулта чи лайӑх вӗренекенсен шутӗнче. Класран класа «пиллӗксемпе» ҫеҫ куҫать. Математикӑпа, физикӑпа ирттерекен олимпиадӑсенче ялан малти вырӑна тухать. Мӑнкӑмӑлланса, мухтанса ҫӳремест, ыйтсан пулӑшать, ӑнлантарать. Юлташӗсем те, учительсем те хисеплеҫҫӗ ӑна, вӗренӳре пултарулӑхӗпе тӗлӗнтерекен ача теҫҫӗ. «Каччи хӑй килӗштермен ӑна, йӑкӑл-якӑла. Ҫавӑнпа тиркешнӗ пек тӑвать ӗнтӗ», — шухӑшларӑм эпӗ ҫавӑн чух Лиля пирки. Чӗрере вара темле савӑк туйӑм хускалчӗ.

Саша амӑшӗ, Татюк инке, пирӗн пата пыма юрататать. Калаҫӑвӗ вара ялан ывӑлӗ ҫинчен.

— Вӗҫӗмсӗр кӗнекесемпе аппаланать. Шкулта вӗренмеллисене вулани ҫитмест, библиотекӑран ҫӗнӗ журналсем илсе килет. Пӗрмай тӗрлӗ кӑткӑс задачӑсем шутласа пуҫне ҫӗмӗрсе ларать, — тет вӑл сайра куҫ харшине кӑмӑлсӑррӑн хускаткаласа. — Урама выляма та вӑрҫа-вӑрҫа хуса ярatӑп вӗт ӑна. Темле ача пулчӗ вӑл. Кӗҫех вун ҫиччӗ тултарать ӗнтӗ. Хӗр шухӑшӗ те пур унӑн, те ҫук.

Пӗлетӗп эпӗ, сассинченех паллӑ, савӑнать Татюк инке ывӑлӗ ҫапла ӑслӑ ӳснӗшӗн, шавлӑ урамалла мар, ытларах кӗнеке-журнал енне туртӑннӑшӑн. Аннепе вӑл ҫавӑн евӗр сӑмах ваклакаласа ларни пӑшӑрханни мар, мухтанни кӑна. Ара, сӑлтавӗ пур ӗнтӗ мухтанма. Анне те хисеплет Сашӑна ҫакӑншӑн, эпӗ те... Ну... Мана та вӑл мӗнпур чун хавалӗпе пӗлӳ енне туртӑнни килӗшет. Ӑмсанатӑп та пулӗ кӑштах. Хам вара, тӳррипе калатӑп, лайӑх вӗренесшӗн, малтисен ретӗнче пуласшӑн ҫунмастӑп. Хӑш-пӗр предметсем, калӑпӑр, математика, физика, хими пачах кӑмӑла каймаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсене тӗплӗ пӗлесшӗн тӑрӑшмастӑп та.

— Марина, эсӗ пӗлетӗн-и? Хӗр пур-и Алек-

сашăн? (Татюк инке ывăлне яланах çапла чĕнет.) Çӳрет-и вăл кампа та пулин? — кĕтмен çĕртен ыйтать кӳршĕ хĕрарăмĕ пуçне ман енне пăрса. Унăн хĕсĕк куçĕсем ман çине уççăнах сăнаса пăхаççĕ. Темшĕн-çке пит-куç хĕрелнине туйса эпĕ пуçа çеç сулкаласа илетĕп. Çук, илтмен Лиля хыççăн Саша урăх хĕрпе çӳрет тенине.

Ĕнтĕ мана та каччăсем асăрхама пуçларĕç — шкулта та, ялта та, хулара та. Çапла, эпĕ те кĕçех вун çиччĕ тултаратăп.

Пĕррехинче (кунне те лайăх астăватăп), февралĕн çирĕм тăваттăмĕшĕнче, юлашки урока ларас умĕн Саша манран физика кĕнеки ыйтрĕ. «Эпĕ илсе килмерĕм. Вăхăтлăха пар-ха. Пăхмалли пур», — терĕ. Класран тухнă чух тыттарчĕ каялла хайхи кĕнекене. Уроксене хатĕрленме ларсан уçрăм та... Çурмаран хуçлатнă шурă тетрадь листи выртать. Илтĕм, саркаларăм. «Марине пикене Сантăр чикан саламлать. Вăл ăна виçмине кинона пыма ыйтать», — тесе çырнă хайхи хут татăкĕ çине. Эпĕ кулса ятăм. Пĕрре вуласа тухрăм, тепре, тата тепре. «Марине пикене... Чикан Сантăр кинона пыма ыйтать...» Билечĕ те пур. Ман чĕрере ылтăн кайăк вăранчĕ. Ылтăн турат çине ларчĕ те тытăнчĕ юрă шăрантарма. Эх, сиккелет, эх, ташлать. Урок шухăшĕ-и халĕ?! Тăтăм та тĕкĕр умне пытăм. Ман çине пăхакан хĕрлĕ çӳçлĕ, калама çук савăк питкуçлă хĕре пӳрнепе юнаса илтĕм, кук тĕрриллĕ сăмсинчен кăмăлсăррăн тĕртрĕм. Унтан çири кивĕ халата хывса пăрахрăм та шкапра мĕнле тум пур — хамăнне те, анненне те — тăхăна-тăхăна каллех тĕкĕр умĕнче çавăрăнкалама пуçларăм. Хам эпĕ чухăн хĕр. Чуна савăнтаракан хитре тум çук тесен те юрать. Аннен пур-ха илемлĕ кĕпесем, анчах мана юрăхлă мар — кĕскерех, шалпартарах. «Ну, мĕнле, сан шутупа, килĕшет-и?» — ыйтатăп эпĕ тĕкĕрти хĕртен тума улăштара-улăштара тăхăннă

май. Вăл е кăмăллăн пуçне сулкалать, е уççăнах сивлесе пит-куçне пăркала-пăркала илет.

Тепĕр кун шкула кайсан эпир Сашăпа шăп класс алăкĕ патĕнче тĕл пултăмăр. Вăл тухать, эпĕ кĕретĕп. Ман çине чăр пăхрĕ те йăл кулчĕ. Пит-куçăма вут-çулăмĕ пĕçертсе илчĕ тейĕн. Пуçа чикрĕм те часрах класа кĕме васкарăм. Саша манран виçĕ парта урлă малта ларать. Сисетĕп — хайхи йăлт та йăлт çавăрăнса пăхать. Эх, куçа илмĕттĕм ун çинчен, анчах тӳсетĕп, юри курмăш пулатăп.

Акă çитрĕ хайхи кĕтнĕ кун — февралĕн çирĕм улттăмĕшĕ. Сехет йĕппи улттă енне сулăнсан канăçа çухатрăм. Çапах хама лăплантарма тăрăшатăпха. Каччăсемпе тахçанах çӳреме пуçланă Лиля каланине асрах тытатăп. «Хĕрĕн тĕлпулăва кайма васкамалла мар. Йĕкĕт кĕттĕр, хумхантăр, иккĕлентĕр, тарăхтăр. Апла вăл ытларах юратать, ытларах хаклать», — вĕрентет вăл пире.

Ах, ку сехет йĕпписене! Ытла та ерипен шăваççĕ. Тата хĕрĕх минут кĕтес пулать... Вăтăр пиллĕк... Çур сехет... Чăтăма çухатрăм. Тумлантăм та тухрăм урама. Кино клубра кăтартаççĕ. Унта çитме пилĕк-ултă минут çеç утмалла. Авă вăл, икĕ хутлă шĕвĕр тăрăллă чул çурт, аякранах курăнса ларать. Анчах халех епле кайса тăрас-ха унта? Каччă пырсан эпĕ сана паçăрах кĕтетĕп темелле-и вара? Тепĕр урамалла пăрăнатăп. Çӳретĕп каллĕ-маллĕ уткаласа. Улттă çитесси пилĕк минут юлсан васкамасăр çитсе тăтăм хайхи клуб патне. Пăхатăп — Саша çук. Пуçа унталла-кунталла пăркалатăп — ниçта та курăнмасть. Нивушлĕ мансăрах кĕрсе ларчĕ? Тутана тăсрăм. Ну, курах эппин пĕччен. Çавăрăнса утас тенĕччĕ, тахăшĕ хулпуççинчен кăлт тĕртрĕ. Саша тăрать.

— Мĕн кӳршĕ урамра каллĕ-маллĕ уткаларăн çак эсĕ? Тем çухатмарăн пулĕ-çке? — тесе ыйтать. Куçĕсенче хăйĕн чее кулă сиккелет. Пĕтĕмпех курнă

иккен вăл: эпĕ килтен тухса кӳршĕ урама пăранни-не те, вăхăта хăваласа каллĕ-маллĕ уткаласа çӳре-нине те... Питĕ аванмарлантăм çавăн чух. Пуçпа шухăшламасăр çапла васкаса тухнăшăн çиллентĕм, ăшăмра вăрçрăм хама. Ларма пĕлмен Лариван сикнĕ тăнă, çупкă çинĕ тенĕ пекех пулчĕ ку. Сашăна та ӳпкелесе илтĕм. Тупăннă шпион... Мĕн тесе ман хыççăн çапла йĕрлемелле унăн?.. Ну, мирлешрĕмĕр. Кĕрсе лартăмăр зала. Çутă сӳнчĕ. Кино пуçланчĕ. «Аларан тыттăр кăна, тăратăп та тухса каятăп, — шухăшлатăп хам. — Эпĕ Лиля мар. Çакна малтанах пĕлтĕр». Тухса кайма сăлтавĕ пулмарĕ, чиперех кур-са пĕтертĕмĕр.

Каярахпа тата та пултăмăр кинора, каçсенче урам-ра тĕл пулкаларăмăр. Анчах юрату çинчен сăмах хус-катман. Ыталама, чуптума мар, аларан та тытман вăл мана. Тантăшсем каласа панине итлетĕн те... Çав-на пулах ман ăша иккĕленӳ шăвăнса кĕре пуçларĕ. «Юратать-ши? Тен, юлташла çеç çӳрет? Кӳршĕллĕ пурăнатпăр-çке, пĕрле выляса ӳснĕ», — çакнашкал шухăш та çаврăнма тытăнать тепĕр чух пуçра. Анчах куратăп, ун çине пăхса илетĕп çеç, шанчăка пăтра-такан сивĕ шухăш, кăвак тӳпене хупăрлама тăнă тĕксĕм пĕлĕте ăшă çил хăваласа салатнă евĕр, кал-лех аяккалла кайса пытанать. Куççем тĕл пулаççĕ кăна — Саша пичĕ-куçĕ яланах хаваслăн çуталса каять, тути çинче ăшă, ачаш кулă курăнать.

Çав кунсенче пирĕн пата Татюк инке кĕчĕ.

— Алексашăпа ларсах калаçрăм-ха паян, — терĕ вăл аннене хирĕç пукан çине вырнаçса. — Асту терĕм, пуласлăху çак юлашки уйăхсенчен килет. Мускава университета вĕренме каятăп тетĕн. Мус-кав вăл — тĕп хула. Унта вĕренес текенсем пинĕ-пинĕпе... Ара, каç пулать çеç, тумланать те урама тухса шăвăнать. Хĕрсем астараççĕ ĕнтĕ, — Татюк инкен кăмăлсăр куçĕ ман çийĕн шуса иртрĕ.

Пит хĕрелсе кайнине туйса эпĕ тĕпелелле утрăм.

— Алексаша, терӗм, — тӑсать кӳршӗ хӗрарӑмӗ пуҫланӑ сӑмахне, — санӑн халӗ вӗренӳ ҫинчен ҫеҫ шухӑшламалла. Хӗрсем пулӗҫ вӗсем татах та. Мускав университетне вӗренме кӗмелле — ҫакӑ саншӑн чи кирли, — тесе шаккасах ӑнлантартӑм-ха.

Хӗрӗме каланине кинӗм илттӗр тенӗ пек, мана тӗртеҫҫӗ ӗнтӗ ҫак сӑмахсем. Ӑнланатӑп, Татюк инке, ӑнланатӑп... Эсӗ пирӗн ялта ман ывӑла тивӗҫлӗ хӗр ҫук тенине те илтнӗ. Пӗлетӗп...

Акӑ юлашкинчен вӗренӳ ҫулӗ вӗҫленчӗ. Унтан — ура! — чуна чӗтретекен хӑрушӑ экзаменсем те иртрӗҫ. Ыран, июнӗн ҫирӗм виҫҫӗмӗшӗнче, сывпуллашу каҫӗ пулать.

Ҫав ир эпӗ ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа вӑрантӑм. Кунӗ мӗн тери аван. Кӑн-кӑвак тӳпере ялкӑш хӗвел хӗртсе пӑхать, унӑн ылтӑн пайӑркисем кантӑкран пӑхса манӑн пӗчӗк пӳлӗме ҫап-ҫутӑ ҫутатаҫҫӗ. Вырӑн ҫинчен сиксе тӑрса эпӗ пахча енчи чӳречене яри уҫса яратӑп, уҫӑ сывлӑша кӑкӑр тулли сывласа пӗр вӑхӑт кайӑк юррине итлесе тӑратӑп. Ах, мӗн тери лайӑх ҫӗр ҫинче пурӑнма! Халӗ эпӗ ирӗклӗ. Кӗҫех экзамен текен шухӑш чуна шиклентермест. Ҫавӑнпа тулли кӑмӑлпа пӳртре тасатма тытӑнатӑп. Кил-ҫурта пуҫтарма, апат-ҫимӗҫ пӗҫерме, тӗрлӗ ал ӗҫӗ тума анне мана ачаранах вӗрентнӗ. Пуринчен ытла эпӗ пӳртре-ҫуртра тирпейлеме юрататӑп. Халӗ те акӑ пӳлӗмсенче ҫуса тухрӑм та кӑмӑллӑ питкуҫпа йӗри-тавра пӑхса илтӗм. Сывлӑш уҫӑ. Нӳрелнӗ урай хӑмисем ҫинче тусан пӗрчи те курӑнмасть. Чӳрече кантӑкӗсем ҫап-ҫутӑ, йӑлтӑртатаҫҫӗ кӑна.

Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн тантӑшсемпе хулана парикмахерскине кайрӑмӑр. Килтӗм — анне каллех ҫук. Кравать ҫинче типтерлӗ саркаласа хунӑ кӗпе выртать. Эпӗ хаваслӑн, ҫӑмӑллӑн сывласа яратӑп. Ӗлкӗрчӗ анне. Тавтапуҫ. Уява кивӗ тумпа каймалла пулать пулӗ тесе юлашки кунсенче питӗ кулянса ҫӳрерӗм. Килте ҫӗвӗ машини ваннӑ пирки

анне çак кӗпене çӗлеме паллакан хӗрарӑм патне кайрӗ. Темиçе те çитрӗ унта. Лешӗ е килте çук, е хӑнасем килнӗ вӗсен, е тата чӑрмантаракан мӗн те пулин çине-çинех тупӑнса пычӗ. Çапах ӗлкӗрчӗ анне. Мӗн тери илемлӗ тум!

Çӗнӗ кӗпе çинчен куçа илеймесӗр пӑхатӑп. Эпӗ ӑна алӑ тупанӗпе хуллен, ачашшӑн шӑла-шӑла илетӗп. Унтан, ванса каясран хӑранӑ евӗр, шутсӑр асӑрханса тӑхӑнатӑп та каллех тӗкӗр умне пырса тӑратӑп. Ман çине касӑр сӑмсаллӑ, хӗрлӗ çӳçлӗ çамрӑк хӗр пӑхать. Хальхинче лапсӑркка çӳçне килӗшӳллӗ тураса тирпейленӗ. Сенкер вӑрӑм кӗпепе. Кам пулатӑн эсӗ тенӗ евӗр, пуçне пӗр енчен тепӗр енне чалӑштара-чалӑштара илет, çавӑрӑнкалать, унтан каллех куçран тинкерет. Эпӗ те ун çине сӑнаса пӑхатӑп. «Ну, мӗн калӑн-ха?» — тесе ыйтатӑп. — «Пӑхма пырать пек те... Сенкер тӗс килӗшет сана. Çапах хӗрлӗ çӳçӳ сарӑ, симӗс куçу кӑвак пулсан илемлӗрехчӗ. Кук тӗррисем шупкаланнӑ, ача чухнехи пек мар, çапах пурпӗр уççӑнах палӑраççӗ», — илтетӗп, çук, туятӑп эпӗ хӗр каланине.

«Сана итлесе уява та кайма кирлӗ мар паян», — тетӗп эпӗ çиллессӗн, алӑ сулатӑп та тӗкӗр умӗнчен пӑрӑнса утатӑп.

Хӗвел каç енне сулӑнсан эпир аннепе шкул енне утатпӑр. Пӗвӗмпе эпӗ ӑна хуса иртнӗ. Паян тата çӳллӗ кӗлеллӗ туфлипе, ура тупанӗ таранах вӑрӑм кӗпепе. Çавӑнпа анне тата лутрарах курӑнать пулас. Хирӗç пулакансем (ял çыннисем пӗлеççӗ пӗрне-пӗри) ман çине тӗлӗнерех, ӑшшӑн кулкаласа пӑхаççӗ. «Ай-уй! Мӗн вӑхӑтра çапла ӳссе кайнӑ эсӗ! Халӗ кӑна хӗр ача чупса çӳреттӗнччӗçке!» Ман чӗре хаваслӑн тапать. Телейлӗн çиçекен пит-куçпа эпӗ анне хыççӑн сулхӑн коридора, унтан зала кӗретӗп. Шкулта халӗ çын нумай мар: эпир, вӑтам шкул пӗтернӗ класс ачисем, вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем, пирӗн учительсем.

Уяв каҫӗн малтанхи пайӗ мӗнле иртни ҫинчен каламастӑп. Ӑна эпӗ тӗлӗкри пек ҫеҫ астӑватӑп. Эпир залра, пирӗн учительсем сцена ҫинче, хӗрлӗ сатинпа витнӗ сӗтел хушшинче ларaҫҫӗ. Ҫапах ӑстӑнӑмра пӗр самант тытӑнса юлнӑ.

Пире аттестатсем пама черет ҫитсен шкул директорӗ чи малтан Саша ятне асӑнчӗ.

— Отличник! Ылтӑн медаль илме тивӗҫлӗ пулчӗ! — терӗ вӑл ҫӗкленӳллӗ сасӑпа. Вара ывӑлӗпе пӗрле Татюк инкене те сцена ҫине хӑпарма ыйтрӗ. Ҫӑмӑллӑн утса Саша сцена ҫывӑхне пычӗ, зал тепӗр енчен утакан амӑшне кӗтсе тӑчӗ, хул айӗн тытса ӑна сцена ҫине хӑпарма пулӑшрӗ. Шкул директорӗ малтан Татюк инкене, унтан ывӑлне алӑ парса ӑшшӑн саламларӗ.

Эпӗ Саша ҫине ытарайми пӑхатӑп.

Акӑ Саша хумханнипе такӑна-такӑна сӑмах калать, учительсене тав тӑвать, телей куҫҫульне пӗчӗк тутӑрӗпе шӑла-шӑла илекен амӑшне ыталать, унтан ӑна сцена ҫинчен анма пулӑшса хӑй вырӑнне ӑсатать. Залра алӑ ҫупаҫҫӗ, музыка янӑрать. Чӗреме сӑмахпа калама ҫук ачаш, савӑк туйӑм ҫавӑрса илет. Унта халӗ асамлӑ чечек, юрату чечекӗ, ешерсе сарӑлать.

Уяв каҫӗн малтанхи пайӗ вӗҫленсен, атте-аннесем кайсан, эпир столовӑя кӗретпӗр. «П» сас палли евӗр лартнӑ сӗтелсене шап-шурӑ ҫи виттисемпе витнӗ. Кашни ҫинчех чечек, тӗрлӗ апатҫимӗҫ тата шампански эрех кӗленчисем ҫуталса ларaҫҫӗ. Ҫакна куртӑм та анне калани аса килчӗ. (Уяв каҫне мӗнле ирттермеллине малтан пирӗн атте-аннесем пӗрле пухӑнса сӳтсе явнӑ-ҫке.)

— Тӗлӗнтереҫҫӗ ку чухнехи этемсем, — кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртатрӗ ҫав пухуран таврӑннӑ анне алӑк урлӑ каҫнӑ-каҫманах. — Эрех таврашӗ кирлӗ мар пулӗ терӗм ҫеҫ, ман ҫине харах сиксе ларчӗҫ. «Унсӑрӑн мӗнле уяв пултӑр?! Тек ача мар. Сӗтел ҫин-

че пĕр кĕленче шампански мĕн вăл», — теме пуçларĕç. Татюкпа килелле утнă май тавлашса та илтĕмĕр. Эх-ха-хай! Эрех çук та, уяв та çук апла... Ывăлĕ-хĕрĕсем хăвăртрах ĕçме вĕренччĕр теççĕ-ши?

«Çапла, аннеçĕм, эпир ĕнтĕ çитĕннĕ çынсем, — шухăшларăм эпĕ çутă, çăмăл туйăмпа тулли сĕтелсем çине пăхса. — Паян çак уявра эпир шкулпа, учительсемпе кăна мар, ачалăхпа та ĕмĕрлĕхех сывпуллашатпăр. Паян юлашки хут пире шкул ачисем теççĕ. Малашне хĕрсем, каччăсем теме тытăнĕç. Ĕнтĕ эпир хамăр тĕллĕн пурăнма пултаракан çынсен шутне кĕтĕмĕр. Çавна пĕлтерсе сĕтел çине паян пире валли пĕрремĕш хут эрех лартнă. Пĕрремĕш хут вĕрентнĕ учительсем, пĕр тан çынсем пек, юнашар ларса пирĕнпе пĕрле ĕçсе çиеççĕ».

Тĕлĕнмелле кун! Паян пурте юлашки хут та пĕрремĕш хут!..

Музыка янраса кайрĕ. Вăйă-ташă пуçланчĕ. Пирĕн арçын ачасем пĕр-пĕринпе малтанах килĕшсе татăлнă ĕнтĕ, кашни ташшах урăх хĕре чĕнеççĕ. «Кĕçĕр эпир уйăрăлатпăр. Тек нихăçан та çапла пурте пĕрле пухăнаяс çук. Çавăнпа пуринпе те ташламалла», — хулăм сасăпа пĕлтерчĕ мана Гера. Маттур пӳ-силлĕ пулнăран ăна тата Геракл, Гера-Геракл тесе чĕнеççĕ. Чăнах та, акă Ваня Архипов хăй килĕштернĕ хĕре Светăна иккĕмĕш хут чĕнчĕ кăна, вĕсене çавăнтах уйăрчĕç. Саша та хĕр хыççăн хĕр çавăтса тухать. Вăл ташлакан мăшăрĕ çине хаваслăн пăхнине, вĕсем кулкаласа калаçнине эпĕ куç хӳрипе вăрттăн сăнатăп. Чун вĕчĕрхенет, вăхăтран-вăхăт чĕре ыратса пăчăртанать. Эпĕ кĕвĕçесшĕн мар-ха. Сăлтавĕ те çук ун пек. Çапах... Манăн Сашăпа ташлас килет, унпа юнашар тăрас килет. Анчах мĕн тăвăн? Вăл та васкамасть мана чĕнме. Акă вĕсем, темиçе арçын ача, аяккалла пăрăнса хуллен тем калаçса илчĕç те залран тухса кайрĕç, унтан кĕчĕç, каллех вăйла хутшăнчĕç.

Юлашкинчен Саша ман пата çывхарчĕ, куçран хаваслăн пăхрĕ те кăтра пуçне шӳтлĕн тайса ташлама чĕнчĕ. «Тинех пĕрле», — пăшăлтатрĕ вăл икĕ аллипе те пилĕкрен ыталаса. Эпир залра çавăрăнма тытăнтăмăр. Те нумай ташланипе, те... Саша пичĕ хĕрелсе илемленнĕ, куçĕсем йăлкăшаççĕ. Вăл тек манран утăм та уйăрăлмарĕ. Пур çĕрте те, пур чухне те пысăк хура куççем çамрăк чунăма хумхантарса ман çине калама çук ăшшăн, юратса пăхрĕç.

— Пăчă. Тухар мар-и пахчана? — сĕнчĕ каччă тарланă çамкине пĕчĕк тутăрĕпе шăлкаласа.

Сада тухмалли алăк хуллен чĕриклетсе уçăлчĕ. Нӳрĕ сывлăш пит-куçа пырса перĕнчĕ, ăшăрханă ӳт-пĕве çемçен çупăрларĕ.

— Мĕн тери лайăх кунта! — терĕ Саша ансăр картлашкапа çăмăллăн чупса анса. — Пĕрре сывласа яма мĕне тăрать!

Эпĕ йĕри-тавра пăхса илтĕм. Çуллахи чи кĕске çĕрсем. Уйăх çук пулин те тĕттĕм мар. Анăçра, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлте, тахăшĕ пысăк кăвайт чĕртнĕ тейĕн. Ялкăшать кăна. Çывăхра пуçтарăннă пĕлĕт татăкĕсене те вут çулăмĕ хыпса илнĕ, вĕсем те çунаççĕ. Анчах пуç тӳпинче тĕксĕм. Сайра çăлтăрсем, тем курас пек, çĕр çине хускалмасăр тинкерсе пăхаççĕ. Каç чĕлтĕр çи виттийĕпе хупăрланнă сад кăнтăрлахи савăк тĕсне çухатнă. Пурте: çӳлелле кармашакан çӳллĕ йывăççем те, сарăлса ларакан лапсăркка тĕмсем те, унта та кунта курăнакан клумбăсем çинчи чечексем те, çăра курăк та — çуллахи çĕр ытамĕнче канать, уççăн сывлать, сайра хутра выляса иртекен уçă çилпе ачашшăн тем çинчен пăшăлтатса илет те каллех шăпланать.

— Атя палăк патне! — сĕнчĕ Саша.

Уçă сывлăша çаплах кăкăр тулли сывласа эпир тӳп-тӳрĕ лапсăркка çăка аллейипе васкамасăр утатпăр. Унăн тепĕр вĕçĕнче Ломоносов палăкĕ. Ученăй

илемлĕ пуçне аяккалла пăрнă та таçта инçете тинкерсе пăхать. Аяларах: «Науки юношей питают», — тесе çырнă. Пуçне каçăртса Саша пĕр вăхăт вырăссен тĕнчипе паллă пĕрремĕш ученăйĕ çине хускалмасăр пăхса тăчĕ.

— Ломоносов ятне илтсен манăн ялан пуçа çĕре çитиех таяс килет, — терĕ вăл хумханнă сасăпа. — Вăт пулнă этем!

Эпĕ Сашăна ăнланатăп. Пулас пурнăçра, тен, вăл та Тăван çĕршыв чапне, унпа пĕрле хăй ятне те çӳле çĕклеме ĕмĕтленет пулĕ. Çапла пĕр вăхăт эпир хускалмасăр, чĕнмесĕр тăратпăр. Шкулта музыка кĕрлет. Çутă чӳречесенчен тĕксĕм мĕлкесем куçкалани, ташласа хуçкаланни курăнать. Аякра, аслă çул енче, машина шавĕ илтĕнет. Кунта, пахчара, шăп. Тавралăх тем кĕтнĕн хускалмасть.

— Уçăлтăмăр, каяр, — тетĕп эпĕ.

— Тăхта... Тăрар кăштах. Пăх-ха йĕри-тавра. Мĕн тери лайăх, — пăшăлтатать Саша ман алла хĕрӳллĕн чăмăртаса.

— Аван мар ушкăнран капла уйăрălса çӳрени, — эпĕ çавăрăнатăп та шкул еннелле утатăп.

— Тăхта, — ума тухса тăрса каллех чарать мана каччă.

Тĕттĕмре эпĕ хура куçсем йăлкăшнине куратăп, каччă хумханнине туятăп.

— Манăн каламалли пур сана... Марина... Эсĕ питĕ лайăх... эсĕ питĕ чипер хĕр. Эпĕ сана... юрататăп... Шутсăр хытă юрататăп...

Тахçан кĕтнĕ, тахçан илтме ĕмĕтленнĕ сăмахсем... Ах, мĕн тери асамлă сăмахсем... Сашăн вĕри аллисем ман пилĕке перĕнеççĕ, ыталаççĕ, çупăрлаççĕ. Ман чĕре хаваслăн тапăлтатать, ӳт-пӳ тăрăх калама çук ырă туйăм чупса саланать.

— Марина... Мариночка... Юрататăп... юрататăп...

— Эпĕ те... Эпĕ те юрататăп...

Çав самантрах каччăн вĕри тути ман тутана пе-

рӗнет. Эпир чуптӑватпӑр. Пӗрре... иккӗ... виççӗ... Темиçе те...

Пуç çаврӑнать, асамлӑ туйӑм хупӑрлать... Çапах эпӗ хӗрӳллӗ ытама сирсе яма вӑй-хал çитеретӗп.

— Саша... Тӑхта, Саша... Эсӗ паян... Паян эсӗ пӗрре те яланхи пек мар. Пачах урӑхла çын...

— Эпӗ юрататӑп сана, — тӑнламасть вӑл мӗнпур чун хавалӗпе ман енне туртӑнса.

— Ӳсӗр эсӗ, Саша. Çавӑнпа хӑвна çапла тыткалатӑн, — кӗтмен çӗртен хӑюланса персе ярат͏ӑп эпӗ.

Çакна илтсен каччӑ ман çине чӑр-р пӑхрӗ.

— Чӑнах... Тӗрӗсех. Ӳсӗр эпӗ. Шутсӑр ӳсӗр. Юрату... Эсӗ... эсӗ ӳсӗртсе ятӑн мана, Марина...

— Э-э, ан чеелен, — хирӗçлетӗп эпӗ çине тӑрсах. — Куртӑм... Чухларӑм. Эсир, арçын ачасем, пурте пӗрерӗн-икшерӗн залран туха-туха кайрӑр. Шампански çитмерӗ сире... Çавӑнта, тӗксӗм, шӑршлӑ вырӑнта, вӑрттӑн ӗçкӗ турӑр-и-ха?

— Ну, Мари-ин, — айӑпа кӗнӗ ача евӗр, Саша тутине кулӑшла тӑсрӗ те куçран хӑюсӑррӑн пӑхрӗ. — Паян пирӗн уйрӑлу каçӗ, уяв. Пӗччен мар-çке, пурте пулнӑ унта. Юлташсенчен уйӑрӑлма аван мар вӗт... Ну... Тӗрӗссине калас-и? Эпӗ юри, санпа уççӑн калаçас тесе... Хӑçантанпа хӑяймасӑр асапланса çӳретӗп. Пӗлетӗн-и? Тахçанах, ачаранах юрататӑп эпӗ сана...

— Каллех суятӑн, — килӗшместӗп эпӗ ӑшра темле сивӗ туйӑм вӗчӗрхенсе çӗкленнине туйса. — Мана мар, Лильӑна юрататӑн эсӗ.

— Ну, Лиля... Лиля, — татах айӑплӑн пӑхса илет ман çине Саша. — Юратман эпӗ ӑна. Нимӗн чухлӗ те юратман. Хӑй вӗçӗмсӗр чӗнет те. Аван мар тесе çеç.

— Çапла пулмасӑр, — тӑвӑлать пурпӗрех ман чӗре. — Мӗншӗн кинона пӗрле каятӑр эппин? Мӗншӗн каççенче тӗттӗм урамра алла-аллӑн тытӑнса çӳретӗр?

— У-у! Хăçан пулнă вăл? Мĕн асăнатăн тахçан иртнине? Марина-а... Ĕнен мана. Эпĕ сана çеç юрататăп. Пĕр сана çеç.

Юлашкинчен ман кăмăл тулать. Эпĕ лăпланатăп.

— Ача чухне те мана вĕçĕмсĕр тарăхтараттăн, — каллех, халĕ ĕнтĕ ячĕшĕн кăна, мăкăртататăп эпĕ. — Урама тухма çук, тӳрех витлеме тытăнаттăн: «Марине пукане...» Сана пула мĕнпур ял ачи витлесе кулатчĕ манран.

Çакна илтсен Саша кусĕнче хаваслă çутăсем ташласа илчĕç.

— Эпĕ ăна юратнипе. Манăн санпа пĕрле пулас, санпа выляс килетчĕ. Эсĕ пур, асăрхамастăнччĕ, çавăрăнса та пăхмастăнччĕ ман çине. Çӳреттĕн хĕр ачасемпе...

Эпĕ чăтаймастăп, кулса яратăп.

Çав кас лапсăркка çăка айĕнче эпир пĕр-пĕрне нихăçан та манмастпăр, ĕмĕрлĕхех юрататпăр тесе тупа турăмăр. Çакна кас тĕксĕмĕпе хупăрланнă йывăççем шăппăн итлесе тăчĕç. Çамрăк юратăва пилленĕ евĕр, тӳлек çил пирĕн пит-куçа ăшшăн ачашласа иртрĕ, тӳпери çăлтăрсем хаваслăн йăлкăшрĕç.

Кĕçех шкултан çамрăксен ушкăнĕ шавласа тухрĕ. Хаваслă каласу, кулă çывхарсах килет. Эпĕ каччă ытамĕнчен вĕçерĕнтĕм.

— Атя таратпăр, — терĕ Саша.

— Çук, — килĕшмерĕм эпĕ. — Мĕн тесе юлташсенчен уйăрăлса çӳрес. Тата кĕçĕр эпир юлашки хут пурте пĕрле-çке.

— Мана сансăр пуçне никам та кирлĕ мар. Пĕр санпа çеç пулас килет, — Саша ман çума ачашшăн йăпшăнчĕ.

Паркра кăштах шавлакаласа çӳренĕ хыççăн эпир ушкăнĕпех шăпланнă урама тухрăмăр та пысăк çул еннелле утрăмăр. Кунта халĕ машинăсем çукпа пĕрех, сайра хутра çеç чупса иртеççĕ. Ретĕн-ретĕн тăрса утма ирĕклĕ. Унтан кукăр-макăр ансăр утма

çулпа Атăл енне пăрăнтăмăр. Кĕçех çав сукмак пире чăнкă çыран хĕррине илсе пычĕ.

Акă вăл аслă Атăл, пирĕн умра мăнаçлăн сарăлса выртать. Унăн анлă шывне тĕксĕм вăрман хыçĕнчен ялкăшса хăпаракан янкăр çĕнĕ кун хăйĕн шупка хĕрлĕ çутипе илемлетсе сăрланă ĕнтĕ. Хумсем юлхавлăн çĕклене-çĕклене аннăран тем сарлакăш юхан шыв канлĕн сывланă пек туйăнать.

— «Ракета» килет, — терĕ арçын ачасенчен пĕри. — Атьăр анатпăр!

— Атьăр! Атьăр!

Такам шуйхатнă кайăк кĕтĕвĕ евĕр, эпир самантрах хускалтăмăр, кулса, шавласа сĕвек çыран еннелле чупрăмăр. Анчах çывăхра картлашка та, çул та çук.

— Кунта килĕр! Акă сукмак!

Сукмакĕ-качки. Тăмлă, хăйăрлă кăпка çĕр çинче ансăр йĕр. Пĕр енче йывăç тĕмĕсем, тепринче тарăн сăрт. Сирпĕнсе антăмăр.

Пĕтĕрĕнекен шурă кăпăклă йĕр хăварса «Ракета» çăмăллăн шуса иртрĕ. Тĕкĕр евĕр йăлтăртатса выртакан Атăл çийĕ тĕксĕмленчĕ. Хумсем хускалчĕç, икĕ енне уйăрălса çырансем енне васкаса чупрĕç. Шăмпăлт-шăмпăлт тăвать таса шыв пирĕн урасем патне кармашса. Унтан юхан шыв çийĕ ерипен лăпланать. Çуталса килекен ирхи кун тĕсĕпе йăлтăртатса каллех канлĕн сывлама тытăнать. Нӳрĕ çил вăркăшса иртет. Эпĕ хулпуççие çӳçенчĕклĕн хускатса илетĕп.

— Сивĕ-и? — ыйтрĕ Саша. Пиншакне хыврĕ те ман çине çепĕççĕн уртса ячĕ. Çакна курса ытти арçын ачасем те курткисене, пиншакĕсене хĕр ачасен хулпуççийĕсем çине вите-вите ячĕç.

Сывлăш чылаях сивĕнчĕ пулин те хăш-пĕр арçын ачасем шыва кĕме тытăнчĕç, теприсем Атăл хĕррипе унталла-кунталла саланчĕç.

Эпир Сашăпа çав вырăнтах йĕри-тавра пăхкаласа тăтăмăр.

— Авă шурăмпуç çĕнĕ куна кĕтсе илме тухнă, — пуçне тухăçалла сĕлтсе çап-сутă çăлтăр çине кăтартрĕ Саша.

— Поэтсем хăйсен сăввисенче ăна час-часах Аврора теççĕ. Çапах вырăс сăмахĕ мар пулас вăл Аврора, — терĕм эпĕ. Йĕкĕт умĕнче эпĕ те пачах пĕлмен çын мар тесшĕн пултăм-ши?

— Авалхи литературăна вуланă-и эсĕ?

— Мухтанма пултараймастăп. Пĕлӳ пысăк мар...

— Аврора — авалхи римлянсен ирхи шуçăм турри вăл. Грексем ăна Эос тенĕ, — ăнлантарма тытăнчĕ мана Саша. — Туррисем вĕсен, грексен те, Рим империн çыннисен те пĕрех. Ячĕсем çеç тĕрлĕ. Юрату турри, калăпăр, пĕрисен Афродита, теприсен Венера. Çав калама çук чипер хĕрарăм туррăн пĕчĕк ывăл пур. Купидон е Амур ятлăскер. Яланах ухăпа çӳрет. Ӳкерчĕксенче курнă пулĕ — кăтра çӳçлĕ, мăнтăркка ача. Пеме питĕ ăста, шăп чĕререн тĕллет.

Йывăç çулçисене хускатса Атăл тăршшĕпе сивĕ çил хуллен вăркăшать, çӳхе тăхăннă ӳт-пĕве çӳçентерет. Çакна Саша туймасть-ши е ман умра туймăш тăвать. Çӳллĕ, яка çамки çине усăннă хура çӳç кăтрисене çӳлелле шăлса вăл пуçланă калаçăва малалла тăсать.

— Çав пĕчĕк ашкăнчăк персе янă ухă йĕппи кама тивет, çав çын юрату чирĕпе чирлесе ӳкет, çывăрайми пулать, канăçне çухатать... Çавăнпа пурте хăраççĕ çав ухă йĕппинчен. Турăсен патши, пуринчен те вăйлă, хăватлă Зевс е Юпитер та хăрать.

Саша шăпланчĕ, шухăша кайнăн кĕске вăхăт Атăл çине пăхса тăчĕ.

— Ман чĕрене те çав сăнă тахçанах амантнă. Ыратать. Çапах çилленместĕп эпĕ кăтра пуçлă пĕчĕк ухă хуçине. Çакăн пек юрату парнеленĕшĕн тав тăватăп кăна, Марина, — хушса хучĕ каччă чуна

хумхантаракан сасăпа ман çине ачашшăн пăхса. — Эсĕ çеç сыватма пултаратăн çав сурана. Пĕр эсĕ çеç...

Эпĕ пуçа чиксе чĕнмерĕм. Çамрăк чĕрем кăна хаваслăн тапăлтатрĕ. Турăçăм, мĕн тери телейлĕ эпĕ! Мĕнпе танлаштарам-ши ăшăмри туйăма? Вăл çак Атăл пек анлă, сарлака, тарăн.

Унтан эпир хĕвел тухнине сăнаса тăтăмăр. Акă ялкăшса выртакан шупка пĕлĕт çине таçтан аялтан, тĕксĕм вăрман хыçĕнчен, хĕп-хĕрлĕ пайăркасем курăнчĕç. Унтан çав вырăнта шĕл кăвар тĕслĕ çинçе йĕр палăрчĕ. Вăл çĕкленсе хăпарса, ӳссе пычĕ. Вара хĕмленсе çунакан хĕвел çаври мăнаçлăн шăвăнса тухрĕ.

— Тата тепĕр çĕр вĕçленчĕ, — терĕ Саша. — Пирĕн юратăва пилленĕ, пирĕн пурнăçри чи телейлĕ çĕр. Эпĕ ăна нихăçан та манас çук.

Çапла, Сашăн калаçăвĕ те ытарайми илемлĕччĕ. Çавăн евĕр сăнарлă, пуян чĕлхепе вăл лайăх журналист та, пысăк писатель те пулма пултарнă...

— Çак каçа эпĕ нихăçан та манас çук...

— Эпĕ те...

Алăсем тĕл пулса хĕрӳллĕн чăмăртанчĕç.

Унтан эпир ушкăнĕпех ялалла утрăмăр. Акă пирĕн кил. Картиш алăкĕ умĕнче чарăнтăмăр.

— Пĕрре те уйрăлас килмест, — терĕ каччă салхуллăн. — Итле-ха, Марина... Атя пирĕн пата...

Эпĕ куçа-пуçа чарса пăрахрăм.

— Саша... Мĕн калаçатăн эсĕ?

— Ыран кайса çырăнатпăр. Ма тĕлĕнетĕн? Пурпĕр пĕрле пулмалла. Хуть халĕ, хуть тепĕр çултан — пĕрех мар-и?

— Татюк инке турчка илсе хăваласа ярĕ.

— Анне-и? — кулса ячĕ Саша. — Э-э, пĕлместĕн апла эсĕ ăна. Вăл нихăçан та хирĕç пулас çук. Маншăн вăл тем тума та хатĕр. Тата ача чухнех анне сана хам кин тăватăп тетчĕ-çке. Астумастăн-и?

Малтан эпĕ вăл шÿтлет пулĕ тесе шутларăм, анчах Саша чăнласах, çине тăрсах ÿкĕтлеме тытăнчĕ. Тепĕр каç каллех çав калаçăва хускатрĕ.

— Ыран аннепе сирĕн пата пыратпăр.

— Мĕн тума?

— Хăтана. Сана качча илес пирки калаçса татăлма.

— Аннÿне каларăн-и вара? Килĕшрĕ-и? — тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.

— Эсĕ ун пирки ан пăшăрхан терĕм-çке. Анне хирĕçлесе сăмах та калас çук. Эпĕ пĕлетĕп. Апла пыратпăр ыран?

— Çук, Саша, çук, — сасартăках салхуланса пуçа сулкаларăм эпĕ.

— Мĕншĕн?.. Мĕншĕн çук? — пысăк хура куçсенче кÿренÿ хĕлхемĕ йăлкăшса илчĕ. — Эсĕ юратмастăн-и мана? Тивĕçлĕ мар тетĕн-и сан упăшку пулма?

— Эсĕ кĕçех Мускава вĕренме каятăн, — ирĕксĕрех ассăн сывласа ятăм эпĕ.

— Пĕрле каятпăр, — татса хучĕ Саша.

— Эпĕ кĕрейместĕп... Мускав-çке вăл, тĕп хула.

— Кĕретĕн, кĕретĕн, — хĕрсе кайсах ĕнентерме тытăнчĕ мана каччă. — Пулăшатăп. Тăрăшса хатĕрленес пулать çеç. Вăхăта сая ямасăр ыранах, вырăн çинчен тăрсанах.

Ӳкĕте кĕртрĕ. Епле килĕшмĕн? Эх, мĕн тери пысăк телей пулĕччĕ кĕме тÿр килсен!.. Тен, пултарăп? Тен, телейлĕ билет лекĕ?

Çав çуллахи кунсенче эпĕ çутă ĕмĕтпе хавхаланса тепĕр хут вĕренмелли кĕнекесем тытса лартăм. Кунĕ-кунĕпе ниçта тухмасăр вуларăм, çыртăм. Ăçтан тупăнчĕ çавăн чухлĕ чăтăмлăх? Вунă çул хушшинче эпĕ пĕрре те, пĕр кун та хальхи пек сехечĕ-сехечĕпе кĕнекесемпе ларнине астумастăп. Ăнланманнине Сашăран ыйта-ыйта пĕлтĕм. Чăнах та, нумай пулăшрĕ вăл мана.

Çав хĕрӳ вăхăтра мана хавхалантарас шутпа-ши вăл час-часах пирĕн пулас пурнăç çинчен сăмах хускататчĕ.

— Вĕренме кĕрсен çырăнатпăр та ĕмĕр тăршшĕпех ниçта уйăрăлмасăр пĕрле пурăнатпăр. Общежитинче пире, паллах, уйрăм пӳлĕм параççĕ. Халĕ çемьеллĕ студентсем темĕн чухлех. Унтан хваттер илетпĕр, — çурри шӳтлесе, анчах хавхалансах тăсатчĕ вăл сăмахне. — Аннесем хăнана пырсан вĕсене хирĕç пӳлĕмсенчен пĕр кĕтӳ ача чупса тухать: тем тĕрли те пур вĕсем хушшинче — чикан евĕр хуп-хури те, сарри те, хĕрлĕ çӳçли те, кук тĕрриллĕ питли те. Кăвак, хура, симĕс куçлисем — кĕшĕлтетеççĕ кăна.

— Ăçта вырнаçтарас тетĕн çавăн чухлĕ ачана? — кула-кула ыйтатăп эпĕ.

— Епле ăçта? Манăн, пысăк çемьеллĕ профессор е академикăн, уй пек аслă хваттер пулать... Хама ĕçлеме пĕр пӳлĕм çеç кирлĕ. Ыттисем пĕтĕмпех ачасем валли...

Эх, Саша, Саша...

Юлашкинчен вăхăт çитрĕ. Эпир Мускава кайрăмăр. Конкурс пысăк. Пĕрремĕш экзаменра Саша «пиллĕк», эпĕ «виççĕ» илтĕм. Шанчăк татăлчĕ. Пирĕн уйăрăлмалла. Хуйха-суйха путарса киле килме билет туянма кайрăмăр. Темиçе кассăна та çитрĕмĕр — пуйăс çине те, самолет çине те тепĕр куна вырăн çук. Çитменнине, мана общежитинчен хăвалама тытăнчĕç.

— Кĕçĕрлĕхе юлма пултаратăн. Кĕçĕрлĕхе кăна, — терĕ çивĕч куçлă вăрт-варт хĕрарăм, общежити коменданчĕ.

Эпĕ ăна тата та тепĕр каçа хăварма тархасларăм, мĕншĕнне ăнлантарма тăрăшрăм — вăл пур хăлхана та чикмерĕ. Йĕрки çапла-ши вĕсен унта, е çав хĕрарăмăн мана хăвăртрах хуса яма хăйĕн урăх тĕллев пулнă-ши, ăна пĕлместĕп.

— Эй, вĕсене йăлăнса... Атя хамăр пата, — терĕ Саша çакăн çинчен пĕлсен. — Пирĕн пӳлĕмре икĕ вырăн. Юлташ кĕçĕр çĕр выртмаллах тăванĕсем патне каять.

Эпĕ пуçа чикрĕм. Пит-куç хĕмленсе илчĕ.

— Марин... Эсĕ ан вăтан... Ну, мĕнех вара...

— Комендант пĕлсен сана лекме пултарать, — терĕм эпĕ. Хам пачах урăххи çинчен шухăшларăм.

— Никам та пĕлмест, — ĕнентерчĕ Саша. — Тепĕр тесен ăна, коменданта, мĕн ĕç?

Шухăшларăм та килĕшрĕм. Чăнах та, ăçта кайса чикмеллеччĕ ман пуçăма пачах пĕлмен пысăк хулара? Лар-ха вокзалта çавăн чухлĕ вăхăт.

Пӳлĕмре иккĕнех юлсан Саша мана ыталарĕ, чуптурĕ, ачашларĕ. Нихăçан та манмастăп, яланах мана çеç юрататăп тесе хĕрӳллĕн тупа турĕ...

Çапах та хуйхă-суйхăн мĕнпур йывăрлăхне эпĕ чугун çул станцинче вагон патне пырса тăрсан тин туйса илтĕм. Вĕренме кĕреймерĕм, çавна пула темиçе минутран савнирен уйăрăлатăп. (Ах, мĕн тери ӳкĕнтĕм эпĕ çав самантра шкулта тăрăшса вĕренменшĕн!) Тата... Эпĕ тек унчченхи Марина мар, Саша арăмĕ те мар. Вăл мана йăпатма тăрăшать, шӳтлет, кулăшла япаласем çинчен калакала парать. Эпĕ унпа пĕрле кулатăп, анчах чĕрене сивĕ тунсăх касать. Вагона кĕрес умĕн юлашки хут ыталаса чуптусан вăл мана куçран тинкерсе пăхрĕ.

— Тем-мĕн пулас пулсан çырса пĕлтер. Тӳрех пыратăп. Çырăнатпăр, — терĕ.

Поезд хускалсан вăл та тӳсеймерĕ. Куçĕсем шывланчĕç, куççуль икĕ пит тăрăх йăпăртатса юхса анчĕ. Проводница çиллессĕн кăшкăрса мана шалалла кĕме хистерĕ. Акă вагон шăппăн малалла шума пуçларĕ. Ман алла вĕçертмесĕр Саша юнашар утрĕ, унтан унăн пӳрнисем пушанчĕç, вĕçерĕнчĕç. Аллине çаплах ман енне тăсса вăл чупрĕ,

юлса-юлса пычĕ. Акă шурă кĕпе кĕпĕрленсе тăракан çынсем хушшинче юлашки хут курăнчĕ те куçран çухалчĕ.

— Сывă пул, савниçĕм! Сывă пул. Ан ман мана... Ан ман.

Вагона кĕрсен эпĕ чӳрече умне пырса тăтăм та куççулĕпе тулнă пит-куçăма алă тупанĕсемпе хупăрларăм.

Киле таврăнсан икĕ кунтан çыру илтĕм. «Ăсатрăм сана. Вокзалранах çыратăп, — вуларăм эпĕ хитре вĕтĕ сас паллисемпе тĕрлесе тултарнă хута. — Чĕре тунсăхлать, йĕрет. Эсĕ çук. Çук эсĕ ман çумра. Эпĕ пĕччен... Пĕр-пĕччен. Йывăр мана сансăр... Ытла та йывăр».

Çапла, чунтан кĕтнĕ çĕнĕ пурнăç мана хăйĕн пуçламăшĕнчех такăнтарчĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ малашне? Вĕренме кĕме кая юлтăм. Тĕрĕссипе каласан, малалла вĕренес ĕмĕт мана илĕртмен. Ман анне аслă шкул пĕтернĕ. Шкулта ачасене вĕрентет. Вăл çĕрĕ-çĕрĕпе тетрадьсем тĕрĕслесе, уроксене хатĕрленсе ларать, укçийĕ вара — чăх кулли. Ĕмĕрĕпе ĕçлет — хăйне валли чуна юрăхлă тум илеймест. Унта-кунта тухнă чух тăхăнкалама икĕ-виçĕ майлăрах кĕпесĕр пуçне мĕн пур унăн? Хам пирки каламастăп — тĕлпулу каçĕнче пулма пĕрремĕш хут йĕркеллĕ платье çĕлесе пама пултарчĕ анне.

Саша амăшĕ заводра рабочи. Ултă-çичĕ сехет ĕçлет те — ирĕклĕ. Укçине вара аннерен ытларах илет. Пĕр-пĕр завода ĕçлеме кĕрсен манăн та укçа тыткаламалăх пулĕ, кĕнеке-тетрадьпе сĕм çĕрлеччен аппаланма кирлĕ мар. Кун вĕçленчĕ те — урăх ĕç çук. Хуть те мĕн ту, хуть те ăçта кай. Çапла шухăшлаттăм эпĕ. Анчах юлашки вăхăтра шухăша улăштартăм. Саша юратăвне тивĕçлĕ пулас тесен — вĕренмеллех...

Çав кунсенче пирĕн пата аннен çывăх тантăшĕ пычĕ.

— Сан пата килтĕм эпĕ, Марина, — терĕ вăл пӳлĕмелле иртсе. — Пире ача садĕнче воспитательница кирлĕ. Пырас шуту пур-и? Ĕçе çӳреме инçе мар, шалу та хушрĕç халĕ.

Килĕшрĕм. Çапла вара кĕтмен çĕртен анне сулĕ çинех тăтăм. Пилĕк уйăхран ман вырăна дипломлă специалист пычĕ. Вара эпĕ çав садикрах няньăра ĕçлеме тытăнтăм.

Малтанхи вăхăтра Сашăран çырусем килсех тăчĕç. Пĕринче вăл: «Чĕрене тунсăх кăшлать. Сансăр пурнăç çук. Юлмастăп кунта, экзаменсем паратăп та вĕренме хамăр хулана пыратăп», — тесе çырчĕ. Кĕтрĕм эпĕ. Анчах вăл таврăнмарĕ.

Çур çула яхăн çырусем час-часах килсе тăчĕç. Яланхи пекех юратуллă, çепĕç, кăмăла савăнтаракан çырусем. Унтан сайраланма пуçларĕç, кĕскелсе пычĕç. Тĕксĕмленчĕç. Сăлтавĕ — пушă вăхăт сахал иккен. Вĕренмелли темĕн чухлех... Ман чĕрене иккĕленӳ, тĕрлĕ сивĕ шухăш пăтратма тытăнчĕ. Çапах эпĕ ăна тăнлас теместĕп. Юратнă каччă чăннине çырать тесе хама хам ĕнентерме тăрăшатăп. Урăхла пулма пултараймасть. Эпир нихăçан та пĕрпĕрне манмастпăр, юратăва ĕмĕрĕпех чĕрере упраса усратпăр тесе тупа тунă-çке...

Çу уйăхĕсем пуçлансан çырусем пачах çухалчĕç. «Халĕ унăн кашни минут шутра. Экзаменсем пуçланнă-çке. Ĕнтĕ хăй таврăнасси те нумай юлмарĕ», — лăпланма тăрăшатăп эпĕ чĕреме кăшлакан туйăма яланхи пекех хăваласа...

Темле кĕтрĕм пулин те, вăл, тĕрĕсрех каласан, вĕсем килнине эпĕ ăнсăртран куртăм. Шăмат кун ĕçрен иртерех таврăнса яланхи пекех пӳртре тасатма тытăнтăм. Кил умĕнчи каткаран ăшăннă шыв ăсса кĕрес тесе картиш алăкне уçса ятăм. Пăхрăм та... Инçе те мар Саша пырать. Аллинче чăматан. Юнашар... хулĕнчен çакланса йăрăс пӳллĕ, хура çӳçлĕ çамрăк хĕрарăм утать.

Такам вăйпа тĕртсе янă пекех, эпĕ каялла картишнелле сирпĕнтĕм, алăка васкаса хупрăм. Кусăмсем ирĕксĕрех карта хушăкне тирĕнчĕç. Тем çинчен кăмăллăн калаçса вĕсем пирĕн тĕлтен иртсе кайрĕç.

Çук, эпĕ йĕрсе ямарăм, ултавçа кăшкăра-кăшкăра ылханмарăм, ӳпкелемерĕм. Сасартăк вăй пĕтнине туйса карта çумне тайăнтăм. Çутă тĕнче тĕттĕмленсе килчĕ... Пуçа çĕклесе пăхрăм та тĕлĕнтĕм. Халĕ эпĕ картиш алăкĕ çумĕнче мар, вут шаршанĕ çывăхĕнче, каска çинче, ларатăп иккен. Мĕн вăхăтра килсе ларнă, мĕн чухлĕ çапла анраса ларнă — ăна астумастăп. Пуç шавлать. Темле пушă пуç, такам уçса силленĕ тейĕн — унта халĕ пĕр шухăш та, пĕр туйăм та çук. Кăштах тăна кĕнĕ евĕр пултăм-ши — тĕлĕкри пек аса илтĕм Саша палламан хĕрарăмпа алла-аллăн тытăнса иртнине. «Мĕн тесе пурăнас ман халĕ?» — çĕрлехи çиçĕм евĕр йăлтлатса илчĕ пуçра сивĕ шухăш. Хам мĕн тунине лайăххăн ăнланмасăр тăтăм, сарайнелле утрăм. Тем шырарăм. Унталла пăхатăп, кунталла. Мĕн патне килтĕм-ха эпĕ? Мĕн кирлĕччĕ-ха мана? А-а, вĕрен... Çапла, вĕрен кирлĕ... Акă вăл кĕтесре, пысăк пăта çинче çакăнса тăрать. Кивелнĕ, анчах çирĕп-ха, тӳсмелле пек туйăнать. Халĕ унăн пĕр вĕçне йăлă тумалла та, теприне сарай каштинчен лайăх çыхса çирĕплетмелле... Çине тăрсах тĕрмешеттĕм, сисмен те, анне пырса тăнă.

— Эсĕ мĕн?.. Мĕн тăватăн кунта? — янраса кайрĕ хăлха патĕнчех.

Шартах сикрĕм, анне çине тĕлĕнсе пăхрăм. Мĕн кăшкăрать вăл? Вăрманта мар-çке... Тата мĕншĕн шурса кайнă? Мĕншĕн куçĕсем хăраса чарăлнă?

Эпĕ чĕнменнине кура анне алăри вĕрене карт туртса илчĕ те хайхи вут каски патне пырса çавăнтах пуртăпа вакласа тăкрĕ. Унтан мана алăран ярса тытса, пĕчĕк ача пек, пӳрте çавăтса кĕчĕ. Эпĕ

хирĕçлемерĕм, алăк урлă каççанах ют çын евĕр малалла иртмесĕр çавăнтах пукан çине тĕшĕрĕлтĕм.

— Эсĕ мĕн? Мĕн шут тытрăн, ухмах хĕр? — терĕ анне мана хирĕç тăрса. — Тĕнчере урăх каччă çук-и сана валли? Çак пит-куçпа, çак кĕлеткеçурăмпа урăх çын тупаймастăн-и?

Эпĕ пуçа уснă, чĕнместĕп. Итлетĕп, ăнланатăп, анчах паçăрхи пекех, чĕрере нимле туйăм та хускалмасть. Хăйне çирĕп, лăпкă тытма пултаракан анне халĕ алăкăн-тĕпелĕн уткалать, вăрçать, ӳпкелет.

— Эх, айван! Эх, ухмах... Ухмах хĕр ача!

Анчах ун сăмахĕсем ман ăс-тăна хускатмаççĕ. Çăра вăрман çийĕн вĕçекен çил пек. Çӳлте шавлать, аялта лăп, пĕр курăк та, пĕр чечек тăрри те вылянмасть. «Халĕ сана çаппа-çарамаслантараççĕ те урама ял çине илсе тухаççĕ», — тесен те çав самантра эпĕ хирĕçлеме вăй-хал тупаймастăм пулĕ... Мĕн чухлĕ ларнине астумастăп.

Кĕтмен çĕртен икĕ-виçĕ кун сасă паман репродукторта шăк-шак, мăк-мак тукаларĕ те çинçе янравлă сасă илтĕнсе кайрĕ: «Ан ман, савни, ан ман, халь...» — вара каллех шăп пулчĕ. Çав çепĕç юрă вăратрĕ-ши аманнă чунăма, е тăна кĕме вăхăт çитрĕ-ши, чĕрем çĕçĕпе чикнĕ пек ыратса кайрĕ. Эпĕ тăтăм, хамăн пĕчĕк пӳлĕме кĕтĕм те вырăн çине лаплатрăм, ĕсĕклесе йĕрсе ятăм...

Унтан анне кĕчĕ. Шăппăн юнашар пырса ларчĕ. Ăшă аллине пуç çине хучĕ.

— Ан йĕр, хĕрĕм. Ан йĕр, пепкем, — илтетĕп эпĕ вăл пăшăлтатнине. — Лăплан, тăванăм. Ан хуçăл каплах.

Ӳснĕ чух анне ăшшине питех туйман эпĕ. Вăрвар вăрçман, ятламан вăл мана, анчах мухтани те, ачашлани те сахал пулнă. Яланах вăхăт çук унăн, яланах ĕç. Тетрадьсем тĕрĕслемелле, шкул

программине çĕнĕ кĕнеке кĕртнĕ, ăна тупса хăвăртрах вуласа тухмалла, педсовет, тĕрлĕ пуху, совещани... Шеллеттĕм эпĕ ăна тата тунсăхлаттăм. Чупса пырса ун çумне йăпшăнас, ыталас, аннепе выляс, кулас килетчĕ. Анчах лăпкă куççем çакна асăрхамастчĕç пулас. Эпĕ вара анне мана юратмасть тесе хаш сывлаттăм та пăрăнса утаттăм.

Халĕ вара... Эпĕ ӳпне выртнă та чарăнаймасăр ĕсĕклетĕп. Анне пичĕ ман çӳçе ачашшăн перĕнсе арпаштарать, мăя, хулпуççине сĕртĕнет. Халиччен илтме хăнăхман, чĕререн тухакан çепĕç сăмахсем суранланнă чуна çемçен, хуллен сăрхăнса кĕреççĕ, ăшăтаççĕ, çутатаççĕ. Сулхăнра ӳснĕ чечек хĕвел енне туртăннă пек, ман кӳтсе çитнĕ чĕре çак ачашлăха хирĕç çĕкленет. Апла юратать, шеллет мана анне... Эпĕ ăна мăйĕнчен ыталаса илетĕп, питĕнчен, çамкинчен, куçĕнчен чуптăватăп, вара халь ĕнтĕ чун çемçелсе кайнипе тата хытăрах макăрса яратăп.

— Аннеçĕм... Аннеçĕм... Пĕртен-пĕр хаклă çыннăм... Шелле мана... Юрат мана...

— Айван хĕр ача, — тет анне чĕтрекен сасăпа. — Кама юратам ĕнтĕ эпĕ сансăр пуçне? Эсĕ çеç ман пурнăç çути.

Çапла вара савнă каччă юратăвне çухатнă кун ман чĕрере тепĕр юрату уçăлчĕ, лăпкарĕ, ачашларĕ, сиплерĕ.

Çав каç эпĕ çĕрĕпе те чăлăм куç хупмарăм. Йĕтĕм, шухăшларăм, каллех йĕтĕм. Каллех шухăшларăм. Усал сунмарăм эпĕ Сашăна. Пурăнччăр. Телейлĕ пултăр. Тĕрĕс анне сăмахĕ — ман валли те каччă пĕтмен. Эпĕ те тупăп-ха телейĕме. Тĕрĕссипе каласан çӳрес текенсем пур. Авă Федя хăçантанпа явăнать ман тавра.

— Марина, — терĕ вăл пĕррехинче куçран тинкерсе пăхса, — пурте пур манăн — тухса çӳреме машина та, мотоцикл та пур, çие тăхăнма темĕн

чухлĕ тум. Хваттер пысăк. Халăх хушшинче ырă ятăм та çук мар. Пĕлетĕн, эпĕ спортсмен, телевизорпа та кăтартнă пире, хаçатра та асăннă ман ята.

Эпĕ пĕлетĕп-ха Федя камне, мĕнлине. Каччи, чăнах та, лайăх пек туйăнать. Тивĕçлĕхĕсем те пур. Сăмах май вĕсем çинчен асăнма нихăçан та манмасть вăл.

— Пурте пур манăн, анчах телейĕм тулли пулма эсĕ çитейместĕн.

— Федя, — шӳтлерех калатăп эпĕ ăна, — çапла, санăн темĕн те пур. Эсĕ пуян çын ывăлĕ. Эпĕ вара чухăн. Манăн нимĕн те çук.

— Мана качча пырсан санăн та пурте пулать. Саншăн эпĕ нимĕн те шеллемĕп. Алăрах йătса çӳрĕттĕм...

Çине тăрсах чĕннĕрен икĕ-виçĕ хут кинора пултăмăр эпир. Çавă çеç. Урăх каймарăм. Саша пĕлсен тем шухăшлĕ терĕм. Эх, айван, айван... Вăл пур тахçанах маннă пирĕн юрату çинчен. Ăна тахçанах урăххипе улăштарнă. Ултав, пĕтĕмпех ултав кăна... Юрĕ, Саша, паянхи кунран эпĕ те пĕлместĕп сана. Хирĕç пулсан та палламастăп. Тек çук эсĕ маншăн çут тĕнчере.

Çакăн евĕр шухăш явăнса çуралчĕ çав çĕр ман нăйкăшсах ыратакан аманнă чĕрере.

Мана пула анне те çĕрĕпех сывăраймарĕ. Илтетĕп — вĕçĕмсĕр пĕр аякĕ çинчен теприн çине çаврăна-çаврăна выртать, ассăн сывла-сывла ярать. Темиçе хут вырăнĕ çинчен тăрса чĕрне вĕççĕн ман пӳлĕм алăкĕ патне ута-ута пычĕ. Эпĕ сывланине итлерĕ пулас. Тепрехинче хуллен кĕрсе ăшă аллине ман çамка çине хучĕ. Эпĕ сывăрнă пек пулса чĕнмерĕм. Каярахпа пĕлтĕм: Саша авланнă, арăмĕпе килчĕ тенине илтсен (ялта ун евĕр хыпар часах сарăлать) ĕçне пăрахса тӳрех чупнă вăл киле. Чĕри сиснĕ пулĕ çав инкек сиксе тухма пултарасса. Чăнах та, каярах пынă пулсан, кам пĕлет, тен...

Çав каç минтер çине йăпăртатса анакан вĕри куççуле шăла-шăла сассăр ĕсĕкленĕ май вилес тени айван, ăссăр шухăш пулнине те ăнланса илтĕм. Çук, пурăнас пулать, ĕçлес пулать. Пилленĕ ĕмĕре тивĕçлĕ пурăнса ирттерме тăрăшас пулать.

Ир енне тĕлĕрсе кайнă. Нумай çывăрман. Вăрантăм — тул çутăлнă. Малтан картишне, унтан темшĕн-çке пахчана тухрăм. Тухăçра тĕксĕм çĕр хыçĕнчен хĕвел çаври çап-çутă ялкăшса çĕкленет. Акă вăл курăнчĕ, çурри хăпарчĕ, акă пĕтĕмпех ярăнса тухрĕ. Шĕл кăвар пек хĕмленет, анчах сивĕ... Хам ĕмĕрте иккĕмĕш хут çуллахи хĕвел тухнине куратăп. «Пирĕн юрату хĕвелĕ хăпарчĕ», — терĕ Саша çулталăк каярах Атăл хĕрринче. Асаилӳсем капланса килчĕç, куççем сисмесĕрех куççулĕпе тулчĕç, пуçăм усăнчĕ.

Ĕçе кайма пуçтарăннă май тĕкĕр патне пырса хам çине тишкерсе пăхрăм. Хĕрлĕ çӳçлĕ чипер хĕрĕн хурлăхлă куçĕпе тĕл пултăм. Тутлă шăршлă крем илсе шурăхнă пит-куçа сăтăркаларăм, кăштах хĕретрĕм. Ытла та салхуллă пите савăклатас тесе пĕр-икĕ хут ирĕксĕррĕн кулса та илтĕм. Вара юратнă кĕпене тăхăнтăм та çӳллĕ кĕлеллĕ туфлипе çирĕппĕн, çепĕççĕн шаклаттарса утса ĕçе тухса кайрăм Çав кунах каç пуласпа Федя кĕчĕ те, эпир кино курма кайрăмăр. Анне ман çине кăшт тĕлĕнерех сăнаса пăхрĕ, анчах шарламарĕ.

Çиелтен пăхма ман пурнăç яланхи пекех иртрĕ. Саша çинчен шухăшламастăп — пур-и вăл тĕнчере, çук-и — маншăн пурпĕрех. Çапла ĕнентеретĕп хама хам. Анчах шиклĕ шухăш яланах сыхă — тĕл пулас марччĕ. Çавна пулах ĕнтĕ чунăм кил енне туртмасть. Çавна пулах тата отпуска кайнă уборщица вырăнне ĕçлеме килĕшетĕп. Ĕç кунĕ вĕçленнĕ хыççăн пӳлĕмсем пушансан пуçтаратăп, çăватăп, тирпейлетĕп. Ывăнтарать кунĕпе çапла айланса. Ку лайăх... Анчах пĕр урамрах, юнашарах пурăнатпăрçке эпир унпа...

Пĕрре çапла, тавралăха каç тĕксĕмĕ ӳкнĕ ун чух, ĕçрен таврăнатăп. Пăралукран пăрăнтăм та — Сашăпа арăмĕ хирĕç пыраççĕ. Унчченхи пекех алăран-алă тытăннă. Утаççĕ васкамасăр. Те уçăлма тухнă, те хулана кайма... Эпĕ вĕсем çине пăхас теменччĕ. Анчах хам та сисмерĕм, пуçа çĕклерĕм те пысăк хура куçсемпе тĕл пултăм. Ăшшăн, ытла та ăшшăн пăхнă пек туйăнчĕç вĕсем. Саша чĕнмерĕ, пуçне сĕлтсе сывлăх сунчĕ кăна. Вăрăм çӳçлĕ чипер арăмĕ пачах урăхла. Куçне те вылятмарĕ, çӳхе тутине мăнкăмăллăн пăчăртаса иртрĕ.

Телее, нумай пурăнмарĕç вĕсем, кайрĕç Мускава, арăмĕн килне. Çавă çул экзаменсем тытса эпĕ те Шупашкарти университета вĕренме кĕтĕм. Эпĕ те студентка ятне илтрĕм.

Сашăран юлас марччĕ, ун юратăвне тивĕçлĕ пуласчĕ тесе çулталăкĕпех аслă шкула кĕме хатĕрлентĕм. Каллех вуларăм, çыртăм, пĕлменнине учительсенчен кая-кая ыйтрăм. Анчах пурнăç улшăнчĕ. Халĕ юрату çук. Тек вăл мана савăнтармасть, вăйхал памасть. Апла пулин те, вĕренес пулать. Мĕн чухлĕ тăрăшрăм, мĕн чухлĕ вăхăта иртертĕм те кĕрес тесе, ахалех сая ямалла-и вара çавна?

Пĕрре мана, хĕл ларнă ун чух, кил умĕнче палламан хĕрарăм чĕнсе илчĕ.

— Эсир çак çуртра пурăнатăр-и? Тăхтăр-ха кĕме. Телеграмма пур сире. Акă алă пусăр.

Мĕнле телеграмма? Камран? Саркаларăм хут татăкне. «Ывăл çуралчĕ. Асанне пулнă ятпа саламлатпăр. Саша. Люда», — тесе çырнă. Çук. Пире мар ку телеграмма. Çурт номерне йăнăш кăтартнă иккен...

«Апла Саша ача ашшĕ пулчĕ», — шухăшларăм эпĕ çак хыпар чунăма нимĕн чухлĕ ыраттарманнинчен тĕлĕнсе. Хут татăкне тирпейлĕн хуçлатрăм та Татюк инке килĕ умĕнче çакăнса тăракан почта ешчĕкне кайса ятăм.

Çăва тухсан Саша каникула таврăнчĕ. Хальхинче пĕччен. Арăмĕ, паллах, пĕчĕк ачапа тухаймасть ĕнтĕ. Сашăн вара амăшĕ патне килмеллех. Унсăрăн мĕнле-ха? Пĕртен-пĕр ывăл-çке.

Ĕнтĕ мана унпа ăнсăртран тĕл пуласси шиклентермерĕ. Тек эпĕ хама хам вăл маншăн никам та мар тесе ĕнентерме тăрăшмарăм. Иртнĕ çулхи евĕр пытанса-пăрăнса çӳреме шутламарăм. Çапла, шанчăка çухатнă юрату, çунса пĕтнĕ вут çулăмĕ евĕр, ерипен вăйсăрлансах пычĕ. Васкамасăр шăвакан вăхăт, ăста тухтăр пек, чун суранĕсене сиплесе лăплантарчĕ. Чăннипех вăл халĕ маншăн ют çын, пĕрле вĕреннĕ кӳршĕ кăна. Темиçе кун та çитрĕ килни, курма тӳр килмерĕ-ха.

Пĕррехинче, кăнтăрлахи шăрăх кунĕленсен, эпĕ шыва кĕме кайрăм. Таврăнатăп каялла. Утатăп васкамасăр хирпе, йĕри-тавра ешерекен илемпе киленсе.

— Марина! — илтĕнчĕ хыçра.

Эпĕ шартах сикрĕм, сисмерĕм те вăртах çаврăнтăм. Пилĕк-ултă утăмра Саша кулкаласа пырать. Ăçтан сиксе тухрĕ вăл?

Акă çывăхах, çумах пырса тăчĕ.

— Марина-а! — терĕ вăл хуллен, ачашшăн. Кăтра пуçне кăштах чалăштарчĕ те куçран тинкерсе пăхрĕ. — Мариночка! Хаклă çыннăм, салам сана. Ыталаса чуптăваттăм, анчах хăяймастăп.

Сасартăках тарăхса кайнипе-ши е урăх сăлтава пула такам мăйран пăвса лартнăн сывлăш питĕрĕнчĕ. Çапах эпĕ самантрах хама алла илме пултартăм.

— Ак тамаша! — кулса ятăм эпĕ. — Каллех тахçан манăçа тухнă халапа тăсас тетĕн-и? Мĕн те пулин урăххи шухăшласа туп. Итлеме кичем ялан пĕр юрра.

— Хуть те мĕн кала, кул, тăрăхла. Эпĕ пурпĕр сана юрататăп, — терĕ вăл аллăма перĕнсе. Эпĕ

ăна каялла туртса илтĕм. — Юлашки вăхăтра сан çинчен шухăшласа ăса çухататăп пулĕ терĕм. Тăван килте хам валли вырăн тупаймастăп, — Саша тата тепĕр утăм çывхарчĕ, эпĕ каллех пăрăнтăм. — Ĕнтĕ тăваттăмăш кун санпа юнашар пурăнатăп. Курас килет, сан çине вĕçĕмсĕр пăхас килет, сассуна илтес килет, чунтан калаçас килет. Эсĕ пур — тарса çӳретĕн манран.

— Кун пирки тек сăмах хускатмăпăр, Александр. Вырăнлă мар сана, авланнă çынна, ача ашшĕне, арăм çумра çук чух урăххипе çапла пакăлтатма, — хирĕçлеме пăхрăм эпĕ. — Эпĕ те тек айван хĕр ача мар, юмах таврашне ĕненместĕп.

Анчах кӳршĕ ман сăмаха тăнламарĕ.

— Килнĕ каçах урама тухса сирĕн кил умĕнче çаврăнса çӳрерĕм. Ман тунсăха сисетĕн, тухатăн пулĕ тесе шухăшларăм. Кĕтрĕм, ăшăмра чĕнтĕм сана, тилмĕртĕм...

Çӳллĕ тырă анине хумхантарса ăшă çил çаврăнса иртрĕ. Саша кăтра çӳçĕпе вылянă евĕр, ăна арпаштарса ячĕ, çамки çине темиçе пайăрка илсе пăрахрĕ. Çул хĕррипе ӳсекен чечек тăррисене унталла-кунталла суллакаларĕ те аяккалла кайса лăпланчĕ.

— Кĕрес тесе те шухăшларăм сан пата, — çӳçне алă тупанĕпе çӳлелле шăлса хучĕ Саша, — аннӳ хуса ярасран шиклентĕм. У-у, çиллес хĕрарăм Варвари аппа. Пăхмасть те ман çине, пачах палламасть тейĕн.

Эх, Саша, Саша! Арăмупа яла килнĕ кун ман анне мĕн тӳссе irттернине пĕлес пулсан çапла шӳтлеместтĕн эсĕ...

Илемлĕ хура куçне салхуллă тĕксĕмлетсе Саша кĕске вăхăт таçта аякка тинкерчĕ.

— Пурне те пăрахрăм, пурин çине те алă султăм, — терĕ вăл сассине сӳрĕклентерсе. — Килтĕм вĕçтерсе... Сан пата, сана курас тесе. Халĕ эсĕ пирĕн

тĕлтен иртсе кайнине куртăм та юри тĕл пулас тесе тухрăм... Марина! — çамрăк арçын каллех ман енне сулăнчĕ, аллисем пилĕке перĕнчĕç. Эпĕ вĕсене çиллессĕн сирсе ярса темиçе утăм каялла кайса тăтăм.

— Саша, — терĕм эпĕ эрех шăршине туйса. — Эсĕ ĕçнĕ. Çавă каласчарать халĕ çапла. Иртет вăл. Çывăрса тăратăн та акă ыран — çак шухăш-кăмăлăн йĕрĕ те юлмасть. Каях килна, ан тăр кунта ман çывăхра. Авă иртен-çӳрен пирĕн çине çавăрăнса пăхать. Мана нимĕн те мар, эпĕ ирĕклĕ çын. Арăму патне хыпар çитме пултарать. Хирĕçӳ-харкашу пуçланĕ...

— Пĕрле утатпăр.

— Пирĕн çул пĕр мар. Тахçанах уйăрăлнă вăл.

— Ун пек ан кала, Марина! Юрататăн эсĕ мана. Чĕлхӳ суять пулин те куçусем суймаççĕ. Куратăп, юрататăн...

Каяс тесе эпĕ утăм турăм, анчах Саша çавăнтах çула картласа тăчĕ.

— Тăхта... Çилленетĕн апла... Ăнланатăп... Тух кĕçĕр, тĕттĕм пулсан, пахчана. Пĕтĕмпех каласа паратăп. Анкарти вĕçĕнче, хурăн айĕнче, кĕтетĕп... Пыратăн-и? Кала. Ну, пуçупа та пулин сĕлтсе ил. Мĕн, чĕркуççи çине тăрса тархаслас-и? Марина, пурнăç пĕрре килет...

Эпĕ чĕнмерĕм, пăрăнтăм та утрăм.

— Юрĕ. Çынсенчен çаплах вăтанатăн пулсан каях эппин, чармастăп, — терĕ Саша манпа юнашар темиçе утăм туса. — Кĕтетĕп, пыр, Марина... Манăн хаклă, манайми Мариночка.

Ăшăмра чăн-чăн çил-тăвăл çĕкленчĕ тейĕн. Пĕрре йĕрес, тепре юрлас-ташлас килет. «Юратать вăл мана... юратать... юратать», — хавасланать, янăрать пĕр сасă. — «Ултав, пĕтĕмпех ултав», — сиввĕн систерет тепри. — «Манăн хаклă, манайми Мариночка», — терĕ. — «Ан ĕнен. Чĕлхи яка унăн. Ăна эсĕ пĕлетĕн». — «Эпĕ те юрататăп сана, Саша...

Кĕске вăхăта та юратма пăрахман. Эпĕ юри... сана манас тесе юри хама улталаса пурăнтăм. Урăх суяссăм çук. Хама та, сана та. Йывăр, ытла та йывăр вăл вĕçĕмсĕр улталанса пурăнма. Тĕрĕс каларăн эсĕ. Пурнăç пĕрре килет. Кĕт, Саша, тухатăп... Чупса пыратăп та сан хĕрӳ ытамна ӳкетĕп. Урăх нимĕн те, нимĕн те кирлĕ мар... Ах, хăвăртрах тĕттĕм пултăрччĕ...»

Çакăн евĕр шухăш-туйăм чуна вĕтелентернипе эпĕ пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ уткаларăм, лартăм, каллех сиксе тăтăм. «Вара... Ун хыççăн мĕн пулĕ? Вăл арăмĕ, ывăлĕ патне таврăнать... Эсĕ вара... Сана мĕн кĕтет?» — вĕри чул çине шыв сапнă пек, ăш-чике пĕçертсе илчĕ тĕксĕм шухăш. Эпĕ çенĕке вирхĕнсе тухрăм. Кĕтесре ларакан пушă чăматана ярса тытрăм та васкаса каялла кĕтĕм. Шкап алăкне уçса ярса çакăнса тăракан кĕпе-тумтире иле-иле чăматана тултарма тытăнтăм. Çаклатрăм та тӳрленсе тăтăм. Куç урам енчи чӳрече çине ӳкрĕ. Саша тăрать. Пилеш çине таяннă, аллисене кĕсьене чикнĕ. Куççем тĕл пулсан вăл шап-шурă шăлне кăтартса хаваслăн кулса ячĕ. Тем çинчен астутарнăн пуçне сĕлтрĕ те çавăрăнса утрĕ. Хуллен, асаплăн йынăшса ярса эпĕ стена çумне сĕвентĕм.

Алăк уçăлчĕ те, анне кĕчĕ.

— Мĕн пулчĕ? — ыйтрĕ вăл çывăхах пырса. Уçă шкапа пăхрĕ, чăматана тытса çĕклерĕ, унтан тĕлĕннĕ куçне ман çине çĕклерĕ. — Мĕне пĕлтерет ку?

— Анне, манăн каймалла... Халех, çак самантрах. Унсăрăн инкек сиксе тухма пултарать... Маншăн та, саншăн та...

Ăнланчĕ-ши? Чĕнмерĕ. Ман çине сăнаса пăхрĕ çеç. Те ӳпкелесе, те шеллесе пуçне хуллен сулкаласа илчĕ.

— Ăçта капла каçа хирĕç?.. Кĕçех тĕттĕм пулать... Поезд çук ку вăхăтра. Автобуссем те çӳреме пăрахнă, — терĕ вăл пусăрăнчăк сасăпа.

Чăнах-çке. Эпĕ кун çинчен шухăшламан. Йывăррăн пукан çине тĕшĕрĕлтĕм, унтан каллех сиксе тăтăм та урама тухса телефон будки еннелле васкаса утрăм.

— Итлетĕп, — янăрарĕ трубкăра çамрăк арçын сасси.

— Федя, эсĕ-и? Салам, Федя. Питĕ пысăк ыйтупа шăнкăравлатăп эпĕ. Мана Канаш станцине леçсе ямăн-и? Çапла, паянах... Халех.

— Мĕн пулчĕ, Марина?

— Çул çинче калаçăпăр...

Кĕске вăхăт трубкăра хуллен кăшăлтатни, чăшăлтатни çеç илтĕнчĕ.

— Юрĕ. Пыратăп. Кĕт, — терĕ юлашкинчен Федя.

— Ăçта каяс тетĕн вара эсĕ? — ыйтрĕ анне эпĕ каялла пӳрте кĕрсенех.

— Хальлĕхе Тюмене, Светлана патне. Кайран куç курĕ.

Светлана — манăн шкулта пĕрле вĕреннĕ тантăш. Пĕлтĕр вăл Тюменьрен ашшĕ-амăшĕ патне отпуска килнĕ çынна качча тухрĕ.

Вăт çапла. Аннене ыталаса чуптурăм, ăшăмра чĕрене çунтаракан ултавлă юратупа сывпуллашрăм, çуралса ӳснĕ тăван кил-çурт çине тепĕр хут пăхса илтĕм, вара хуллен пырса ларнă йăлтăр-йăлтăр машинăна Федьăпа юнашар кĕрсе лартăм. Тухса тартăм тăван ялтан, тăван вырăнсенчен. Хисепе çухатас мар, чыса ӳкерес мар тесе...

Машина хуларан тухрĕ те такăр çулпа малалла вĕçтерчĕ.

— Ну, хăлхана тăратсах итлетĕп, — терĕ Федя.

Эпĕ кĕскен, анчах пĕр пытармасăр мĕне пула тата ăçта кайма шут тытнине каласа патăм. Пĕр вăхăт эпир чĕнмерĕмĕр. Унтан каччă машинине çул хĕрринелле пăрчĕ, чарчĕ.

— Итле-ха, Марина, — терĕ вăл мĕнпур кĕлеткипе ман енне çаврăнса. — Халĕ эсĕ тăван кил-

тен, аннӳ патӗнчен пачах курман, пӗлмен ют ҫӗре тухса каятӑн. Хӑвна мӗнле пурнӑҫ кӗтесси ҫинчен, паллах, тавҫӑрмастӑн та. Шухӑшлама вӑхӑт та пулман ун ҫинчен. Ну, ҫитетӗн. Хваттер ҫук, паллакан-пӗлекен ҫук... Тен, ҫавӑрар машинӑна каялла. Кӑмӑлу пулсан пирӗн пата кайӑпӑр, килӗшмесен — аппа патне леҫсе яратӑп. Ыран кайса ҫырӑнатпӑр та — ӗҫӗ те пӗтрӗ. Туй тӑватпӑр. Чаплӑ туй, чи хаклӑ ресторанра. Ырӑ сунакансем савӑнччӑр, ӑмсанакансем ӑмсанччӑр. Ҫав ултавҫӑ Саша патне те ҫиттӗр шавӗ. Ҫакӑн пек хӗре хаклама пӗлменшӗн ӳкӗнтӗр.

Мӗн тӑвӑн? Юрату — ирӗк кайӑк, ӑҫта савать, ҫавӑнта ларать. Ӑна хушса итлеттереймӗн...

Кам пӗлет, темшӗн ҫапла пулать-ҫке вӑл. Пӗри чуна темле ҫунтарса асаплантарсан та, чӗре ун патнех туртать, вӑлах хаклӑ. Тепри тивӗҫлӗ, лайӑх ҫынах тейӗпӗр, ҫук, илӗртмест, кӑмӑлламасть ӑна чун-чӗре.

* * *

Федя асӑрхаттарни тӗрӗсех пулчӗ. Пединститутра пӗр курс пӗтернӗрен эпӗ ҫӗнӗ вырӑнта ача садне воспитательницӑна е шкула кӗрейӗп-ши тесе чылай вӑхӑт кӑлӑхах хула тӑрӑх ӗҫ шыраса ҫапкаланса ҫӳрерӗм. Вара хӑнӑхнӑран пулас, каллех ача садӗнче няньӑра ӗҫлеме тытӑнтӑм. Ҫӗнӗ вырӑнта нуша мана малтанхи кунсенчех йӗрлеме пуҫларӗ. Шалу пӗчӗк, укҫа ҫитмест. Тата ҫын патӗнчи пурнӑҫ мӗнлине чухлама йывӑр мар ӗнтӗ. Ҫапах ӗҫсем хуллен-хуллен юсанма пуҫларӗҫ. Виҫӗ уйӑхран ырӑ ҫынсем пулӑшнипе общежитие вырнаҫрӑм, тепӗр икӗ уйӑх иртсен эпӗ ӗҫлекен ача садӗнчех воспитательница вырӑнӗ пушанчӗ. Вӗренме пӑрахмарӑм — специальность кирлех.

Пилӗк ҫултан университет пӗтерсе вырӑс чӗлхипе литература учителӗн дипломне илтӗм. Хама хам

ачаранах çавăн пек ĕнентернĕрен-ши, мана учитель пуласси пĕрре те илĕртместчĕ. Диплом илсен кăштах ĕçлетĕп те урăх çĕре куçатăп тесе шутлаттăм. Каярахпа кĕтмен çĕртен çак кăткăс, йывăр ĕç кăмăла кайнине туйрăм. Ман ята малтан шкулта, унтан районта та ырăпа асăнма пуçларĕç. Уроксене итлеме, вĕренме урăх шкулсенчи вĕрентекенсем пыма тытăнчĕç.

Çапла çулсем иртсе пычĕç. Йывăр тунсăх, ӳттире тăраннă шăрпăк евĕр, чылай вăхăт çаплах чуна ыраттарса пурăнчĕ. Ĕнтĕ ватă хĕр шутне кĕтĕм. Çапах пурнăçăн хăй йĕрки пур. Тантăшсен ачисем çине тĕмсĕлсе пăхма тытăнтăм. Çемье çавăрас шухăш час-часах пуçа пыра-пыра кĕме пуçларĕ... Тупрăм вара мăшăр... Асăнас килмест кун çинчен. Çапах вăл та ман пурнăçăн пĕр татăкĕ-çке. Çынни манран икĕ çул аслă. Çаврăнăçуллă, чипер, нумай вуланă. Пĕр сăмахпа каласан, çиелтен пăхма килĕшӳллĕ арçын. Васкарăм пулас çав эпĕ. Унăн шухăш-кăмăлне, вăл мĕнлине лайăх пĕлмесĕр ун мăшăрĕ пулма килĕшрĕм. Çулталăк аванах пурăнтăмăр. Анчах пĕррехинче ача пирки сăмах хускатрăм çеç, тутине тăсрĕ, кăмăлĕ пăсăлчĕ, хирĕçсе кайрĕ. «Мĕн тума кирлĕ халĕ пире ача-пăча? Пурнăç кĕске. Çамрăк чух вăл панă телейпе ытларах савăнса юлмалла», — терĕ. Каярахпа ирĕклĕ юрату çинчен пакăлтатма пуçларĕ. Мана ӳкĕтлеме тытăнчĕ, ĕнентерме тăрăшрĕ. Килĕшменшĕн эпĕ «ялти тĕттĕм ухмах», «пурнăçран юлнă хĕрарăм» пулса тăтăм. Вара уççăнах хăйĕн çывăх тусне сĕннĕ хыççăн эп тек çакна тӳссе пурăнас темерĕм...

Пĕррехинче роно заведующийĕ уроксем хыççăн хăй патне кĕме ыйтрĕ.

— Марина Витальевна, — терĕ вăл умри хутсем çинчен пуçне çĕклесе, — Кубăна кайма килĕшместĕр-и? Эпир кунта канашларăмăр та сирĕн кандидатура çинче чарăнса тăтăмăр.

Сĕнĕве эпĕ хаваслансах йышăнтăм. Мĕншĕн каяс мар? Çемье çук, ачам-пăчам çук. Мана çав аякри илемлĕ утрав çамрăкĕсене вырăс чĕлхи вĕрентме тивĕçлĕ теççĕ пулсан ма шанăçа тӳрре кăларас мар?

...Ну, Кубăра мĕнле пурăнни, мĕнле ĕçлени — урăх калаçу. Договор тăрăх унта виçĕ çул ĕçлемеллеччĕ, анчах вăхăчĕ вĕçленсен ярасшăн пулмарĕç. Тата икĕ çула юлтăм.

Ĕнтĕ çитет ют çĕршывра пурăнса. Киле, киле каймалла. Йăлтах тунсăхласа çитрĕм. Уйăх мар, юлашки кунсем тем тăршшĕн туйăнма пуçларĕç. Çук, Куба çĕршывне тиркесе каламастăп. Унăн капăр çут çанталăкне, ырă кăмăллă çыннисене, пĕлӳшĕн çунакан студентсене нихăçан та манас çук эпĕ. Анчах тăван çĕршыв хаклăрах, çывăхрах. Кĕтет вăл, илĕртет, чĕнет. Акă эпĕ аэродромра. Акă çĕнĕ туссемпе сывпуллашса хамăр самолета, вырăс самолетне, кĕрсе ларатăп.

Çапла, чылай çул иртрĕ эпĕ Сашăна юлашки хут курса уйăрăлни... Халĕ мана аякри çамрăклăхра юлнă Саша та, эсĕ те пĕр çынах теççĕ. Пĕр çынах... Ăсăмпа йышăнатăп эпĕ çакна, анчах чĕре килĕшесшĕн мар. Канăç памасть мана, хирĕçлет, йĕрет. Халĕ эсĕ ман ума тухса: «Марина, пулăш мана, çăл мана», — тесе калас пулсан эпĕ шухăшласа тăмăттăм. Юрамасть сана çапла пурăнма. Ăнланатăн-и? Ю-ра-масть! Мĕншĕн тесен эсĕ — Саша... Эпĕ юратнă каччă Саша.

Çапла эпĕ çурри чăнласа, тĕрĕсрех каласан, шутлани пултăрччĕ тесе хама хам хавхалантарса пурăнтăм, ăшăмра темиçе хут та Сашăпа калаçрăм, ӳкĕтлерĕм, тилмĕртĕм, ĕнентерме тăрăшрăм...

— Вăн пырать сулланса, — илтрĕм пĕрре чӳречерен пăхса тăракан анне каланине. — Укçа илнĕ ĕнтĕ. Ури çинче аран-аран тăрать.

— Кам?

Чӳречерен пырса пӑхма вӑй-хал ҫитереймерӗм.

Килтен эпӗ йывӑр туйӑмпа тухса кайрӑм. Вырӑна ҫитсен чӑтаймарӑм, ӑшӑ ҫыру ҫырса ятӑм. Хирӗҫ ҫырмарӗ.

Тепӗр ҫул отпуска каллех тӑван килте ирттерме шут тытрӑм. Юлашки вӑхӑтра ҫуралнӑ вырӑнсен туртӑмӗ вӑйланнине туя пуҫларӑм. Ҫунатӑмсем ывӑнаҫҫӗ-ши? Ун пек шутлама ватӑ мар та-ха...

Ку хутӗнче те анне чугун ҫул станцинче кӗтсе илчӗ. Киле ҫитсе ирхи апат ҫиме лартӑмӑр ҫеҫ, тахӑшӗ алӑкран шаккарӗ.

— Кӗрӗр, кӗрӗр, — терӗ анне.

Алӑк уҫӑлмарӗ. Каллех шаккани илтӗнчӗ.

— Кам пулчӗ вара ку? — анне тӑрса алӑк патнелле утрӗ.

— Чӑрмантарнӑшӑн каҫарӑр, Варвара Осиповна, — илтӗнчӗ арҫын сасси. — Марина Витальевна килнӗ терӗҫ. Самантлӑха тухаймӗ-ши? Калаҫмалли пурччӗ те...

— Ҫитсе тӑтӑн апла... Лӑпкӑн апат ҫиме те памастӑн ҫул ҫинчен килнӗ ҫынна. Акӑ алӑ тенкӗ. Юлашки хут паратӑп. Тек ан шаккаса ҫӳренӗ пултӑр.

Ҫӑвара хыпнӑ апат пырта хытса ларчӗ. Саша... Нивушлӗ ҫаплах?.. Нивушлӗ усал тӗлӗк мар ку?

Эпӗ ӑна ҫав кунах куртӑм. Урама тухрӑм ҫеҫ, кӗтсе тӑнӑ пулас, тӳрех утса пычӗ. Сывлӑх сунчӗ, киле килнӗ ятпа саламларӗ, вара тем илме-ҫке — астумастӑп ӗнтӗ — укҫа ҫитмест тесе кивҫен ыйтрӗ. Ҫапла час-часах Саша эпӗ урама тухасса кӗтсе тӑратчӗ. Карттусне хывсах сывлӑх сунать, парӑмне халӗ те тавӑрса парайманшӑн пӑшӑрханса калаҫать, ӗҫлемест пулин те паян-ыран укҫа илмелле тесе ӗнентерет, вара каллех кивҫен ыйтать. Эпӗ унӑн тӑртаннӑ питне, мӗскӗннӗн йӑпӑлтатса пӑхакан куҫне куратӑп та, чӗрене йывӑр тунсӑх хупӑрлать. Пӗтрӗ иккен ҫын...

Ĕнтĕ аннен кашни çырăвне илсе уçмассерен чĕрене шиклĕ туйăм çӳçентерсе илет. Мĕнле-ши унта? «Пуртте унчченхи пекех. Пысăк улшăнусем çук», — тенине вулатăп та вăхăтлăха лăпланатăп.

Акă каллех çыру килчĕ. Вуласа тухрăм та — ӳте тирĕннĕ шăрпăка кăларнă хыççăн ыратни лăп пулать — çавăн пекех манăн та чĕре лăштах кайрĕ, шухăш-кăмăлăма çутă канлĕх çавăрса илчĕ. Тĕтре хыçĕнче пăхакан хĕвел евĕр çав туйăм паян кунĕпех чунăма çутатса ăшăтать. Çырăвĕсенче Сашăна нихăçан та асăнман анне ку хутĕнче сăмахне шелленмен. «...Татюк, шеремет, мĕн чухлĕ чупрĕ ăна сыватасшăн. Вара кăçал Çĕн çул хыççăн вĕсем патне икĕ çын килчĕ — арçынпа хĕрарăм. «Упăшка хурăнташĕсем», — терĕ ун чух Саша амăшĕ. Каярах пĕлтĕм — нимĕнле тăван та мар иккен. Татюк хăй шыраса тупнă вĕсене, вăл йăлăннипе килнĕ тет. Нумай вĕреннĕ çынсем пек туйăнмарĕç. Тĕрлĕ йывăр чир-чĕртен сыватма пултараççĕ-мĕн. Çур уйăх пурăнчĕç кӳршĕсем патĕнче. Чăнах, вĕсем кайсан эрне те иртмерĕ — Саша ĕçе кĕчĕ. Пăхатăп та, ир-каç картишĕнче тем шаккать, юсать, тирпейлет. Пирĕн пахча алăкĕ чалăшса кайнăччĕ, çавна килсе тӳрлетсе пачĕ. Çур çул иртрĕ ĕнтĕ — ĕçнине курман. Хăй те пачах улшăнчĕ — пичĕ-куçĕ те çуталса илемленчĕ. Каллех хут-кĕнекепе аппаланма пуçларĕ». Çырури çак йĕркесем вара пачах тĕлĕнтерчĕç: «Саша амăшĕ калать. Авланас пирки сăмах хускатсан итлесшĕн те мар тет. Икĕ çул каялла эсĕ ун патне юрататăп тесе çыру çырнă имĕш. Çав çырăва та, сан сăн ӳкерчĕке те çак тарана çитичченех упрать иккен Саша. Салам калама хушрĕç — ывăлĕ те, амăшĕ те...»

Тавтапуç, аннеçĕм, ырă хыпаршăн! Саламсемшĕн тавтапуç... Ăнлантăм эпĕ сана, тăванăм, тавçăратăп эсĕ систерсе каланине. Çак çыру виçĕ уйăх маларах килнĕ пулсан... Анчах пурнăçăн хăйĕн

çулĕ... Манăн та çĕнĕ хыпар пур сана валли, анне. Пурнăç маншăн хĕрарăм телейне ытла та шеллерĕ. Çавăнпа хальхинче те темле пулĕ тесе пĕлтерме васкамарăм. Эпĕ качча тухрăм. Çынни лайăх пекха. Çулталăк каярах вăл арăмне пытарнă. Икĕ ача унăн. Хĕрĕ пĕлтĕр качча тухнă, упăшкипе пурăнать. Тăвата çулхи Руслана ашшĕ виçĕ эрне каяллa асламăшĕ патĕнчен илсе килчĕ. Шутсăр лайăх ача. Иленчĕ мана, хыçранах çӳрет. «Марина аппа, мĕншĕн çапла вăл? Марина аппа, ку мĕншĕн капла? Юмах вуласа пар-ха, Марина аппа...»

Виçĕм кун вара ĕç хыççăн ун патне садика кĕрсен чупса пычĕ те... «анне» тесе мăйран ыталаса илчĕ. Никам хушмасăр, никам вĕрентмесĕр. Савăннипе кăшт çеç йĕрсе ямарăм. Çапла, илтрĕм, эпĕ те илтрĕм ача юратса «анне» тенине... Манăн пĕчĕк пепкем! Акă вăл кунтах, çумрах сĕртĕнкелесе çӳрет. Ӳсĕркелет те, паян садика ямарăмăр, шăкăлтатать пĕчĕк чĕлхипе. Тем те пĕлес килет унăн, тем çинчен те ыйтать. Ашшĕ: «Эсĕ Руслан мар, сана Мĕншĕнкке тесе чĕнес пулать», — тесе кулать...

Саша, пурнăçу сана çапла тĕксĕм шурлăха илсе çитернĕшĕн эпĕ те айăплă мар-ши? Тухмаллаччĕ-и тен çав каç сан пата пахчана. Эсĕ ун чух тем çинчен-çке пĕтĕмпех каласа паратăп терĕн. Çавăн чухнех ишĕлме тытăннă пулĕ-ши телейӳ? Юрату, ӳкĕнӳ чăннипех чĕрӳне çунтарнă-и тен?.. Çав кун ман ума пурнăç икĕ çул, икĕ шăпа тухса тăратрĕ: е санпа пулас, суя, анчах пурпĕр чуна илĕртекен юратупа савăнса, киленсе ятăма ярас, хисепĕме çухатас, е ăна сирсе таса та тивĕçлĕ пурнăç шырас... Телейсĕр юрату теççĕ çакăн пек чух. Çук, килĕшместĕп. Çулсем иртрĕç, хуйхă-суйхă сĕвĕрĕлсе лăпланчĕ, тек вăл чĕрене çунтарса ыраттармасть. Эпир те улшăнтăмăр, тахçанах айван ачасем мар. Анчах çав таса, хĕрӳллĕ туйăм çути ăшра халĕ те сӳнмест. Ку пирĕн шурăмпуç çăлтăрĕ аякри çам-

рăклăхран пире ăшă саламсем ярать. Пуç таяр çак парнешĕн пурнăçа.

Саша, Алексаша... Чикан Сантăр... Саншăн халĕ чĕререн савăнатăп. Малашнехи пурнăçу ăнăçлă пултăр. Телей сунатăп сана...»

Ал çырăвĕ çакăнпа вĕçленет. Çыраканĕн ячĕ те, хушамачĕ те çук. Хăçан çырнине те кăтартман. Пичете пама хатĕрленĕ литература произведенийĕ-ши ку е Марина чăннипех хăй пурнăçĕн пĕр пайне шурă хута шанса каласа хăварас тенĕ? Тата вагонра çак хура хуплашкаллă тетраде вуласа пыраканĕ кам пулнă-ши? Маринах-и?.. Ыйтмаллисем татах та пур. Анчах шухăшласан кирлех-ши кун çинчен пĕлме?

Юрий Дмитриевич тетраде хупрĕ те сехечĕ çине пăхса илчĕ. Урам тăршшĕпе нӳрĕ çил чупрĕ, йывăç çулçисене хускатса хуллен кăштăртатрĕ.

## ШЫРЛАН ХĔРРИПЕ

Ĕçрен таврăнакан Таис пысăк çулран пăрăнчĕ те кăкăр тулли сывласа ярса васкамасăр малалла утрĕ. Юратать вăл хăй пурăнакан пĕчĕк урама. Кунта машинăсем час-час çӳремеççĕ. Çавăнпа та шавлă мар вăл. Тата йывăçлă, симĕс. Çуркунне çĕмĕрт, сирень, шăлан тата ытти тĕрлĕ йывăççем çурăлса куçа илĕртеççĕ. Халĕ ылтăн кĕркунне. Кăнкăвак тӳпере ялкăш хĕвел хĕртсе пăхать, анчах пăчă мар, сывлăш тап-таса, кĕленче пек çутă, тавралăх янкăр уçă, лăпкă. Тĕксĕм сивĕ кунсем пуçланиччен урам симĕс тĕсне улăштарса йăмăх капăр тум тăхăнчĕ. Мĕнле тĕс çук пулĕ халĕ унта! Пăхса тăранайми илем! Сисмесĕрех чун çĕкленсе каять, çав вăхăтрах тата темле çутă тунсăх чĕрене пăчăртать. Юлашки ăшă кунсем... Çапла, иртет вăхăт, сисмесĕрех малалла шăвать.

Акă Таис пурăнакан пилĕк хутлă çурт. Подъезд умĕнче, тенкел çинче, çулланнă хĕрарăм ларать.

— Салам, Анфиса Максимовна!

— Салам, Таис. Ĕçрен килетĕн-и?

— Урăх ăçтан пултăр ĕнтĕ. Килтен — ĕçе, ĕçрен — киле. Çапла иртет пирĕн пурнăç... Сывлăхăр мĕнле, Анфис аппа?

— Сывлăхĕ-качки. Мухтанмалли çук ĕнтĕ манăн, ватă çыннăн. Пуç ыратать. Паян тата ăш-чик вăрканипе аптăрарăм. Вĕçĕмсĕр йĕрес килет. Шеремет хĕрĕ, пĕр самантлăха та ăшран тухмасть.

— Мĕнле хĕр? Мĕн пулнă? — чарăнса ыйтрĕ подъезда кĕме тăнă Таис.

— Э-э... Эсĕ ирех пĕрремĕш сменăна ĕçе кайнă та хыпар илтмен пулĕ-çке. Кил-ха, лар, каласа парам... Салминсен хĕрне Таньăна пĕлнĕ-и эсĕ?

— Салмина Таньăна-и? Ара, палламасăр. Митьăпа пĕр класра вĕренчĕç-çке вĕсем. Тем пулнă ĕнтĕ...

— Вĕлернĕ ăна çĕр каç. Хамăр урамрах. Авă çав выранта...

— Ай-уй! Чăнах-и? Кам?.. Мĕншĕн? — Таис шăм-шакĕ тăрăх сивĕ сăрăлтатса саланчĕ.

— Камне хальлĕхе никам та пĕлмест çав. Çамрăксем пулĕ тесе калаçаççĕ. Çавсем ытла та иртĕхме тытăнчĕç юлашки вăхăтра. Ларатăп вăт пуçа çĕмĕрсе — мĕн пулчĕ ку чухнехи этеме? Мĕне кура пĕр айăпсăр çын пурнăçне татрĕç. Халĕ кăна çитĕнсе çитрĕ вĕт-ха.

Подъездран пĕчĕк пӳллĕ хыткан хĕрарăм тухрĕ.

— Мăнтăрпа алхасаççĕ хальхи çамрăксем, — калаçăва хутшăнчĕ вăл. — Капăр тумланаççĕ, тутлă çиеççĕ. Ĕç шучĕ çук вĕсен. Çӳреççĕ хула тăрăх çапкаланса. — Хĕрарăм ларчĕ, пĕчĕк хутаçран çип çăмхипе çап-çутă йĕпсем кăларчĕ те васкасах çыхма тытăнчĕ.

Ку Клавти, Таис кӳрши. Таврара мĕн пулса иртнине, мĕнпур хыпар-хăнара Клавти пуринчен малтан пĕлет.

— Каласа пĕтерейместĕм сана, — терĕ Анфис

аппа. — Таня каҫхине тантӑшне троллейбус ҫине ӑсатма кайнӑ тет. Ашшӗпе амӑшӗ кӗтеҫҫӗ-кӗтеҫҫӗ, хӗр ҫук та ҫук. Мӗн пулчӗ? Мӗншӗн халӗ те килмерӗ тесе урама тухаҫҫӗ. Хӑйсен подъездӗнчен инҫе те мар выртать тет юн юхтарса.

«Салмина Таня... Йӑпӑш пит-куҫлӑ, вӑтам пӳллӗ хӗр. Ҫӳллӗ ҫамки ҫине хура ҫӳҫ пайӑркисем ӳкнӗ. Лӑпкӑ, чипер», — аса илчӗ Таис.

— Амӑшӗ, шеремет, ҫавӑнтах тӗшӗрӗлсе анчӗ тет. «Васкавлӑ пулӑшу» илсе кайнӑ иккӗшне те, — хыткан пӳрнисене хӑвӑрт-хӑвӑрт вылятса хушса хучӗ пикенсех ҫыхакан Клавти.

— Ҫӑлайман-и вара?

— Ӑҫта ҫӑлан? Чӗре тӗлӗнченех чикнӗ тет ҫӗҫӗпе...

— Эх, хуйхӑ! Ӗмӗр манайми тӗпсӗр хуйхӑ! Ачапӑчана асапланса, юратса ӳстеретӗн те...

Анфис аппа кӗсйинчен шурӑ тутӑр кӑларса шывланнӑ куҫне шӑлса типӗтрӗ.

— Айӑпсӑр ҫынна вӗлерекене ӑна хӑйне те пӗтермелле. Ун евӗр путсӗртен пурпӗр йӗркеллӗ этем пулмасть, — мӑкӑртатрӗ Клавти ҫиллессӗн. — Саккунӗсем йӑваш пирӗн. Ҫавна кура иртӗхеҫҫӗ ку чухнехи ҫамрӑксем.

— Камӑн тискер алли ҫӗкленчӗ-ши ҫав ҫапҫамрӑк чун ҫине? — хаш сывларӗ Анфис аппа.

Кӳршӗсене итленӗ май Таис чӗрине сисмесӗрех темле шиклӗ туйӑм шӑвӑнса кӗчӗ.

— Мӗне кура?.. Ҫаратас е мӑшкӑллас шутпаши вара? — ыйтрӗ вӑл.

— Ӑна-кӑна каламарӗҫ. Ылтӑн ҫӗрри те алӑрах тет... Ара, вӑхӑчӗ те нумай пулман ун чух. Вун пӗр сехет те ҫитмен тет. Урамра та ҫын ҫӳреме пӑрахман, — пӗлтерчӗ Клавти.

Вӑл ӗҫне чӗркуҫҫийӗ ҫине хучӗ те пуҫне ҫӗклерӗ.

— Ытла вата ҫын та мар ӗнтӗ эпӗ. Алӑ ҫула ҫит-

ме те пайтах пурӑнмалла-ха. Анчах мӗн тери улшӑнчӗ самана... Астӑватӑп, вун тӑххӑрти хӗр ача эпӗ ун чух. Ҫӗрле иккӗмӗш сменӑран пӗр-пӗччен хваттере таврӑнаттӑм. Аслӑ ҫулран чылай аякра, тарӑн ҫырма хӗрринче, пурӑнаттӑм эпӗ. Никам та нихӑҫан та хӑратман мана, никам та кӳрентермен. Халӗ вара... Анфис аппа, эсир пурнӑҫ курнӑ хӗрарӑм тата учительница пулнӑ. Ачасем те йӗркеллӗ ҫынсем сирӗн, — тӑсрӗ Клавти сӑмахне. — Калӑр-ха, мӗнле ӳссе пулаҫҫӗ вӗсем, ҫавнашкал тискер чунлӑ ҫамрӑксем?

Ватӑ хӗрарӑм шухӑша кайнӑн кӗске вӑхӑт чӗнмерӗ. Ҫинҫе тураттисене ҫӗрелле уснӑ лапсӑркка хурӑн ҫинчен ун чӗркуҫҫийӗ ҫине сап-сарӑ ҫулҫӑ вӗлтӗртетсе ӳкрӗ. Анфиса Максимовна ӑна ватӑ пӳрнисемпе шӑла-шӑла якатма тытӑнчӗ.

— Хамӑр хушӑрах ӳсеҫҫӗ, Клавти, — терӗ вӑл юлашкинчен пуҫне салхуллӑн сулкаласа. — Ҫын преступник пулса ҫуралмасть. Ӑна эпир хамӑр тӑватпӑр. Хамӑрах ҫапла ҫитӗнтеретпӗр. Мӗн акатӑн, ҫав шӑтать.

— Нихӑш ҫемьере те ку пирӗн ача усал ҫын пултӑрччӗ тесе ҫитӗнтермеҫҫӗ те. Пурин те ӑслӑ, йӗркеллӗ ӑру ӳстерес килет. Пулаҫҫӗ-ҫке вӗсем, пулаҫҫӗ. Ана ҫинчи ҫум курӑкӗ пекех, акмасӑрах шӑтса ӳсеҫҫӗ, — терӗ Клавти каллех ҫыхма тытӑнса. — Манӑн хамӑн ача ҫук та, хуйхӑ ҫук. Аппа ҫемйинех илетӗп эпӗ. Аппи те, йысни те ӗҫчен ҫынсем. Ывӑлӗ вара виҫӗ пуса тӑмасть. Ҫирӗм иккӗ тултарчӗ ӗнтӗ. Ӗҫлесшӗн мар. Сыпас тесен вара яланах ухута. Ӗҫсе килет те тытӑнать ҫавӑрӑнма, пӗтӗрӗнме. Ним калама та ҫук. Урапине чуптарса пымасан тӳрех юнама, чышкисемпе ҫапкалашма тытӑнать. Мӗн тӑвӑн унпа, киревсӗрпе? Вӑт ӳсрӗ тал пиҫен... Никама юрӑхсӑр усал. Эй, тур-тур. Амӑшӗ ҫине алӑ ҫӗклекен ҫын ҫын-и вӑл!

— Нивушлӗ амӑшне хӗнет? — тӗлӗнчӗ Таис.

— Пулкалать çав. Пĕрре ман умрах шанлаттарса ячĕ.

— Хĕнемесĕр. Вăй пур унăн — ăс-тăн кирлĕ мар. Каллĕ-маллĕ шухăшлама пĕлмест, вĕрентмен ăна, — терĕ Анфиса Максимовна сиввĕн. — Шырлан хĕррипе утнă пек туяттăм эпĕ хама ача-пăча ÿстернĕ чух. Халиччен курман-пĕлмен шырлан хĕррипе... Ура айне тинкерсе пăхмасан, асăрханса пусмасан кашни утăмрах инкек сыхлать сана. Ÿснĕ чух ача-пăча çитĕннисене пăхать, пурне те вĕсенчен курса, вĕсенчен илтсе вĕренет-çке.

— Йысни эрехне сыпкалама юратать çав, чăнах та... Ну юрĕ... Ывăлĕ ашшĕне хывнă тейĕпĕр, — тăсрĕ шухăшне сăмах ваклама юратакан Клавти. — Ĕçкĕпе супса çÿрекен çын çемйинче йĕркеллĕ ача-пăча сайра пулать. Вăл паллă-ха пурне те. Анчах тепĕр чух ăслă, тивĕçлĕ çынсен ывăлĕ-хĕрĕсем те алхасса, иртĕхсе çÿреççĕ-çке. Судра, халăх заседателĕнче пулнă чух, пайтах куратăп эп ун йышшисене...

— Урам пăсать хальхи ачасене. Мĕн тăвăн? Хура-шурă курман вĕсем, ырăпа усала уйăрма вĕренсе çитеймен. Каяççĕ астаракансем хыççăн, — хушса хучĕ Таис.

Клавти, тем калас пек, ун çине пăхса илчĕ, анчах шарламарĕ.

— Этемре пурте пĕчĕкрен пуçланать — ырри те, усалли те, — терĕ Анфис аппа çирĕппĕн. — Хăш-пĕр çемьесенче, пăхатăп та эпĕ, ача-пăча ÿстерес мĕнпур хуйхи-суйхи те ăна тутлăрах çитерес те капăртарах тумлантарас шухăш çеç. Нимĕн те шеллемеççĕ ывăлĕ-хĕрĕшĕн, тем тума та хатĕр. Эх, иртĕхтереççĕ, эх, курнăçланаççĕ ачисемпе. Анчах пĕчĕк ача чун йăпанăвĕ çеç мар-çке, вăл пулас çын. Ăна хисеплес пулать, ырă тĕслĕх парса чи пĕчĕкрен пурăнма вĕрентес пулать. Вара ÿсерехпе урамра вăл тĕрлĕ çапкаланчăксемпе паллашмасть,

путсĕрсем хыççăн каймасть. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ çакна ăнланманни, ачи-пăчин пуласлăхĕ çинчен шутламанни шутсăр тĕлĕнтерет мана.

— Чăнах та. Темле алхассан та апла ан ту, ачам, юрамасть темест çав хăшĕ-пĕри, — килĕшрĕ ватă хĕрарăмпа Клавти. — Кăшт та вĕрентсе каламасан ăçтан ырă ача ÿстĕр ĕнтĕ? Ахальтен мар авалхи чăвашсемех ача хыççăн каякан суккăр пулнă тенĕ.

— Халĕ çав Таньăна вĕлернĕ çын çинчен шухăшлатăп та, — терĕ Анфиса Максимовна салхуллăн, — этем-и вăл? Усал тискер кайăкпа та танлаштарас килмест ун пеккине. Тепĕр енчен илсен, кам айăплă унăн ăшĕ-чунĕ çапла киревсĕр пулнăшăн? Шкул-и? Эпир-и? Ыттисем-и? Тин кăна пурăнма тытăнать вĕт вăл. Кам пулĕ ĕнтĕ унран? Мĕнле пурнăç кĕтет ăна, шеремете, малашне? — Анфис аппа ассăн сывласа ячĕ те шăпланчĕ. Клавтипе Таис та шарламарĕç. Хуллен вăркăшса вĕрекен уçă çил кăна сарă хурăн çулçисемпе тем çинчен хуллен пăшăлтатрĕ.

— Ах, каллех пуç ыратма пуçларĕ. Пĕрре те пăлханма юрамасть çав, — терĕ ватă хĕрарăм. Вăл тенкел çинчен йывăррăн çĕкленчĕ, урисене хуллен илсе пусса подъездалла кăштăртатрĕ.

Тек Таис та тытăнса тăмарĕ. Хăрушă хыпар, кÿршĕ хĕрарăмĕсен калаçăвĕ унăн савăк кăмăлне тĕксĕмлетрĕç, чунне çÿçентерчĕç.

Хваттерте шăп. Туфлине хывса Таис çемçе тапочка тăхăнчĕ, чĕрне вĕççĕн утса пÿлĕм алăкне уçса пăхрĕ. Митя çывăрать. Месерле тăсăлса выртнă та, хăрах алли кăкăрĕ çинче, тепри çĕрелле усăннă. Пуçĕ вĕçĕнче хулăн кĕнеке. «Александр Дюма. «Виконт де Бражелон или десять лет спустя», — вуласа илчĕ Таис. Унăн пичĕ ăшшăн çуталчĕ. Урамра илтнĕ хыпар çинчен манса вăл пĕр вăхăт ывăлĕ çине савăнса пăхса тăчĕ.

«Чипер каччă ӳсрĕ, — шухăшларĕ Таис. — Кĕлетки-çурăмĕ каснă лартнă ашшĕн. Çӳллĕ, маттур. Хальлĕхе çинçешкерех çеç. Çăра тĕксĕм куç харшийĕ, çавра пичĕ те Энтрин. Çутă сăнне, кăвак куçне вара амăшĕнне илнĕ. Çӳçĕ хура та, сарă та мар, çырă, икĕ тĕсе пĕрле хутăштарса тунă пек».

Таис алăка шăппăн хупрĕ. Урăх тум тăхăнчĕ, кухньăна кĕрсе сĕтел çинчен пуçтарма тытăнчĕ. Митя каллех ăшăтман пĕçерсе хăварнă апата. Кăлпасси, услам çу, çăкăр, помидор татăкĕсем тирпейсĕррĕн йăваланса выртаççĕ. Çурри тултарнă чей курки ларать. Капла вĕçĕмсĕр типĕлле çисен чирлесе каять вĕт ача.

— Анне, эсĕ килнĕ-çке, — илтрĕ Таис кухньăна кĕрсе тăнă ывăлĕн сассине. — Хырăм выçрĕ манăн. Çимелли пур-и?

— Пĕçерме ĕлкĕреймерĕм çав. Халĕ кăна таврăнтăм ĕçрен. Яшка ăшăтса парас-и?

— Яшка çиес килмест.

— Апла кăштах кĕтес пулать. Çиччас, ывăлăм, кĕçех пĕçеретĕп.

Таис Митьăна халĕ кăна илтнĕ хыпара пĕлтерес тенĕччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, ывăлĕ пăрăнчĕ те хăй пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, алăк çăринче уçă кăштăртатса çавăрăнни илтĕнсе кайрĕ. Энтри те çитрĕ ĕçрен.

— Митя килтех-и? — ыйтрĕ вăл арăмĕнчен.

— Килтех-çке.

— Ĕçе кайнă-и вăл паян?

— Ĕçе? — тĕлĕнерех пăхрĕ упăшки çине Таис. — Пĕл... Пĕлместĕп. Эпĕ хам та нумаях пулмасть таврăнтăм та... Мĕн пулнă?

Энтри нимĕн те каламарĕ, утса пычĕ те пӳлĕм алăкне яри уçса ячĕ. Диван çинче кĕнеке вуласа выртакан Митя хускалмарĕ.

— Ĕçе кайнă-и эсĕ паян?

Лешӗ кӗнекине куҫ умӗнчен сирсе ашшӗ ҫине сӳрӗккӗн пӑхса илчӗ.

— Мӗн?

— Ӗҫе кайнӑ-и эсӗ тетӗп? — сасартӑках капланса килнӗ ҫиллине путарма тӑрӑшса йӑвашлатрӗ сассине Энтри.

— Ӗҫе?.. А-а... Вырнаҫма ӗлкӗреймерӗм-ха. Документсем ҫитмеҫҫӗ терӗҫ, — ывӑлӗн пит-куҫӗ каллех кӗнеке хыҫне пытанчӗ.

— Мӗн туса выртатӑн апла пулсан? Е хутсем пухма та пирӗн ҫӳремелле-и саншӑн? — ҫӗкленсе хӑпарчӗ ӑшра ҫил-тӑвӑл.

Кӗнеке каллех сирӗлчӗ, ҫинҫе вӑрӑм пӳрнеллӗ шуранка аларан диван ҫине куҫса выртрӗ.

— Кӑнтӑрла пуҫ ыратрӗ манӑн. Каяймарӑм. Халӗ ӗҫ кунӗ вӗҫленчӗ, — каччӑн кӑвак куҫӗсем умра тӑракан ашшӗ ҫине вӑрттӑн, сиввӗн пӑхса илчӗҫ те айккинелле тарчӗҫ.

— Тӑма шутлатӑн-и эсӗ, ҫук-и? Ҫамрӑк пуҫпа мӗнле кунӗ-кунӗпе йӑваланса выртас килет-ши? Халех ҫӗкленнӗ пултӑр! — сассине хӑпартрӗ Энтри.

— Мӗн?.. Мӗн пулчӗ? — вирхӗнсе кӗчӗ пӳлӗме Таис.

Чӗппине хӳтӗлекен кӑлӑх чӑххи пек, вӑл тӳрех упӑшкипе ывӑлӗ хушшине ыткӑнчӗ.

— Мӗн алӑк урлӑ каҫнӑ-каҫманах урма тытӑнтӑн эсӗ паян?

— Кай-ха, ан ҫапкалашса тӑр кунта! — терӗ Энтри вӑйлӑ аллипе арӑмне хӑй умӗнчен сирсе. — Манӑн ҫак харам пырпа чунтан калаҫса илмелле.

Таис пӑрӑнчӗ. Пӗлет вӑл мӑшӑрне. Таҫта такам пӑснӑ ӗнтӗ кӑмӑлне. Ун пек чух Энтри ниме тӑман сӑмахшӑнах ахӑрса каять. Каснӑ лартнӑ ҫулӑм хыпса илнӗ типӗ ҫатрака пекех. Ялкӑшса, ҫатӑртатса илет те лӑпах пулать. Вара тем каласан та, темле кӳренмелли сӑмахсемпе вӑрҫсан та, чӗнмест, арӑмӗн хаярланнӑ пичӗ-куҫӗ ҫине пӑхса йӑвашшӑн кулка-

лать çеç. Çавăнпа Таис сăмахсăрах пăрăнчĕ. Чĕннинчен чĕнменни лайăхрах. Юратнă ывăлĕ çине шеллесе пăха-пăха илчĕ çеç. Çапах мĕн тулаштарса янăха Энтрие паян? Ĕçре мĕн те пулин сиксе тухнăши. Е Митя çинчен ырă мар хыпар илтрĕ-ши? Ăшра каллех паçăрхи шиклĕ туйăм чуна кансĕрлесе йăшăлтатса илчĕ.

— Ну, тăратăн-и эсĕ? Е манăн пулăшмалла-и?

Митя юлхавлăн çĕкленчĕ. Сапаланнă çӳçне синçе алă тупанĕпе васкамасăр шăлса якатрĕ, ашшĕ çине пăхмасăр кăмăлсăр пит-куçне çутă чӳрече еннелле пăрчĕ.

— Ĕçе кĕме шутлатăн-и эсĕ?

— Каларăм-çке пуç ыратать тесе, — кăмăлсăррăн сăмах хушрĕ Митя. — Мĕн, ĕç тесе чирлеме те юрамасть-и? Тата харам пыр тесе хăртма эпĕ вун çиччĕре çеç-ха...

— Вун çичĕ çул сахал-и вара? Каччă вĕт эсĕ... Ӳссе çитнĕ каччă... Çĕрĕ-çĕрĕпе таçта çапкаланса çӳреме çул çитнĕ, ĕçе кĕме ача кăна. Çапла-и? Сан пек чухне эпĕ кăнтăрла аттепе тан заводра ĕçленĕ, каçсенче шкула вĕренме çӳренĕ.

— Илтнĕ, илтнĕ, — каллех мăкăртатрĕ Митя сиввĕн, çаплах чӳрече çинчен куçне илмесĕр. — Вĕçĕмсĕр пĕр сăмах... Итлеме кичем...

— Кичем... пур çĕрте те кичем сана, кахала. Шкулта вĕренесшĕн пулмарăн, уроксенче ларма кичем иккен. Учительсем начар, вĕрентме пĕлмеççĕ. ПТУра та кичем аптратрĕ пулас. Виçĕ уйăхран ытла тытăнса тăраймарăн. Хам пата илтĕм. Тивĕçлĕ ĕçе вĕрентсе чăн-чăн ăста тăвăп тесе ĕмĕтленеттĕм. «Санпа ĕçлес килмест, эсĕ усал надзиратель пекех, кашни хусканăва сыхлатăн», — терĕн.

— Вĕçĕмсĕр çавăнпа ӳпкелетĕн ачана, — упăшки çилли сирĕлме тытăннине туйса калаçăва хутшăнчĕ Таис. — Темех пулĕ ĕнтĕ сан ĕçӳ. Кама килĕшет, кама çук. Чун кăмăлламан ĕç ĕç-и вăл?

Ух! Иртрĕ çавра çил... Митя амăшĕ çине çуталнă пит-куçпа кăмăллăн пăхса илчĕ.

— Анне тĕрĕс калать, мана, чăнах та, ун ĕçĕ ытларах килĕшет, — терĕ вăл. — Анне, илетĕн-и мана хăв патна? Ну, малтан, паллах, практика, вĕренмелле, экзамен тытмалла пулĕ ĕнтĕ.

Çакна кĕтмен Энтри тĕлĕннипе ывăлĕ çине тинкерчĕ.

— Мĕ-ĕн? Эсĕ хĕрарăм парикмахерĕ пуласшăн-и? Арçын пуçупа... Çак вăй-халпа...

— Ма аплах тиркетĕн? Начар ĕç мар, — терĕ Таис кăмăллăн. — Тен, чăннипех чун туртăмĕ вăл Митьăн. Пирĕн патра арçынсем те пайтах тĕрмешеççĕ.

— Анне авă мĕнле хисепре. Вăл хулара чи паллă ăстасенчен пĕри. Епле культурăллă, чаплă клиентсем пыраççĕ ун патне, — Митьăн кăвак куçĕсем çаплах сăмах тупаймасăр аптраса тăракан ашшĕ çине уççăнах тăрăхласа пăхрĕç. — Тата... ĕçĕ тупăшлă. Анне, миçе тенкĕлĕх калăм пуçтарăнать санăн уйăхра?

Таис пичĕ-куçĕнчи хаваслăх самантрах тарса пытанчĕ. Вăл пĕрре ывăлĕ, тепре упăшки çине сисĕнмеллех шикленсе пăхса илчĕ.

— Тупăш? Мĕнле тупăш? Мĕнле калăм? — ыйтрĕ Энтри канăçсăррăн. — А-а... ăнлантăм. Авă мĕн илĕртет иккен сана çав ĕçре... Сăмса шывĕ тепĕр тесен! Эсĕ халех ун пеккисем... халех ун пеккисем çинчен...

Лăпланма ĕлкĕреймен ăшри тăвăл тепĕр хут çĕкленчĕ. Капланса килнĕ хаяр çилĕ ăс-тăна хупларĕ. Энтри хăй те сисмерĕ, шăнăрлă пысăк чышкисене чăмăртаса çаплах пĕр шухăшсăр кулкаласа ларакан ывăлĕ енне талпăнчĕ.

— Энтри! Эсĕ мĕн? Ухмаха ертĕн-им? — сирпĕнчĕ ун умне хăранипе сасартăках шурса кайнă Таис.

Ывăлне хăй кĕлеткипе хупăрласа вăл икĕ аллипе те упăшкин сарлака кăкăрне хирĕнчĕ. Мĕнпур вăйне пухса ăна каялла тĕртме тытăнчĕ.

— Кай кунтан! Халех тухнă пултăр пӳлĕмрен! — çухăрса ячĕ хĕрарăм.

— Илтрĕн-и ывăлу мĕн тенине? Акă вăл сан воспитани. Çав ирсĕр йăлана пăрах тесе миçе хут каларăм сана, — арăмĕн аллине сирме хăтланса çаплах Митя патнелле кармашрĕ тарăхса кайнă ашшĕ. — Куртăн-и халĕ? Каламлă ĕç шырать иккен вăл! Ĕç мĕнне пĕлмест, халех аякран тупăш илесси çинчен ĕмĕтленет.

Хăйĕн чысне, вуншар çул тимлĕн ĕçлесе илнĕ ырă ятне çапла ниме хумасăр варалама пăхнине Таис лăпкăн итлеме пултараймарĕ. Ĕнтĕ вăл ывăлне кăна мар, хăйĕн тивĕçне те хӳтĕлеме хатĕрленчĕ. Мĕн пулать те мĕн килет...

— Çитет! — пит-куçне хаяррăн ялкăштарса çиллессĕн çапрĕ Таис сĕтеле. — Мĕн кăшкăрашатăн ăсран тухнă çын пек? Манăн та карланкă пур! Эпĕ те пултаратăп... Мана çапла темĕн те пĕр каласа хăртма эпĕ çаратмастăп, клиентсен кĕсйисене кĕместĕп. Хăйсем параççĕ пулсан ма илмелле мар? Укçи те темиçе пус. Тьфу! Тупăннă тĕрĕслĕх шыракан паттăр тепĕр тесен. Хăшĕ-пĕрисем авă пинĕ-пинĕпе вăрлаççĕ. Пурĕ пĕрех хисеплĕ çынсен шутĕнче çӳреççĕ.

— Эсĕ, мĕн, тĕрĕс çын çук тесшĕн-им?

— Эсĕ пур тĕнчере пĕр ухмах. Тем тума кирлĕ пуль. Мĕн пачĕ вăл сана, çав тĕрĕслĕх?

— Та-ис! Мĕн калаçатăн эсĕ ача умĕнче? Мĕне вĕрентетĕн? Унăн пурнăç тăвас пулать.

Анчах хĕрсе кайнă Таис чарăнасшăн пулмарĕ.

— Илттĕр. Вăл та пĕлтĕр чăн-чăн пурнăç мĕнлине. Сан пек ухмах ан пултăр. Кулаççĕ санран пĕрле ĕçлекенсем. Хăçантанпа ĕçлетĕн комбинатра. Ударник, малти ретре пыракан тесе хваттер пачĕç-и

сана? Миҫе хутчен тӗрлӗ сӑлтав тупса черетрен сиктере-сиктере хӑварчӗҫ? Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен чӗлхӳ вӑрӑм санӑн. Аслисем умӗнче шӑлна ҫыртма пӗлместӗн. «Пирӗн ҫав-ҫав ҫитмест», «Ку апла мар», «Ҫакна ҫапла тӑвасчӗ», — витлесе илчӗ хӗрарӑм. — Эпӗ ҫӳремен, эпӗ чупман пулсан халӗ те ҫав ҫӗрӗк пӳртре асапланса пурӑнмалла. Алӑ ҫула ҫитрӗн, халӗ те ача ӑсӗ каймасть. Ҫук вӑл пурнӑҫра эсӗ шыракан тӗрӗслӗх! Ҫук! Илтетӗн-и?

— Таи-ис!

— Мӗн, ҫапас тетӗн-и? — пуҫне мӑнкӑмӑллӑн ҫӗклесе Таис упӑшки ҫине чӑрсӑррӑн пӑхса илчӗ. — Ме, ҫап, хӗне. Вӑй пур — ӑс кирлӗ мар. Эсӗ урнӑ чух эпӗ шӑпах тӑратӑп. Эсӗ те итле...

— Эй, санпа! — аллине сулчӗ Энтри. — Вӗрентех эппин! Атя хуҫ, пӗтер ывӑлун пурнӑҫне. Аса илӗн те, кая пулӗ, — вӑртах ҫавӑрӑнса вӑл пӳлӗмрен сирпӗнсе тухрӗ. Ун хыҫҫӑн хваттер алӑкӗ ҫиллессӗн шартлатса хупӑнчӗ.

Икӗ чи ҫывӑх ҫын ҫапла чунтан тарӑхса хирӗҫнине Митя лӑпкӑн итлесе ларчӗ. Калаҫӑва хутшӑнмарӗ вӑл. Унӑн илемлӗ пичӗ-куҫӗнче нимӗнле туйӑм та палӑрмарӗ. Ашшӗ хыҫҫӑн алӑк хупӑнсан вӑл каллех диван ҫине тӑсӑлса выртрӗ те кӗнекине уҫрӗ.

Энтри пусма картлашкисем ҫийӗн хӑвӑрт чупса анчӗ. Подъездран тухрӗ те, такам хӑваланӑ евӗр, васкасах урампа утрӗ. Йывӑҫ сулхӑнӗнче ларакан арҫынсенчен пӗри ӑна ятран чӗнчӗ. Ахӑртнех, доминолла е шахматла выляма сӗнесшӗнччӗ пулӗ, анчах Энтри илтмӗш пулса чарӑнса тӑмарӗ. Аслӑ урама тухсан ӑҫталла каяс-ши тенӗн унталла-кунталла чупакан машинӑсем ҫине пӑхкаласа тӑчӗ, вара пӑрӑнчӗ те ҫывӑхри пӗчӗк сквер енне ҫул тытрӗ. Лӑпланаймасӑр пӗр вӑхӑт йывӑҫсем хушшипе, тӗрлӗ тӗспе ешерекен чечек клумбисем ҫумӗ-

пе каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ, унтан тенкел çине тĕшĕрĕлчĕ, тарăн шухăша путрĕ.

Тулли кăмăлпа таврăнчĕ Энтри паян ĕçрен. Сĕтел-пукан тăвакан комбинатра Кашкаров бригади кăçалхи çур çулта каллех малти вырăна тухрĕ. Пысăк чыс туса саламларĕç паян ĕçре бригада членĕсене. Комбинат директорĕ пурне те алă тытсах тав турĕ. Бригадира мухтама та ырă сăмахсем шеллемерĕ. Репортерсем пынă. Пĕри Мускавран терĕç. Телевизор, кино çине ӳкерсе илчĕç. Пурнăçра кун пекки яланах пулмасть. Арăмĕпе ывăлне те савăнтарас тесе Энтри хăвăртрах килне васкарĕ...

Урамра илтнĕ хăрушă хыпар кăмăла айĕн-çийĕн пăтраштарса ячĕ, сивĕ туйăм шăм-шак тăрăх сӳлесе саланчĕ...

Çапла. Пăлханма сăлтавĕ пур çав Энтрин... Пурăнас пурнăç пăрнăçсăр пулмасть тенĕ. Энтри пурнăçĕ те сисмесĕрех аяккалла пăрăнчĕ, йăнăш çулпа чупрĕ. Çакна вăл паян нихăçанхинчен те çивĕчрех туйса илчĕ.

Ывăлĕн пуласлăхĕ шиклентерет халĕ ăна. Хытах шиклентерет. Вĕренесшĕн мар Митя. Ĕçе кĕме те васкамасть. Кăнтăр кунне диван çинче йăваланса ирттерет, каç пулсан урама тухса каять...

Сакăр çул кĕтрĕç вĕсем çемьере ача çураласса. Таис врачсем, профессорсем патне кайса çӳрерĕ, курортсенче, санаторисенче темиçе хут пулчĕ. Ара, ачасăр çемье çемье-и, этем тени сĕм авалтан мăшăрланса ача-пăча çитĕнтерме ĕмĕтленнĕ-çке. Пурнăçăн тĕп тивĕçĕ ĕнтĕ вăл.

Ахаль пулмарĕ çӳрени... Хаваслă хыпара цехра пĕлтерчĕç.

— Андрей Никонорыч! Энтри пичче! — пырса тăчĕ ун патне çамрăк рабочи. — Больницăран шăнкăравларĕç.

— Мĕн?.. Мĕн терĕç? — Хыпкаланса ыйтрĕ Энтри юлташĕ çине канăçсăррăн тинкерсе пăхса.

Энтрие чи малтан арӑмӗн сывлӑхӗ пӑшӑрхантарчӗ. Юлашки вӑхӑтра Таис ытла та йывӑр ҫӳрерӗ. Ҫулӗ те сахал мар ҫав. Ҫирӗм саккӑр тултарчӗ. Мӗнле-ши вӑл? Чиперех-ши? Инкек-синкек сиксе ан тухтӑрччӗ. Ача ҫуратакан хӗрарӑм хӑрах урипе вилӗм тӑпри ҫинче тӑрать тенӗ ваттисем... Ирхине пилӗк сехетре илсе кайрӗ Таиса «васкавлӑ пулӑшу» машини.

— Сывлӑхна... Сывлӑхна упра, — мӑшӑрӗн сывлӑхӗ чӑннипех ҫавӑнтан килес пек мӑкӑртатрӗ Энтри арӑмне машинӑна ларма пулӑшса. Хӑраса чарӑлнӑ куҫӗпе Таис упӑшки ҫине пӑхса илчӗ ҫеҫ — алӑк шартлатса хупӑнчӗ... Халӗ кӑнтӑрла иртни виҫҫӗ ҫитет. Кунӗпе чунтан пӑлханса кӗтрӗ Энтри больницӑран хыпар пӗлтерессе. Темиҫе хут та шӑнкӑравларӗ вӑл ача ҫуратакан уйрӑма..

— Ну, мӗн терӗҫ? Мӗн? — хыпӑнчӑклӑн ыйтрӗ пырса тӑнӑ ҫамрӑкран.

— Саламлама хушрӗҫ, — хаваслӑн шӑлне йӗрчӗ лешӗ. — Ывӑл ҫуралнӑ санӑн. Ы-ывӑл!

— Таисӑн... Амӑшӗн сывлӑхӗ мӗнле-ши? Каламарӗҫ-и?

— Ачи те, амӑшӗ те чиперех, сывах теме хушрӗҫ.

Энтри ҫинчен темиҫе пӑт йывӑр чул катӑкӗ ишӗлсе аннӑн туйӑнчӗ. Вӑл хаваслӑн сывласа ячӗ, пичӗ-куҫӗ телейлӗ кулӑпа ӑшӑнса ҫуталчӗ. Аллинчи савине хурса Андрей Никонорович умра тӑракан ҫамрӑка ыталарӗ те, капланса килнӗ савӑнӑҫне ниҫта та хума пӗлмесӗр шӑнӑрлӑ пысӑк чышкипе ӑна тимиҫе хут ҫурӑмӗнчен ачашшӑн чыша-чыша илчӗ.

— Ну, Витек шӑллӑм, тавтапуҫ хыпаршӑн.

— Э-э, тавтапуҫпах ҫырлахмасть.

— Пӗлетӗп, пӗлетӗп. Ҫамрӑк-ха эсӗ мана вӗрентме... Эх, мать честная! — шап-шурӑ шӑлӗсене кӑтартса каллех хаваслӑн кулса ячӗ ача ашшӗ.

Ырă хыпар цехра хăвăрт чупса çавăрăнчĕ. Андрей çемйинче ача çуккине, Кашкаровсем çак куна чăтаймасăр кĕтнине пĕрле ĕçлекенсем пурте пĕлеççĕ. Пĕрисем халĕ телейлĕ ача ашшĕн аллине пыра-пыра чăмăртарĕç, теприсем хаваслă пит-куçпа пуçĕсене сĕлте-сĕлте аякранах саламларĕç.

— Ывăл çуралнă ятпа, Никонорыч!

— Маттур, Энтри!

— Менелнике пыратпăр!

Ача çуралнă. Мĕн тери ырă, çутă хыпар. Илтсен кашнинчех: «Телейлĕ пул, ачам. Лайăх, сывлăхлă çитĕн. Ĕçӳ-хĕлӳпе те, ăсу-тăнупа та халăха, çĕршыва тивĕçлĕ çын пул!» — тесе калас килет. Асапĕ те сахал мар ĕнтĕ вĕсемпе, ачасемпе. Ӳссе çын пуличчен пайтах хура-шур тӳсетĕн. Çапах савăнăçĕ те пысăк çав. Çемьере лайăх, йĕркеллĕ ачасем ӳссен ашшĕ-амăшĕн ĕмĕр сӳнми телей-çке вăл.

Ĕç кунĕ вĕçленсен Энтри çăвăнса тасалчĕ, тумне улăштарса тăхăнчĕ те васкасах цехран тухрĕ. Чи малтан пасара кайса темиçе роза туянчĕ (Таис шутсăр юратать çак чечеке), вара больница енне каякан троллейбус çине ларчĕ. Хирĕç тухнă шурă халатлă сестрапа калаçнă хыççăн вăл тинех лăпланчĕ. Блокнотран хут листи татса кĕске ăшă çыру çырчĕ те арăмне пама ыйтса каллех шавлă урама тухрĕ.

Çапла вун çичĕ çул каялла, апрель уйăхĕн çирĕм иккĕмĕшĕнче, ăшă та хĕвеллĕ кун вăтăр икĕ çулхи Андрей Кашкаров ача ашшĕ пулса тăчĕ. Ячĕ пирки вĕсем Таиспа тахçанах калаçса татăлнă. Арçын ача çуралсан Дмитрий пулать тенĕ. Мĕтри, Митя, Митюк, Дима... Шутласан хуть те кам çуралсан та пурпĕрех пек ĕнтĕ. Анчах Энтри хăй ăшĕнче ытларах ывăл кĕтрĕ. Ывăл ывăлах. Вăл йăха тытса пыраканĕ, унăн тĕп вулли. Пĕр ача, паллах, çителĕксĕр. Çемьере сахалтан та виççĕн пулмалла вĕсем. Ну, кун пирки калаçма иртерех-ха. Пурнăç

йĕркеллĕ пулсан ачисем çуралĕç. Авă чупаççĕ вĕсем урамра мĕн чухлĕн. Канăçсăр халăх. Акă пĕри ашшĕпе троллейбуса кĕчĕ. Хирĕçех ларчĕç. Сасси шăнкăрав пек уçă. Кĕçех Энтри ывăлĕ те çапла шăкăлтатма тытăнать ĕнтĕ. «Вăхăт хăвăрт иртет. Сывлăхлă пултăр çеç. Вунă-вун икĕ çулсене çитсен эпĕ ăна пĕчĕккĕн ĕçе хăнăхтарма тытăнатăп, — çĕкленчĕ ăшра çутă ĕмĕт. — Пирĕн йăхра арçынсем йывăç каскалама юратаççĕ. Асатте платник пулнă. Атте те сĕтел-пукан, шкапсем, арчасем ăсталатчĕ».

Çапла, Энтри хăй те юратать çак ĕçе, ачаранах хăнăхнă. Тен, Митюк та ашшĕ ури çинех пусĕ-ха. Кам пĕлет, тепĕр вун сакăр-çирĕм çултан пĕрлех, пĕр комбинатрах ĕçлеме тӳр килĕ. Тен, Хисеп хăми çинче иккĕшĕн сăнĕ те çакăнса тăрĕ. «Кусем камсем? Пĕр хушаматлă çынсем-и?» — «Çу-ук, ашшĕпе ывăлĕ». — «Ну-у! Ай, маттурсем!» — тĕлĕнĕç куракансем... Ну, урăх ĕçе килĕштерсе е вĕренсе пĕр-пĕр лайăх специальность алла илни те начар мар. Апла та юрать. Çапах кулленхи пурнăçра арçынна каскалама пĕлни питĕ кирлĕ.

Çакăн евĕр хаваслă шухăшсем çавăрăннăччĕ вун çичĕ çул каялла арăмĕпе ывăлĕ патĕнчен таврăнакан ача ашшĕн пуçĕнче. Халĕ вара... Эх!..

Энтри ассăн сывласа ячĕ, пуçне çĕклесе йĕритавра пăхса илчĕ.

Август уйăхĕн иккĕмĕш çурри пулсан та кунĕ лăпкă, ăшă. «Çумăрлă тĕксĕм кĕр çитиччен тепре савăнтарам-ха сире», — тенĕ пек, çут çанталăкĕ тавралăха илемлетме çуттине те, тĕрлĕ савăк тĕсне те шеллемест... Паркра çын çукпа пĕрех. Вунă-вун икĕ утăмра тенкел çинче шурă шлепкеллĕ, çулланнă хĕрарăм кĕнеке вуласа ларать, вăхăтран вăхăт пуçне çĕклесе хăйăр çинче вылякан виçĕ-тăватă çулхи ача çине пăха-пăха илет. Акă çумранах ыталаннă çамрăк мăшăр иртсе кайрĕ. Пысăк

хура йытă çавăтнă çын йывăç тĕмĕсем хыçĕнче курăнса çухалчĕ.

— Саша! Сашенька! Юрамасть, ачам, юрамасть тивме! — илтрĕ Энтри.

Кĕнеке вуласа ларакан хĕрарăм вăртах çĕкленчĕ те йăмăх клумба çывăхĕнче аллине чечек енне тăснă ача патне чупса пычĕ.

— Юрамасть ăна тивме, ывăлăм!

— М-м-м! — тутине тăсрĕ пĕчĕк çын. Вăл хĕрарăм çине кăмăлсăррăн пăхса илчĕ те тепĕр вырăна кайса тăчĕ, каллех чечек енне туртăнчĕ.

— Татсан пупу пулать вĕт ăна. Йĕрет вара вăл. «И-и-и, мана Саша кӳрентерет тет», — чăтăмлăн ăнлантарчĕ хĕрарăм. Вăл кĕсйинчен шурă тутăр кăларчĕ те ача умне пĕшкĕнсе унăн хăйăрпа вараланнă пĕчĕк аллисене, капăр тумне шăлкаласа тасатрĕ. — Эсĕ, хитре чечек, пирĕн Сашукран ан хăра. Вăл лайăх ача, тивмест сана. Шăршласа пăхасшăн çеç. Çапла вĕт, Саша?

— Çапла, — терĕ ача хавасланнă сасăпа. Унтан чечек умне пĕшкĕнчĕ те сăмсине кулăшла картлантарса темиçе хутчен хыттăн мăшлатса илчĕ.

— Ан йĕл, ан хăла, — хушса хучĕ вăл, вара пĕчĕк алă тупанĕпе чечек тăррине хуллен сăтăрса ачашларĕ.

— Вăт маттур! — мухтарĕ ăна хĕрарăм. — Халĕ киле кайăпăр. Каçхи апат çиме вăхăт. Ăçта-ха витрӳ? Ăскăчу тата? Ну, утрăмăр-и?

Витре йăтнă пĕчĕк çын ансăр сукмакпа васкамасăр таплаттарса пынине Энтри вăл курăнми пуличченех çутă, ăшă кăмăлпа пăхса юлчĕ. Темшĕнçке ассăн сывласа ячĕ. Вĕçĕмсĕр унталла-кунталла куçакан канăçсăр шухăш ăна каллех тахçан иртнĕ кунсене аса илтерчĕ.

— Атте килчĕ! — хаваслăн кăшкăрать пĕчĕк Митя ĕçрен таврăннă ашшĕне хирĕç малти пӳлĕме сирпĕнсе тухса.

Энтри ăна вăйлă аллисемпе тытать те пуçĕ çийĕн çĕклет. Иккĕшĕ те калама çук телейлĕ, иккĕшĕ те ахăлтатса кулаççĕ. Пĕр-пĕрин хыççăн хăваласа чупма, тĕрлĕ вăйă выляма тытăнаççĕ. Унтан Митя аш-шĕне чаплă теттине кăтартать. Ăна Таис йăмăкĕ Елена Мускавран ярса панă. Вăл унта ача таварĕсем сутакан магазинра ĕçлет. Вылямалли çеç мар, кĕпе-тумтир те, урана тăхăнмалли те Митя валли Мускавран килет.

— Чаплă машина, — тет Энтри йăлтăр-йăлтăр теттене аллинче çавăркаласа.

— Пирĕн Митьăн çеç кун пекки, урăх никамăн та çук, — мăн кăмăллăн хушса хурать юнашарах кулса тăракан Таис.

— Йӳнех мар пулĕ-ха...

— Хакĕ пирки калаçмăпăр. Митя пирĕн пĕртен-пĕр ача.

— Ытлашши иртĕхтеретĕн эсĕ ăна, Таис. Пăхха кĕтесе, мĕн тĕрлĕ вылямалли йăваланса выртать. Виçĕ-тăватă кунран ку та йăлăхтарать, кăна та пăрахать.

— Эсĕ яланах çапла, — тутине тăсать Таис. — Ним те илсе пама çук ачана. Хуть те мĕн кала, ывăла эпĕ кӳрентерместĕп. Пĕр кĕпе вĕççĕн юлам, анчах унăн мĕн кирли пурте пулать.

Çемьере пĕр ача сахал тенипе те Таис килĕ-шесшĕн пулмарĕ.

— Пур пирĕн ывăл, — татса хучĕ вăл. — Эпĕ хам йышлă çемьере ӳснĕ. Нуша мĕнне пĕлетĕп. Тĕлĕкре те ан куртăр Митя ман пурнăçа.

Ача ӳснĕ май çакăн евĕр перкелешсе илесси вĕсен хушшинче час-часах сике-сике тухма пуçларĕ.

Çуллахи пĕр ырă кун ĕç хыççăн Энтрипе Таис кино кайса курма шут тытрĕç.

— Митя мĕнле? — иккĕленерех ыйтрĕ арăмĕ.

— Митя садикра. Каялла килнĕ чух çула май кĕрсе илетпĕр.

Ĕлкĕрĕпĕр-ши тенĕн Таис сехет çине пăхса илчĕ те килĕшрĕ.

Каялла килнĕ чух вĕсем ача сачĕ картишне кĕчĕç. Унта темĕн чухлĕ ача выляса чупать.

— Пирĕн группа хăш кĕтесре-ши? — калаçса илчĕ Таис пур çĕрте те хаваслăн хĕвĕшекен çамрăк ăру çине пăхкаласа.

— Анне! — илтĕнчĕ çавăнтах палланă сасă. Карта çумĕнче тăракан Митя ашшĕпе амăшне хирĕç чупса пычĕ.

— Пĕчĕк пепкем. Ылтăнăм! — çепĕççĕн ыталарĕ Таис хăй çумне ачашшăн йăпшăннă ултă çулхи ывăлне. — Мĕншĕн пĕр-пĕччен тăратăн эсĕ? Ма вылямастăн? Сывах-и? Чирлеместĕн-и? — ыйтрĕ вăл ăна куçĕнчен канăççăррăн тинкерсе.

Митя пуçне чиксе сăмсине çиллессĕн мăшлаттарса илчĕ.

— Ну, кала, мĕн пулчĕ? Ма чĕнместĕн?

— Мана кӳрентереççĕ кунта, — тутине тăсрĕ Митя.

— Кам? Кам кӳрентерет?

— Пурте. Ачасем те... Алевтина Иннокентьевна та ятларĕ мана паян.

Ывăлĕ умне пĕшкĕннĕ Таис яштах тӳрленсе тăчĕ. Халĕ кăна ачашшăн йăлкăшакан кăвак куçсем самантрах сивĕнчĕç.

— Суять вăл. Эпир ăна кӳрентермен, — пырса тăчĕ вĕсем патне ачасенчен пĕри. — Митя хăй Слава Поликарпова пуçĕнчен машинăпа çапрĕ.

— Аха. Эпĕ те куртăм. Юн тухрĕ Славикăн, — хушса хучĕ тепри.

— Вара ăна... Вара Славика Светлана Ивановна, пирĕн врач, хăй пӳлĕмне илсе кайрĕ.

— Суранне эмелпе сĕрсе çыпăçтарчĕ. Вăт, — пĕлтерме васкарĕç темиçе ача харăсах.

Çакăн хыççăн амăшĕн Митьăран: «Чăнах çапла-и? Тĕрĕссине каласа пар-ха», — тесе ыйтмалла

пекчĕ ĕнтĕ. Анчах ывăлне юлташĕсем хурласа калаçни Таиса пачах килĕшмерĕ.

— Сирĕнтен ыйтмастăп эпĕ. Кайăр кунтан, — хăтăрса илчĕ вăл йĕри-тавра пуçтаранса тăнă ачасене. — Манăн воспитательницăна курмалла. Ăçта вăл? Чĕнсе килĕр ăна кунта!

— Таис, лăплан, — чарма пăхрĕ арăмне Энтри. — Ачасем суяс çук. Кунта чăннипех Митя айăплă. Атя киле. Унта калаçăпăр. Алевтина Иннокентьевнăран ыран та ыйтса пĕлме пулать.

Таис упăшки сăмахне хăлхана та чикмерĕ, ан чăрмантар тенĕн аллине сулчĕ çеç.

— Авă воспитательница килет!

— Аха. Алевтина Иннокентьевна килет, — калаçса илчĕç ачасем.

Хăйăр сапнă тап-такăр çулпа вĕсем патне çамрăках мар типшĕм хĕрарăм çывхарчĕ. Аванмарланнă Энтри воспитательницăна сывлăх сунчĕ те аяккалла пăрăнчĕ.

— Салам, Андрей Никонорович! Салам, Таисия Васильевна! — терĕ воспитательница. — Питĕ лайăх эсир килни. Паян ĕç хыççăн хам пырас тенĕччĕ сирĕн пата.

— Салам. Пирĕн те калаçмалли пур çав сирĕнпе. Эпир те акă иккĕн тан килтĕмĕр, — хăй кăмăлсăррине уççăнах систерсе сăрхăнтарчĕ сăмахне Таис. — Алевтина Иннокентьевна, мĕн пулса иртнĕ паян сирĕн кунта? Мĕнпур ача вылять, чупать. Пирĕн Митя карта çумĕнче пĕр-пĕччен мĕскĕннĕн тĕмсĕлсе тăрать. Мĕншĕн эсир ачасене Митьăна хирĕç хĕтĕртетĕр?

Çакăн евĕр калаçăва илтме хăнăхнăран-и е хăйне çирĕп тытма пултарнăран, воспитательница пичĕ-куçĕнче пăшăрханни те, кӳренни те палăрмарĕ. Хăйпе уççăнах сивлесе юмахлакан хĕрарăм çине вăл лăпкăн пăхса илчĕ.

— Таисия Васильевна! Утар мар-и çавăнталла?

Ачасем, эсир мĕн кĕпĕрленсе тăратăр кунта? Чупăр, выльăр!

Тутине çаплах тăсса тăракан ывăлне Таис пуçĕнчен ачашласа илчĕ те, тăхта кăштах, эпĕ халех килетĕп тесе воспитательницăпа юнашар утрĕ. Энтри те вĕсем хыççăн каяс тенĕччĕ, анчах шăлан тĕмĕ хыçĕнче тăракан ачасен сассине илтсен хăлхине чăнках тăратрĕ. Çук, вĕсем чупса саланмарĕç. Пулса иртнине хăйсем ăнланнă пек хĕрӳллĕн сӳтсе явма тытăнчĕç.

— Ну, Кашкаров, лекет сана Славика пуçран çапнăшăн, — илтĕнчĕ хĕр ача сасси.

— Мана лекмест, — терĕ Митя. — Алевтина Иннокентьевнăна хăйне лекет аннерен пире пăхма пĕлменшĕн.

Тĕлĕннĕ Энтри пуçне сулкаласа илчĕ. «Кур-ха, мĕн калаçать. Вăт пĕчĕк, айван те ăна».

— Лекет сана! Пурпĕрех лекет! — хĕрӳллĕн хирĕçлерĕ Митьăна темиçе сасă.

— Лекмест. Эпĕ пĕлетĕп. Вăт куратăр акă.

— Мĕншĕн Славика эсĕ пуçран çапрăн? Çын çине алă çĕклеме юрамасть, — хĕрсех пычĕ пĕчĕк çынсен сучĕ.

— Мĕншĕн вăл мана вертолет памарĕ? Эпĕ ыйтрăм унран. Вăл хама кирлĕ терĕ.

— Эсĕ усал ача тата суеçĕ. Аннӳне суйса патăн эпир кӳрентеретпĕр тесе, — çапла пулчĕ юлашкинчен суд приговорĕ.

Тек итлесе тăма Энтри вăй-хал çитереймерĕ. Ывăлĕ патне пырса унăн ăна хулпуççийĕнчен çиллессĕн тытса силлес, аллинчен ярса илсе киле талкăштарса каяс килчĕ. Анчах вăл апла тумарĕ, пуtарчĕ вĕресе хăпарнă çиллине. Çук, куншăн Митя айăплă мар. Митя айван ача кăна... Энтри тенкел çинче ларакан арăмĕпе воспитательница енне утрĕ. Хĕрсе кайсах калаçаканскерсем, вĕсем Энтри çывхарнине асăрхамарĕç.

— Сирĕн, Алевтина Иннокентьевна, вĕçĕмсĕр пĕр сăмах. Митя апла, Митя капла, — илтрĕ ача ашшĕ Таисăн кăмăлсăр сассине. — Мĕншĕн çавăн пекех тапăнатăр эсир ман ывăл çине? Мĕн ăнланать вăл, пĕчĕкскер? Халĕ вĕсем пурте пĕр пек. Пĕрне ырласа теприне хурламалли çук. Паян ман Митя такампа чăркăшнă, ыран ăна кам та пулин çапать е тĕртсе ярать. Сирĕн шутпа, группăри мĕнпур йĕркесĕрлĕхсемшĕн Митя кăна айăплă пулса тухать.

— Таисия Васильевна, каласа пĕтерме парăр-ха.

— Митя — кăмăллă, ырă ача, — тӳрккессĕн пӳлчĕ воспитательницăна Таис. — Ăнланмастăр эсир ăна. Ача чунне курмастăр.

— Çитет калаçса, — пырса тăчĕ Энтри вĕсен çывăхне. — Таис, атя киле. Митя кĕтет авă... Алевтина Иннокентьевна, каçарăр, тархасшăн.

Таис тăчĕ.

— Нихăçан та, пĕр кунлăха та илсе килмĕттĕм эпĕ ывăлăма çакăнта. Шел, урăхла май çук, — терĕ вăл çиллессĕн. Çавăрăнчĕ те сывпуллашмасăрах пăрăнса утрĕ.

— Апăрша ачи! — илтрĕ Энтри хăй хыçĕнче воспитательница сассине. — Мĕнле çын пулĕ ĕнтĕ унран!..

«Ну, мĕн, вăрçрăн-и Алевтина Иннокентьевнăна мана кӳрентернĕшĕн?» — ыйтрĕç амăшĕ çине тĕлленĕ Митя куçĕсем.

Киле кĕрсен Энтри арăмĕпе йĕркеллĕн, тĕплĕн калаçасшăнччĕ. Çук, пулмарĕ. Мăшăрĕ ăна ăнланманнине, каланине пачах тăнламаннине курса упăшки каллех çилле тытса чараймарĕ. Хытă хирĕçрĕç вĕсем çав кун. «Юратмастăн эсĕ ывăлна! Вăл пирĕн пĕртен-пĕр ача. Çынсен ачисене хута кĕретĕн, хăвăнне хĕнесе вĕлерсен те сăмах хушас çук эсĕ!»

Мĕн-мĕн каласа ӳпкелемерĕ пуль Таис. Эрне ка-

лаҫмасӑр пурӑнчӗ, эрне ҫиллессӗн мӑртлатса ҫӳрерӗ.

Ҫук, Энтри сивлемест арӑмне, тиркешсе каламасть. Пур енчен те аван хӗрарӑм Таис. Ҫамрӑках мар пулин те, халӗ те килӗшӳллӗ пит-куҫлӑ, тӑпӑлтӑпӑл кӗлеткеллӗ. Хваттерте яланах тирпейлӗ, таса. Апат-ҫимӗҫе те тутлӑ пӗҫерме пӗлет. Кӑмӑлӗ те начар мар ахаль чух. Анчах ывӑл пирки калаҫу пуҫла ҫеҫ — ӑсне ҫухатать тейӗн. «Эпӗ сансӑрах пӗлетӗп ӑна мӗнле ӳстермеллине. Эпӗ амӑшӗ!» — тесе ҫуйхашма тытӑнать.

Алӑ сулчӗ вара Энтри. Каярахпа хӑй те арӑмӗ пек шутлама тытӑнчӗ пулас: «Чӑнах та, айван ача кӑна-ҫке хальлӗхе Митя. Унӑн малашлӑхӗ ҫинчен шутласа ма халех ҫапла пӑшӑрханас? Сахал-и ҫамрӑк чух чӑрсӑрланса ҫӳрекенсем? Ҫитӗнсен пурнӑҫ майне-шайне хӑйсемех ӑнланма тытӑнаҫҫӗ».

Апла пулин те ывӑлне ачаранах ӗҫе хӑнӑхтарса ӑсталӑха вӗрентес ӗмӗте Энтри асрах тытса пурӑнчӗ.

— Митя, дачӑра шкап ҫук пирӗн. Ҫавна тӑвас пулать. Атя, пулӑшӑн мана, — терӗ вӑл ҫуллахи пӗр ир апатланса сӗтел хушшинчен тухсан.

— Шкап тума? — куҫ харшине кӑмӑлсӑррӑн пӗркелесе упӑшки ҫине пӑхрӗ Таис. — Эсӗ куна пуҫпа шухӑшласах каларӑн-и? Е ывӑлу вун виҫҫӗре кӑна пулнине мантӑн-и? Е вӑл чӑлах пулса юлтӑр тетӗн-и?.. Ну, Энтри, тӗлӗнтеретӗн... Е пӑчкӑ-пуртӑпа каскаласси ача ӗҫӗ маррине пӗлместӗн-и?

— Таис, ӑнлан-ха эсӗ... Мана хама та ҫак ӗҫе атте вун иккӗрех хӑнӑхтарма тытӑнчӗ.

— Ямастӑп. Хуть те мӗн кала, хуть те мӗн ту, пурпӗр ямастӑп, — ҫиллессӗн татса хучӗ хӗрарӑм.

— Таис...

— Митя, ывӑлӑм, — сассине йӑвашлатса ача енне пуҫне ҫавӑрчӗ амӑшӗ. — Каях, чуп урама. Юлташусем кӗтеҫҫӗ пулӗ унта...

Митьăна мĕн... Вăл тӳрех тухса сирпĕнчĕ.

— Кӳлĕнет акă, ĕмĕрлĕхех кӳлĕнет. Нумай юлмарĕ кĕтмелли. Ун чух йăпататăн чунна, — тăрăхларах каларĕ Таис чашăк-кашăк çума тытăнса. — Хальлĕхе ӳстĕр ирĕкре, савăнтăр, култăр. Ачалăх пĕрре кăна килет.

Мĕн тăвăн? Кунпа та килĕшмелле пулчĕ Энтрин. Вĕçĕмсĕр хирĕлсе-харкашса пурăнас килместçке.

Çапла ӳсрĕ Митя. Шкулта пуçламăш çулсенче аванах вĕренчĕ, каярахпа «виççĕпе» «иккĕ» çине анса ларчĕ, тăххăрмĕш класра кĕркуннене юлчĕ. «Йăлăхтарчĕ шкул, тек каймастăп», — терĕ. Амăшĕ хирĕçлемерĕ. ПТУна вырнаçтарчĕ. Унта та вĕренесшĕн пулмарĕ Митя. Виçĕ уйăх çӳрекелерĕ те интереслĕ мар тесе пăрахрĕ. Пĕр çĕре ĕçе кĕренçи пулчĕ, тепĕр çĕре. Нумай тытăнса тăраймарĕ. Вăй хурса ĕçлес пулать-çке, тата чăтăмлăх кирлĕ. Çапла çапкаланса ирттерчĕ вăхăта. Çулталăк каярах мотоцикл илсе парăр тесе минретме пуçларĕ. Энтри, паллах, хирĕçлемерĕ. Каччă пулчĕ-çке Митя. Çамрăк чух кирлĕ вăл та, ку та. «Тăхтама тивет кăштах, хальлĕхе укçа çук», — терĕ çеç. Тăхтасшăн пулмарĕ Митя. Пĕр каç юлташĕпе кӳршĕ кил картинчен илсе тухнă çаксем хайхи мотоцикла. Çӳретме те пĕлмест хăй. Юпа çумне çапăнса ватса пăрахнă. Телее, инкек-синкек пулман, урине шăйăрттарнипе иртсе кайрĕ. Мĕншĕн çапла хăтлантăн тесе ыйтсан ярăнас килчĕ терĕ. Пĕрре те каллĕ-маллĕ шухăшлама пĕлмест, пĕчĕк ача пекех. Юрать-ха мотоцикл хуçи лайăх çын пулчĕ, милицие евитлемерĕ... Ваннă машинăшăн, паллах, тӳлеме тиврĕ... Кĕркунне çара каймалла, тен, çавăнта кăштах ăстăн кĕрĕ.

Çывăхрах юрă кĕвви хыттăн кĕрлесе кайни асилĕве татрĕ. Паркра, Энтрирен инçе мар, çамрăксен ушкăнĕ курăнчĕ. Магнитофонран тухакан

илемсĕр хăйăлти сасă таврари шăплăха хупларĕ, аяккалла кайса йăвашланчĕ. Тата тепĕр ушкăн иртрĕ. Йывăç тĕмĕ хыçĕнче гитара тĕнкĕлтетни, такамсем ахăлтатса кулни илтĕнчĕ. Парка яш-кĕрĕм пуçтарăнма тытăнчĕ.

Тен, Митя та пулать кунта каçсерен... Ĕнтĕ миçе уйăх вăхăта пĕр уссăр ирттерет. Кăнтăрла çывăрать, каç пулсан капăр тум тăхăнать те тухса каять, сĕм çĕрле е ир енне тин таврăнать. Такампа таçта çапкаланса çӳрет. Энтри ăна пĕлмест. Юлашки çулсенче Митя ашшĕпе пачах калаçасшăн мар, яланах пăрăнать. Ыйтсан е чĕнмест, е хваттертен тухса каять. «Ну, мĕн çулăхатăн ача çумне? Хăв вун çиччĕре пулман-им?» — ӳпкелет ăна яланах Таис...

Ĕнтĕ хĕвел анăçри çĕр хĕррине перĕнчĕ. Унăн юлашки пайăркисем хура пĕлĕт татăкĕсем çине ӳксе сиввĕн ялкăшрĕç. Уçă çил вăркăшса йывăç тăррисем çийĕн выляса иртрĕ, Энтри ури умне темиçе сарă çулçă татса пăрахрĕ те каллех шăпланчĕ. Каç сулхăнĕ çĕр çине анчĕ, ӳт-пĕве çӳçентерчĕ.

Каяс тесе Энтри тăчĕ, анчах утăм та ярса пусма ĕлкĕреймерĕ.

— Мĕн çулăхатăр эсир ман çума? — илтĕнчĕ çывăхрах пăлханнă сасă. — Каларăм-çке, пымастăп эпĕ сирĕнпе.

— Пыратăн. Эпир чĕнетпĕр пулсан килĕшмеллех. Ан хăра, киле çитиччен ăсатса яратпăр, — уççăнах тăрăхласа каларĕ çамрăк арçын.

Энтри шартах сикрĕ. Ăш-чик пĕрре сивĕнсе, тепре ăшăрхаса кайрĕ. Сасси... Сасси паллană пек... Нивушлĕ?.. Хальлĕхе калаçакансене курмарĕ вăл. Вĕсене лапсăркка йывăç тĕмĕ хупăрласа тăрать.

— Ан тĕкĕн! Яр алла! Яр тетĕп! А-а-й-й! Ма пăратăн!

Энтри сасăсем патне вирхĕнчĕ... Вăрăм сарă çӳçлĕ хĕр ыратнине тӳсеймесĕр авкаланать. Ун çывăхĕнче виççĕн... Çук! Йăнăшрĕ Энтри. Телее,

йăнăшрĕ. Хĕр умĕнче виçĕ палламан çамрăк тăрать. Пĕри çӳллĕ, тăсланкă. Вун ултă-вун çичĕ çулсенче пулĕ. Вăл хĕре аллинчен çатăртаттарса тытнă та ун çине сиввĕн кулкаласа пăхать. Юлташĕсем тата çамрăкрах, имшертерех.

— Мĕн пулчĕ? Мĕн тӳпелешетĕр эсир кунта? — тухса тăчĕ вĕсен умне Энтри. Вăл йывăррăн сывларĕ, сивĕ тарпа витĕннĕ кĕлетке-çурăмĕ вĕттĕн чĕтрерĕ.

— Пичче, эсĕ утах, уттар ху çулупа. Кунта санăн ĕç те çук, — терĕ тăсланкă каччă ун аллинчен çăлăнасшăн турткалашакан хĕр çинчен куçне илмесĕр.

— Халех янă пултăр! Вĕçерт аллуна! Ну! Илтрĕн-и каланине?! — Энтри каччă çывăхнех пырса тăчĕ.

Тăсланкă пуçне ун енне пăрчĕ те куçран сиввĕн юнаса пăхрĕ. Хĕскĕч евĕр çатăртаттарса тытнă алă ерипен, ирĕксĕррĕн вĕçерĕнчĕ.

Çăлăннă хĕр аслă çул еннелле тапса сикрĕ.

— Эсĕ мĕн?.. Кам хушрĕ сана пирĕн хушша кĕме? Сана, мĕн, ăса кĕртмелле-им? — ансăр кăкăрне паттăррăн каçăртса пырса тăчĕ Энтри умне тепĕр çамрăкĕ. Виççĕмĕшĕ чĕнмесĕр аллине сылтăм кĕсйине чикрĕ те çурăм хыçнелле пĕр-икĕ утăм ярса пусрĕ. Тăсланкă каччă палламан арçыннăн сарлака, çирĕп хулпуççийĕ, вăйлă шăнăрлă аллисем çине сăнаса пăхса илчĕ те куçне аяккалла пăрчĕ.

— Кайрăмăр, — терĕ вăл юлташĕсене. — Тепре куриччен, пичче. Ун чух урăхла калаçăпăр, — вара çаврăнчĕ те урисене ӳркенчĕклĕн пусса сукмакпа малалла таплаттарчĕ. Юлташĕсем ун хыççăн сулланчĕç. Пĕри, чышкисене чăмăртаса Энтри умне пырса тăни, лайăххах астуса юлам-ха тенĕ пек, икĕ хутчен çаврăнса пăхрĕ.

— Вăт кашкăр çурисем, — мăкăртатрĕ Энтри çамрăксем хыççăн пăхса юлса.

Кĕсйинчен шурă тутăр кăларса вăл тарланă çам-

кине шăлса типĕтрĕ. Алăсем халĕ те сисĕнмеллех чĕтрерĕç. Нивушлĕ Митя та килтен тухса кайсан çапла иртĕхсе çӳрет?..

Паян ĕçрен таврăннă чух Энтри калама çук хăрушă хыпар илтрĕ. Хĕре вĕлерекенсене куракан пулнă имĕш. Пĕрне паллană пулать. Хамăр урамри ачах-мĕн... Çук, Митя мар... Тăван ывăлĕ çинчен çапла усал шухăшлас килмест Энтрин. Йывăр вăл, ытла та йывăр юратнă, хаклă çын айăплă тесе йышăнма. Анчах пурнăç пурнăçах. Унран пăрăнса утаймăн. Йышăнас пулать лайăхне те, усалне те. Çапла, пĕр тĕлсĕр, ĕçлемесĕр пурăнни çынна ырра вĕрентмест. Митьăн та акă пуян та çăмăл пурнăçпа пурăнас килет. Ĕçлемесĕр, вăй хумасăр. Мĕн тейĕн? Ку чухнехи саманара çавăн евĕр ĕмĕтленме айван çамрăксемшĕн тĕслĕхĕ те çук мар çав. Тата халь кăна тĕл пулнă иртĕхсе, алхасса çӳрекен çамрăксем пек юлташсем тупса ярсан... Кампа çӳретĕн, çавăн пек пулатăн... Ырри пултăр тесен уншăн вăй хурас, тăрăшас пулать, усалли хăех, сисмесĕрех çулăхать çын çумне... Çук! Инкек сиксе тухасса кĕтсе ларма юрамасть. Митьăна хăвăртрах, çине тăрсах ĕçе вырнаçтармалла, шăршлă лачакара путма памалла мар...

Энтри çапла шухăшласа илчĕ те васкасах килнелле утрĕ.

— Йăлăхтармасть-и сана кунĕ-кунĕпе çапла диван çинче йăваланса выртма? — ыйтрĕ Таис ывăлĕн пӳлĕмне кĕрсе. — Апат пиçрĕ.

Митя çăмăллăн тăрса ларчĕ.

— Лайăх япала, — терĕ вăл аллинчи кĕнекине шап хупса. — Уйăрălма çук. Вуланăçемĕн вулас килет. Вăт пурăннă çынсем, э? Мĕн кирлĕ — пурте пур вĕсен, мĕн тăвас килет — ирĕк. Никам та чармасть, никам та чăрмантармасть. Эпир вара... Эх! — Митя аллине сулчĕ.

— Юрĕ-çке, юрĕ. Тупнă танлаштармалли. Кĕнеки лайăх, чăнах та, анчах унта пирĕн пек ĕç çыннисем çинчен мар, корольсем, графсем çинчен çырнă.

— Эпĕ мĕнрен кая вара? Манăн та вĕсем пек пурăнас килет.

— Миçемĕш ĕмĕрти пурнăçа çырса панă унта, пĕлетĕн-и? Халĕ урăх вăхăт, çыннисем те урăх... Пуян бизнесменсем те вăй хурсах тĕрмешеççĕ тесе çыраççĕ хаçат-журналсенче...

— Шел. Эх, пĕр-пĕр граф е герцог пулас пулсан эпĕ...

— Вара мĕн тунă пулăттăн-ха? — ывăлĕ çине кăмăллăн йăлкăшса пăхса шӳтлĕ калаçăва тăсрĕ Таис.

— Манăн çавăн чухлĕ пуянлăх, тĕрлĕ кермен-сем, çавăн пек ирĕклĕх пулас пулсан-и?..Э-э, пĕлĕттĕм эпĕ мĕнле пурăнмаллине. Мĕнпур тавралăх ăмсанса пăхĕччĕ... Çук çав. Дмитрий Кашкаров чухăн çемьере çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ столяр, амăшĕ парикмахер пулнă, — терĕ Митя кичем сасăпа. — Çапла вара, хăйĕн çамрăк пурнăçне тулăхрах, илемлĕрех тата савăнăçлăрах тăвас тесен унăн хăйĕн тăрăшмалла, хăйĕн çине тăмалла пулнă... Ну, анне, мĕнле? Пырать пек-и Митя Кашкаров биографийĕ?

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ, ачам? Мĕн тăвăн? Пурнăçĕ çапла, — терĕ Таис ассăн сывласа. — Халĕ те нимĕн те шеллеместпĕр саншăн. Мĕн ыйтнине вăй çитнĕ таран пурне те илсе паратпăр... Паллах, малашне ху пурнăçушăн хăвăн та тăрăшмалла пулать. Унсăрăн епле... Ĕçе кĕрĕн акă. Тимлесе ĕçлесен, ăсталăха ӳстерсе пырсан укçу та пулĕ, яту та чапланĕ. Тен, паллă çын пулса тăрăн, — йăпатасшăн пулчĕ Таис ывăлне.

Митя сӳрĕккĕн кулса ячĕ.

— Анне, паçăр атте умĕнче эпĕ юри хĕрарăм парикмахерĕ пулатăп терĕм. Халĕ шухăшлатăп та...

А мĕн? Чăннипех начар мар ĕç. Унта сирĕн яланах ăшă, таса. Чаплă, культурăллă клиенткăсем те пайтах пыраççĕ пулĕ ĕнтĕ сан пата. Эсĕ хулари чи ăста, лайăх парикмахерсен шутĕнче-çке.

— Мĕнех вара, кăмăлу пулсан заявлени çыр. Калаçăп эпĕ кадрсен пайĕнче. Хамах вĕрентетĕп сана, — хавасланчĕ каллех амăшĕ.

Ывăлĕ ĕçе кĕме васкаманни юлашки вăхăтра Таиса та пăшăрхантарма пуçларĕ çав.

— Эсĕ чăннипех тупăш тăватăн-и, анне? Миçе тенкĕ пухăнать уйăхра?

Ăшă кулă Таис пичĕ-куçĕнчен самантрах тарса пытанчĕ.

— Ан сӳпĕлтет-ха кирлĕ мара, — мăкăртатрĕ вăл. — Атя. Хуран кукли пĕçертĕм паян. Çи ăшăлла, — çапла каларĕ те пӳлĕмрен тухрĕ. «Мĕн çулăхрĕ вăл паян ман çума çав сăмахпа? — шухăшларĕ хĕрарăм кăмăлсăррăн. — Ну, илнĕ... Илмен теместĕп... Клиентсенчен хăшĕ-пĕри йăпăрт тыттарнă укçана каялла тавăрса паман. Мĕнех вара уншăн? Ăста, килĕшӳллĕ ĕçшĕн савăннă çын çапла тав тунишĕн мĕн именмелли пур?» Апла пулин те темшĕн-çке Таисăн çакăн çинчен ывăлĕпе калаçас килмерĕ.

«Çапах ăçтан пĕлет Митя кун çинчен? Килте нихăçан та сăмах хускатман-çке. Илтнĕ-ши камран та пулсан? Е пĕчĕк чух хăй курнине астăватьши? Энтри командировкăсене кайсан Таисăн ачине ирĕксĕрех ĕçленĕ çĕре илсе кайма тиветчĕ... Ну, пĕлет пулсан пĕлтĕр. Тепĕр тесен Таис çеç мар çапла илекен. Çынсем авă... Митя пĕчĕк ача мар ĕнтĕ. Çитес çул салтака каймалла. Ăнланма тивĕç чăнчăн пурнăç мĕнлине». Çапла шухăшларĕ Таис чунне кансĕрлекен туйăма хăваласа.

Акă Митя пӳлĕмĕнчен тухрĕ. Тĕкĕр умĕнче васкамасăр хырăнчĕ, ваннăра шăмпăлтатрĕ, çӳçне тураса якатрĕ, вара сĕтел хушшине ларчĕ.

— Ну, мĕн, хуран кукли çийĕпĕр-и? — терĕ вăл аллисене хаваслăн сăтăркаласа. — Тутлă пулас. Шăрши епле!..

Ывăлĕ пăсланакан пĕчĕк кукăльсене вилкăпа тире-тире киленсех çинине Таис ăшă кăмăлпа пăхса ларчĕ. «Пĕлет-ши Митя Таньăна вĕлерни çинчен?» — çутă чуна кансĕрлесе каллех пырса кĕчĕ пуçа пăлханчăк шухăш.

— Эсĕ мĕн... мĕн ман çине темле пăхатăн? — ыйтрĕ çисе тăраннă Митя аллисене шăлса тасатнă май.

Таис чунĕ çӳçенсе илчĕ.

— Мĕнле пăхрăм вара?

— Ну, темле... шанмасăр. Атте пек. Уншăн эпĕ çапкаланчăк та, харам пыр та, чыс çухатнă çын та. Тен, эсĕ те çапла шухăшлатăн?

— Митя, эпĕ сана нихăçан та çавăн евĕр каламан... Аçу та...

— Э-э, каламасăрах пĕлетĕп эпĕ. Туятăп, — пӳлчĕ каччă амăшне.

Вĕри чее пĕчĕк кашăкпа хуллен пăтратса вăл кĕске вăхăт чĕнмесĕр ларчĕ. Унăн тĕксĕм куç харшийĕсем кăмăлсăррăн хускалса илчĕç, кăвак куçĕсем сивĕнсе хĕсĕнчĕç.

— Мĕн пулнă ăна паян? Мĕн алăк урлă ярса пуснă-пусманах ахăрашма тытăнчĕ вăл? — ыйтрĕ Митя çаплах кашăкĕпе чейне пăтратса.

Чухлать Таис Энтри мĕншĕн пăлханса таврăннине. Анчах епле калăн кун çинчен Митьăна?

— Пĕлместĕп çав. Ĕçре тарăхмалли пулнă-и тен?

— Эпĕ вара мĕншĕн айăплă? Мĕн тесе ман çине урнă йытă пек сиксе ларчĕ вăл?

— Чипертерех калаç, ывăлăм, — чарчĕ ăна амăшĕ, — вăл санăн аçу.

— Пулин, — çиллессĕн хирĕçлерĕ Митя. — Юрать-ха çапмарĕ. Кăтартнă пулăттăм эпĕ ăна чышкăпа мĕнле хăмсармаллине.

— Митя! Мĕн пулнă сана паян? Эсĕ, мĕн, аçупа çапăçас тетĕн-и? — Таис ывăлĕ çине шикленерех пăхса илчĕ. — Ухмах ача... Пăх-ха эсĕ ăна, мĕн калаçать... Е аçу мĕнле вăйлине пĕлместĕн-и?

— Пĕлетĕп, — терĕ Митя сиввĕн. — Анчах вăл та пĕлтĕр манпа асăрханса калаçмаллине. Эпĕ ăна...

— Мĕн тăвас тетĕн вара?

— Пур манăн хута кĕрекенсем. Систеретĕп кăна. Вĕсем ăна хăвăрт тăна кĕртĕç.

— Сан тусусем çавăн пек çынсем-и вара?..

— Çапла. Çавăн пек çынсем, — терĕ Митя. Вăл тути-çăварне, аллисене шурă салфеткăпа шăлса илчĕ те ăна ывăçĕпе чăмăртаса сĕтел çине пăрахрĕ.

Таис ывăлĕн хаярланса сивĕннĕ питне, усаллăн ялкăшакан куçне курчĕ те калас сăмахне калаймасăр шăпланчĕ. Çан-çурăм тăрăх шиклĕ туйăм чуна сăрăлтаттарса чупса саланчĕ. Митя кухньăран тухсан вăл кĕске вăхăт хускалмасăр шухăша кайса ларчĕ, унтан сĕтел çинчен пуçтарма пуçларĕ.

Урама кайма тирпейленсе Митя каллех кухньăна кĕчĕ. Халĕ вăл илемлĕ тумпа. Юратать Таис ывăлне тумлантарма. Пуринчен те чипер пултăр вăл. Пурте ăмсанса пăхчăр вĕсен ывăлĕ çине. Ку тумне, ют патшалăхран кӳрсе килнĕскере, Таис палланă хĕрарăмран хакне хак парса илчĕ.

— Анне, мана укçа кирлĕ.

— Ёнер кăна пилĕк çĕр тенкĕ патăм-çке. Пĕтертĕн те-и?

— Мана укçа кирлĕ, — терĕ каллех Митя кăмăлсăр сасăпа.

Таис йывăррăн çĕкленчĕ те кухньăран тухрĕ. Кăштах кĕтсе тăракан ывăлне тирпейлĕн хутлатнă хĕрлĕ кăвак хут тăсса пачĕ.

— Сахалтарах та ку, — терĕ Митя укçине кĕсйине пытарса. — Хыт кукарланма пуçларăн эсĕ, анне, юлашки вăхăтра. Ача чух хăвах, аса илтермесĕрех,

тыттараттăн. «Ме, илсе çи мĕн те пулин», — теттĕн. Ăçта салатрăн, мĕн илтĕн тесе те каламастăнччĕ. Халь ыйтсан та уçă кăмăлпа парасшăн мар.

— Ну, ача чух... Мĕн танлаштаратăн ун чухнехине хальхипе? Панă ĕнтĕ темиçе тенкĕ. Халĕ сана тăрантарма çук укçаран, темĕн чухлĕ парсан та самантрах салататăн. Эпир аçупа миллионерсем мар, пирĕн кашни тенкĕ, кашни пус шутра.

— Тупатăн. Пĕртен-пĕр ывăлу валли тупатăнах. Эсĕ лайăх анне, маттур, пултаруллă.

Çак сăмахсене илтсен Таис ăшĕнчи кӳренӳ, хĕвел питтине лартнă услам çу пекех, çемçелсе ирĕлсе кайрĕ.

— Юрĕ-çке. Укçа-тенкĕ тытма пĕлместĕн тесшĕн çеç эпĕ.

— Кĕçех манăн хамăн укçа пулать. Кăштах чăт унччен. Ан мăкăртат... Ну, эпĕ кайрăм, — утрĕ Митя алăк патнелле. — Кĕçĕр, тен, часах килеймĕп. Юлташăн çуралнă кунне уявламалла.

— Митя, ачам, асăрханса çӳре унта... Пули-пулми çынсемпе ан паллаш. Такам тĕлне пулăн. Авă Таня...

Алăк хăлăпĕнчен тытнă Митя амăшĕ çине çаврăнса пăхрĕ.

— Мĕнле Таня? Мĕн пулнă? — ыйтрĕ вăл.

— Илтмен-и вара эсĕ çав хыпара? Таня Салминана хамăр кил умĕнчех çĕçĕпе чиксе вĕлерне вĕт.

— Пĕлместĕп. Илтмен, — пуçне пăркаларĕ каччă. Вăл кăштах шухăшласа тăчĕ, тем калас пек амăшĕ çине пăхса илчĕ, анчах шарламарĕ, алăка яри уçса хваттертен тухрĕ.

Таис чӳрече патне пычĕ. Акă Митя подъездран тухрĕ, пирус туртса ячĕ, вара васкамасăр аслă çул енне уттарчĕ. Ăçта каять-ши вăл халĕ? Ăçта çапкаланса çӳрет-ши кашни каçах сĕм çĕрлеччен? Кампа? Мĕнле çынсемпе? Хĕрпе пулсан юрĕччĕ. Туссем пур терĕ. Камсем вĕсем? Таис пĕрне те кур-

ман, пӗлмест. Паянччен Митя, темшӗн-ҫке, вӗсем ҫинчен нихӑҫан та сӑмах хускатман. Юлташӗн аш-шӗне, айӑпсӑр ҫынна, хӗнеме пултараҫҫӗ пулсан...

Лӑпкӑ мар Таис чӗри. Паян, ҫав хӑрушӑ хыпара илтнӗ хыҫҫӑн, пушшех канӑҫсӑрланать. Ах, ин-кек-синкек сиксе ан тухтӑрччӗ...

Эй, ача-пӑча! Ӗмӗр тӑршшӗпех канӑҫа пӗлместӗн унпа. Тӗрӗсех каланӑ ҫав ваттисем: пӗчӗк чух — пӗчӗк хуйхӑ, пысӑк ачапа хуйхи те пысӑк тесе. Хыҫ-ран курӑнмасӑр ҫӳреме май пулсан пӗр утӑм та юлмӗччӗ Таис ывӑлӗнчен. Хӑйне тем пулсан та, ачине хӑрушлӑхран хӳтӗлӗччӗ... Энтри ӑҫта ҫӳрет-ши тата? Ӗрӗхсе тухса кайрӗ те... Апат тахҫанах сивӗнчӗ ӗнтӗ. Таис каллех чӳречерен кармашса пӑхрӗ.

Ҫук, упӑшкине хурласа каламасть Таис ҫак сӑ-махсене. Мӑкӑртатма юрататъ вӑл. Те кӑмӑлӗ ҫапла унӑн, те хӑнӑхрӗ ҫав йӑлана. Упӑшкине ӳпкелеме сӑлтавне часах тупать.

Чӗрӗк ӗмӗр иртрӗ ӗнтӗ вӗсем пӗр-пӗринпе пал-лашса пӗрлешни. Таис ун чух ҫирӗм ҫулхи кӑвак куҫлӑ, сарӑ ҫӳҫлӗ йӑрӑс хӗрччӗ. Парикмахерта тин кӑна ӗҫлеме тытӑннӑ. Кӗркунне колхоз хирне ҫӗр улми кӑларма кайсан курчӗ вӑл чи малтан пулас упӑшкине. Паянхи пекех астӑвать Таис ҫав хӗвеллӗ янкӑр куна... Юнашарах палламан хӗрарӑмсем ҫуй-хашни илтӗнет.

— Андрей, кил-ха кунта! Пулӑш михӗ ҫыхма! — пырса кӗрет Таис хӑлхине.

— Андрюша, михӗ тулчӗ. Ҫӗклесе кай!

— Кашкаров!

— Халех! Пыратӑп! — илтӗнет арҫын сасси.

Пикенсех ҫӗр улми пуҫтаракан Таис пуҫне ҫӗк-лесе сасӑсем енне пӑхать. Акӑ маттур пӳ-силлӗ ҫамрӑк арҫын икӗ миххе икӗ хул хушшине тытса ҫӗклерӗ те пысӑк утӑмсемпе ҫывӑхрах тӑракан ма-шина еннелле уттарчӗ.

«Кур-ха эсĕ ăна... Улăп паттăр», — шӳтлесе шухăшларĕ хĕр.

— Çавăнталла пăх-ха, — тĕртрĕ Таиса пĕрле ĕçлекен çамрăк хĕрарăм. Пуçне сĕлтсе вăл хайхи каччă çине кăтартрĕ. — Хăй унта, куçĕ кунта. Эй, йĕкĕт! Мĕн пуçна вĕçĕмсĕр унталла-унталла пăратăн? Мăю пăрăнса ларать акă. Мĕнле хĕр юратĕ вара сана? — хаваслăн кăшкăрчĕ вăл. Унтан хĕре каллех чавсипе тĕртсе илчĕ. — Чипер каччă. Тем, туйсăр иртмест пулĕ ку тĕлпулу. Чун сисет манăн. Ура тупанĕ те кĕçĕтет. Туйра ташласса туять пулĕ-ши?

Таис хуллен кулса илчĕ çеç.

— Чăнах та маттур. Илья Муромец пекех вăйлă, — терĕ вăл тулли михĕсене машина çине вылянă пекех çăмăллăн çĕкле-çĕкле паракан каччă çине ăшшăн пăхса.

Анчах чипер-ши? Кĕре сăнлă, пичĕ икерчĕ евĕр çаврака, куçĕсем те уçăлса çитеймен пек, хĕсĕкрех. Чăваш мар-и тен вăл. Вăтам Ази çынни пек те туйăнать.

Пур Таисăн каччăсем. Иккĕ те. Пĕри хуларах пурăнать. Тепри çуралса ӳснĕ тăван ялта, кăçал кăна çартан таврăнчĕ. Иккĕшĕ те пĕрлешме сĕнеççĕ. Анчах шухăшлать-ха Таис, хĕр ĕмĕрĕпе сывпуллашма васкамасть.

Çĕр улми тултарнă витрене йăтса Таис машина енне утрĕ.

— Йывăр мар-и пикене? — илтĕнчĕ хыçра арçын сасси. Хайхи каччă. Хуса çитрĕ те юнашар утрĕ. «Пике тет тата. Чĕлхи яка пулас. Ха, пике... Манăçа тухнă тахçанхи чăваш сăмахĕ», — шухăшласа илчĕ хĕр.

— Пулăшас мар-и? — каччăн пысăк алă тупанĕ витре хăлăпĕнчен тытнă хĕр аллине асăрханса перĕнчĕ. — Йывăр йăтма юрамасть хĕр упраçа.

— Аптрамасть. Эпĕ ялта ӳснĕ. Хăнăхнă.

— Эпĕ те ял каччи.

Кассан — турпас, пуплесен — сăмах. Çăмăллăн калаçса-шӳтлекелесе вĕсем каялла Таис ĕçленĕ çĕре пырса тăчĕç.

— Эпĕ Энтри ятлă, — терĕ йĕкĕт.

— Тая, — тесшĕнччĕ хĕр, анчах шухăшласа илчĕ те Таис терĕ.

Чăнах, атте-анне панă ят мĕнрен начар вара? Мĕншĕн ялтан хулана килсен эпир ята та, чĕлхене те улăштарма васкатпăр? Энтри — мĕнле илемлĕ янăрать. Эн-три...

Хулана вĕсем пĕрле, пĕр автобуспа таврăнчĕç. Тем пулчĕ-çке Таиса — те çаплах ытла та юратса пăрахрĕ вăл çав кĕре сăнлă, çавра питлĕ качча, те, ваттисем калашле, пуç çавăрчĕ-ши вăл, тепĕр эрнерен вĕсем загса заявлени кайса пачĕç. Ĕнтĕ çирĕм пилĕк çул пĕрле пурăнаççĕ. Çук, нихăçан та ӳкĕнмен Таис Энтрие качча тухнăшăн. Йĕркеллĕ çын пулчĕ ун упăшки. Ĕçре тимлĕ, çивĕч. Килте те арăмне пулăшма ӳркенмест. Ĕçкĕпе-çикĕпе иртĕхсе çӳремест, ĕç укçине пĕр пус юлмиччен киле илсе килет. Ют хĕрарăмсем патне чупмасть. Тата мĕн кирлĕ? Ну, паянхи пек, кĕтмен çĕртен çатăртатса каясси пур ĕнтĕ. Пулкалать сайра хутра. Пăрăхран сирпĕнсе тухакан вĕри шыв пăсĕ пек, шавласа илет те лăпланать.

Ывăлне те юратать Энтри. Анчах юлашки вăхăтра час-часах иккĕшĕ харкашкалама тытăнчĕç çав. Шкулта вĕренменшĕн çилленет ашшĕ. Ара урокри материала ăнланайманшăн Митя айăплă-и? Учительсем вăрçма, тиркешме питĕ ăста, хăйсем ачасене йĕркеллĕ вĕрентме пĕлмеççĕ... Халĕ тата Митя ĕçлемест тесе хирĕçме тытăнчĕ Энтри. Каçсерен урама кайнăшăн та ӳпкелет ăна. Маннă хăй вун çиччĕре пулнине.

Алăка шăнкăртаттарни Таис шухăшĕсене татрĕ. Клавти кĕчĕ.

— Пĕчченех-им? — ыйтрĕ вăл малалла иртсе. — Арçынсем ăçта?

«Пĕлместĕн пулĕ эсĕ вĕсем килте çуккине. Сăмах çукран сăмах туса çӳретĕн», — шухăшларĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

Таис çынпа ытлах хутшăнма юратмасть. Кӳршĕсем патне ыт ахальтен кайса лармасть, урама та уни-куни калаçма сайра çеç тухкалать. Килтен — ĕçе, ĕçрен — киле — çапла иртет кун-çул. Таврара пулса иртекен мĕнпур хыпар-хăнара вăл ытларах Клавтирен пĕлет. Лешĕ ниепле те каласа памасăр чăтаймасть. Наччаслăха та пулин кĕрсе пĕлтеретех хăй мĕн илтнине. Çавăнпа килĕштереççĕ вĕсем пĕрне-пĕри. Анчах паян тантăшĕ килнине Таис хапăлламарĕ. Хĕрарăм кĕрсенех шăм-шак каллех сиввĕн çӳçенсе илчĕ. Тем илтнĕ ĕнтĕ, темле хыпар пĕлтерет.

— Килех, Клавти, тĕпелелле ирт, — кăмăлне палăртмарĕ Таис. — Çĕнĕ хыпар илсе килтĕн пулĕха, — ыйтрĕ вăл сăмах майĕн.

— Хыпарĕ-качки, — терĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ çемçе пукан çине ларса. — Халĕ çав Салминсен хĕрĕ пирки нумай пакăлтатаççĕ.

— Тытман-ши вĕлерекенсене?

— Ăна-кăна илтмерĕм.

— Тата мĕн калаçаççĕ унта, урамра?

— Э-э, çын çинчи сăмах — таканари шыв тенĕ. Унталла та, кунталла та сулланать. Куракані пулнă лешсене. Çамрăксем тет. Пĕри хамăр урамранах имĕш.

— Кам курнă-ши вара?

— Виççĕмĕш подъездра ватă арçын пурăнатьçке. Ах, мĕн ятлăччĕ-ха вăл? Пĕлетĕн эсĕ ăна, курнă. Туяпа кăштăртатса çӳрет. Çав пакăлтатать тет. — Клавти тантăшĕ çине йăлт пăхса илчĕ те куçне пытарчĕ.

Çакна асăрханă Таис чĕри кăртах турĕ.

— Мĕн калать-ши вара вăл?

— Çывăрма выртиччен кашни каçах балкон çине уçă сывлăша тухса тăрать имĕш çав старик. Çавăн чухне курнă вăл. Пушă урампа малтан хĕр васкаса иртрĕ. Унччен те пулмарĕ, ун умне икĕ çамрăк сиксе тухрĕç тесе калать тет. Тем çинчен пĕр вăхăт шăв-шав калаçса илеççĕ кусем. Хĕрĕ уйăрăлчĕ те чупрĕ тет. Вара пĕр каччи, çӳллĕ пӳлли, хыçран вирхĕннĕ. Малалла мĕн пулнине курман старикĕ, анчах йынăшса янине илтнĕ иккен. Унтан хайхи икĕ каччă сиккипех аслă урамалла вĕçтерчĕç тет. Вăт, çавăн пек хыпар, — ассăн сывласа ячĕ Клавти.

— Милицие пĕлтернĕ пулĕ ĕнтĕ кун çинчен. Халиччен тытнă та-и тен? — ыйтрĕ Таис.

Тем калас пек, Клавти тантăшне куçран тинкерсе пăхрĕ, анчах хăй нимех те шарламарĕ. Сĕтел çинче ларакан вазăри йăмăх чечек букетне тимлĕн сăнанă пек, ăна çавăркаласах тишкерме тытăнчĕ.

— Ну, вара... Каласа пĕтер... Ма шăплантăн?

— Пĕр çамрăкĕ, çӳллĕ пӳлли... сирĕн Митя пек туйăнчĕ тесе калать тет çак старик, — мăкăртатрĕ Клавти пуçне çĕклемесĕр.

Таис чĕри малтан çӳлелле ывтăнчĕ, пырта сывлăша питĕрсе лартрĕ, унтан вăйсăррăн аялалла лаплатрĕ. Шăм-шак шăлтăрах кайрĕ. Кĕске вăхăт куç хуралса килчĕ.

— Кам пĕлет çав. Тухса каяççĕ те тем хăтланса çӳреççĕ вĕсем, ку чухнехи çамрăксем, хула урамĕсенче, — асăрханарах каларĕ Клавти ассăн сывласа.

Ывăлне хурласа, тиркесе калаçакана Таис чăтма пултараймасть. Халĕ вара, чĕре çурăлса каяс пек ыратнă чух, çак лăпкăн юмахласа ларакан хĕрарăма унăн кăшкăрса пăрахас, тек уру ярса ан пустăр ман хваттере тесе хуса ярас килчĕ. Анчах чарчĕ

вăл çиллине. Хăйĕн хуйхине кăтартас килмерĕ сăмах вĕçтерме юратакан кӳршине.

— Çын çăварне карта тытаймăн. Калаçакансем калаçчăр. Пĕрне-пĕри кăшлама юрататпăр эпир. Сăлтавĕ пултăр çеç. Ан юмахлăр-ха пустуя пĕлмесĕрех текен çук ун пек чух, — терĕ вăл хăйне алла илсе. — Ну, шухăшла-ха хăвах, — куçран сиввĕн тинкерсе пăхрĕ вăл хирĕç ларакан кӳрши çине. — Каçсенче пирĕн урамра яланах çурма тĕттĕм. Виççĕмĕш хутра тăракан старик ăçтан палласа илме пултарнă çĕрле çав çамрăксене? Тата ватă çын куçĕ... Вăл мар, эпĕ те уйăрса илеес çук çав вăхăтра иртен-çӳрене. Сахал-и çӳллĕ çамрăк хулара...

— Вăл çаплах та-ха... Çĕрлехи япала, чăнах та... Кури-курми уйрăм çын çине тĕллесе калама хăяс çук эпĕ хам та... Сăмахĕ мĕн тери йывăр, усал.

— Вăт-вăт. Ватă çын пек пулса кăштах пуçĕпе каллĕ-маллĕ шухăшласчĕ малтан. Э-э, тепĕр тесен... Мĕн шухăшламалли... Йӳтеме тытăннă ĕнтĕ вăл. Урине те аран-аран сĕтĕрет, — хаяррăн хуравларĕ Таис.

Кӳрши тухса кайсан вăл пукан çине вăйсăррăн тĕшĕрĕлчĕ. «Турă сыхлатăрах! — пăшăлтатрĕ хĕрарăм. — Энтри ав мĕншĕн ытла та пăлханса таврăнчĕ. Апла ун хăлхине те çитнĕ ку хыпар. Нивушлĕ?.. Нивушлĕ?» — асаплантарчĕ Таиса усал иккĕленӳ. — «Çук! Çук!» — хирĕçлерĕ ăна чĕререн тухакан тепĕр сасă.

Çĕркаç Митя çур çĕр иртсе икĕ сехетре тин килчĕ. Кăштах ĕçнĕ пулас, эрех шăрши кĕнĕ пек туйăнчĕ. Анчах ывăлĕ хăйне хăй тыткаланинче Таис çавăн чухне нимле улшăну та асăрхамарĕ. Ирхине çывăрса юлчĕ. Кăнтăрла кĕнеке вуланă, чей ĕçнĕ... Яланхи пекех. Шикленни те, пăлханни те сисĕнмерĕ. Митях пулсан нивушлĕ ун чунне нимĕн те пăлхатмасть? Нивушлĕ çаплах ăста пытарма пĕлет

вăл хăйĕн туйăмĕсене? Çук, çук. Митя çамрăкха, ача çеç.

Çапла хăйне хăй лăплантарма тăрăшса Таис ывăлĕн пӳлĕмне кĕчĕ, вăл выртнă дивана тирпейлеме тытăнчĕ Йĕпе çине сапа тенĕ пек, лӳчĕркеннĕ çи виттине çĕклерĕ те, урайне тĕплĕн хутлатнă пĕчĕк хут татăкĕ пат ӳкрĕ. Таис ăна пĕшкĕнсе илчĕ, саркаларĕ. «Паян та çав вырăнтах кĕтетĕп, — вуларĕ вăл ывăлĕ аллипе çырнă сас паллисене. — Пымасан хăвна ӳпкеле. Юлашки хут асăрхаттаратăп...» Аяларах тепĕр алăпа çырнă сăмахсем: «Ан юна. Ан кĕт. Пымастăп. Т.» Хăçан çырни паллă мар, анчах хучĕ халĕ кăна тетрадьрен татса илнĕ пекех, яка.

Çак хут татăкне маларах тупса вуланă пулсан Таис кăмăллăн кулкаласа илетчĕ çеç пулĕ. Мĕнле чиперккешĕн çунать-ши Митя чĕри? Кам-ши ку «Т.» текен мăн кăмăллă хĕр?

Шиклĕхĕн çичĕ куç тенĕ... «Юлашки хут асăрхаттаратăп...» «Кама çапла юнать Митя? Кам вăл «Т.»? Чим-ха... Таня Салмина!» — тĕттĕм пĕлĕт çийĕн йăлтăртатса илнĕ çиçĕм çиппи евĕр, чĕрене çурса пырса кĕчĕ хăрушă шухăш. Таис йынăшса ячĕ. Ним тума пĕлмесĕр алăкăн-тĕпелĕн уткаларĕ.

Энтри кĕчĕ. Темшĕн-çке арăмĕ çине тинкерсе сăнаса пăхрĕ. Пичĕ-куçĕнче паçăрхи çилĕ палли те çук, анчах савăк мар вăл, лăпкă та мар. Тем хумхантарать, тем пăшăрхантарать пулас Энтрие. Апат çикелерĕ те хаçат тытрĕ, анчах вуламарĕ. Яланхи пек, телевизор та пăхмарĕ.

— Итле-ха, Таис, — терĕ вăл кăшт шухăша кайса ларнă хыççăн. — Çитет нимĕн курман, нимĕн пĕлмен пек пулса пурăнма. Тем ырă мар сăмах çӳрет пирĕн ывăл çинчен урамра. Эпĕ ĕненместĕп ăна... Çапах та кала-ха... Митя çĕклеме пултарнă-и аллине, — Энтри сасартăках чыхăнчĕ. — Пирĕн Митя хутшăнма пултарнă-и?..

Вăл каллех каласа пĕтереймерĕ, тархасшăн, хăвах ăнлан тенĕ пек, арăмĕ çине тилмĕрсе пăхса илчĕ çеç.

— Кай, Энтри, ан калаç-ха кирлĕ мара. Чĕлхӳ мĕнле çавăрăнать тăван ывăлу çинчен çапла шутлама, — кĕтмен çĕртен персе ячĕ арăмĕ.

Ах, Таис, Таис! Ну, кам, мĕн шутпа калаттарчĕ сана халĕ те çак чăннипех ăссăр сăмахсене? Ывăлна вĕçĕмсĕр хӳтĕлеме хăнăхнипе-и? Е Энтрие лăплантарас тесе? Пырса ларасчĕ халĕ сан упăшку çумне. Асаплă куçĕсенчен ăнланса пăхасчĕ. Уçса парасчĕ чунна. Йывăр самант килсе çапсан, ах, мĕн тери кирлĕ вăл сан хуйху-суйхуна чунĕ-чĕрипе ăнланакан, пĕрле куççулĕ юхтаракан çывăх çын!

— Лайăх шухăшла ху мĕн калани çинчен, Таис. Ыран ирпе виççĕн ларсах тĕплĕн сӳтсе явăпăр ку хыпара. Юрĕ, ывăнтăм эпĕ. Çывăрас килет, — Энтри тăчĕ те пӳлĕмрен тухрĕ...

«Хальлĕхе нимĕн те паллă мар-ха... Çав ăсран тухнă старик сӳпĕлтетнĕшĕн... Тьфу!» — шухăшларĕ Таис каллех хăйне хăй лăплантарма тăрăшса.

Унăн та пĕччен ларас килмерĕ. Анчах выртса куçне хупрĕ кăна, хулăн чӳрече каррисемпе хупăрланă тĕттĕм пӳлĕмре каллех шиклĕх çĕкленчĕ. Акă вăл пӳлĕмĕн пур кĕтессисенчен те шăппăн шуса хăпарать, çăралса ӳссех пырать. Таис çийĕн явăнать, хупăрлать, чуна шăнтать, чĕрене пăчăртаса ыраттарать... «Пĕтертĕн ывăлна! Хăвах пĕтертĕн! Мĕнле пурнăç кĕтет Митьăна малашне?! Çавна чухлатăн-и? Пуриншĕн те эсĕ айăплă! Эсĕ! Эсĕ!» — сиввĕн пăшăлтатать мĕнпур пӳлĕм... Кансĕр Таиса. Ах, ытла та кансĕр. Чун тăвăнать, сывлама йывăр.

Шартах сиксе хĕрарăм куçне уçса ячĕ. Ун-кун пăхкаласа илчĕ. Пӳлĕмре тĕттĕм. Çурăмĕпе çаврăнса выртнă Энтри çывăрать-ши, хускалмасть. «Тĕлĕк

куртăм пулас, — шухăшларĕ Таис. — Сисмен те, кăтăш пулнă иккен». Çывăрас тесе вăл каллех куçне хупрĕ.

Чи асаплă суд — чун-чĕре сучĕ.

«Çук! Çук! Митя мар ăна! Митя мар, — такампа тавлашать Таис. — Митя апла тума пултараймасть».

«Мĕншĕн пултараймасть? Аса ил-ха... Аса ил», — каллех пăшăлтатать пӳлĕм.

«Мĕн аса илес манăн? Ну, ӳсрĕ. Ашкăнма юрататчĕ ĕнтĕ ачаранах. Тепĕр чух вăйă-кулăра ăнсăртран кама та пулин çапни те пулнă пулĕ. Мĕнех вара уншăн? Арçын ача унсăр ӳсет-и? Паян Митя кампа та пулин тӳпелешнĕ, ыран ăна хăйне лектерекенсем тупăнаççĕ».

«Ку çеç мар. Тата, тата аса ил... Астăватăн-и Митя яланах пĕр айăпсăрах юлташĕсене хĕнеме пăхатчĕ, хăйĕнчен имшеррисене кӳрентерме юрататчĕ».

«Тем те пулнă пулĕ вун çичĕ çул хушшинче. Ырри те, усалли те. Астумастăп эпĕ... Маннă».

Чееленет Таис. Пур, сахал мар унăн аса илмелли. Ăш-чикри чи тĕттĕм, чи аякри кĕтессенче пытарса усрать вăл вĕсене. Шухăшласшăн мар вĕсем çинчен, манăçа кăларасшăн. Анчах вĕсенчен пĕри халĕ сисмесĕрех тĕрме алăкне çĕмĕрсе тухрĕ. Акă экран çинчи пек çуталса, чĕрене пăлхатса, тарăхтарса, хăратса ерипен шăвăнса иртрĕ.

Шкулта вĕреннĕ чух пулчĕ-ха вăл, кĕркунне. Митя тăххăрмĕш класа çӳрет ун чух. Çăкăр магазинĕнчен килелле утакан Таиса Клавти хуса çитрĕ.

— Ах, Таис, мĕн куртăм эпĕ! Мĕн куртăм! — терĕ вăл аллисене шарт çапса. — Çанталăкĕ ытарма çук лайăх та, çуран килтĕм паян ĕçрен. Парка кĕтĕм, пыратăп утса. Пăхатăп та — инçе те мар пĕр ушкăн çамрăк тапăлтатать. Тинкererех пăхрăм та — тăваттăн пĕр çынна хĕнеççĕ.

Ансăр сукмакпа иккĕн юнашар утма тăвăр пирки Клавти тантăшĕ умнерех тăчĕ те сăмахне малалла тăсрĕ.

— Хупăрласа илнĕ те кӳпкеççĕ кăна. Пуçĕнчен, питĕнчен çапаççĕ, хулпуççийĕнчен тытса силлеççĕ, кăкăрĕнчен чыша-чыша яраççĕ. Унтан ӳкерчĕç. Тытăнчĕç тапма, таптама. «Эй, мĕн тăватăр эсир! Халех чарăнăр!» — тесе кăшкăрас тетĕп — хăранипе чĕлхе çĕтрĕ. Нихăçан та çын çынна çапла хĕненине курман, никам та çук тата çывăхра. Чупрăм хăвăртрах çул çине. Телее, милици машини вĕçтерсе пырать. Эпир çитнĕ çĕре тарма ĕлкĕрнĕ хайхи чун иллисем. Пĕр вун пилĕк-вун ултă çулсене çитнĕ шуранка ача кăна йăваланса выртать. Тăрасшăн хăй, анчах ыратать пулас, тăраймасть.

Хăйсем пурăнакан çурт патне çитиччен каласа пĕтерес тесе-ши, Клавти сăмахĕсене, пулеметран пенĕ пекех, тăрлаттарма пуçларĕ.

— Милиционерсем чупрĕç хайхи таркăнсене шырама. Эпĕ ача патне пытăм. Тумĕ, пичĕ-куçĕ тăр тусан, тутинчен юн сăрхăнать. Ăна тăма пулăшрăм. Ерипен çĕкленчĕ ку. Пĕр утăм турĕ те айлатса сылтăм аякне аллипе ярса тытрĕ. Кĕçех шур халатлă çын васкаса пычĕ. Тахăшĕ (милиционерсемех-и, тен) «васкавлă пулăшу» чĕннĕ иккен. Лартса ятăм. Эй-яй-яй! Мĕн тери тискер чунлă çамрăксем ӳсеççĕ халĕ. Тăваттăн пĕр çынна... Ачи чирлĕ пулас, шуранка, имшерккескер çеç... Ниепле те лăпланаймастăп. Халĕ те ăш-чик сиксех чĕтрет, — Клавти каласа пĕтерчĕ те ансăр хулпуççийĕсене çӳçенчĕклĕн хускатса илчĕ.

— Хĕнекенĕсем камсем-ши вара? Палламарăн-и? — ыйтрĕ Таис.

— Çывăхран курмарăм çав. Çамрăксем. Шкул ачисем пулĕ терĕм.

— Тытрĕç-и милиционерсем? — каллех ыйтрĕ Таис.

— Пĕрне лартса кайнине куртăм.

Подъезд патне çывхарсан Клавти хирĕç килекен хĕрарăмпа калаçса юлчĕ (ахăртнех, курни-илтнине унпа сÿтсе явма васкарĕ пулĕ), Таис тек тытăнса тăмарĕ. Кĕçех Митя та шкултан таврăнчĕ. Ывăлĕ çине Таис тинкерсе пăхрĕ, анчах нимĕн те ыйтмарĕ, нимĕн те каламарĕ. Ывăлне апат çитернĕ хыççăн вăл торт пĕçерме тытăнчĕ. Паян Митьăн çуралнă кунĕ. Хăйшĕн çеç пулсан аппаланас çукха. Митя питĕ юратать амăшĕ тунă торта. Мухта-мухта çиет, савăнтарать амăшĕн чунне.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, алăка шăнкăртаттарчĕç. Çăнăхлă аллине саппунĕпе шăлса Таис уçрĕ. Кутамас тачка арçын тăрать. «Капан пекех», — шухăшласа илчĕ хĕрарăм. Кĕске вăхăт сăмах чĕнмесĕр палламан çын ун çине сиввĕн сăнаса пăхрĕ.

— Кашкаровсем çакăнта пурăнаççĕ-и? — ыйтрĕ вăл юлашкинчен хулăн сасăпа.

— Çакăнта-çке.

— Манăн хуçипе, Кашкаровпа хăйпе, калаçмалла.

— Андрей Никонорович килте çук. Вăл отпускра. Яла кайрĕ.

Палламан çыннăн лапсăркка куç харшийĕ кăмăлсăррăн турткаланса илчĕ.

— Апла пулсан ывăлупа пуплеме тивет, — сĕнмесĕрех хваттере кĕчĕ хайхискер. — Митя ятлă терĕç пулас. Çапла-и?

— Митя та килте çук. Халĕ çеç кино курма тухса кайрĕ, — суйрĕ Таис темшĕн. — Мĕн тума кирлĕ сире ман упăшкапа ывăл? Мĕн пулнă? — ыйтрĕ вăл сиввĕн çак арçын ырă хыпарпа килменнине чунĕ-чĕрипе туйса.

— Питĕнчен сурас тенĕччĕ сан упăшкуна çавăн пек ывăл ÿстернĕшĕн... Лешне те — кашкăр çурине — куçран тинкерсе пăхса пĕр-икĕ витĕмлĕ сăмах калас тенĕччĕ.

— Мĕн пулнă вара? Мĕн тунă сире ман упăшкапа ывăл вĕсене киле килсех çапла хăртма? — ыйтрĕ Таис ăшра ӳссех пыракан курайманлăхне путарса.

Килнĕ çыннăн пĕчĕк куçĕсем каллех Таис çине тирĕнчĕç.

— Ха, мĕн тунă, — мăкăртатрĕ вăл çиллессĕн. — Пĕлместĕн пулсан каласа парам. Паян шкултан киле таврăннă чух Тимофея — ман ывăл вăл — тăвată ача пĕр айăпсăр-сăлтавсăр хĕнесе пĕтернĕ. Халĕ эпĕ ун патĕнчен больницăран таврăнатăп.

— Каларĕç-ха, илтрĕм эпĕ те паркра ушкăн çамрăк çапăçрĕ тесе. Вара мĕн?

— Çапăçман. Хĕненĕ, — хулăн сассине хăпартрĕ арçын. — Пĕр класра вĕренекен юлташне... тăваттăн пĕр ачана... Ăнланатăн-и эсĕ çавна?.. Çапла путсĕрленме хĕтĕртекенĕ Митя Кашкаров пулнă терĕç. Сирĕн ывăл ĕнтĕ вăл. Ман Тимофей задача шутласа пама ĕлкĕреймен ăна, кахала, тĕрĕслев урокĕнче.

— Калакансем пулĕç вĕсем... Тен...

— Ман сăмахра суя çук, — тӳрккессĕн пӳлчĕ Таиса арçын.

— Арçын ача тӳпелешмесĕр ӳсмест.

— Тăваттăн пĕр ачана хĕненине тӳпелешнĕ тетĕн-и эсĕ? Сӳпĕлтететĕн кирлĕ мара... Ну, санпа калаçса сăмаха сая яни çеç кунта. Систер киревсĕр ывăлна... А-а, акă вăл хăй те курăнчĕ, — арçын пичĕ-куçĕнче темле ырă мар кулă курăнса сухалчĕ. — Эсĕ ывăлу килте çук терĕн мар-и?

Таис çаврăнса пăхрĕ — уçă пӳлĕм алăкĕ патĕнче Митя чĕнмен хăна çине куç айĕн пăхса тăрать.

— Акă мĕн, — терĕ «капан» сивĕннĕ куçне каччă çине тĕллесе. — Пулни-иртни çинчен эпĕ милицие евит тумастăп, шкула каймастăп, судсем тăрăх çапкаланса çӳреместĕп. Эпĕ сана хам

суд тăватăп. Тепре тĕкĕн кăна ман ывăла. Çакна куратăн-и? — шăнăрлă çирĕп чышкине чăмăртаса кăтартрĕ вăл. — Вĕрентетĕп эпĕ сана путсĕрленме. Ĕмĕр ÿкĕнсе пурăнăн. Ниçта та пытанаймастăн манран. Çĕр тĕпĕнче те шыраса тупатăп сана.

— Эпир те тăлăх мар. Пирĕн те...

— Эп каларăм калас тенине, — пÿлчĕ Таиса арçын, çаврăнчĕ те алăка хыттăн шалтлаттарса тухса кайрĕ.

— Ну, илтрĕн-и?.. Мĕнле çыннине куртăн-и? Каснă лартнă çĕр хăвăлĕнчен тухнă тискер этем... Ан çыхлан тек унăн нишлĕ ачипе. Тем туса хурĕ вăл, — çапла вĕрентсе houларĕ Таис юратнă ывăлне.

Таис тăрса ларчĕ, пÿлĕмрен тухса çутă çутрĕ. Пуç кашлать. Уççăн сывлама çук, сулахайра, чĕре тĕлĕнче, темскер-çке чиксех ыратать. Çывăрнăçывăрман асапланса выртнине пула шăм-шак йывăр, ăш-чик вăркать.

Çур çĕр иртни пĕр сехет. Хĕрарăм каллĕ-маллĕ уткаларĕ, тахçан çыхма пуçланă кофтине тытса ларчĕ, темиçе журнал илсе страницисене уçа-уça пăхрĕ. Нимĕн те тăвас килмест... Мĕнпур вăй-хала, мĕнпур çутă, хаваслă туйăма такам кăларса илнĕ тейĕн. Пуш-пушах халĕ чĕрере. Йывăр, тĕксĕм тунсăх кăна чуна чĕрмелесе асаплантарать. Кăшт та пулин уçăлас тесе Таис балкон çине тухрĕ. Çук, кунта та пăчă. Кунта та сывлама йывăр.

Хула çывăрать. Кÿршĕ çуртсен чÿречисем тĕттĕм. Урамра пĕр чун та курăнмасть. Аслă çул çинче кăна сайра хутра иртекен çăмăл машина çути вĕлтлетсе илет те çухалать. Çанталăк лăп. Унта-кунта курăнакан хунарсен имшер çутинче лапсăркка пуçлă йывăççем те тĕлĕреççĕ. Чÿрече умĕнче ÿсекен ăвăс кăна хăйĕн çăмăл çулçисене çилсĕр-мĕнсĕрех ташлаттарать. Пуç тăрринче çăлтăрсем йăлкăшаççĕ. Кăнтăр енчен хура пĕлĕт капланса хăпа-

рать. Унăн тĕксĕм кӳлепи ялтăрт та ялтăрт çуталса илет, аслати халтăртатни илтĕнет.

Акă çĕрлехи шăплăха пăсса çил кĕрлесе тухрĕ. Йывăççем самантрах ыйхăран вăранчĕç, кăтра пуçĕсене унталла-кунталла сулкаласа кăмăлсăррăн шавлама тытăнчĕç. Шалт! — хупăнчĕ уçă форточка, инçе те мар тем япала-çке çĕр çине кĕмсĕртетсе ӳкрĕ. Тăвăл çĕкленĕ шăв-шав аслати сассипе пĕрлешсе тавралăха хупларĕ. Хура пĕлĕт хăвăрт шуса пуç çийĕнче пĕтĕрĕнме тытăнчĕ. Куçа йăмăхтарса çиçĕм ялтлатрĕ, çав самантрах пуç çийĕнче аслати хăрушшăн шартлатса илчĕ.

— Ай! — хăранипе кăшт çеç урайне персе анмарĕ Таис. Вăл хăй те сисмерĕ, пӳлĕме вирхĕнсе кĕчĕ, балкон алăкне шăлт-шалт питĕрсе хучĕ.

Телефон шăнкăртатни илтĕнчĕ. Ку тата мĕне пĕлтерет? Кам шăнкăравлать капла сĕм çĕрле?

— Итлетĕп, — терĕ Таис чĕтрекен аллипе трубкăна хăлхи патне илсе пырса.

— Кашкаровсен хваттерĕ-и? — илтĕнчĕ арçын сасси. — Эпĕ Кашкаров Дмитрий ыйтнипе шăнкăравлатăп. Ан кĕтĕр ăна паян. Вăл пирĕн патра, милицире.

— М-мĕ-ĕн?.. Мĕн-шĕн?..

Пик-пик-пик! терĕ трубка.

Çĕмĕрлесрен хăранă евĕр, Таис ăна ерипен, питĕ те ерипен хăй вырăнне хучĕ. Унтан куçне хупрĕ те вăйсăррăн стена çумне таянчĕ, вара хуллен, асаплăн йынăшса ячĕ.

— Мĕн пулчĕ, Таис? Кам шăнкăравларĕ? — илтрĕ вăл упăшкин пăлханнă сассине.

— Пирĕн Митя... Пирĕн Митьăна... арестленĕ ăна... Милицире вăл, — типсе кушăрханă тутине асаплăн хускатса аран-аран пĕлтерчĕ Таис.

— Эх! Пĕтертĕмĕр ачана! — терĕ Энтри. Ăшĕ çуннипе ниçта кайма пĕлмесĕр, вăл алăкăн-тĕпелĕн уткалама тытăнчĕ.

— Çук! Çук! Ёненместĕп! Пулма пултараймасть! Такам элекленĕ ăна! Кураймасăр элекленĕ, — каллех çапкалашма, тапăлтатма тытăнчĕ ăссăр туйăм Таис чун-чĕринче.

Хĕрарăм питне аллисемпе хупларĕ те ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ. Унтан сасартăк чĕркуççийĕ çине персе анчĕ.

— Эй, ырă Турă! Хĕрхен ман ачана. Пĕтме ан пар, — куçне таçта çӳлелле тинкерсе хĕрӳллĕн пăшăлтатрĕ вăл. — Упра ăна хаяр элекрен, усал çынсенчен. Вăл пирĕн пĕртен-пĕр ывăл, пĕртен-пĕр телей. Унран хакли маншăн тĕнчере урăх çук. Айăплă пулсан каçар ман ывăла. Вăл ăна чунĕ усал пулнипе мар, хăй айваннине пула тунă. Эпĕ айăплă, пуриншĕн те эпĕ çеç... Кирлĕ пулсан мана пĕтер...

Халиччен нихăçан та Турă ятне асăнман арăмĕ çапла чĕререн тилмĕрсе кĕлтунине, çамкине урайне çапа-çапа пуççапнине Энтри тĕлĕнсе пăхса тăчĕ... Çывăхах пырса вăл аллине мăшăрĕн хулпуççийĕ çине хучĕ. Таис ăна-кăна туймарĕ пулас, çаплах хĕрӳллĕн пăшăлтатрĕ, аллийĕ çаплах çĕклене-çĕклене кăкăрĕ çине хĕрес хучĕ. Чунтан шеллесе Энтри пĕр вăхăт арăмĕ çине пăхса тăчĕ, унтан пукан çине йывăррăн тĕшĕрĕлсе пуçне усрĕ.

Тулта çаплах çанталăк тулашрĕ, çиçĕм çиçрĕ, аслати шартлата-шартлата аватрĕ. Шалкăм çумăр çĕр çине тăкăнчĕ...

Ах, ерипен, ытла та ерипен шăвать-çке асаплă вăхăт! Мĕн тĕрлĕ шухăш пăтранмасть-ши пуçра!

Троллейбусра çын лăках. Ку вăхăтра хула халăхĕ ĕçе кайма васкать. Энтрипе Таис та хĕсĕнкелесе кĕрсе тăчĕç. Таис пушаннă вырăна ларсан алăк çывăхĕнче питĕ тĕрткеленнине пула Энтри малаллах иртрĕ.

Троллейбус васкамасӑр хӑй ҫулӗпе кӑлтӑртатать. Йывӑр шухӑш Энтри пуҫне ҫӗрелле пусать. Вӑл никама та курмасть, нимӗн те илтмест. Пӗртенпӗр шухӑш чӗрене хӗссех ыраттарать. «Нивушлӗ? Нивушлӗ?..» Сасартӑк такам ыйхӑран вӑратнӑ пекех, Энтри шартах сикрӗ.

— ...халӗ милицире ларать, — пырса кӗчӗ ун хӑлхине.

Кам?.. Кам пирки ку калаҫу? Энтри куҫне сасӑ илтнӗ енне тӗллерӗ. Ҫумрах икӗ арҫын лараҫҫӗ. Пӗртӑвансем пулас. Иккӗшӗ те вӑтам пӳллӗ, ҫавра питлӗ. Ҫулӗсем кӑна пӗр мар. Чӳрече ҫумӗнче ларакан пичӗ ҫутӑрах, пӗркелекенчӗкӗсем те сахалтарах.

— Тумтирне хывма та ӗлкӗреймерӗ, — терӗ вӑл хуллен. — Хыҫранах алӑка шӑнкӑртаттарчӗҫ. Иккӗн кӗчӗҫ. Икӗ милиционер... Эх, ӳстертӗмӗр намӑс курма...

— Ай-яй-яй! — тӑванӗ ҫине шеллесе пӑхса пуҫне сулкаларӗ аслӑрах арҫынӗ. Вӑл тата та тем каларӗ, анчах троллейбус хыттӑн шалтлатса илнине пула Энтри илтеймерӗ.

— Арӑм сӑмахӗ тӑрӑх, килӗштернӗ-мӗн вӑл ҫав хӗре. Лешӗ яхӑнне те яман иккен.

— М-да-а... — вӑрӑммӑн тӑсрӗ итлекенӗ хавассӑр сасӑпа.

— Тӗлӗнетӗп, — каллех мӑкӑртатрӗ арҫын. — Хӗр ҫӳреме килӗшменшӗн ҫапла хӑтланма... Эпир те каччӑ пулнӑ, юратнӑ та, сивӗннӗ те... Эх! — чӗркуҫҫийӗ ҫине хунӑ аллисем унӑн вӗҫӗмсӗр шурӗҫ, пӑчӑртанчӗҫ, канӑҫсӑррӑн кускаларӗҫ. — Ну, мӗн ҫитмерӗ-ши ухмаха? Мӗн ҫитмерӗ?..

— Тӗлӗнмелли ҫук кунта, Макҫӑм, — терӗ аслӑ тӑванӗ. — Каҫар, тӳрӗ каланӑшӑн. Хӑвах шутла — тем кирлӗ пулсан та, тем тусан та, уншӑн ҫемьере чару пулман. «Юрамасть» текен сӑмаха илтме хӑнӑхман вӑл, йышӑнасшӑн пулман ҫавна. Хӗрпе

вара... пачах урăхла калаçу... Мĕн тăвăн ĕнтĕ? Пулмалли пулчĕ. Шăла çыртас та тӳсес пулать... Ну, манăн тухмалла... Ĕç хыççăн кĕретĕп эпĕ. Ун чух тĕплĕнрех калаçăпăр, — арçын тăчĕ те алăк патнелле утрĕ.

«Акă тата тепĕр шеремет, — шухăшларĕ Энтри тунсăхлă куçне пĕр çĕре тĕллесе ларакан палламан çын çинчен. — Кам айăплă пирĕн ывăл-хĕр çапла ытла та чарусăр пулнăшăн? Ашшĕ-амăшĕ-и е, нумайăшĕ калашле, ку чухнехи канăçсăр самана-и? Эпир çитĕннĕ чух та пурнăç çăмăл пулманçке... Çук, тата та йывăртарах пулнă вăл...»

Кĕçех Энтрипе Таис та троллейбусран тухрĕç. Çĕркаçхи çумăр хăварнă шыв кӳлленчĕкĕсенчен пăрăна-пăрăна çулăн тепĕр енне каçрĕç, кирпĕчрен тунă икĕ хутлă пысăках мар çурт патне пырса тăчĕç. «Шалти ĕçсен министерствин иккĕмĕш уйрăмĕ», — пуçне çĕклесе вуларĕ Таис.

— Энтри, — пăшăлтатрĕ вăл сасартăках пир пек шурса кайса, — тăхта, Энтри. Вăй çук. Эпĕ сиксех чĕтретĕп, — Таис карлăкран тытса ун çине тайăнчĕ.

Энтри арăмĕ çине каллех шеллесе пăхса илчĕ. Пĕр каçра мĕн тери улшăнса кайрĕ вăл. Пĕвĕ кукăрăлнă, пичĕ шурса тĕксĕмленнĕ, тути çунса кушăрханă.

— Чирлеместĕн пулĕ те эсĕ? — пăлханса ыйтрĕ Энтри. — Киле кайса врача чĕнмелле мар-и?

— Çук! Çук!

— Апла пулсан авă тенкел. Кĕт мана çавăнта. Эпĕ халех пĕлсе тухатăп.

— Эпĕ санран юлмастăп. Пĕрлех кĕретпĕр.

Темиçе картлашка хăпарсан вĕсем чарăнчĕç. Кĕме хăяймасăр кĕске вăхăт тăхтаса тăчĕç. Мĕнле хыпар кĕтет ĕнтĕ вĕсене çак алăк хыçĕнче?

Суд вĕçленчĕ. Арестленĕ виçĕ çамрăка пăшаллă икĕ милиционер илсе кайрĕ. Çынсем вырăнтан

тăрса алăк еннелле кĕшĕлтетрĕç, урама тухса тĕрлĕ енне саланчĕç.

Залра пĕр хĕрарăм кăна ларса юлчĕ. Унтан вăл та тухрĕ. Çул урлă каçса йывăççем хушшинчи тенкел çине пырса ларчĕ. Пуçне усса питне аллипе хупларĕ. Çĕр çине тăкăннă типĕ çулçăсене кăштăртаттарса ун патне çӳллĕ арçын çывхарчĕ.

— Таис, атя киле, — терĕ вăл.

Хĕрарăм хускалмарĕ. Энтри пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа илчĕ те тенкел тепĕр вĕçне ларчĕ. Кукăрăлчĕ. Тунсăхпа тулнă куçĕ инçете тинкерчĕ.

Тĕксĕм кĕр. Çурçĕр енчен вĕрекен сивĕ çил кассăн-кассăн вăйланса çаралса юлнă йывăç тăррисене лăскать. Тӳпе çийĕн хура пĕлĕт шăвать, çутă хĕвеле хупăрла-хупăрла тавралăха тĕксĕмлетет.

— Энтри, эсĕ кай, ан кĕт мана. Пыратăп эпĕ, кĕçех пыратăп, — терĕ Таис упăшки çине пăхмасăр.

Çук, каяс килмест Таисăн халĕ киле. Мĕн кĕтет ăна унта? Ывăлĕн пушанса юлнă пӳлĕмĕ, унăн япалисем... Тата тунсăх... Чĕрене çиекен йывăр тунсăх. Ах, Митя! Митя! Этем пурнăçĕнчи чи çутă, чи телейлĕ вăхăта тĕрмере ирттерме лекетçке сана. Миçе çул йĕплĕ пралук тытнă картара. Миçе çул саккуна пăсса тĕрлĕ айăп тунă çынсем хушшинче... Мĕнле пурăнăн ĕнтĕ? Кӳрентерекенсем пайтах тупăнĕç. Хута кĕрекен пулас çук. Мĕншĕн çапла хăтлантăн-ши? Ма пуçупа каллĕ-маллĕ шухăшламарăн, ывăлăм?

«Шухăшлама вĕрентмен вĕсене. Çемьере преступниксем çитĕнтерекен ашшĕ-амăшне айăпа кĕнĕ ывăлĕ-хĕрпе çакăнта юнашар лартмалла. Пĕрле суд тумалла вĕсене. Шел, çук пирĕн хальлĕхе ун пек саккун», — терĕ прокурор.

«Пĕтертĕмĕр ывăла. Хамăрах пĕтертĕмĕр», — тет Энтри те. Кӳршĕ Анфис аппа калани те асне килет: «Шырлан хĕррипе утнă пек туяттăм эпĕ хама ачасем ӳснĕ чух».

Вĕрентмерĕ çав Таис ывăлне пурнăç шырланĕ хĕррипе утма. Шеллерĕ. Упрарĕ ăна тĕрлĕ йывăрлăхран. Митя иртĕхнине уççăнах курчĕ пулин те, ялан ун хутне кĕчĕ. Пур çĕрте те: килте те, ача садĕнче те, шкулта та, урамра та — ăна хӳтĕлесе хирĕлчĕ, тавлашрĕ... Эх, иртсе кайнă вун пилĕк-вун ултă çула каялла çаварса килме май пулсан... Чавса çывăх та çыртма çук çав.

«Кĕçех манăн хамăн укçа пулать», — терĕ Митя арестленĕ каç хулана кайма пуçтарăннă май. Шухăшламан Таис, пуçа пырса кĕмен ун чух çав сăмахсем мĕне пĕлтерни. Ĕçлесе илес шалу пирки калать тесе. Вăл авă мĕнле шут тытнă... Вĕсене, айван çамрăксене, машина илес текенĕ хăй хĕтĕртнĕ ĕнтĕ, астарнă çăмăллăн тупăнас укçапа.

Ултавпа пурăнма хăнăхнă çынна мĕн вăл ачасен ăс-тăнне пăтратса яма! Анчах судра хăй таса юлчĕ. Кусем вара, виçĕ айван, мĕнпур айăпне хăйсем çине илчĕç. Машина хуçин çав самантра пырса тухмалла пулнă тата. Хытă хĕненĕ вĕсем ăна... Уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Вăл халĕ те больницăра выртать. Унсăрăн приговорĕ çакăн пек йывăр пулмастчĕ. Айăпĕ пысăк, чăнах та... Çапах, Турра шĕкĕр, çын вĕлерни мар.

Таисăн çирĕм çул пурăнас сывлăхне илсе кайрĕ пулĕ Митьăна арестленĕ каç... Тин ĕнтĕ нимĕн те тăваймăн. Тӳссе ирттерес пулать çак йывăр вăхăта. Чипер, сывлăхлă таврăнтăрччĕ çеç. «Тен, амнистипе иртерех тухĕ. Тем пекехчĕ. Таврăнсанах ашшĕ патне ĕçе кĕрĕ. Энтри алли ылтăн. Вĕрентет вăл ăна ăсталăха. Тек апла хăтланмĕ Митя. Пăрахĕ ашкăнас йăлана», — ыраттаракан чунне йăпатма тăрăшать Таис. «Юсанмасан? Пушшех усалланса пăсăлса килсен? — çĕлен евĕр шăвăнса кĕрет пуçа тепĕр шухăш. — Ун пеккисем çинчен те пĕр пытармасăр çыраççĕ халĕ. Телевизорпа та кăтартаççĕ темиçе хут тĕрмере ларакансем çамрăксене мĕне

вěрентнине, вěсенчен епле хаяррăн мăшкăлласа кулнине».

Таис хăвалама хăтланса пăхать чуна юнаса хăратакан шухăша, анчах ниепле те хăтăлаймасть. Пěрлех çӳрет вăл, уйăрăласшăн мар.

Шăннине туйса хěрарăм тенкел çинчен тăчě, пуçне усса васкамасăр троллейбуссем чарăнакан çěрелле утрě. Кассăн-кассăн вěрекен çил ун çумне пыра-пыра çапăнчě, йěри-тавра чупкалашса тулашрě, тумтир аркисене турткаларě, калпак айěнчен курăнакан çӳçе арпаштарчě. Кăвак тӳпе çийěн çаплах хура пěлěт татăкěсем шурěç. Ялкăш хěвел е вěсен айне пула-пула çухалчě, е каллех ишсе тухса тěксěмленнě сивě тавралăха çутатрě.

# ТУПМАЛЛИ

## Калавсем

Кăмпара . . . . . . . . . . . . . . 4
Тус . . . . . . . . . . . . . . . 6
Хĕллехи каç . . . . . . . . . . . . . 9
Çухалнă урок . . . . . . . . . . . . 15
Султан . . . . . . . . . . . . . . 18
Ултавçă хĕрт-сурт . . . . . . . . . . . 25
Парне . . . . . . . . . . . . . . 27
Ашкăнчăк . . . . . . . . . . . . . 28
Инçе çул . . . . . . . . . . . . . 30
Ăçта-ши эсĕ халĕ? *Фантастикăллă калав* . . 31
Кунта пулман хăна. *Фантастикăллă калав* . 43
Шурă кайăк. *Фантастикăллă калав* . . . . 55
Юлашки операци . . . . . . . . . . . 72
Ах, ывăлăм... . . . . . . . . . . . . 82
Гипноз мыскари . . . . . . . . . . . 88
Ирхи шуçăм . . . . . . . . . . . . 92

## Повеçсем

Ан ман, савни, ан ман . . . . . . . . 118
Шырлан хĕррипе . . . . . . . . . . . 171

Литературно-художественное издание

*Для детей среднего и старшего школьного возраста*

**Зоя Алексеевна Нестерова**

**ĂÇТА-ШИ ЭСĔ ХАЛĔ?**
**ГДЕ ТЫ СЕЙЧАС?**

*Рассказы и повести*

На чувашском языке

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *Т.И. Немцева*
Художественные редакторы *С.А. Бритвина, И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *Н.Н. Маслова, Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *Е.Ю. Ермолаевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 21.07.09. Формат 84x108 ¹/₃₂. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 11,76. Уч.-изд. л. 9,87. Тираж 2000 экз. Заказ № К-1139. Изд. № 57.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство» Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

68.20

Чăваш
кĕнеке
издательстви